**Анатолий Юман**

# Пурнăç кукрашкисем

**Калавсем. Аса илӳсем.**
**Икĕ повесть**

**Ульяновск-2012**

ББК С (Чув)

Ю 41

Юман А.
Ю 41 **Пурнăç кукрашкисем.** Калавсем. Аса илӳсем. Повесть. – Ульяновск, 2012 - 133 стр.

«Пурнăс кукрашкисем» тесе ят панă хăйĕн проза кĕнекине пирĕн ентеш, чăвашсен паллă поэчĕ А. Юман. Ку вăл – тĕрлĕ саманара утса тухнă пурнăç çулĕ çинчи çынсен шухăша яракан çăмăл мар шăписем çинчен чăн пулнине çырса кăтартнă калавсен ярăмĕ.

Кĕнеке «Вăрçă ачисем» тата «Манăн пурнăç» повеçсемпе вĕçленет. Ку автобиографилле хайлавсене авторĕ пĕрле ӳснĕ тантăшĕсене халалланă. Унта вĕсен хаяр вăрçăн йывăр çулĕсемпе пĕр килнĕ шăпине, вĕсем юратнă Тăван çĕр-шывăн никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварассишĕн пынă кĕрешӳре Аслă Çĕнтерӳшĕн аслисене пултарнă таран пулăшнине, вĕсен патриотла çĕкленĕвне çырса кăтартнă.

«Повороты жизни» - так назвал свои невыдуманные рассказы известный чувашский поэт, наш земляк А. Юман свою новую книгу, в которой запечатлены разные человеческие судьбы на фоне исторических событий в разные периоды жизни страны, выпавшие на долю старших поколений прошлого и наших современников.

Книгу завершают документальные повести под названием «Дети войны» и «Моя жизнь». Эти автобиографические произведения посвящены поколению, детство которых было опалено военным лихолетием. Они в трудные минуты наравне со взрослыми принимали активное участие во всех патриотических начинаниях, тем самым внесли посильный вклад в общую копилку Великой Победы во имя независимости и процветания нашей любимой Родины.

© А.Юман, 2012
© Составление и оформление
В.А.Ефимова (г. Ульяновск), 2012

# АНАТОЛИЙ ЮМАН



Анатолий Федорович Ермилов (Юман) 1932 сулхи юпа уйӑхӗн 28-мӗшӗнче Ульяновск облаҫӗнчи Чӑнлӑ районӗнчи Чӑвашкасси ялӗнче ҫуралнӑ. 1952 ҫулта Вӑта Тимӗрҫенти вӑтам шкултан вӗренсе тухсан ӑна райхаҫат редакцине ӗҫлеме чӗнсе илнӗ. Кунта вал 37 ҫул хушши тӑрӑшнӑ. Куҫӑмсӑр майпа Хусанти Парти аслӑ шкулӗ ҫумӗнчи журналистсен курсенчен вӗренсе тухнӑ. Облаҫра чӑвашлӑха чӗртсе ярас ӗҫе хастар хутшӑннӑ. 1989 ҫулта Ульяновскра тӑван чӗлхепе «Канаш» хаҫат тухса тӑма пуҫласан тивӗҫлӗ канӑва тухиччен унта вӑй хунӑ.

Малтанхи сӑвви 1947 ҫулта райхаҫатра ҫапӑнса тухнӑ. Халӗ Анатолий Федорович 40 ытла кӗнеке авторӗ. Паллӑраххисем: «Телей сӑпки» (поэма, 1972), «Чӗмпӗр чулӗ калаҫать» (поэмасем, 1975), «Ҫунатсем» (сӑвӑсем, поэма, 1988), «Чӗре ҫӗввисем» (сӑвӑсемпе поэмӑсем, 1992), «Кӑвак йӗр» (сӑвӑсем, поэма, 1992), «Суйласа илнисем» (1994), «Натюш» (сӑвӑлла аса илнисем, прозӑллӑ сӑвӑ, 2003), «Сонетсем» (2003), «Сонетсем, иккӗмӗш ҫаврӑм» (2005), «Марине» (поэма, 2005), ҫав шутрах «Пурнӑҫ авӑрӗ» сӑвӑлла роман тата ытти те.

А. Юман 1967 ҫултанпа Журналистсен союзӗн членӗ, 1983 ҫултанпа СССР Писателӗсен союзӗн членӗ, Раҫҫей культурин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, Чӑваш халӑх академикӗ, Чӑнлӑ районӗн хисеплӗ гражданинӗ, ЧНК Ваттисен канашӗн членӗ. Чавашсен профессиллӗ писателӗсен союзӗн П. Хусанкай ячӗллӗ, Ульяновск облаҫӗнчи Н.Абрамов тата журналистсен организацийӗн М. Ульянова ячӗлӗ премисен лауреачӗ.

# ПУРНĂÇ КУКРАШКИСЕМ

## Кукаçи еткерлĕхĕ

Кукаçине эпĕ астумастăп. Вăл, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Синкĕл уесне кĕнĕ Ялавăр ялĕнче хресчен ĕçĕпе пурăннăскер, 1921 çулта вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Ун чухне Атăл тăрăхĕнче хăрушă выçлăх хуçаланнă. «Мăян çул» ятпа кĕрсе юлнă вăл халăх асне.

Шăпах çав çул манăн кукаçи, Илья Никифорович Туйбахтин, хăйĕн самаях пысăк çемйине тĕрĕс-тĕкел упраса хăварас шутпа (виçĕ арçын ача, икĕ хĕрача ӳснĕ кил-йышра) Самара тухса кайнă пулнă. Унта пыл сутса пушара пула юхăннă хуçалăхне çĕклеме шутланă. («Ĕмĕр тăршшĕнче виçĕ хутчен вут тухса хур куртăмăр», - тесе аса илетчĕ кукамай). Анчах çул çинче тифпа чирлесе каялла таврăннă. Çапла вара вăтам хресчен шутĕнче тăнă кукаçи йывăр чирлесе выртнă хыççăн вилсе каять. Кукамай калană тăрăх, вăл вăтам ӳт-пӳллĕ, сарлака хул-çурăмлă арçын пулнă. Хăйĕн ĕçне пĕлсе те юратса тунă пулмалла. Хуçалăхне йĕркеллех тытса пынă: картиш тулли выльăх-чĕрлĕх усранă, тырă акса çитĕнтернĕ. Анкарти хыçĕнче сад пахчи пулнă. Ялавăрсем сад ĕрчетес енĕпе авалтан палăрса тăнă. Ку тăрăх çутçанталăк ырлăхĕпе пуян кĕтес шутланнă: çывăхрах вăрман кашласа ларать, çăл куç пек таса юхан шыв шарласа юхать.

1937 çулта атте вилсен, кукамай Ялавăрти кил-çуртне хупса пирĕн пата, аякри Чăвашкасси ялне пурăнма куçрĕ. Çу кунĕсенче пире, Геннадий шăллăмпа иксĕмĕре, çулсерен тăван ялне, Ялавăра, илсе каятчĕ. Шел пулин те, ун чухне кукаçи çурчĕ те, хуçалăхĕ те юхăнса çитнĕччĕ ĕнтĕ. Садри улмуççисен хăрнă турачĕсем хуран курăнса ларатчĕç. Пирĕн валли пĕр-ик катăркас теми çеç сыхланса юлнăччĕ. Тăкăрлăк хĕрринчи урамалла хĕвеле хирĕç пăхса ларакан çурт пĕренисемпе вырăсла хапха хăмисем те хуралма ĕлкĕрнĕччĕ. Улăм витнĕ сарай тăррисем унтан та кунтан шăтнăччĕ. Пӳрт тăррине те улăмпа витнĕ пулнă. Çумăр çума тапратсан пӳрте шыв каятчĕ. Тăм кирпĕчрен купаланă лаçă йăлтах ишĕлсе ларнăччĕ.

Çуркунне Атăл пăрахучĕ çӳреме тапрансанах пырса çитеттĕмĕр эпир Ялавăра. Павăшки (кукамая эпир ялавăрла çапла чĕнеттĕмĕр) пуш анкартинче кавăн акса çитĕнтеретчĕ, акнă вăрлăх йăвине кӳршĕ чăххисем чавса пĕтересрен йĕри-тавра хулăсем лартса тухатчĕ. Ял вĕçĕнчи вĕтлĕхре, çӳллĕ çыр хĕрринче, пĕчĕк уçланкă пурччĕ.

- Кунта пирӗн пчельник (утар) пулнӑ, - тесе каласа кӑтартачӗ павӑшки ҫывӑхри вӑрмана кайса ҫӳренӗ чухне. – Вӗллисен шучӗ хӗрӗхе ҫитнӗччӗ...

Ҫӗрӗ вӑл халӗ пуш-пушах. Никамӑн та мар темелле. Ҫумӑр вӑрах ҫумасан тата иртсен-ҫӳренсемпе выльӑх таптанипе курӑк та сайра ӳсет кунта. Хуҫасӑр тӑрса юлсан ҫурт-йӗр ҫес мар, пӗтӗм тавралӑх юхӑнать иккен.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн кукаҫи ҫуртӗнче унӑн кӗҫӗн ывӑлӗ - Кришша кукка хӑйӗн ҫемйипе пурӑнатчӗ. Ялти учитель, ватӑ салтак, вӑл 84 ҫула ҫитсе ҫӗре кӗчӗ. Хӑй вилнӗ хыҫҫӑн унӑн пысӑк ҫемйи саланса пӗтрӗ – йышлӑ ывӑлӗсемпе хӗрӗсем Ульяновскра, ҫаплах ытти хуласенче тӗпленсе пурӑнаҫҫӗ. Кукаҫи ҫуртне сутса кайнӑ вӗсем. Унта эпир палламан ҫӗнӗ ӑру ҫыннисем тымар янӑ.

Пурнӑҫ малаллах пырать. Анчах ку вӑл – урӑх ҫӗр-шыв, урӑх йӑла-йӗрке.

# Икӗ кукка

Манӑн пурӗ виҫӗ кукка пулнӑ. Кӗҫӗннине, 1904 ҫулта ҫуралнине, Кришша кукканa, лайӑх астӑватӑп. Тӑван ҫӗр-шывӑн аслӑ вӑрҫи пуҫланиччен вӑл Ульяновск облаҫӗнчи Тереньга районӗнчи Патуел ялӗнче пуҫламӑш шкулта учительте ӗҫленӗ. Пӗвӗпе ытла ҫӳллӗ мар, хыткан пит-куҫлӑскер йӑвашшӑн калаҫатчӗ вӑл ҫынсемпе. «Арӑ, арӑ» - тесе ҫеҫ тӑратчӗ, калаҫма юратакансен сӑмахӗсене ӑнтарса пырса. Мӑшӑрӗ вара, ҫивӗч пит-куҫлӑскер, йӑваш упӑшкине хӑй аллипе тыткаланӑ. Ҫав Еля ятлӑ хаяр кинӗ ҫепӗҫ чунлӑ кукамая (кукамая эпир пурте ку енчи чӑвашсен чӗлхипе «павӑшки» тесе чӗнеттӗмӗр) кӳрентерме те вӑтанса тӑман. Пӗррехинче, тем сӑлтавпа кӑтӑрса кайса, павӑшкине чашкӑри турӑхпа питӗнчен сапнӑ. Кун ҫинчен павӑшки ватлӑх кунра куҫҫуль кӑларсах каласа кӑтартатчӗ карчӑксене.

Ҫак хире-хирӗҫ кӑмӑллӑ мӑшӑрсем сакӑр ача пӑхса ӳстерчӗҫ. Тӑван ҫӗр-шывӑн аслӑ вӑрҫи ҫулӗсенче, мӗнпур вӑйпитти арҫынсем пекех, Кришша кукка фронтра пулнӑ. Пирӗн пата вӑл Карпат тӑвӗсем ҫинчи ҫапӑҫуллӑ ҫартан виҫ кӗтеслӗ ҫырусем ярса тӑратчӗ. Унӑн ҫырӑвӗсене эпир савӑнса илсе вулаттӑмӑр. Пӗррехинче Кришша кукка ҫырупа пӗрле хӑйӗн сӑн ӳкерчӗкне те ярса панӑччӗ. Аллине автомат тытнӑ, урине пурттенккепе чӑркаса пушмак тӑхӑннӑ пилоткӑллӑ салтак тухса тӑчӗ пирӗн ума. Кӑкри ҫинче пӗр медаль пур.

Çартан Кришша кукка тӗрӗс-тӗкел таврӑнчӗ. Анчах павӑшки ӑна кӗтсе илеймерӗ, вӑл выçлӑха пула чире кайса 1944 çулхи çур кунӗсем умӗн çӗре кӗчӗ. Вӑрçӑ хыççӑнхи çулсенче Кришша куккин пысӑк çемйи тӗван ене – хӑй çуралса ӳснӗ Ялавӑр ялне куçса тӗпленчӗ. Павӑшкин кивӗ çуртне вӑл тӗпрен юсаса тирпейлерӗ. Çуллахи кану кунӗсенче эпир унта хӑнана кайса çӳреттӗмӗр. Шел пулин те, ватӑлмалӑх кунӗнче унӑн пысӑк çемйи саланса пӗтрӗ. Еля инке хулари пӗр хӗрӗ патне пурӑнма куçрӗ. Кришша кукка хӑйӗн юлашки кунӗсене ялта пӗччен ирттерчӗ. Вӑл вилсен ачисем çуртне сутса ячӗç. Халӗ унта ют çынсем пурӑнаççӗ.

Павӑшкин чунне ыраттаракан тӗп хуйхӑ аслӑ ывӑлӗсен шӑпиччӗ. Асли – Митта, вӑтамми — Пеття ятлӑ пулнӑ. Пӗрремӗш тӗнче вӑрçи пуçлансан Миттана фронта илсе кайнӑ. Унтан таврӑнсан Митта çемье çавӑрнӑ. Пурӑнасса ашшӗ-амӑш çуртӗнчех пурӑннӑ-ха.

Кӗтмен çӗртен çӗр-шывра граждан вӑрçи пуçланса кайнӑ. Ку тӑрӑхра хӗрлисемпе шуррисем хушшинче юнлӑ çапӑçусем пынӑ. Пеття кукка хӗрлисем енче çапӑçнӑ. Митта кукка тек вӑрçа каясшӑн пулман. Яла хӗрлисен отрячӗ пырса кӗрсен вӑл хирти ыраш хушшине тарса пытаннӑ. Такам систернипе ӑна унта шыраса тупнӑ, çара кайма килӗшменшӗн ӑна судсӑр-мӗнсӗрех персе вӗлернӗ.

Пеття кукка хӗрлисен отрядӗнче Чӗмпӗр хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ çапӑçура пуçне хунӑ.

Çав синкерлӗ кунсем павӑшки чӗри витӗр иртнӗ. Вӗсем çинчен вӑл пире йӗре-йӗре каласа кӑтартатчӗ. Кӳршӗ карчӑксем вӑл каласа кӑтартнисене хӑлхисене тӑратсах итлетчӗç. Хӑйсем унашкал ларутӑрӑва лексе курманскерсем «Ах» та «ах!» тесе çех ларатчӗç.

Килти сӑн ӳкерчӗксен альбомӗнче Миттапа Пеття кукка тата вӗсен çарти юлташӗ пӗрле ӳкерттернӗ сӑн ӳкерчӗк упранатчӗ. Хӗрлӗ çӑлтӑрлӑ карттус тӑхӑннӑ Пеття кукка варринче тенкел çинче ларать, сылтӑм енчи – Митта кукка, сулахайри палламан ентеш – салтак, Митта кукки хӑрах аллине шӑллӗн хулпуççийӗ çине хунӑ. Митта кукка тӑхӑннӑ çар карттусӗ çинчи кивӗ çар коккарди те уçӑмлӑн курӑнса тӑрать. Темле унӑн сӑнӗ япӑх, шупка тухнӑ. Кунта та пулин ӑна телей пӳрмен. Çитменнине унӑн сӑнне такам кӑранташпа хӗреслетсе туртса та хунӑ пулнӑ. Тен, такам курса репрессие лекесрен хӑранӑ тӑвансенчен пӗри? Кил-йышра ӑна-кӑна шарласа калаçмастчӗç.

Шел, анне вилсен эпир тӑлӑха юлса ютра пурӑннӑ çулсенче арчари сӑн ӳкерчӗксем те, атте-анне япалисем те çухалса пӗтрӗç. Халӗ куккасен сӑнарӗ манӑн асра çех упранса юлнӑ.

# Селиме акка

Селиме акка чи çывăх кӳршĕсенчен пĕри пулнăран пирĕн пата кунсерен тенĕ пек пырса çӳретчĕ. Вăл, вăрăм та хыткан ӳт-пӳллĕ вăтам çулсенчи хĕрарăм, ялти йăлапа икĕ аркăллă вăрăм пир кĕпепе, умне тирпейлĕ çĕленĕ саппун çакса, пуçне пасар тутăрĕ çыхса çӳретчĕ. Кăвак-симĕс тĕслĕ куçĕпе шăтарасла пăхса калаçатчĕ тĕл пулнă çынсемпе. Сăмахшăн ют кĕсьене кĕместчĕ, кирлĕ пулсан çава пек касса тататчĕ чĕлхипе пĕр-пĕр киревсĕр ĕç-пуç çинчен илтсен. Кун пек чухне вĕри çатма çинчи пек ăшалантаратчĕ вăл айăплисене – тӳссе кăна тăр!

Çемйи пысăк марччĕ Селиме аккан. Мăшăрĕ, Уçпек Мĕтрикĕ, кĕреш пек вăйпитти арçын, вăрçă тытăннă хыççăнах фронта тухса кайнă. Виç кĕтеслĕ çырăвĕсене кăранташпа тетрадь листисем çине чăвашла çырса Мускав çывăхĕнчен ярса тăрать. Селиме акка хăй шкулта пĕр çул та вĕренмен, çавăнпа вулама та, çырма та пĕлмест. Çавăнпа мăшăрĕнчен çыру илсен вулаттарма тӳрех урам урлă пирĕн анне патне каçать. Çав çырусем тăрăх эпир Мускав сывăхĕнче хаяр çапăçусем пынине, Мĕтрик тете маттур салтак пулнине пĕлсе тăратпăр. Сăн ӳкерчĕкĕ çинче унăн кăкрине «Паттăрлăхшăн» медаль илемлетет. Манăн анне, ялти И.Я Яковлев никĕсленĕ пуçламăш шкул пуçлăхĕ, салтак арăмне çырусем çырма та пулăшать. Çырăвĕсене Селиме акка сăмахĕсемпе вăл каласа панă тăрăх çырать.

Ильмендеевсем (кӳршĕсен хут çинчи хушамачĕ çапла) пире хирĕç ретре кивĕ ăвăс пĕренесенчен пураланă пысăк мар çуртра пурăнаççĕ. Çурчĕ çумĕнчех вырăсла хапха, хыçалта хуралтă тавраш. Пахчине акаци тĕмĕсем хупласа лараççĕ. Селиме аккан манпа тантăшлă Çинук ятлă пĕртен-пĕр хĕрĕ пур, çаплах çитмĕле çывхарса пыракан хунямăшĕ – Хапипе кинеми вĕсемпе пĕрле пурăнать.

Хапипе кинеми пирĕн павăшкипе (кукамайпа) туслă. Сăнĕпе вăл кукамайран чылай ватăрах курăнать: тахçан тулли пулнă пит çăмартисем усăнса ларнă, вĕсем тарăн пĕркеленчĕксемпе касăлнă. Куçĕ те витĕрех курмасть унăн, çавăнпа ялан патак çине таянса çӳрет. Хăйĕн ĕмĕрĕнче Хапипе кинеми кӳршĕ ялсене те тухса курман теççĕ. Çавăнпа унăн кукамая каласа кăтартмалли нумаях мар.1896 çулта И.Я.Яковлев «янарал» шкулăн çĕнĕ пурине купалаттарсан ялти

çамрăк хĕрсемпе пĕрле вăл пĕренисене мăк çапма çӳренине çех лайăх астăвать.Çаплах ялти авалхи пурнăç кукрашкисем те унăн асĕнче лайăх сыхланса юлнă. Çитĕнсен вĕсенчен пĕрин сюжечĕпе эпĕ «Телей сăпки» поэмăна çырнă чух усă курнăччĕ.

Манăн кукамай, В.И.Ленинпа пĕр çулта çуралнăскер, хурапа шурра ытларах курнă, граждан вăрçи çулĕсенче икĕ ывăлне çухатнă, «мăян çул» мăшăрĕсĕр тăрса юлнă. Çавăнпа кӳршĕ карчăкĕ ытларах кукамай каласа кăтартнисене итлеме юрататчĕ.

Пирĕн павăшки – пĕвĕпе пĕчĕкçĕ те тирпейлĕ пит-куçлă карчăк. Вăл «майралла» тумланать: ун çиййĕнче сăрăрах кăвак ситцăран çĕленĕ кофта, кĕрен сукнаран çĕленĕ сарафан. Пилĕкĕнчен тăваткал хутаç пек енчĕк çакса çӳрет, ăна вăл «карман» тет, унта вак укçа упрать.

Ача чухне эпĕ ӳкерчĕксем тума юрататтăм. Анчах ӳкерчĕк тумалли тетрадь çуккипе анне çырăнса илекен тĕрлĕ журналсен таса хуплашкисемпе усă кураттăм. Пĕррехинче ватăсем калаçса ларнă чухне павăшкин портретне ӳкернĕччĕ. Сăнĕ хăй пекех пулса тухнăччĕ. Унта вăл кĕнчелепе çăм арласа ларнине сăнланăччĕ. Манăн çак ĕçе куракансем пурте кула-кула хаклатчĕç. Шел, кивĕ хутсем хушшинче вăл сыхланса юлман.

Павăшки вырăсла таса калаçатчĕ. Чăвашла калаçнă чухне Ялавăр чăвашĕсен акценчĕ палăратчĕ: «пăто», «кăмоко», «пăшол». Çу кунĕсенче аякри тăван ялне кайсан чĕресĕпех кăрăç е шурă кăмпа йӳçĕтсе килет. Вутă хутсан кăмака кукринче кăштăртатма юрататать: пĕлĕм, икерчĕ, чӳлмек лартса шаркку пĕçерет. Çăкăрĕ те ытарма çук ырă шăршăллă пулса тухать унăн. Кăваса павăшки «йӳçĕ» тет. Килен-каяна унпа хăналать. Хапипе кинемипе калаçнă чух та ахаль лармасть: çип арлать-и унта е чăлха çыхать-и. Вăт çаплаччĕ вăл пирĕн кил ăшши. Унăн хӳттинче аннене хăйĕн шкулти е халăх хушшинчи ĕçĕсене туса пама самаях çăмăлччĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă хыççăн аякри чăваш ялне те унăн синкерлĕ ахрăмĕ сисĕмлĕн пырса çапрĕ. Ял хуçалăхне уйрăмах 1943 çул йывăр килчĕ: вăйпитти арçынсем вăрçă хирĕнче йышлăн пуçĕсене хунисĕр пуçне ялти ватăсемпе вĕтĕсене, салтак арăмĕсене выçлăх килсе асаплантарчĕ. Хирти тырă пысăк лаптăк çинче юр айне пулса юлнăччĕ. Хирте хĕл каçнă тырă пĕрчи наркăмăшланать иккен. Выçăпа аптранисем ăна çисе вилнĕ тĕслĕхсем йышланчĕç. Эпир çаплах юр айĕнчен тухнă çĕр улми крахмалĕнчен пашалу пĕçерсе

çиеттёмӗр, çу кунӗсенче вӗлтӗрен, пултӑран яшкисемпе хырӑмсене улталаттӑмӑр. Хӑш-пӗри вилнӗ лаша ашне çини те пулнӑ. Селиме акка пирӗн пата каçса куллен ял çыннисенчен кам выçӑпа аптраса вилни çинчен пӗлтерсе тӑратчӗ: «Эптӗк вилнӗ», «Кӑлава вилнӗ», «Кӑлава арӑмӗ вилнӗ», «Теннис Павӑлӗ вилнӗ».

Районти социаллӑ пулӑшу пайӗ выçӑпа аптранӑ салтак çемйисене талонпа пӑртак та пулин çӑнӑх уйӑрса парса пулӑшатчӗ. Унран курӑк яшки çине юрса хатӗрленӗ апат чӑннипех те «деликатес» шутланнӑ. Анчах та талонпа çав çӑнӑха илсе тӑма пулӑшу пайне заявлени çырмалла пулнӑ. Çавнашкал заявлени çыртарма анне патне хут пӗлмен ял çыннисем йышлӑн пырса çӳретчӗç.

Пӗррехинче Селиме акка пирӗн пата питӗ пӑшӑрханса пырса кӗчӗ.

- Стеша (çапла чӗнетчӗ вӑл аннене -**А.Ю.**), тархасшӑн, пӗр чашкӑ та пулин çӑнӑх парса яр. Ывсӑ çинче пӗр чӗптӗм те юлмарӗ. Хуть выртса вил! – терӗ вӑл тархасласа. Хӑй йӗрсе яманни кӑна.

Анне, паллах, ӑна хӗрхенчӗ. Ыйтнӑ чухлӗ çӑнӑх парса ячӗ. Чунӗ кӳтсе çитнӗ кӳршӗ хӗрарӑмӗ аннене тав туса çапла каласа хучӗ:

- Кунтан сывӑ юлас пулсан нихӑçан та çӑнӑха çӑкӑр пӗçерсе сая ямӑттӑм. Пашалу е салма яшки пӗçернипех çырлахӑттӑм.

Кунсем-çулсем иртрӗç. Вӑрçӑ пӗтрӗ. Ял пурнӑçӗ те майӗпен майлашӑнса пычӗ. Телее, Мӗтрик тете килне ыр-сывах таврӑнчӗ. Сакӑр хутчен аманса та вӑл вилӗме парӑнман. Пӗррехинче вилӗм хучӗ килсе те хӑратнӑччӗ пире. Кайран вилнӗ çӗртен чӗрӗлни паллӑ пулчӗ. Тӑван яла таврӑнсан Мӗтрик тетене ял-йыш колхоз тилхепине шанса панӑччӗ. Ертӳçӗре ӗçлеме çамрӑксем хатӗрленсе çитсен мӗн тивӗçлӗ канӑва кайиччен арманçӑра тӑрӑшрӗ. Кил-йышӗ тулӑх пурнӑçпа пурӑнма пуçларӗ. Ял халӑхӗ лаш! сывласа ячӗ. Вӑрçӑ çулӗсенчи йывӑрлӑхсем хӑвӑрт манӑçа тухрӗç. Савӑннипе чылайӑшӗ ылтӑн тыр-пула перекетлеме мар, унран сӑмакун юхтарса ӗçкӗ-çике ярӑнни те пулчӗ. Çав инкеке пула чылай çамрӑк çут тӗнчерен вӑхӑтсӑр уйрӑлса кайма пуçларӗ. Ку вӑл – урӑх истори-ха.

Селиме акка ӗмӗрӗ вӑрӑм пулчӗ. Вӑл тӑхӑрвуннӑ урлӑ каçрӗ, мӑшӑрӗ вилнӗ хыççӑн тата çирӗм çул ытла пурӑнчӗ. Çак хушӑра Çинук хӗрӗпе йышлӑ мӑнукӗсен телейне курма та ӗлкӗрчӗ.

Çапах вӑл «курӑк çул» перекетлӗх çинчен тупа тунӑ пек каланӑ сӑмахсене эпӗ паян та час-часах аса илетӗп. Çакна манӑн çӗнӗ ӑру çыннисене те астутарас килет.

# Виçĕ хăма

Вăрçăченхи çулсенче пирĕн урамри мунча пек пĕчĕк çуртра Паймуковсем – каракпа старик пурăнатчĕç. Вĕсен çитĕннĕ пĕртен-пĕр ывăлĕ пурччĕ, Тимĕр ятлăскер. Карчăкпа старикĕн ятне ас тумастăп. Кил хуçине ватти те, вĕтти те «Кăлава» тесе чĕнетчĕç. Ку хушма ят епле майпа тухса кайнине пĕлместĕп. Кирек мĕнле ялта та унашкал «псевдонимсем» килĕрен пур темелле. Ялĕ пирĕн пĕчĕк. Унта нихăçан та кăлава таврашĕ пулман. Ку ята çивĕч чĕлхеллĕ ентешсем йăваш та мĕскĕн чăваш çумне тăрăхласа çыпăçтарнă пулĕ ĕнтĕ. Арăмĕн ятне те астумастăп. Ăна пурте «Кăлава арăмĕ» тетчĕç.

Кăлавасем питĕ чухăн пурăнатчĕç. Çийĕсенче - якалса çитнĕ кивĕ сăхманпа кĕрĕк, килте тĕртсе çĕленĕ пир кĕпе, урисенче – çĕтĕк çăпата. Хĕлле Кăлава йытă тирĕнчен çĕленĕ, курак йăвине аса илтерекен çĕлĕк тăхăнса çӳретчĕ.

Пĕррехинче çĕре кĕнĕ атте вырăнне кӳршĕри Кивĕ Улхашран килнĕ ялти пуçламăш шкул ертӳçи Александр Семенович Ванюшкин Кăлавана сурăх пусма чĕнсе пынăччĕ. Ун чухне те эпĕ ăна çав çĕлĕкпе ас тăватăп. Кăлава вĕренпе çакса хунă сурăх тирне сĕвет, выльăх тирĕпе ӳчĕ хушшине чышкине чике-чике кăларать. Хăйĕн ĕçне вĕçленĕ хыççăн пĕр хушă хĕрелсе анакан хĕвел тĕрĕлесе илемлетнĕ кăвак пĕлĕтсен чаршавĕ çине шухăшлăх пăхса тăрать. Çăварĕнче хаçатпа чĕркенĕ чикарккă мăкăрланать. Кунтанах хăйсен вата йăмра айĕнчи çурчĕ тĕ курăнать...

Шкулăн çĕнĕ пуçлăхне часах Хĕрлĕ Çара илсе кайрĕç. Ун вырăнне вăтам шкул та пĕтерме ĕлкĕреймен çамрăк икĕ учителе ярса пачĕç. Пĕри, лутра та сарлака хул-çурăмли - Николай Иванович Семенов, вăл та кӳршĕри Кив Улхаш ялĕнчен. Ванюшкинпа Семеновăн ашшĕсен килĕсем те пĕр касăрах, урам урлă хире-хирĕç лараççĕ. Тепри, яштака та кăвак куçли, Анат Тимĕрçен чăвашĕ Виктор Герасимович Праков, паллă çемьерен. Çамрăк учительсем иккĕшĕ те комсомолецсем, ялти общество ĕçне те хастар хутшăнаççĕ. Шкулта вăхăтлăха тунă сцена çинче спектакльсем лартаççĕ. (Тихăн Петĕрккин «Сунтал» журналра çапăнса тухнă «Укçа» пьесине лартса панине ас тăватăп).

Ялта клуб çук. Çавăнпа спектакльсене шкултах лартаççĕ учительсемпе ялти каччăсемпе хĕрсем. Хăш-пĕр чух аслă классенче вĕренекенсем те выляççĕ сцена çинче. Партăсем çине хӳме çинчи чи хулăн хăмасене сарса тухаççĕ те – сцена хатĕр! Кайран, спектакль

вĕçленсен, хăмисене каялла хӳме çине вырнаçтарса хураççĕ.

Колхозри стена хаçатне те вĕсемех кăлараççĕ. Хаçачĕ «Сталинла вăйлă тыр-пулшăн» ятлă. Ăна ялти хăй тĕллĕн вĕреннĕ художник Владимир Узалуков (ялти пек каласан, Пашалу Вăлатимĕрĕ) илемлетет. Узалуковсем виççĕн пĕр тăван. Пурин те ӳнер искусстви еннелле туртăмĕсем пур. Вăлатимĕре илес пулсан, вăл Мускаври Крупская ячĕллĕ ӳнерçĕсен курсĕнче куçăмсăр вĕренсе ăсталăхне ӳстернĕ. Эпĕ унăн аллинчи чăвашсен паллă художникĕн Герасим Харлампьевăн «Çамрăк художник» ятлă методика пособине те курнăччĕ. Узалуковсен ашшĕпе амăшĕ колхоза кĕмен, çавăнпа вĕсене «индюксем» теççĕ. Вĕсем те хĕсĕк кил-çуртра пурăнаççĕ. Аслă ывăлĕ стенисене тĕрлĕрен плакатпа паллă художниксен картинисен хăй тунă копийĕсемпе илемлетнĕ, вĕсен йышĕнчех ашшĕпе амăшĕн пир çине кăмрăкпа ӳкернĕ портречĕсем.  Уйрăмах М. Греков баталистăн «Тачанка» картини ăнăçлă пулса тухнă. Стенасем çинче пĕр пушă вырăн та çук. Музейри пек. Патшалăх уявĕсем çитиччен Вăлатимĕр урамри стендсем çине те плакатсем ӳкере-ӳкере çакать. Колхозăн стена хаçатне те вăл чун туртнипе, укçа тӳлемесĕрех илемлетет.

Кĕтмен çĕртен пирĕн пата кукка - район хаçачĕн яваплă секретарĕнче ĕçлекен, Чĕмпĕрти И.Я. Яковлев ячĕллĕ чăваш педучилищинче вĕренсе пĕлӳ илнĕ Иван Кирюшкин (Иван Ялавăр) журналист тата çамрăк поэт килчĕ. Вăл пирĕн учительсен ĕçне тишкерсе ырларĕ, хаçат ятне кĕскетерех çырма хушса çапла каларĕ:

- Сăмахпа перекетлĕн усă курмалла. Чехов пек. Сирĕн хаçат «Сталинла вăйлă тыр-пулшăн» ятлă. «Вăйлă» сăмах ытлашши кунта. «Сталинла» пулсан вăйлă тыр-пул çинчен сăмах пыни каламасăрах паллă. Апла пулсан «Сталинла тыр-пулшăн» тесе çеç çырмалла.

Пĕррехинче, малтанхи юр ӳкнĕ хыççăн, шкул хӳмисем çухални паллă пулчĕ. Такам çĕрле килсе илсе кайнă вĕсене. Виçĕ хăма. Ку киревсĕр ĕç çамрăксене уйрăмах пăшăрхантарнă: халĕ сцена тума хăма ăçтан илмелле-ха?

Тепĕр кунне ирхине вĕсем хăйсемех йĕр тăрăх кайса çухалнă хăмасене тупаççĕ. Йĕр вĕсене Кăлава çурчĕ патне илсе пырать. Хăмисене Кăлава ывăлĕ Тимĕр сӳтсе килне йăтса пынă-мĕн. Шăп та шай виçĕ хăма. Тем тума кирлĕ пулнă ĕнтĕ ăна вĕсем? Те юхăннă урай хăмисене улăштарма? Те пӳрте хутса ăшăтма?

Часах стена хаçатĕнче çакнашкал сăвăллă фельетон çапăнса тухрĕ:

*«Шеппи-шеппи шелепи,*
*Эпĕ шкула шелеп-и?» -*
*Тесе пулас Паймуков*

Шкул хăмине çаратнă...
Бригадир ĕçе хушсан,
Ун яланах ыратать...

Хаçатра фельетон çапăнса тухнă хыççăнах вырăнти влаçсем «мера йышăннă». Часах суд пулчĕ. Паймуков Тимĕре виçĕ хăма вăрланăшăн çулталăка тĕрмене хупрĕç. Суд ларăвне, кӳнтелее пулса манăн анне, шкул ертӳçи, икĕ хутчен кайса килнĕччĕ. Вăл çамрăк каччă пуçĕпех пăсăлман, çитменнине ватă та чирлĕ ашшĕ-амăшне унсăр пăхакан çук тесе ăна асăрхаттарнипех çырлахма е пысăк мар штраф хума сĕннĕ. Анчах саккун хуралçисем унăн сăмахне хăлхана та чикмен (çапах та, вăрланă-çке-ха), приговора вăйра хăварнă.

Кун хыççăн часах Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи пуçланчĕ. Паймуков Тимĕре тĕрмеренех вăрçа илсе кайнă текен сас-хура тухрĕ. Вăл вăрçă хирĕнчен таврăнаймарĕ. Кăлавасем çак инкеке тӳссе ирттерейменĕç. Малтан кил хуçи çĕре кĕчĕ, ун хыççăн часах мăшăрĕ те. Темиçе кун курăнманнипе кӳршисем пырса пăхаççĕ те, вăл кăмака çинчен анаймасăрах хытса кайнине кураççĕ.

Çавăнтанпа пирĕн ялта «Паймуков» хушамат сыхланса юлман. Çапла вара Кăлавасен йăх тымарĕ виçĕ хăмашăнах сарăмсăр хăрса ларчĕ.

# Мĕтрик тете

Мĕтрик тете тесе чĕнетттĕмĕр эпир ăна. Аслисемшĕн вăл Уçпек Мĕтрикĕччĕ. Чăн ячĕ вара – Дмитрий Кузьмич Ильмендеев. Ильмендеевсем пире хирĕçех – пысăк мар йывăç çуртра – пурăнатчĕç. Йĕри-тавра - хапха та хуралтăсем. Çемйи пысăк марччĕ Мĕтрик тетен: тулли ӳт-пӳллĕ те пĕркеленсе пĕтнĕ пит-куçлă, патак çине таянса хулен утса çӳрекен ватă амăшĕ Хапипе кинемей, мăшăрĕ – Селиме аппа, хыткан та çӳллĕ хĕрарăм, вут чулĕ пек çивĕч чĕлхеллĕскер, вĕсен пĕртен-пĕр хĕрĕ, пирĕнпе тантăшлă Çинук. Кил хуçи – пăхаттир пек çӳллĕ те тĕреклĕ арçын пĕвĕпе икĕ метра яхăнччĕ. Пит-куçĕнче вара яланах хаваслă та ăшă кулăччĕ.

Мĕтри тете аттен çывăх тусĕччĕ. Атте вилсен - 1937 çулта – шăпах çул татăлнă вăхăтра – унăн халалне пурнăçласа, колхозăн чи маттур лашисене кӳлсе ӳтне хунă тупăкне çурхи шыв-шур урлă çирĕм çухрăма ытла вырнаçнă тăван ял масарне леçнĕ шанчăклă та кервен арçынсенчен пĕри шăпах Мĕтрик тете пулнă та.

Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи пуçланнă чухне Мĕтрик тете 35-ре пулнă. Çавăнпа та вăл фронта чăн малтан илсе кайнă арçынсен ретне лекнĕ.

Мĕтрик тете çапăçу хирĕнчен янă виç кĕтеслĕ çырусене хут пĕлмен Селиме аппа тӳрех анне патне илсе пырса вулаттаратчĕ. Ытти хĕрарăмсем те упăшкисенчен е çывăх тăванĕсенчен илнĕ çырăвĕсене вулаттарма анне патне пырса çӳретчĕç. Çакăн пек самантсем пирĕншĕн те уяв пекехчĕ.

Çав çырусенчен эпир Мĕтрик тете Мускав çывăхĕнче тăни, унти хаяр çапăçусене хутшăнни çинчен пĕлеттĕмĕр. Акă вăл тĕп хуламăр çывăхĕнче Нарофоминск хулине пырса çитни çинчен пĕлтерет. Шартлама сивĕ кунсенче хăйсене веç çĕнĕ çăм атăпа алсиш тата ăшă кĕрĕк пани çинчен савăнса хыпарлать. Часах пирĕн кӳршĕ «Паттăрлăхшăн» медале тивĕçнĕ. Сăн ӳкерчĕкĕ те пурччĕ.

Пĕр хушă Мĕтрик тетерен хыпар килмерĕ. Кĕтмен çĕртен вилни çинчен калакан хут çитрĕ. Хĕр-почтальон ăна Селиме аппана кăтартма хăранине, аннепе канашланине астăватăп. Телее, анне шухăшланă пекех, ку йăнăш хыпар пулнă иккен. Часах Мĕтрик тете хăй йывăр аманнă хыççăн госпитале лекни çинчен çырса пĕлтерчĕ. Çапăçури паттăрлăхшăн ăна хальхинче Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçин ikkкĕмĕш пусăмлă орденне панăччĕ. Вăрçăра Мĕтрик тете сакăр хутчен аманнă, контузи те пулнă. Эпир, ачасем, вăл фронтри хаяр çапăçусем çинчен каласа кăтартнисене каçса кайсах итлеттĕмĕр. К.К. Рокоссовский генерал ертсе пынă çĕрте çапăçни, чапа тухнă çар пуçлăхне хăйне те курни çинчен каланине ас тăватăп.

Фронтран Мĕтрик тете ухсахланса таврăнчĕ. Сылтăм урин шăмми самай кукăрălса тухнăччĕ. Çĕнтерӳçĕ-салтака ял халăхĕ тӳрех колхоз председательне суйларĕ. Каярахпа вăл арманта ĕçлерĕ, платник пуртти тытнă вăхăтра тивĕçлĕ канăва кайрĕ.

Пушă вăхăтра Мĕтрик тете чăваш писателĕсен кĕнекисене вулама юрататчĕ. Атте-анне тусĕ манăн та юлташ пулса тăчĕ. Хĕллехи вăрăм каçсенче пирĕн пата кĕнеке вулама каçса ларатчĕ.

Вăл 1983 çулта 77 тултарсан çĕре кĕчĕ. Халĕ ялта унăн хĕрĕ Зина, мăнукĕсем пурăнаççĕ.

Мĕтрик тетен вăрçăри паттăрлăхĕ çинчен фронтри хаçатсенче те çырнă. Вĕсенчен пĕрне вăл хăйпе пĕрле илсе таврăннăччĕ. Вуласа та пăхнă эпĕ ăна. Шел, ун чухне пысăках мар çав тĕрленчĕке çырса илсе упрама хăварма та ăс çитмен.

Чылай çултан, вăрçă ветеранĕ пиртен уйрăлса кайнă хыççăн, «Канаш» хаçат редакцине пирĕн тепĕр ентеш Ульяновск хулинче

пурăннă вăрçă ветеранĕ (халĕ вăл та пирĕн хушăра çук ĕнтĕ) Николай Михайлович Аюгов, Мĕтрик тетене лайăх пĕлнĕскер, унăн фронтри паттăрлăхĕ çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Эпир ăна хаçатра пичетлесе те кăлартăмăр.

1994 çулта çырнă «Пĕрремĕш хĕл» сăвăра манăн Мĕтрик тете çинчен аса илнĕ йĕркесем пур:

*Çыру çырать атте юлташĕ*
*Мĕтрик тете сив окопран.*
*«Тăман хĕвет. Юр тарăн, ашăм,*
*Фашист иртеймĕ Мускавран!*

*Хыт амансан та юлтăм чĕрĕ,*
*Каллех фронта ăсантăм, сис.*
*Тавах! Çире – çăм атă, кĕрĕк,*
*Алра та пирĕн çăм алсиш.*

*Фриц, ĕнтĕркенĕскер, пĕркеннĕ*
*Щаль тутăр. Улăм çăпата*
*Сырса урисене чĕркенĕ...*
*Вилес килмест-çке, тупата!*

*Çавах шăна пек тăкăнаççĕ*
*Шăнса е вут пĕçернĕрен.*
*Тинех Анăçалла тараççĕ,*
*Тăрсан – ӳкеççĕ çĕнĕрен!»*
2010

# Йывăç велосипед

Манăн атте мал ĕмĕтлĕ çын пулнă. Шел, 1937 çулта вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Çамрăк чухне атте вулăс кантурĕнче писарьте ĕçленĕ. «Ăна унта почеркĕ хитрее пулнипе илнĕ», - тесе каласа партчĕ анне.

Анне хăй Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренсе пĕлӳ илнĕ. Кун хыççăн ăна аякри чăваш ялне – Ирçелне ĕçлеме янă. Шăпах çавăн чух паллашса пĕрлешнĕ те ĕнтĕ вĕсем аттепе. Ку вăл çирĕммĕш ĕмĕрти çирĕммĕш çулсен вĕçĕнче пулнă. Митта Ваçлейĕпе Ехрем Иванĕ чăваш поэчĕсем çинчен аса илетчĕ анне. Вĕсем пĕр вăхăтра вĕреннĕ пулнă.

Ялти хресчен ывӑлӗ атте писарь вырӑнӗпе ҫырлахман, малалла пӗлӳ патне ӑнтӑлнӑ, Куйбышев хулинчи рабфака вӗренме кӗнӗ. Унта вӗренсе тухса учитель ятне илсен ӑна тӑван ялӗнчен ҫирӗм ҫухрӑмра вырнаҫнӑ Чӑвашкассинчи пуҫламӑш шкула янӑ. Пӗрле вӗреннӗ Стихван Шавлы поэт ас тӑватчӗ аттене. Малалла вара аттепе анне ҫав шкулта пӗрле ӗҫлеме пуҫланӑ.

Чӑвашкассинчи ҫак шкул И.Я. Яковлев аслӑ просветитель ячӗпе тӳрремӗнех ҫыхӑннӑ. 1896 ҫулта Иван Яковлевич ҫине тӑнипе ялта ҫӗнӗ шкул ҫурчӗ ӳссе ларнӑ. Вӑл халӗ те тӗрӗс-тӗкелех ҫӗкленсе ларать. Унтанпа кунта сахал мар ӑрури ял ачисем вӗренсе пӗлӳ илнӗ. Манӑн аттепе анне И.Я. Яковлев ӗҫне малалла тӑсакансем пулнӑ темелле. Атте пырса вырнаҫнӑ чух шкул ҫурчӗ пӗчченех тӑлӑххӑн курӑнса ларнӑ. Атте ун таврa хуралтӑ тытса ҫавӑрттарнӑ: хапха, кӗлет, вите, вут-шанкӑ хурса усрамалли сарай тутарнӑ. Шкул пахчинче ачасене ӗҫе хӑнӑхтарнӑ, вӗсем пахча ҫимӗҫ ҫитӗнтерсе илнӗ. Хурт-хӑмӑр ӗрчетнӗ. Пахчара пӗр улмуҫҫи пурччӗ, хура хурлӑхан тӗмӗсем йышлӑччӗ. Арҫын ачасем валли мастерской та пурччӗ шкулта. Унта вӗсене хурт-хӑмӑр ӑстаҫи Улентей мушик верстак ҫинче ӗҫлеме хӑнӑхтарнӑ: ачасем каскаланӑ, саваланӑ. Шкул пахчи ҫумӗнче столовӑй ҫурчӗ ӳссе ларчӗ, унта ачасене укҫа тӳлемесӗр апатлантаратчӗҫ.

Аттепе анне ял халӑхне те ырра вӗрентнӗ, ҫӗнӗ пурнӑҫ калчисене хунаса ӳсме ырӑ вӑрлӑх акнӑ. Ахальтен мар ял ҫыннисем вӗсене паян кунччченех ырӑпа асӑнаҫҫӗ.

Астӑватӑп-ха, пирӗн килте патефон пурччӗ. Вӑтӑрмӗш ҫулсенче вӑл ахаль ял ҫыннисене космос вӗҫевӗ пекех тӗлӗнтеретчӗ. Пирӗн пата юрӑ-кӗвӗ итлеме кӳршӗ-аршӑсем каҫсерен йышлӑн пухӑнатчӗҫ. Пире, пӗчӗк шӗвӗрсене, «Шалта пӗчӗк пукане пек ҫынсем лараҫҫӗ, ҫавсем юрлаҫҫӗ», - тесе калатчӗҫ. Эпӗ, чӑнах та, ӗненеттӗм. Пӑртак ӳсерех парсан, паллах, ӑна-кӑна чухлакан пултӑм. Мӗнле юрӑсем пулнӑ-ха вӗсем? «Ҫатмисен» ячӗсене ас тӑватӑп: «Веселые ребята» кинофильмри Исаак Дунаевский кӗвӗленӗ «Легко на сердце от песни веселой» юрӑ, тепӗр енче «Сердце» ятлӑ юрату юрри, ӑна асам саслӑ Леонид Утесов шӑрантарнӑ, Жорж Бизе композиторӑн «Кармен» оперенчи арисем, Фридерик Шопен серенади, Петр Ильич Чайковскин «Сентиментальный вальсӗ» т.ыт. классиксемпе композиторсен юрри-кӗввисем.

Атте ялта пуҫласа велосипед туяннӑччӗ. «Ҫуран ут» - тетчӗҫ ӑна ял ҫыннисем. Ку та вӗсемшӗн тӗлӗнтермӗш япала пулнӑ. Атте аслӑрах класри ачасене унпа ҫӳреме вӗрентетчӗ.

Ҫамрӑксем велосипедпа кӑсӑкланнине кура ялти ӑста тимӗрҫӗ

Илпек Имечĕ йывăç велосипед хайланăччĕ. Унăн аслă ывăлĕ, Мишша, унпа чиперех ярăнса çӳретчĕ. Çакăн хыççăн велосипед – нумай ял ачисен ĕмĕчĕ пулнă. Анчах ашшĕ-амăшĕсен ăна туянма вăй çитерейменн. Илпек Имечĕ йывăçранах велосипед туса ывăлне савăнтарма пултарнă.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçлансан Илпек Имечĕ ялти вăй питти арçынсемпе пĕрле чи малтан çапăçури çара тухса кайрĕ. Вăй хăйĕн ăсталăхĕпе çех мар, çирĕп сывлăхĕпе тата пăхаттирле вăй-халĕпе те палăрса тăратчĕ.

Илпек Имечĕ вăрçăра пулеметчик пулса çапăçнă. Смоленск çывăхĕнчи Велиж хулине хӳтĕленĕ чухне паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Унпа пĕрле çар хĕсметĕнче тăнă ентешсем каласа панă тăрăх, хĕссе килекен гитлеровецсене Илпек Имечĕ хулари чиркӳ тăррине вырнаçтарса лартнă пулеметĕнчен ăшалантарса чарса лартнă. Тăшмансем пысăк çухату тӳснĕ. Юлашкинчен вĕсем ăна асăрхаса йĕтре хыççăн йĕтре кăларса янă. Кĕçех унăн пулемечĕ «чăхăмлать». Çакна сисе фашистсен эшкĕрĕ тепĕр хут сĕкĕнсе кĕрет. Илпек Имечĕ аптраса ӳкмест, самантран пулеметне юсаса тăшман çине тепĕр хут вут çумăрĕ çутарма тытăнать. Черетлĕ йĕтре тӳрремĕн лекнĕ хыççăн пирĕн паттăр ентеш сывлăша сирпĕнет. Шел пулин те, унăн паттăрлăхне командовани асăрхаман. Килтисене «хыпарсăр çухалнă» тесе пĕлтернĕ кăна.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче эпĕ «Огонёк» журналта вун тăххăрмĕш ĕмĕрте Çĕпĕртен тухнă вырăс ăсти йывăç велосипед хайлани çинчен вуласа пĕлнĕччĕ. Епле пулсан та, ман шутпа, чăвашран тухнă ăста та – Илпек Имечĕ (хут çинчи ячĕ Имет Ильбекович Ильмендеев) хăйĕн ăсталăхĕпе тата тавçăрулăхĕпе унран пĕртте кая пулман.

2010.

# Аркади

Чăвашкасси ялĕ. Çĕр-шывра вăрçă кĕрлет. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи. XIX ĕмĕр вĕçĕнче чăвашсен аслă просветителĕ И.Я.Яковлев никĕсленĕ пуçламăш шкул çуртĕнче класс пӳлĕмĕсемсĕр пуçне учитель çемйи валли те вырăн пур: çывăрмалли, апатланмалли пӳлĕмсем, зал. Халĕ эпир унта виçĕ çемье пĕр кил-йыш пек пурăнатпăр: анне, шкул заведующийĕ, кукамай, эпĕ, вуннăри арçын ача, манăн пĕртен-пĕр шăллăм Геннадий. Шăпах вăрçă пуçланнă

çул Ульяновскри И.Я.Яковлев ячĕллĕ чăваш педучилищине пĕтерсе тухнă çĕнĕ учительница – çирĕмрен тин çеç иртнĕ Пухтел хĕрĕ Ольга Васильевна Нагорнова килнĕччĕ. Анне ăна кĕтесри пĕчĕк пӳлĕме – çывăрмалли пӳлĕме уйăрса пачĕ. Çулталăкран Ольга Васильевна пирĕнпе тантăшлă Верук ятлă йăмăкне пурăнма илсе килчĕ. Вĕсемсĕр пуçне пирĕнпе пĕрле уборщица çемйи – Крахьяна аппапа унăн Аниçça ятлă пĕчĕк хĕрĕ, манăн шăллăмпа тантăшлăскер – пурăнать. Вĕсем валли çуртăн çурçĕр енче тĕнĕ пек çеç пӳлĕм пур. Унта хуран вучахĕ туса вырнаçтарнă: апат-çимĕç те час пиçет, ăшă та пулать, вут-шанкă самай перекетленет. Ку пӳлĕмре пĕртен-пĕр пысăк чӳрече. Ку – çуртри чи ăшă кĕтес, пирĕн “Крым”. Чĕпĕ куçĕ мĕлтлетсе çуннă май уроксене те кунтах хатĕрленетпĕр тепĕр чух.

Крахьяна аппа класс пӳлĕмĕсен урайĕсене çуса тасатать, хутса ăшăтать. Вутти чĕрĕ, йĕре-йĕре çунать. Çавăнпа пӳлĕмсене хутса ăшăтма пĕртте çăмăл мар. Вуттине колхоз лавçисем вăрмантан кӳрсе тăраççĕ. Çулла турттарса типĕтме май пулман, çавăнпа чĕрĕ пĕренесене касса вакланă хыççăнах хутма тивет. Епле хутсан та класĕсем яланах сивĕ. Ачасем унта çири тумтирĕсемпех ларaççĕ. Тепĕр чухне чернил та шăнать. Хучĕ те çителĕксĕр. Аптранă енне хаçатсенчен тетрадьсем çĕлеме вĕренсе çитнĕччĕ.

Крахьяна аппа аннепе тантăш: хĕрĕхелле çывхарнă кăмăллă хĕрарăм. Авалхи йăлапа, вăл чăваш хĕрарăмĕн тумĕпе çӳрет: аркăллă пир кĕпе тăхăнать, саппун çыхса ярать. Шуранка питлĕскер час-часах пуçĕ ыратнипе аптăрать. Пултарнă таран эпир ăна пурте пулăшма тăрăшатпăр: вут-шанкă касмалла-çурмалла-и унта, шыв кӳрсе килмелле-и, каланкка-кăмака чĕртсе ямалла-и? Уйрăмах Ольга Васильевна лара-тăра пĕлмест. Хĕвел сăнлă хитре хĕр чи йывăр вăхăтра та аптăраса ӳкмест, шăнкăрав пек уçă сассипе юрă шăрантарма та ăста. Мĕн чухлĕ çĕнĕ юрă вĕрентмерĕ-ши вăл пире юрă урокĕсенче! Чылайăшĕ халĕ те асрах.

Пĕррехинче Крахьяна аппа аннене чĕнсе илсе темĕн çинчен пăлхануллă калаçрĕç. Часах хыпарĕ ку пирĕншĕн те вăрттăнлăх пулма пăрахрĕ. Вĕренӳ çулĕ варринче шкула çӳреме пуçланă Аркади ятлă арçын ача (эпир ăна Аркаччи тесе чĕнеттĕмĕр)... Крахьяна аппан тăван ывăлĕ пулнă-мĕн. Анчах халĕ вăл Мускавран тин çеç таврăннă амаçури амăшĕпе пурăнать.

Пурнăçра кун пек япаласем сахал мар тĕл пулаççĕ-ха. Крахьяна аппа мăшăрĕ Энтруçка ятлă пулнă. (Крахьяна аппа унăн хушамачĕпех çӳренĕ – Денисова. Хĕр чухнехи хушамачĕ Панюсева тетчĕ.) Вăрçăччен вĕсем темле сăлтава пула уйрăлнă. Энтрюçка

çĕнĕрен авланса Мускава куçса кайнă, унти стройкăсенче ĕçлесе пурăннă. Çапла вара Аркади Мускава лекнĕ. Вăрçă пуçлансан ашшĕне çара илсе кайнă, вăл фронтра паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Кил хуçи вăрçăра çухалсан унăн çĕнĕ çемйи каллех тăван яла таврăнать. Çапла вара кунта Аркади хăйĕн тăван амăшĕпе тепĕр хут тĕл пулать. Çак тĕл пулу хыççăн амăшĕпе ывăлĕ хушшинчи туйăм çĕнĕрен пĕр-пĕрин патне туртать. Куннехинче ăна нимĕнле вăй та тытса чарма пултарайман. Çапла вара Аркади часах тăван амăшĕ патне таврăнчĕ. Пирĕн кил-йыш ӳсрĕ. Эпир хуйха-суйха та, савăнăçа та пĕрле пайлама пуçларăмăр.

Аркади таврăнни пирĕн пĕр евĕрлĕ пурнăçа çĕнĕ сывлăш кĕртрĕ. Ара, вăл Мускавра пулнă-çке, пурăннă унта, çав хушăра нумай тĕлĕнмелле япала курма ĕлкĕрнĕ: метро, цирк, зверинец. Кино пирки каламăпăр та. Эпир ун çинчен кĕнекерен çех пĕлетпĕр. Тĕлĕнмелле сăвăсем те нумай пĕлет Аркади. Сăмахĕсем питех те илĕртӳллĕ:

*Мы едем, едем, едем...*
*В далёкие края,*
*Хорошие соседи,*
*Счастливые друзья.*
*Нам весело живётся,*
*Мы песенку поём,*
*И в песенке поётся*
*О том, как мы живём.*

*Красота, красота!*
*Мы везём с собой кота,*
*Чижика, собаку,*
*Петьку-забияку,*
*Обезьяну, попугая —*
*Вот компания какая!*

Пире Аркади хăй курнă кинокартинăсем çинчен кала-кала парать. Кино тавраш̆ĕ ялта пулкалать ĕнтĕ. Анчах сайра хутра кăна. Ăçта Мускаврине çитме унта! Эпир Аркадие вырăн çинче итле-итле çывăрсах каятпăр.

Аркади Мускавра тир çухаллă хитре пальтопа, çăмламас хура çĕлĕкпе çӳренĕ. Мускавра ӳкерттернĕ ӳкерчĕк çинче çапла питĕ хитре тухнă вăл. Амăшĕ патне çăмăл тумпа тарса килнĕрен çĕнĕ çĕрте ытти ачасем пекех çăпатапа, амăшĕ ăнсăртран тупса панă йытă тирĕнчен çĕленĕ кивĕ çĕлĕкпе çӳреме пуçларĕ. Çапах та кунта телейлĕрехчĕ вăл, хаваслăрахчĕ. Пушă вăхăтра пушăт чĕллинчен лаша

кӗлеткисем касса кăларса выляма юрататчӗ.

Крахьяна аппан ялта хăйӗн пысăк мар çурчӗ те пур. Анчах ăна хутса ăшăтма вут-шанкă çуккипе хӗл кунӗсенче унта ура ярса пусма та çук. Çуртне йӗри-тавра мачча таранах юр хӳсе каять.

1944 çулта пуçламăш шкул пӗтернӗ хыççăн çӗнӗ вӗренӳ çулӗнче Аркади манпа пӗрле темиçе кун хушши Чăвашкассинчен пилӗк çухрăмра вырнаçнă Кивӗ Улхашри çичӗ çуллă шкула вӗренме çӳрерӗ. Йӗпе-сапаллă кунсем пуçлансан атă-пушмак çуккипе вӗренме пăрахрӗ, трактор бригадине плугаре ӗçлеме вырнаçрӗ.

Вăрçă ачисен вӗренес туртăмӗ пулман мар. Сăмах майăн каласан, вӗренӳ çулӗ пуçламăшӗнче аслăрах шкулта пӗлӳ илме шутланисем вун пилӗк ачана çити пухăннăччӗ. Каярах килти йывăрлăхсене пула пирӗн йыш пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн чакса пычӗ. Юлашкинчен вăрçăччен, атте сывă чух,  шкул пахчинче утарçăра ӗçленӗ, çав вăхăтрах ачасене верстаксем çинче каскалама вӗрентнӗ ăста столяр (хальхилле каласан – ӗç учителӗ) Улентей Сидулов ывăлӗпе, Викентипе, лутра та тăп-тăп кӗлеткеллӗ, тулли пит-куçлă тантăшпа, иккӗн çех тăрса юлтăмăр.

Вăрçă хыççăн пирӗн çемьесем тӗрлӗ еннелле саланчӗç. Ольга Васильевна тăван ялне куçса кайрӗ, унта ӗçлеме пуçларӗ. Çемье çавăрса ача-пăча ӳстерчӗ, хăйӗн вăрăм ӗмӗрне унта ӗмӗрлерӗ. Унăн Верук йăмăкӗ хӗр çулне çитме ӗлкӗреймен: ăна аслатиллӗ çумăр вăхăтӗнче аçа çапса вӗлернӗ терӗç.

Крахьяна аппа кивӗ çуртне куçса кайрӗ, ăна тирпейлесе йӗркене кӗртрӗ. Кунта ăна трактор бригадинче плугарьте тăрăшакан Аркади пысăк пулăшу пачӗ. Ӳт-пӳ енчен те çирӗпленсех пычӗ вăл, ялти çамрăк каччăсен шутне кӗрсе çитнӗччӗ темелле. Кăвак куçлăскер, питӗ хӳхӗм каччăччӗ. Ăна эпӗ ял çеремӗ çинчи каçхи вăййăра та, Çимӗкре, Кӗрхи сăра уявӗсенче, улахсенче те пӗр хутчен мар курнă. Шел, унăн кун-çулӗ вăхăтсăр, сарăмсăр татăлчӗ. Ку  1947 çулта пулчӗ. Яра куна суха туса ывăннă хыççăн смена улшăннă вăхăтра Аркади суха касси хӗррине выртса çывăрнă. Каç пулттипе тракторисчӗ ăна асăрхаман, таптаса кайнă.

Аркадие юлашки çула ăсатма пӗтӗм ял халăхӗ пухăнчӗ. Пытарасса ăна Крахьяна аппан тăван ялне, кӳршӗри Çӗнӗ Улхаш масарне, Çӗнтерӳ  Кунне кӗтсе илеймен манăн кукамай вилтăприпе юнашарах пытартăмăр. Çапла сарăмсăр вӗçленчӗ телейсӗр вăрçă ачин хурлăхлă кун-çулӗ.

“Инкек пӗччен килмест,” - теççӗ. Турă çапла çырнă темелле-и? Хăйӗн айăпӗпе çула çитмен çамрăк пурнăçне татнă тракторист пӗр хушă ухмаха тухса асапланчӗ. Сипленнӗ хыççăн вăл каллех трактор

рулӗ умне ларнӑччӗ. Кӗтмен ҫӗртен аварие лексе хӑй пӳкле вилчӗ. Куннехинче сӗм ҫӗрле тарӑн вар кӗперӗ урлӑ каҫнӑ чух тракторӗ-мӗнӗпе ҫырмана чӑмнӑ.

Тӑван яла каймассерен Аркадин пурнӑҫланайман мал ӗмӗтлӗ ҫутӑ сӑнарӗ ман куҫ умне ҫаплах чӗррӗн тухса тӑрать, унӑн синкер шӑпи хӑварнӑ чӗре суранӗ тепӗр хут хускалса сурма пуҫлать..

2011.

# Сухви

Эпӗ ӑна хӑне курман. Крахьяна аппа каласа панӑ тӑрӑх, унӑн кӗҫӗн йӑмӑкӗ, Сухви, Тӑван ҫӗр-шыв аслӑ вӑрҫи пуҫланнӑ ҫул тин ҫеҫ ҫитӗнсе ҫитнӗ чӑваш хӗрӗн сӑн-сӑпачӗ куҫ умне чӗррӗн тухса тӑратчӗ. Вӑл мана вилӗмсӗр Нарспи сӑннех аса илтеретчӗ. Классик ҫырса кӑтартнӑ поэмӑри пекех, хитре хӗр сӑнарӗ пире пурсӑмӑра та тӗлӗнтерсе калаҫтаратчӗ. Ҫутҫанталӑк ӑна чӑннипех те хӳхӗм сӑн-пит парнеленӗ пулнӑ ҫав: ҫӑлтӑр пек ҫутӑ куҫ, чуптума лайӑх ҫӳхе тута, пан улми пек ҫаврака питҫӑмартисем хӗвел сӑнне аса илтереҫҫӗ, хӑмӑр ҫивӗт вӗҫӗсем тулли чӑмӑр кӑкрисем урлӑ каҫса пилӗк таранах илем кӳрсе тӑраҫҫӗ.

Ытти мӗн пур ял ҫамӑкӗ пекех, вӑрҫӑ пуҫланнӑ ҫул хура кӗркунне вӗсене окоп чавнӑ ҫӗрте ӗҫлекенсем валли вӑрман касма илсе каяҫҫӗ. Пирӗн ҫеҫен хир тӑрӑхӗнче вӑрман тӑван ялтан сахалтан та 70-80 ҫухрӑмра вырнаҫнӑ. Шӑпах аякри вӑрман варринчи ялта ӗҫлесе пурӑннӑ та вӗсем. Унта хӗллехи шартлама сивӗре ырми-канми тӑрӑшнӑ Сухви те. Пурнӑҫ опычӗ пысӑк пулманнипе сыхланса ӗҫлеме пӗлмен. Пӗррехинче вӑл, йывӑр пӗренесем каса-каса пӑшӑхнӑскер, ҫырмари вакӑран пӑрлӑ шыв ӗҫнӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн часах ӳпки шыҫнипе аптраса ӳкет. Вӑхӑтра медицина пулӑшӑвӗ илейменнипе чирӗ шалтан-шала каять. Юлашкинчен тӑван ялне таврӑнса вырӑнпах выртать. Шӑпах ҫав кунсенче Крахъяна аппа чирпе асапланакан йӑмӑкӗ патне кӳршӗри Ҫӗнӗ Улхаш ялне кунсерен кайса ҫӳретчӗ. Анчах епле тимлесе пӑхсан та Сухвин чӗрӗлес шанчӑкӗ сӳнсех пынӑ. Вӑл хӑйӗн чирӗпе епле асапланни ҫинчен Крахъяна аппа пире йӗре-йӗре каласа кӑтартатчӗ. Юлашкинчен вилӗм чирӗ Сухвие парӑнтарсах ҫитернӗ. Ҫапла вара ҫутҫанталӑк пилленӗ хӗр илемне вӑл питех те вӑхӑтсӑр илсе кайнӑ. Сухвин синкерлӗ шӑпи ун ҫинчен илтсе пӗлнӗ ял ҫыннисене питех те кулянтарса калаҫтаратчӗ.

Ҫулсем иртнӗ хыҫҫӑн эпӗ Сухвин ҫӗнӗ сыпӑкри тӑванӗсем патне ятарласах кӗрсе тухнӑччӗ. Вӗсен кил-ҫурчӗ ял хӗрринчи урам вӗҫӗнче ыттисенчен нимӗнпе те уйрӑлса тӑмастчӗ. Урама тӑрӑхла пӑхса ларакан пилӗк чӳречеллӗ пысӑках мар йывӑҫ ҫурт. Кивӗ хапха. Ҫуртӑн шалти интерьерӗ те чӑваш йӑли-йӗркипе хӑтланӑскер. Кантӑксен ик айккипе тӗрӗллӗ алшӑллисем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ, вӗсене алӗҫ юратакан ӑста халӑх орнаменчӗсепе эрешленӗ. Хӗрлӗ-хура ҫипсемпе тӗрленӗ автансем таранччен пурччӗ унта. Чӑвашсен авалхи тӗрӗ ҫырулӑхӗ темелле-и вӗсене? Тен, ҫав сӗлкӗсене Сухви тахҫан хӑех тӗрлеменши?

Стена ҫинчи хура хашаксем ӑшӗнче кивӗ сӑн-ӳкерчӗксем те самаях. Акӑ чӑваш хӗрӗсем пӗрле ӳкерӗннӗ пысӑках мар сӑн ӳкерчӗк. Унта виҫӗ хӗр-тантӑш ура ҫинче тӑраҫҫӗ. Калӑн йӗкӗрешсем тейӗн вӗсене. Виҫҫӗшӗ те чӑваш хӗрӗн тумӗсемпе, кӑкӑрӗсем ҫинче ҫутӑ тенкӗсем, аллисенче сулӑсемпе ҫӗрӗсем. Хӗр-тантӑшсем ҫимӗк вӑййи вӑхӑтӗнче ҫапӑннӑ пулас. Асӑнмалӑх. Вӗсенчен пӗри шӑпах Сухви, тесе ӑнлантарчӗҫ мана. Ӳкерчӗк ҫинчен пирӗн ҫине чӑннипех те тӗлӗнмелле хитре хӗр ӑшшӑн пӑхса тӑрать. Вӑл алӑк уҫса халех пӳлӗме кӗрсе тӑрассӑн туйӑнать. Анчах тӑван килне тек таврӑнаймӗ ҫав урӑх, хаяр вӑрҫӑ ҫулӗсенче Тӑван ҫӗр-шыв ирӗклӗхӗшӗн пуҫӗсене хунӑ пин-пин тантӑшӗсем пекех, ӗмӗрлӗхех хитре те ҫамрӑк сӑнлӑ тӑрса юлнӑ чӑваш пики.

Кил хуҫисемпе сывпуллашас умӗн эпӗ унӑн ӑнсӑртран сыхланса юлнӑ пӗчӗк сӑн ӳкерчӗкне вӑрахчен ытараймасӑр пӑхса тӑтӑм. Чӑнах та, унӑн ячӗ халӑх хушшинче хӑйпе тантӑшлӑ Зоя Космодемьянская е Лиза Чайкина вӑрҫӑ паттӑрӗсен ячӗсем пек анлӑн сарӑлман, ҫапах та вӑл аякри чӑваш ялӗнче пурӑнса Аслӑ Ҫӗнтерӳшӗн хӑйӗнчен мӗн килнине йӑлтах тума тӑрӑшнӑ-ҫке-ха? Чи ҫутӑ ӗмӗчӗсем пурнӑҫланайманшӗн вара вӑл пӗрре те айӑплӑ мар.

Ҫавӑнпа эпир, сыввисем тата ҫӗнӗ ӗмӗрти пач палламан ҫӗнӗ ӑру ҫыннисем, ун умӗнче те пуҫӑмӑра пӗкме тивӗҫлӗ мар-и-ха?

## Икӗ виле

Манӑн «Ачалӑх ҫӗр-шывӗ» аса илӳ-повеҫе пӗр трагедилле ӗҫ-пуҫ кӗмесӗр юлчӗ. Темме сюжет йӗрне вырнаҫтараймарӑм эпӗ ӑна.

1943 ҫулхи «курӑк ҫулӗ» Атӑл ҫинчи Синкӗл хули ҫывӑхӗнчи павӑшкипе (кукамайпа) аннен тӑван Ялавӑр ялӗнчен пирӗн пата

çитĕннĕ хĕр çулĕнчи Лисук аппа килсе кĕчĕ. Аннепе павăшки ăна, паллах, хапăлласа кĕтсе илчĕç. «Ялта выçлăх, пысăк çемьепе пурăнма йывăр», - тесе ăнлантарнă вăл хăйĕн пурнăç пуçламăшĕнчи çак тумхахлă утăмне.

Лисук аппасен пысăк кил-йышĕ Ялавăр юхан шывĕ хĕрринчи кивĕ çуртра пурăнатчĕ. Вăрçăччен Ялавăра кайсан павăшки пире, Геннадий шăллăмпа иксĕмĕре, чи малтан вĕсем патне çавăтса каятчĕ. Пысăк çемьере пирĕнпе танлă ачасем те пурччĕ. Эпир унта кунĕ-кунĕпе выляма юлни те пулнă.

Выçлăх çул пурне те çăмăл пулман ĕнтĕ. Анне Лисук аппана вăхăтлăха ĕçе вырнаçтарчĕ, ялта хăй ертсе пыракан пуçламăш шкулта класс пӳлĕмĕсене хутса ăшăтма тата урайĕсене çуса тăма хушрĕ. Çапла вара Лисук аппа çăкăрлăх укçа ĕçлесе илме пултарчĕ. Апатланасса пĕр сĕтел хушшинчех апатланса пурăнаттăмăр. Анчах вăхăт шунă май Лисук аппа салхуллансах пычĕ. «Кăкăр хĕртет» тесе шур тăм çикеленине те асăрханă эпĕ. Ĕçе те хуллен тухса çӳреме пуçларĕ вăл. Юлашкинчен Лисук аппа йывăр çын пулни палăрчĕ. Малтанласа вăл çынсем асăрхасран пилĕкне пиçиххипе хытă туртса çыхса çӳренĕ, тесе калаçатчĕç аслисем унăн вăрттăнлăхĕ çиеле тухсан.

Вăхăт çитсен Лисук аппан ачи тĕрĕс-тĕкелех çуралчĕ. Атăл шывĕ тапрансан вăл килне таврăнма васкарĕ. Анне ăна лав тупсах ăсатса ячĕ. Шел пулин те, Атăл пăрахучĕпе пынă чухне вăл хăйĕн «вăхăтсăр» тĕнчене килнĕ «ытлашши» пепкине туалета кĕрсе шавласа юхакан хумсем çине ярса хăварнă. Яла таврăнсан пăртакран хăйĕн çак «çылăхне» тӳсеймесĕр хăй те çакăнса вилнĕ.

Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче вилнĕ 27 миллион совет çыннисем хушшинче пӳкле пĕтнĕ Лисук аппапа унăн çут тĕнчене тин çеç килнĕ ачи те пур тесе шутлатăп.

# Марка

Вăрçăченхи çулсенче эпир, ача-пăча, колхозри лаша витине çӳреме юрататтăмăр. Лашасене пăхаканĕ, конюх, яка янахлă старик, Эхтюк тете пирĕнпе пĕр касăрах пурăнатчĕ. Вăл касăри ачасене тăван ачисем пекех юрататчĕ. Çуллахи ăшă каçсенче ĕç лашисене улăхри ешĕл курăк çине хăваласа кăларатчĕ. Унпа пĕрле выртмана касăри ачасем те йышлăн çӳретчĕç. Пĕррехинче эпĕ те аслăраххисемпе пĕрле выртмана кайма шутларăм. Пиртен çĕленĕ хутаçа çăкăр татки,

пиçнĕ çăмарта тата кăвар çине пăрахса пĕçерме темиçе чĕрĕ çĕр улми хутăм та колхоз витине пырса çитрĕм. Эхтюк тете выртмана каякансене пурне те хăйсем тахçанах кăмăллама ĕлкĕрнĕ лашасене уйăрса пачĕ. Ман тĕле çитсен аптраса тăчĕ.

- Сана хăш лашине тытса парас-ши? - тесе калаçрĕ хăйпе хăй.

Эпĕ, халиччен лаша çине утланса курманскер, нимĕн чĕнме аптраса тăтăм. Çакна кура Эхтюк тете хуравне хăех тупрĕ.

- Акă сана – Марка. Вăл ватă лаша. Лаша ĕмрипе танлаштарсан, манпа тантăшлă темелле. Хăвăрт чупмасть. Ăслă. Ун çинче эсĕ хăвна йĕнер çинчи пек туйăн, - терĕ. Хăех мана утланса ларма та пулăшрĕ.

Аслăрах арçын ачасем ларнă-ларман учĕсене хистесе хăвалама пуçларĕç. Вĕсем хыççăн манăн Марка та лĕппĕс-лĕппĕс юртма пуçларĕ. Мана лаша çурăмĕ çинче тытăнса пыма пĕртте çăмăл пулмарĕ. Çитменнине тирĕ витĕр тухса тăракан шăмми те ыраттарать.

- Хыçалалла выртса пыр. Ан хăра, - тесе вĕрентет мана Эхтюк тете.

Эпĕ çапла тума тăрăшатăп та. Майĕпен тытăнса пытăм-пытăмах. Ешĕл улăха тĕрĕс-тĕкелех çитрĕм.

Çавăнтанпа эпир Маркăпа чăннипех те туслашса çитрĕмĕр. Пысăк шăм-шаклă, хура тĕслĕ кĕсрене Эхтюк тете çу каçичченех ман çума çирĕплетрĕ. Эпĕ пырса тăрсан ватă кĕсре ман енне пысăк та çаврака куçĕсемпе лăпкăн çаврăнса пăхатчĕ. Эпĕ ăна килтен чиксе тухнă çăкăр таткипе сăйлаттăм, çурăмĕнчен, çилхинчен ачашласа çупăрлаттăм. «Кенеш, кенеш», - тесе сасă параттăм. Манăн Марка вара хăй çине меллĕн утланса лармасăр та вырăнтан тапранмастчĕ.

## Аслă хĕрĕме асăнса

Халĕ ĕнтĕ ĕлĕке тăрса юлнă çирĕммĕш ĕмĕрти çитмĕлмĕш çулсенче чăваш писателĕсем ырă йăла пуçарнăччĕ, вĕсем ача-пăча валли çулсерен «Юратнă кĕнеке» ятлă калавсемпе сăвăсен пуххине кăларатчĕç. Кил-йышра аслă хĕр çуралсан, çур илемĕпе хавхаланса, эпĕ «Чĕкеç чĕлхи» ятлă сăвă çырнăччĕ. Ăна шăпах пĕчĕк Натюка халалланăччĕ. Сăвви çак йĕркесемпе вĕçленетчĕ:

*Инçе мар тек кĕтмелли...*
*Çуркунне сана валли*
*Чĕлхе кӳрĕ те чĕкеç,*
*Калаçмашкăн пуçлăн эс.*

Çав сăвва шăпах асăннă кĕнекесенчен пĕрине сĕнтĕм. Часах вăл пичетленсе тухрĕ. Çакна пĕлсе тăма питех те кăмăллă пулчĕ. Эпир çур илемĕпе чĕререн савăнтăмăр, пĕчĕк пепкемĕр часах калаçма вĕренессе те хавхаланса кĕтсе пурăнтăмăр.

Çулсем иртнĕ май пирĕн алри Надя ятлă хĕрача, чăнах та, сехетсерĕн тенĕ пек ӳссе çитĕнчĕ, шăкăл-шăкăл калаçма та вĕренсе çитрĕ. Часах савăнăçлă шкул çулĕсем пуçланчĕç, пĕчĕк хĕрĕмĕр пĕве çитнине сисмерĕмĕр те. Ялти вăтам шкултан вĕренсе тухсан вăл аякри хулана ăсанчĕ, студентка пулса тăчĕ. Ĕнтĕ вырăс тата тĕнче литературин классикĕсем çырнă шаршан пек хулăн кĕнекесене вуласа ăс пухма пултарчĕ. Çапла вара чăвашла та, вырăсла шакăлтатса калаçма çех мар, ачаран вĕренме ĕмĕтленнĕ вырăс чĕлхине те тĕплĕн алла илме пултарчĕ, Пушкин, Лермонтов, Гоголь, Некрасов, Достоевский, Тургенев, Лев Толстой, Чехов, Горький т.ыт. аслă писательсемпе поэтсен вилĕмсĕр хайлавĕсене вуласа ӳсрĕ. Вăл классик аслă вырăс чĕлхи пирки çырса хăварнă çунатлă йĕркесене яланлăхах чĕри çумне хурса йышăнчĕ тесен те пĕртте йăнăш пулмасть. Астăватăр-и епле янăраççĕ çав йĕркесем: «Иккĕленӳ çуралнă кунсенче, манăн тăван çĕршывăм шăпи пирки йывăррăн шухăша кайнă кунсенче, - эсĕ манăн пĕртен-пĕр хӳтлевçĕ те тĕрек, аслă, хăватлă, тӳрĕ те ирĕклĕ вырăс чĕлхи!»

Çук, профессионал-писатель çул-йĕрне суйласа илмерĕ вăл хăй валли. Хитре сăн-питлĕ те йăрăс пӳллĕ, пысăк хăмăр куçлăскер, вăл тĕнче çине вичкĕнĕн тилмĕрсе пăхатчĕ, сăн-питĕнчен ытларах трагедилле жанр актрисине аса илтеретчĕ темелле. Анчах вăл ку тулаш енчен пăхсан çеç çапла туйăнатчĕ ĕнтĕ. Надя учитель профессине кăмăлларĕ, ачасене тĕрĕс калаçма та çырма, юрă юрлама вĕрентрĕ, юрă урокĕсенче аллине баян та çăмăллăн тытатчĕ.

Кайран, район шайлă культура специалисчĕ пулса тăрсан, тăмра тытса калатчĕ, халăх хорĕнче юрлатчĕ. Пĕччен ача амăшĕ пулнă май икĕ ывăл пăхса ӳстерчĕ, ялта пурăннăскер, кирек мĕнле ĕçе те тытса тăватчĕ. Ĕç умне тăрсан çамрăксене аттесемпе асаттесен чĕлхине, ыттисенчен пĕртте кая мар ытарайми чăваш чĕлхине юратса упрама вĕрентетчĕ. Пĕр сăмахпа каласан, тулли пурнăçпа хавхаланса пурăнатчĕ пирĕн хĕрĕмĕр. Кĕтмен çĕртен акă шелсĕр вилĕм унăн пурнăçне питех те вăхăтсăр татрĕ. Çапла вара эпир, унăн ватă ашшĕпе амăшĕ, икĕ пĕчĕк мăнукпа пĕрле, тăлăха тăрса юлтăмăр. Шутлăр-ха эсир: тĕрĕс-и-ха ĕнтĕ çакă, ашшĕпе амăшĕ хăйсем тĕнчене илсе килнĕ ывăлĕпе хĕрĕнчен тăлăха тăрса юлни? Пирĕн Надя хĕрĕмĕр çакă çутă тĕнчене чăннипех те хăнана килсе кайнă пек çеç килсе кайрĕ-

çке, унăн чи çутă ёмĕчĕсем пач пурнăçланаймасăр юлчĕç мар-и.

Вилессе вăл манăн алăрах вилсе кайрĕ. Çĕрĕпе лартăм эпĕ унăн пуçелĕкĕ умĕнче усал чир асапне епле те пулин çăмăллатассишĕн тăрăшса, анчах кăлăхах... Ача чухне çине тăрса туяннă чĕкеç чĕлхине çухатнине курса тăма уйрăмах йывăр пулчĕ-çке. Унăн таса та çутă куçĕсем, вилĕм аллине парăнмасăр, ӳчĕ сивĕнсе çитсен ту чылайччен хупăнмарĕç, чĕр пурнăçшăн юлашки сывлăш тухиччен кĕрешрĕç.

Надьăна юлашки çула ăсатма пĕтĕм ял тухрĕ. Çав самантра ăна шеллесе ватти те, вĕтти те хӳхлерĕç. Таймапуçах вĕсене ырă кăмăлĕсемшĕн. Тата акă мĕн туйса илтĕм эпĕ çав хурлă самантра: пĕр чĕрĕ чун тĕнчерен уйрăлса кайнă хыççăн ун вырăнне тепри çĕкленсе тăрать. Акă мĕн чухлĕн вĕсем, сыввисем, пирĕн пултаруллă та ĕçчен, пурнăçа юратакан ентешсем. Эппин, çакă çутă тĕнче ĕмĕр чĕрĕ те сывă юлĕ. Ентешсем, тăвансемпе çывăх çынсем ыр-сывă чух пирĕн юратнă аслă хĕр сăнарĕ те вĕсен асĕнче сыхланса упранĕ. Çапла вара вăл хăй те, ача чух эпир пурсăмăр та çунатлă вĕçен-кайăксенчен туянса юлнă тăван чĕлхемĕр те чĕррисен ĕçĕ-хĕлĕнче ламран лама куçса пурăнĕç.

...Халĕ акă хура хашак ăшĕнчен пирĕн çине хĕрĕмĕр хăйĕн асран кайми хитре те чĕрĕ куçĕсемпе çаплах тимлесе пăхать. «Эпĕ яланлăхах кайман, çаплах сирĕнпе пĕрле», - тесе каланăнах туйăнать.

2002, çу уйăхĕ.

## Каланкка вучахĕ умĕнче

Манăн кил-çуртăн малти тата хыçалти пӳлĕмĕсенче иккĕшĕнче те каланккасем сыхланса юлчĕç. Çутçанталăх газĕ кĕртнĕ чух сӳттермерĕм эпĕ вĕсене: чăрмантармаççĕ, ларччăр, терĕм. Кĕрлĕ-çурлă, хĕл лариччен тата çуллахи ăшă кунсем çитиччен, çурта газпа хутма пуçличчен тата хутма чарăнсан кирлĕ самантра вут-шанкă çунтарса ăшăнма пулать вĕт-ха? Пĕр енчен – газ перекетленет, тепĕр енчен – тĕрлĕ сăлтава пула газĕ пулмасса та пултарать. Çитменнине вĕри каланкка умĕнче ăшăнса, шута кайса ларма епле лайăх тата! Вут-шанкă тĕтĕмĕ те пĕртте йӳçĕ мар, вăл иртсе кайнă çамрăклăха аса илтерет кăна.

Вучахри вут пуленккисене чĕртсе яма кивĕ хутсем ĕмĕр тăршшĕнче çĕклемĕпех пухăннă. Вĕсем хушшинче ачасем шкул çулĕсенче çырса пынă тетрадьсем те сахал мар.

Эпир мăшăрăмпа икĕ ывăл, икĕ хĕр пăхса ÿстертĕмĕр. Вĕсем пурте аван вĕренетчĕç. Ялти вăтам шкул директорĕ пирĕн ачасем çинчен заметка та пичетлесе кăларнăччĕ. Вăл çаплах упранать. «Отличниксен çемйи» ятлăччĕ çав çыру. Пирĕн ачасем, чăнах та, чăваш ятне ямарĕç, пурте лайăх ÿссе çынна тухрĕç, çемье çавăрчĕç . Халĕ вĕсем çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче тĕпленсе пурăнаççĕ. Кашнин хăйĕн çемйи, кашнин хăйĕн пурнăç тĕнчи. Эрех ĕçмеççĕ, табак туртмаççĕ. Мăнуксем те йышлă. Вĕсем те ашшĕ-амăшĕсенех хывнă.

Шел, пĕр Натюш ятлă аслă хĕрĕмĕр кăна вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Хăй хыççăн икĕ пĕчĕк ывăлне тăлăха хăварчĕ. Вĕсене Таня ятлă кĕçĕн хĕрĕмĕр усрава илчĕ. Халĕ икĕ тăлăх мăнук та çынна çитрĕç темелле: асли Хусан университетĕнче вĕренет, кĕçĕнни II-мĕш класа каять кăçал. Патвар каччă. Отличник. Лайăх спортсмен.

Таня хăй икĕ хĕр, пĕр ывăл пăхса ÿстерчĕ. Аслă хĕрĕ Хусан университетне вĕренсе пĕтерме ĕлкĕрчĕ, кĕçĕнни те унтах вĕренет. Ывăлĕ авиаци институне кĕнĕ. Кĕрÿпе килĕштерсе пурăнаççĕ. Тата виçĕ тăлăх ачана усрава илнĕ. Çапла вара кил-йышĕ ача çуртнех аса илтерет.

Кану кунĕсенче ачасемпе мăнуксем ман пата, тĕп киле, хăнана килсех çÿреççĕ. Вĕсене курсан мĕнле савăнмăн-ха!

Каланкка вучахĕ умĕнче ватă шăм-шака ăшăтса ларнă май иртсе кайнă кунсем паянхи пекех куç умĕнче.

Куннехинче ал айне кĕçĕн хĕрĕм вăтам шкулта вĕреннĕ чух çырса пынă тетрадь листисем лекрĕç. Эпĕ вĕсене пĕрремĕш хут курнă пек хумханса вуласа тухрăм. Акă çав тетрадь листи çинчи йĕркесем:

«Мана мĕнле кĕнекесем кăмăла каяççĕ?

1. Мораль темипе çырнисем, детективсем. Уйрăмах Жюль Вернпа Вальтер Скотт çырнисем.

2. Пушкин кĕнекисем. Каверин, Фадеев, Беляев çырнисем.

3. Çул çÿренисем çинчен, фантастика темисемпе çырнисем т.ыт.те – пурте, пурте.

4. Чăвашлисенчен К.Ивановăн «Нарспи», С.Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче», Ухсай Яккăвĕн «Кĕлпук мучи», П.Хусанкайăн «Таня» поэмисем. Çеçпĕл Мишши, Стихван Шавлы сăввисем.

Манăн мĕнле пулас килет?

1. Хамран ытларах ыйтмалла.

2. Ырă, ачаш кăмăллă пулас килет. Пур енĕпе те çирĕп пуласчĕ.

3. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсене пурне те пурнăçлас килет.

4. Пурне те телей çеç сунас килет.

5. 100000 çул пурнас килет.

6. Çирĕп сывлăхлă, пурнăçра, юратура телеейлĕ пулас килет.
7. Ырă кăмăллă пулса юласчĕ.
8. Чи малтанах лайăх вĕренсе тухасчĕ».

Çакăнпа тетрадь листисем вĕçленеççĕ. Эпĕ вĕсемпе вучах чĕртме хăймарăм, чи кирлĕ хутсем хушшине уйăрса хутăм.

# Паллă мар пĕчĕк гени

*Яланах хĕвел пултăр!*
*Çӳл тӳпе çутă тăтăр!*
*Ман анне ялан пултăр!*
*Ман пуласчĕ ялан!*

Кам пĕлмест ку чухне пĕтĕм тĕнчене сарăлнă сак юрă сăмахĕсене! Вăл çĕр-планета çинчи мĕн пур тӳрĕ кăмăллă сынсене пĕр-пĕринпе татуллă пурăнма, тĕнчери миршĕн кĕрешме чĕнет. Унашкал чĕрене çывăх çунатлă йĕркесене чăннипех те, Пушкин пек, гени пулма çуралнă çын çех çырма пултарнă тейĕн. Чăннипе вара миршĕн кĕрешекенсен гимнĕ пек юрă пулса тăнă йĕркесен авторĕ никам та мар, ...паллă мар пĕчĕк ача пулнă иккен.

Ку вăл иртнĕ ĕмĕртех пулса иртнĕ. Пилĕк-ултă çулхи шĕвĕр хăйĕн амăшĕ патне чупса пырса пач кĕтмен ансат ыйту панă:

- Ялан тени мĕн вăл?

- Епле ăнлантарас-ши сана? Ялан сăмах ĕмĕрлĕхе тени пулать. Паян та, ыран та, виçмине те çулсем, ĕмĕрсем иртсен те... çак сенкер тӳпе пек... унта ялтракан сарă хĕвел пек... Тӳпе те, хĕвел те ялан пулнă, малашне те пулĕç. Çын ĕмĕрĕ акă апла мар. Вăл самай кĕске. Çын килет те каять, çук пулать. Шел пулин те, вăл яланлăха килмест.

Çапла вара тавçăруллă ача ялан сăмах мĕне пĕлтернине лайăх ăнланса илет. Çав самантра хĕвеллĕ тӳпене савăнăçлăн тинкерсе, хыттăн кăшкăрса ярать: «Çӳл тӳпе çутă пултăр!» Шăратса пăхакан хĕвеле курса епле савăнмăн-ха тата! «Яланах хĕвел пултăр!» - тесе хушса хурать вăл çавăнтах. Амăшĕн ăшă кулли те унăн кăмăлне çĕклет. Çакă çутă тĕнче амăшĕсĕр епле хитре пултăр-ха! «Ман анне ялан пултăр, ман пуласчĕ ялан» текен çĕкленӳллĕ сăмахсем те илтĕнсе каяççĕ сав самантра. Çапла вара хăй тĕллĕнех сăвă йĕркисем çуралаççĕ. Çакăн çинчен 1928 çулта хăйĕн вулаканĕсене «Ĕç ачисен шкулĕнчи тăван чĕлхепе литература» журнал çырса пĕлтернĕ.

Пулни-иртни манăçа та тухнă пулĕччĕ-и, тен, 1962 çулта Мускав ӳнерçисенчен пĕри паллă мар ачапа унăн сăввине хăйĕн плакатĕнче сăнарламан пулсан. Çав плаката Хĕрлĕ площадьри уявра кăтартнă. Хăйсен черечĕпе журналистсем çав хăй евĕрлĕ плаката асăрхаса хаçатра çырнă. Кайран хаçатри репортажа Аркадий Ильич Островский композитор ăнсăртран вуланă. Ăна плакат çинчи ача сăмахĕсем калама çук килĕшнĕ. Паллă мар ача сăвви шăпах юрă хывма ятарласа çырнăскер пулнине йышăнма унăн тусĕ Лев Ошанин поэт çийĕнчех хатĕр пулман. Çавах та паллă мар ача сăмахĕсем юрăра хушса юрламалли валли питех те вырăнлă пулнине йышăнать. Композитор çине тăрса ӳкĕтленĕ хыççăн тинех çĕнĕ юрă туллин çуралать.

Çапла вара 1962 çулта хывăннă çак юрă çулталăкран Польшăра пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери конкурсра пĕрремĕш вырăн йышăнать. Ăна унта малтанхи хут Тамара Миансарова юрă ăсти юрланă.

Асăннă юрă концертсенче паян та час-часах янăрать. Çапла вара паллă мар пĕчĕк гени ăнсăртран хайланă сăвă йĕркисем ялан пирĕнпе. Эппин, çав ача хăй те вилĕмсĕр. Шел, унăн ячĕ çеç паллă мар.

## Якур тенкелĕ

Пĕр 30-40 çул каялла пирĕн хваттере юсарĕç. Ĕçĕ эрнене яхăнах тăсăлчĕ. Юсавçăсенчен пĕри, Янрав Якурĕ, ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмастчĕ ĕнтĕ. Ачаранпах ĕçе хăнăхнăскер, хăй ĕмĕрĕнче темтепĕр курнă вăл. Аваннине те, начаррине те тӳснĕ темелле. Пĕр хушă «Шырăн-тупаймăн» учреждени директорĕ те пулнă. Кайран çӳлти пуçлăхсене юрайманнипе (пĕрле эрех ĕçме юратманнипе тата пухусенче сăмахне тӳррĕн янратнипе) урăх ĕçе куçма тивнĕ. Юлашкинчен ахаль платник пурттипе каскаласах тăранма пуçланă. Çакă нимĕн чухлĕ те пăшăрхантарман ăна.

Вăт çав Янрав Якурĕ ыттисем чикаркка туртса вăхăта ирттернĕ хушăра ытахальтен тенĕ пек, килти ача-пăча валли пĕчĕк тенкел туса пачĕ. Хăма таткисем тупрĕ те унтан-кунтан пăта çапрĕ. Тенкел пулса та тăчĕ. Пĕчĕк пулсан та самаях çирĕпччĕ вăл. Пире, мăннисене те тӳсетчĕ.

Çавăнтанпа нумай шыв-шур юхрĕ. Ĕнтĕ пирĕн ачасем те çынна çитрĕç, çунат сарса килтен çĕр-шыв тăрăх саланчĕç. Янрав Якурĕ çĕре кĕни те чылай пулать. Вăл ачасем валли туса хăварнă пĕчĕк тенкел вара çаплах ларать пӳртре. Çĕр улми шуратнă, атă-пушмак тăхăнса тасатнă е чăх-чĕп валли апат хатĕрленĕ чухне ун çине ларса

ĕçleme питех те меллĕ, пилĕке авса ывăнтармалла мар. Кун пек чухне мăшăрпа иксĕмĕр кашнинчех Янрав Якур ятне аса илетпĕр. Çынни хăй çук, анчах вăл туса хăварнă пĕчĕк ĕçĕ унăн ятне çаплах упрать. Кам тенкелĕ? Янрав Якурĕн тенкелĕ тетпĕр. Чăн-чăн палăк мар-и çакă?

2006.

# Хĕрлĕ Савин тата поэт

Вăрăм ĕмĕрлĕ мучисем кашни ялтах пур. Пирĕн ялти Хĕрлĕ Савин (çапла чĕнетчĕç Шур сухала пурте: те çирĕп сывлăхне кура, те çамрăк чухне хĕрлĕ комиссар пулнăран?) тăхăр вуннăран иртсе çĕре кĕчĕ. Мĕн пур вată çын пекех, Хĕрлĕ Савин хăй ĕмĕрĕнче сахал мар хура-шур курнă. Вун тăххăрмĕш ĕмĕр вĕçĕнче ялта И.Я. Яковлев шкул уçсан, унта чи малтан вĕренме пуçланă ачасенчен пĕри пулнă. Çитĕнсе çитсен вара çĕр-шывра пулса иртнĕ мĕн пур паллă событие хутшăннă: пĕрремĕш тĕнче вăрçи çулĕсенче тыткăнра та пулнă, революци вутĕнче пиçĕхнĕ.

Юлашкинчен Хĕрлĕ Савине эпĕ 1983 çулхи майăн 13-мĕшĕнче И.Я. Яковлева чысласа шкулта Асăну хăми уçăлнă кун курнăччĕ. Ун чухне вăл самай йăшса çитнĕччĕ ĕнтĕ. Ял çыннисем каласа панă тăрăх, пĕррехинче вăл тĕк ларнăçĕртенех сиксе тăрать те чӳречерен тинкерсе пăхса ывăлне çапла калать:

- Авă, атте!.. Чĕнсе кĕр-ха ăна, Илле.

Ывăлĕ чӳречерен пăхать.

- Никам та çук-çке, -тет тĕлĕннипе.

- Халĕ çеç кунтаччĕ. Ăçта кайса кĕчĕ-ши вара? – тет мучи.

Ашшĕ сахалтан та... аллă çул каялла çĕре кĕнине пурте пĕлеççĕ-ха. Çапах та ялти чаплă тĕл пулăва пырса лартнăччĕ Хĕрлĕ Савине. Хăнасем хушшинче Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ те пурччĕ. Эпĕ ăна Кĕлпук мучи пек ватăпа паллаштартăм. Ватă çын хăйĕн вилнĕ ашшĕне «курса шырани» çинчен те каласа кăтартрăм. Çакă ятлă сăвăçа питех те кăсăклантарчĕ. Часах вĕсем пĕр-пĕринпе чылайччен шăкăлтатса калаçса ларчĕç.

Çакă хыççăн нумай та вăхăт иртмерĕ, ентешсем мана Хĕрлĕ Савин вилсе кайни çинчен пĕлтерчĕç.

- Ашшĕ килсе хăй патне илсе кайрĕ, - терĕç вĕсем мучи вилĕмĕ çинчен.

2006.

# Экспромт

1969 çулхи çуркунне Чăваш çĕр-шывĕнчи культура работникĕсемпе писательсен пысăк ушкăнĕсем Ульяновск хулипе облаçри чăваш ялĕсем тăрăх çӳрерĕç. Тĕл пулусен вăхăтĕнче кашни ялтах чăваш писателĕсемпе поэчĕсен кĕнекисене те сутрĕç. Акă автомашина çинчи кĕнеке лавкки Вăта тата Анат Тимĕрçен ялĕсене те пырса çитрĕ. Ун чухне çак икĕ пысăк чăваш ялĕ пĕр хуçалăха – «Память Куйбышева» колхоза – кĕретчĕç. Юлашкинчен кĕнекесем тиенĕ пĕчĕк грузовик Анат Тимĕрçен клубĕ умне пырса чарăнчĕ. Часах кунта тĕл пулу каçĕ пулмалла. Унччен маларах Григорий Хирбю композитор, Ваçлей Давыдов-Анатри тата Петĕр Хусанкай сăвăçсем сутуçăсем патне кĕнеке туянакансене автографсем çырса пыма пычĕç. Кунĕ - ăмăр. Çилĕ те самаях сивĕ. Грузовик кузовĕ çинче ларма меллех мар. Апла пулин те чылаях тар кăларма тиврĕ сăвăçсен. Юлашкинчен кузов хĕррине икĕ хĕр ача тăрса юлчĕç. Çулĕпе вĕсем 13–14-ран иртмен темелле. Куçĕсем «чĕрĕ писательсене» курнипе савăнăçлăн çиçеççĕ.

- Хăвăртрах туянăр! Атту сутма чарăнатпăр: часах тĕлпулу пуçланать, - васкатать сутуçă. – Сире мĕнле кĕнкесем кирлĕ?

Хĕрачасенчен пĕри В. Давыдов-Анатри сăввисене, тепри Петĕр Хусанкайăн «Хушка хумсем» ятлă самаях хулăн сăвăсен пуххине суйласа илчĕç.

- Кӳр-ха, эппин, хĕрĕм, сана алă пусса парам, - терĕ Петр Петрович кĕске çивĕтлĕ чиперкке еннелле куçне ывăтса.

Хĕрача, хаваслăн кулса, тин çеç туяннă кĕнекине пачĕ.

- Яту мĕнле-ха санăн? - ыйтать сăвăç.

- Люçça... - тет лешĕ.

- Хушамату?

- Элли...

- Мĕнех калăн? Питех те хитре хушамату. Чăн чăвашла!.. Мĕнрен кая поэтсен псевдонимĕнчен? Рифмăлама та лайăх: «Элли Люççи – тутли-йӳççи...»

Хĕр-тантăшĕсем пĕр-пĕрин çине пăхса именчĕклĕн кулса илчĕç. Хирбюпе Анатри те ятлă сăвăç сăмахĕсене ырларĕç: тĕлĕнмелле хушамат çумне тĕрлĕрен рифмăсем хушса пăхрĕç.

- Миçемĕш класра вĕренетĕн?

Хĕрача каларĕ.

- Питĕ çамрăк-ха. Пурнăç çулĕ пуçланать çеç санăн, - терĕ

Хусанкай кӗнеке туяннӑ хӗрачана, автограф ҫырма хатӗрленсе. – Чӑваш кӗнекисене вулатӑн-и?

- Вулатӑп...

- Апла пулсан маттур! – терӗ те Петр Петрович, шӳтле-путле сӑвӑлама та пуҫларӗ:

*Ҫак пурнӑҫӑн тутли-йӳҫҫи*
*Сана пит паллӑ мар, Элли Люҫҫи.*
*Анчах ӑна, пурна-киле,*
*Эс те тутанӑн темелле.*

Ҫапла ҫырса парнелерӗ те вӑл Чӑнлӑ хӗрачине хӑйӗн кӗнекине, унтан, ман еннелле пӑхса, ҫапла хушса хучӗ:

- Ҫырса хур, Юман, ҫак йӗркесене блокноту ҫине. Асӑнмалӑх.

Эпӗ тӗл пулусем ҫинчен район хаҫатне ҫырма килнӗ ҫул ҫыравҫӑ (летописец), блокнота туртса кӑларса сӑвӑҫ экспромтне хӑвӑрт ҫырса та хуратӑп. Аяла Петр Петрович хӑй алӑ пусса ҫирӗплетрӗ: «П.Хузангай. 26.IV.69. В. Тимӗрҫен». Ял ячӗ ҫеҫ йӑнӑш кайнӑ унта. Анат Тимӗрҫен вырӑнне Вӑта Тимӗрҫен тенӗ.

2006.

# Композитор парнисем

Вӗсем виҫҫӗн – Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗренсе малтанхи професиллӗ композиторсем пулса тӑнисем: Федор Павлов, Степан Максимов тата Григорий Лисков.

2010 ҫулхи ноябрӗн 27-мӗшӗнче Григорий Григорьевич Лисков ҫуралнӑранпа 120 ҫул ҫитрӗ. Пулас композитор халӗ Ульяновск облаҫне кӗрекен Чӑнлӑ районӗнчи Чӑвашкасси ялӗнче хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. 1907-1915 ҫулсенче Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ.

«Шкултан вӗренсе тухсан И.Я. Яковлев ӑна та хӑй патнех ӗҫлеме хӑварнӑ, - тесе ҫырать ун пирки Ю. Илюхин паллӑ музыковед. - Григорий Григорьвеич унта ачасене сӗрме купӑспа калама вӗрентнӗ. Ҫав вӑхӑтрах хӑй те музыкӑна малалла вӗренсе пынӑ. 1917 ҫулта вара Хусанти музыка училищинче экстерн йӗркипе экзамен тытать, музыка преподавателӗ ятне илет».

Шӑпах Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ ҫулсенче Г.Г. Лисков Атӑл тӑрӑхӗнчи чӑваш ялӗсем тӑрӑх ҫӳресе халӑх юррисене нумай ҫыра-ҫыра илет. Чӑваш патшалӑх гуманитари институчӗн архивӗнче вӑл ҫырса илнӗ 1300 юрра яхӑн упранать. Ҫав шутра «Пиҫнӗ-пиҫмен

çырлишĕн», «Ямпак урам», «Апла каламасан», «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан», «Чĕкеç вĕçет çӳлелле», «Бурлаксен юрри» тата ытти те.

Каярах пирĕн ентеш чăваш ялĕсенчи шкулсенче ачасене вĕрентнĕ, çав шутрах хăй çуралса ӳснĕ Чăвашкасси ялĕнче те. XIX ĕмĕр вĕçĕнче И.Я. Яковлев ку ялта çĕнĕ шкул çурчĕ туса лартнă пулнă. Вăл паян та тĕрĕс-тĕкел упранать. Унта эп астăвасса та ачасене музыкăна вĕрентме пианино пурччĕ. Ялта сĕрме купăс калама пĕлекен ватăсем йышлăччĕ. Вĕсем шăпах Г.Г. Лисков вĕренекенĕсем пулнă пулас.

Ваттисем каланă тăрăх, Лисков-учитель ачасене «хытă тытнă». Шухăраххисене вăрăм линейкипе пуçĕсенчен шаклаттарса та илетчĕ, тетчĕç. Кун пирки эпĕ «Шупашкарта» поэмăра çапла çырса кăтартнăччĕ («Ялав» журнал, 2003 çул, юпа уйăхĕ. Илсе кăтартакан йĕркесем журнал вариантне кĕреймерĕç):

*Лискав Хемичĕ Чĕмпĕре иленнĕ,*
*Чăвашкасси чăвашĕ, хамăр ял.*
*Сăнĕпеле те чунĕпе илемлĕ*
*Кĕçтенттинпе тĕл пулнă, панă ал.*

*Пĕлӳ хутаççине тултарнă хыççăн*
*Яла кĕç таврăннă. Яш ăрăва*
*Мĕн пуррине валеçнĕ. Ирĕк, уççăн*
*Янратнă сĕрме купăс... çырăва*

*Хресчен ачи-пăчисене вĕрентнĕ,*
*Пит хытă тытнă теççĕ йĕркине.*
*Ăрсурнике асăрхасан çĕкленĕ*
*Шаклаттарса илме линейкине.*

*Аван-и ку, начар-и — йышланнă*
*Çавăнтанпа пирте те купăсçсем.*
*Туй-çуй çитсен нăй-нăй саспа янранă*
*Сĕрме купăспала хут купăссем.*

*Çав ватă мучисен хавас сăн-пичĕ*
*Ку чух та чĕрĕ манăн асăмра.*
*Сăваплă вăрлăх тухăç çимĕç пачĕ —*
*Янрать çӳнатлă юрă уявра.*

*Çилпе вĕçет хаваслă кĕвĕ-çĕмĕ —*
*Хемит мăнукĕсен йăлттам сасси.*

*Пулни-иртнисене ас илнĕçемĕн*
*Тĕпре – ачалăхри Чăвашкасси.*

*Кайран Хемит тĕнче касса çӳренĕ,*
*Хутланă урлă-пирлĕ Çĕпĕре.*
*Ăсталăхне вăл Мускавра тĕпленĕ –*
*Маэстро çунат сарнă ирĕкре.*

*Хăй çăлтăрне шур Шупашкарта вăл çутнă,*
*Ят-сумлă композитор, педагог.*
*Суйланă çулĕпе тӳп-тӳррĕн утнă, -*
*Куч ух ăна пĕлмен чăваш та çук.*

«Хемит» - композиторăн ял-йыш хушшинчи ячĕ. Çапла чĕннĕ ăна чăвашкассисем.

1921 çулта Атăл тăрăхĕнче выçлăх сарăлнă. Тăван çĕр-шыв историне вăл «мăян çул» ятпа кĕрсе юлнă. Шăпах çав çул Лисковсен çемйи Çĕпĕре тухса каять. 1923-1931 çулсенче ирĕксĕрех Новосибирск, Семипалатинск тата Алма-Ата хулисенче партипе совет органĕсенче ĕçлесе пурăнать. 1931 çулта тин Шупашкара пурăнма куçать. Кунта чăваш искусствин тĕрлĕ учрежденийĕсенче тата музыка училищин преподавателĕнче ĕçлет. Çав шутрах Ф.П. Павлов ячĕллĕ музыка училищинче 25 çул хушши ĕçленĕ. Унăн вĕренекенĕсенчен вăтăр çынна яхăн çĕр-шыври консерваторисенче ăсталăхĕсене ӳстерсе композиторсем, дирижерсем, тĕрлĕ инструментсемпе калакан музыкçăсем пулса тăнă (Герман Степанович Лебедев, Виктор Васильевич Ходяшев, Григорий Яковлевич Хирбю, Филипп Миронович Лукин, Петр Филиппович Филиппов виолончелист тата ыттти те).

Г.Г. Лисков витĕмне пулах Чăвашкасси каччисем Михаилпа Никонор Афанасьевсем Шупашкарти музыка училищине вĕренме тухса каяççĕ. Ку вăл вăрçăччenхи çулсенче пулнă. Çитмен пурнăçа пула Михаил Иванович унта вĕренсе пĕлӳ илеймен, анчах вăл та сĕрме купăспа лайăх калатчĕ. Унăн Никонор ятлă шăллĕ вара паллă виолончелист пулса тăнă, кайран Саратоври консерваторие вĕренме кĕнĕ. Шел, вăрçă суранĕсене пула вăл вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Михаил Иванович хăйĕн Зоя ятлă хĕрне Шупашкарти музыка училищине вĕренме янăччĕ. Кайран Зоя Михайловна унтан ăнăçлă вĕренсе тухса чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕнче юрларĕ, «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки» хисеплĕ ята тивĕçрĕ. Халĕ вăл Ульяновск

облаçĕнчи Çĕнĕ Ульяновск хулинчи Культура кĕрменĕнче чăвашсен музыка культурине пропагандăлас тĕлĕшпе ĕçлет.

Иртнĕ ĕмĕрти утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнче Шупашкара кайсан мана хамăрăн паллă ентешпе паллашма тӳр килнĕччĕ. Эпĕ сăвăсем çырнине пĕлсен, вăл вĕсенчен пĕрине юрă çырма суйласа илчĕ. Анчах шухăшланине пурнăçласа ĕлкĕреймерĕ, часах çĕре кĕчĕ.

Чылай çулсем иртнĕ хыççăн эпĕ çав хăй вăхăтĕнче ниçта та пичетленмен сăвва тепĕр хут аса илтĕм. Ăна çĕнĕ куçпа пăхса тухнă хыççăн, пĕле ĕçлесе курнă Юрий Кудаков композитор патне ярса патăм. Вăл чăвашсен малтанхи композиторĕсенчен пĕрин вĕçне çитереймен ĕçне тĕплерĕ, çав юррăн клавирне ман пата çийĕнчех ярса пачĕ. 2007 çулта çав пирĕн «Малтанхи юрату» ятлă юрă «Ах, мĕн-ма-ши?..» юрăсен кĕнекинче тухрĕ.

«Гр. Лисков сăввăр пĕлтерĕшне, туйăмне аванах пĕлнĕ, паллах. Çырса хума ĕлкĕреймен, ватă пулнă, вăр-варлăх çухалнă ĕнтĕ. Ăна уншăн нимĕн те калаймăн. Çыннăн пурнăçĕ кашнийĕнех хăйĕн çулĕпе чупать çав. Сăвву çепĕç юрă çуратма ыйтать», - тесе çырнăччĕ Юрий Кудаков çав сăвă пирки. Кайран вăл чăнах та юрра хывăнчĕ.

Шупашкарта эпĕ чăвашсен К.В. Иванов ячĕллĕ патшалăх драма театрĕнче Г.Г. Лисков музыкипе илемлетнĕ «Чакка» драмăна кĕрсе курнăччĕ. Композитор хăй Атăл хĕрринчи йывăç пĕренесенчен пураласа купаланă кивĕ çуртра пурăнатчĕ. Савăн чух ун патне пырса паллашсан, вăл мана хăйĕн тин çеç пичетленсе тухнă «Юрă урокĕсем» кĕнекине алă пусса парнелерĕ. «Ермилова А.Ф. (Юмана) çак кĕнекене савса парнелетĕп асăнмаллăх. Г. Лисков. 25 октября 1962 г.» - тесе çырнă вăл унта.

Чăвашкассичи И.Я. Яковлева халалласа уçнă шкул музейĕнче те пур композиторăн парне-кĕнекисем. Иккĕшĕ «Юрлар-ха, тантăшсем» ятлă. Кусем вĕсем хорпа тата пĕччен юрламалли юрăсен пуххисем. Вĕсене ЧАССР Государство издательстви Шупашкарта 1961 çулта пичетлесе кăларнă. Пĕрне композитор ялти шкул ачисене ятарласа парнеленĕ. Акă унта вăл çырнă автограф: «Манăн юратнă Чăвашкасси шкулне, мана пĕчĕкке чухне ăс панă шкула тата унта халĕ коммунизм вăхăтĕнче пурăнма хатĕрленекен ачасене эпĕ çырнă сăвăсен кĕнекине, сирĕн Хемит куккăр, сире чунтан савса парнелетĕп.

Ачасем, вĕренĕр тăрăшса! Юрлăр савăнса! Ку кĕнекере сире валли юрламалли юрăсем те пур.

Композитор Г. Лисков (Хемит).

2 февраля 1961 г.»

Çав ятлă тепĕр кĕнекине Г.Г. Лисков хăйĕн Çĕпĕртех пурăнма

юлнӑ тӑванне Петр Лискова парнеленӗ пулнӑ. Унта ҫапла ҫырнӑ йӗркесем пур:

«Дорогому и любимому родному племяннику Петру Васильевичу Лискову от первого чувашского композитора Лискова Григория Григорьевича.

В этот сборник включены три песни: 1) «Хурӑн ҫулҫи», 2) «Чупать тухать, илем кӗртет», 3) «Килчӗ ырӑ ҫуркунне», которые исполнялись в мае месяцы 1912 года на литературно-музыкальном вечере в Симбирской чувашской учительской школе женским хором.

На этом вечере присутствовали инспектор Симбирской чувашской учительской школы И.Я. Яковлев и К.В. Иванов (автор поэмы «Нарспи», откуда мною взяты слова «Килчӗ ырӑ ҫуркунне») И.Я. Яковлев после концерта меня обнял и поцеловал, а Константин Васильевич Иванов даже прослезился. Вот так дело было, дорогой Петя!

8 ноября 1961 г.»

Композиторӑн «Юрлар-ха, тантӑшсем» кӗнекинче хӑй кӗвӗлесе ҫырнисем – 13, халӑх кӗввипе йӗркеленисем 10 юрӑ пичетленнӗ. Юрӑ сӑввисен авторӗсем – В. Урдаш, С. Шавлы, Н. Пахомов, В.Рождественский, Я. Ухсай, Ю. Скворцов, А. Ӗҫхӗл, паллах, К.В. Иванов. «Килчӗ ырӑ ҫуркунне» юрӑра пурӗ тӑватӑ строфа:

1) *Килчӗ ырӑ ҫуркунне,*
*Килчӗ ячӗ ӑшӑтса.*
*Хӗвел савать тӗнчене*
*Хӗл ыйхинчен вӑратса.*

2) *Тӗттӗм вӑрман чӗрӗлет,*
*Ешӗл тумне тӑхӑнать.*
*Ҫеҫенхир те ешӗрет,*
*Илемӗпе мухтанать.*

3) *Тӗрлӗ тӗслӗ чечексен*
*Ырӑ шӑрши сарӑлать.*
*Пур ҫӗрте те кайӑксен*
*Лайӑх юрри янӑрать.*

4) *Ҫӳлте пӗлет айӗнче*
*Тӑри юрри илтӗнет.*
*Ҫемҫе курӑк ҫийӗнче*
*Путек-сурӑх сиккелет.*

«Юрă урокĕсем» кĕнекине те Г.Г. Лисков хăйĕн аякри тăванне парнеленĕ пулнă. Ăна вăл 1-2-мĕш классенче вĕренекенсем валли çырнă. Кĕнеки Шупашкарта 1962 çулта, хăй вилес умĕн çулталăк маларах, пичетленсе тухнă. Автографне унта та вырăсла çырнă:

«Лискову Петру Васильевичу, моему родному племяннику и его семье от дяди, первого чувашского композитора.

19 ноября 1962 года».

Чăвашкассинчи И.Я. Яковлев шкулĕнче 50 çул ытла ĕçленĕ ентешĕмĕр, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Мария Михайловна Бикмендеева пуçарнипе 1983 çулта ялта район шайлĕ культура уявĕ пулса иртнĕччĕ. Шăпах çавăн чух вата шкул стени çинче патриарха чысласа Асăну хăми тата класс пӳлĕмĕсенчен пĕринче музей уçăлнăччĕ. Çав уявра Шупашкар хăнисем — Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ, Чăваш писателĕсен Союзĕн ун чухнехи правлени председателĕ Юрий Артемьев, «Советская Чувашия» хаçатăн культура пайĕн пуçлăхĕ Аристарх Дмитриев, НИИ сотрудникĕ, истори наукисен кандидачĕ В.П. Иванов, «Ялав» журнал фотокорреспонденчĕ Виталий Федотович Исаев, «Коммунизм ялавĕ» («Хыпар») хаçат фотокорреспонденчĕ Ю.А. Дмитриев, çаплах Ульяновск облаçĕнчи И.Я. Яковлев ячĕллĕ культурăпа çут ĕç обществин правлени председателĕ, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ И.С. Кирюшкин тата ытти ятлă-сумлă культура ĕçченĕсем йышлăччĕ. Çавăнтанпа ку уяв ял-йыш йăлине кĕрсе юлчĕ. Ăна эпир халĕ «И.Я. Яковлев Кунĕ» тетпĕр. Чăваш Чĕлхин Кунĕн тымарĕ те çав уявран вăл илчĕ темелле.

Ялтан аякра татăлса пурăнакан ентешсем тăван ене курма килсен кашнинчех чи малтан И.Я. Яковлев шкулĕпе унăн музейне кĕрсе пуç пĕкеççĕ. Çавнашкал хăнасем хушшинче композитор тăванĕсем — Çĕпĕрте пурăннă Петр Васильевич Лисков Хусанта тĕпленнĕ, çамрăк чух Самарта тухса тăнă «Колхозник» хаçатра ĕçлесе тăван литературăна иленнĕ Афанасий Васильвеич Лисковсем те пулнă. Шăпах çавăн чух Петр Васильевич композитор-пиччĕшĕ парнеленĕ кĕнекисене шкул музейне парса хăварнă. Кунта вĕсем шанчăклă упранаççĕ.

А.В. Лисков пирки. Унăн ятне П. Хусанкай хăйĕн «Çар иртсен паттăр нумай» сăввинче асăннă: «Кам сăвă çырмасть-ши? Аха, Шуркин пур-мĕн, Лискав, Ахваниç — кусем йăлт сăвăçсем». «Лисков, Ахваниç — пĕр ят: А. Лисков журналист, Г. Лисков композитор шăллĕ. Унăн ял çинчи хушамачĕ Лискав пулнă», - тенĕ П. Хусанкайăн çырнисен пуххинче асăрхаттарса.

# Тĕлĕк

Чăвашкассинчи И.Я. Яковлев шкулĕнче çуралса эпĕ унта çирĕм çула çити пурăнтăм. Ăна халалласа «Атте килĕ» ятлă пĕчĕк поэма та çырнăччĕ. Унтанпа утмăл çул та иртсе кайрĕ. Халĕ шкул çуртĕнче пирĕн кил-йыш пурăннă пӳлĕмсем те, павăшки хутса апат-çимĕç пĕçернĕ вырăс кăмаки те, каланккисем те çук. Вĕсене çӳтсе класс пӳлĕмĕсем тунă. Шкулĕнчи вĕренекен ачасен йышĕ çулран-çул чаксах пырать. Тӳресем ăна «пĕчĕк комплектлă» шкул, теççĕ. Çурчĕ тĕрĕс-тĕкелех тăрать-ха, унта 1983 çулта йĕркеленĕ И.Я. Яковлев класс-музей те пур. Мачча кашти çинче çех атте хăй вăхăтĕнче сăпка çакма çапса хунă сӳре пăти тăратса тăрать, ăна çех вăхăт тĕкĕнеймен.

Ачалăхпа яшлăх çулĕсем иртнĕ шкул çурчĕ ку таран çитсе те тăтăшах манăн тĕлĕке кĕрет. Тĕлĕкри мĕн пур ĕç-пуç ун тавра пулса иртет.

Нумаях пулмасть мана ун чухнехи шкул кăмаки тĕлĕке кĕчĕ. Вăрçă çулĕсенче ун çине çемйипех хăпарса ларса ăшăнаттăмăр, эпир, ача-пăча павăшкипе пĕрле унтах çĕр каçаттăмăр. Куннехинче тĕлĕкре манăн кăмака çине хăпарса çывăрас килсе кайрĕ. Пăхатăп та... унта тахçанах çĕре кĕнĕ арăм çывăрма пуçтарăнать иккен. Ĕнтĕ манăн та, мăшăрăм уйрăлса кайнăранпа хĕрарăм ăшшисĕр юлнăскерĕн, унпа пĕрле выртса канас килет. Анчах вăл темме мана чĕнмест. Хам та сăмах хушма именетĕп. Çав самантра вăранса та кайрăм.

# Кĕле

Темиçе çул хушши ураран кайман туфли кĕли çĕтĕлчĕ. Мĕн тумалла? Паллах, пасара тухса çĕннине туянма пулать. Анчах ку туфлие ура лайăх хăнăхса çитнĕччĕ. Çитменнине ăна мана юратнă хĕрарăм парнеленĕ-çке. Халĕ ĕнтĕ вăл хăй çук. Çавăнпа кивĕ туфлие тăхăннă май яланах унăн çутă сăнĕ куç умне тухса тăрать. Тепĕр енчен атă-пушмака юраттарма та ансат мар: пĕри – хĕсет, тепри – лакăштатать, виççĕмĕшĕ мода енчен килĕшсех каймасть. Арăм суйланă пекех суйламалла. Ку кивĕ туфли хама пур енчен те çырлахтаратчĕ. Ирĕксĕрех мастерскойри атăçа кăтартса пăхма шутларăм. Атăçă манăн туфлие çавăркаласа пăхрĕ те:

- Тĕпне касса илсе çĕнĕ тĕп хурса çĕлемелле пулать. Ку вăл сахалтан 400 тенке ларать, - терĕ.

Эпĕ килĕшмерĕм. Ара ку хакпа ҫĕнĕ туфли туянма пулать-ҫке?

Киле таврӑнсанах хамах ĕҫе пикĕнтĕм. Резина тĕплĕ кивĕ пушмакран кĕле касса кӑлартӑм, «Момент» клей сĕрсе ӑна туфли ҫумне ҫыпӑҫтарса хутӑм: пулчĕ те! Манӑн кивĕ туфли ҫĕнĕ пекех пулса тӑчĕ. Вӑл ҫаплах ураран каймасть.

Ҫĕнĕ саманара ху тӑрӑшмасан саншӑн никам та тӑрӑшмасть иккен, тесе шутларӑм вара. Профессионал-ӑстаҫӑсен тĕллевĕ – клиентсенчен епле пулсан та ытларах укҫа хӑпӑтса илесси. Ҫавӑ кӑна!

# Ӑнӑҫсӑр кун

– Хӑҫан пенсие тухӑп-ши? Ун чухне пӳрт умĕнчи пĕрене ҫинче яра куна хĕвелҫаврӑнӑш ҫеҫ шĕкĕлчесе ларӑттӑм, – тетчĕ район типографийĕнче наборщицӑра ĕҫлекен вӑтам сулсенчи хитре хĕрарӑм – Антун Ҫинукĕ.

Унтанпа ҫул хыҫҫӑн ҫул сисĕнмесĕр иртрĕ, пирĕн Ҫинукӑн та тивĕҫлĕ канӑва тухмалли вӑхӑчĕ ҫитрĕ. Халĕ ĕнтĕ район хаҫатне те сас паллипе алӑпа пуҫтарса мар, компьютерпа наборласа пичетлеҫҫĕ. Хитре сӑн-питлĕ Ҫинук тулли ӳт-пĕллĕ, шурӑ ҫӳҫлĕ кинеми пулса тӑчĕ. Анчах темме ӑна пĕртте «пӳрт умĕнчи пĕрене ҫине» тухса ларнине курма ҫук. Хĕвелҫаврӑнӑш катма шӑлĕсем юлман, шурӑ шӑл кашти вырӑнне протез тӑхӑнса ҫӳрет. Унашкал шӑлпа нумаях хĕвелҫаврӑнӑш катаймӑн.

Ҫинук ҫеҫ-и! Хам та акӑ сĕтел хушшине ниепле та тĕпленсе ĕҫлейместĕп, ялан вӑхӑт ҫук. Ҫавӑнпа пушӑрах кун тупса мĕн-мĕн тумаллине малтанах картса хутӑм, хальччен вӑраха хӑварнӑ ĕҫсене пĕр кун хушшинчех пурнӑҫлама шутларӑм. Чи малтанах парикмахерскине кĕрсе ҫӳҫ кастармалла. Теме манӑн пуҫӑм асаттепе кукаҫи ҫулĕсенчен иртсен те кукшаланмарĕ, тахҫанах тӑм тивнĕ ҫӳҫĕм пурнӑҫра калама ҫук нумай йӑнӑш туса ҫылӑха кĕнĕ «ухмаха» пӑрахса кайма васкамасть, вӑрах иртсе ямасан шултра турана та пӑрахмасть, курак йӑви пек, тамаланать кӑна. Ҫаплах коммуналлӑ хуҫалӑх кантурне кĕрсе электроэнергипе тата газпа усӑ курнӑшӑн тӳлемелли бланк кĕнекисене илсе тухмалла, шывпа усӑ курнӑшӑн та кран ҫине счетчик вырнаҫтарса лартма хушаҫҫĕ. Ӑна мĕнле тумаллине пач пĕлместĕп: ӑҫта, мĕнле счетчик туянмалла – ыйтса тухас. Йӑлара усӑ курнӑшӑн ҫӑмӑллӑхсемшĕн пенсионерсенчен малтан хӑйсенчен укҫа тытса юлма пуҫларĕҫ, ӑна каялла тавӑрни паллӑ мар. Субсиди

илме документсен ксерокопийёсене тутармалла. Çула май аптекăна кĕрсе эмелсем туянмалла. Кĕсье телефонĕпе усă курнăшăн та тӳлеме вăхăт çитнĕ. Кăçал çу шăрăх килчĕ, хуçалăх лавккине кĕрсе калчасене шыв сапма лейка туянмалла, кивви йăлтах юхăнса çитнĕ. Пĕр сăмахпа каласан, мăй таран ĕç!

Шел пулин те, хальхинче кивĕ проблемăсене пĕрне те татса парасси пулмарĕ. Парикмахерскинче арçынсемпе хĕрарăмсене пĕр пӳлĕмрех «çамрăклатса» яраççĕ. Унта пырса перĕнме çук черет. Кĕтсе ларса çур кун иртсе кайрĕ, юлашкинчен чăтăмлăх пĕтсе çитрĕ те коммуналлĕ хуçалăх кантурне васкарăм. Унта черечĕ тата вăрăмрах иккен. Документсен ксерокопине те ӳкересси пулмарĕ — аппаратпа ĕçлекен хĕрĕ таçта тухса кайнă. Ăçта кайнă, хăçан таврăнать - никам та пĕлмест. Юнашар лараканнисем ыран килме хушрĕç. Аптекăра та кирлĕ эмелсене туянса пулмарĕ. «Çывăх вăхăтра кӳрсе килме тивĕç, кĕрсе тухăр», - терĕ кăна шурă халатлă аптекарь. Хуçалăх лавккинче те пулин ĕç ăнмарĕ - юлашки лейкине эпĕ пыриччен такам туянса та кайнă. Кĕсье телеефонĕшĕн те тӳлесе хăвараймарăм: техника пăтăрмахне пула унта та ĕç вăхăтлăха чарăнса ларнă. Ирĕксĕрех усăсăр çӳресе ирттертĕм куна.

Киле таврăннă чухне урамра Антун Çинукĕ тĕл пулчĕ.

- Каçар-ха, калаçса тăма вăхăт çук. Кĕçĕн мăнукăма пульницана леçмелле. Яслире темĕн çисе ăшпа аптранă, - тесе ури ыратнипе пăхмасăрах, вăл утнă çĕрте утса, чупнă çĕрте чупса пасарти пек шавлă урам авăрĕнче çухалчĕ.

# Аса илӳсем

## Малтанхи учитель

1949 çулхи мартăн 22-мĕшĕнче эпĕ, тин çеç вун çичĕ çула кайнă йĕкĕт, райхаçат сотрудникĕ пулса тăтăм. Ĕç кĕнеки çине çакна палăртса «секретарь ĕçне вĕренекенĕ» тесе çырнă. Шкулта вĕренме пăрахса ĕçе кӳлĕнме шутланин сăлтавĕ – вăрçă хыççăнхи йывăр пурнăçа çăмăллатма, чирлĕ аннепе пĕртен-пĕр шăллăма пăртак та пулин усă кӳме хăтланни. Редакцире вара «çырма пĕлекен çын», хальхилле каласан, журналист кирлĕ пулнă. Эпĕ ун чухне, икĕ çул каяллах райхаçатра малтанхи сăвва пичетлесе кăларнăскер, пĕчĕк заметкăсемпе корреспонденцисем те çырма ярăннăччĕ. Çапах та манăн «бенефист» ăнăçсăр пулса тухрĕ. Тĕпрен илсен, йăла условийĕсем япăххипе. Пĕччен вырăс карчăкĕ патĕнче хваттерте виçĕ эрне выçăллă-тутăллă тертленсе пурăннă хыççăн ирĕксĕрех киле каялла пăрахса таврăнма тиврĕ. Çак кĕске хушăра редакци ĕçне те туллин алла илсе ĕлкĕреймерĕм, паллах. Заметкăсем çырасса çырнă ĕнтĕ, анчах икĕ полосаллă хаçатра пĕтĕм лава пĕччен тенĕ пек туртса пыма хевте çитерейменх-ха ун чухне. Райхаçат редакцийĕнче вара шăпах çавнашкал çын кирлĕ пулнă та. Çавах та çакăн хыççăн хаçат ĕçĕ çине ăнланса, профессионал куçĕпе пăхма пуçларăм. Ĕнтĕ шрифта алăпа пухса хаçат çуралнине курнăскер, макет ăсталама та пуçланăччĕ, редакци çыннисем хушшинчи хăйсем çеç пĕлекен çунатлă сăмахсем те хăлхана кĕнĕ: «подвал», «окно», «рубрика», «шапка» тата ытти те.

Райцентртан вăтăр çухрăмра вырнаçнă тăван яла варсенчи çурхи шыв ăшне пута-пута киле çуранах, иккĕмĕш куне аран-аран çиткелесе ӳкрĕм. (Кӳршĕри Кивĕ Улхаш ялĕнче аттепе анне тусĕ пулнă вăтă учительница патĕнче каç выртнăччĕ). Анне мана кĕтмен çĕртен алăк уçса кĕнине курсан куççуль кăлармасăр та тӳсеймерĕ.

- Юрĕ. Пурăнкалăпăр-ха. Кĕркунне вĕренме кайăн, - терĕ вăл, манăн «одиссейăна» итлесе пĕтернĕ хыççăн.

Çу кунĕсенче районта тухса тăнă «Пĕрлешӳллĕ ĕç» хаçатра «Вл. Садай» ят курăнса кайрĕ. Ячĕ ку маншăн çĕнех пулман-ха. Ăна эпĕ вăрçă çулĕсенчех сайра-хутра куркаланăччĕ. Аялта автор тĕлне палăртса «Каша ялĕ» тесе çыратчĕç. Куннехинче вăл çырнисем кашни номертех тухма пуçларĕç: очерксем, сăвăсем, тĕрленчĕксем. Эпĕ, халĕ ĕнтĕ ăна-кăна тĕшмĕрекенскер, редакцие ман вырăна çĕнĕ çын

килнине тӳрех чухларӑм. Вӑл пиҫсе ҫитнӗ, чӗрӗ, хитре чӗлхепе ҫырать. Кӗске вӑхӑт хушшинче пӗтӗм хаҫат сӑнӗ улшӑнчӗ.

Ҫӗнӗ ят курӑнса кайнӑ хыҫҫӑн темиҫе номертенех эпӗ редакцинчен ҫыру илтӗм. Тӳрӗ те, М. Горькийӗнни пек, ҫаврака саспаллисемпе, шупка фиолетовӑй чернилпа ҫырнӑ ҫак кӑмӑллӑ ҫыру манӑн сӗвӗрӗлнӗ чуна тепӗр хут чӗртсе ячӗ. Ҫыру айне: «Владимир Садай» тесе алӑ пуснӑ. Садай мана хаҫата сӑвӑсемпе корреспонденцисем ҫырса тӑма ыйтать. Ман ҫинчен ӑна пӗрле ӗҫлекен редактор, Ирҫел чӑвашӗ, вӑрҫӑччченех хӑй тӗллӗн вӗренсе хаҫат ҫынни пулса тӑнӑ атте тантӑшӗ тата юлташӗ пулнӑ Михаил Иванович Нюдеев каласа панӑ ӗнтӗ. Эпӗ ҫыратӑп. Корреспонденцисем чӑрмавсӑр кайса пыраҫҫӗ. Ҫитменнине ҫӗнӗ сотрудник вӗсене эпӗ мӗнле ҫырнӑ ҫав халлӗнех пичете ярса пырать. Ҫакӑ мана тата хавхалантарать. Акӑ сӑвӑсем те ҫуралаҫҫӗ ӗнтӗ манӑн. Анчах вӗсене «ахаль» сӑмахсемпе мар, «урӑхларах» ҫырмалла иккен. «Урӑхларах» сӑмаха Садай ҫине-ҫинех асӑнать, кашни ҫырура тенӗ пек. Ку енӗпе «пӗр чӑваш поэчӗн» сӑввинчи тӗслӗхсене илсе кӑтартать. «Пӗр чӑваш поэчӗ» тени те хӑех иккен. Ку кайран, сӑвви хаҫатра ҫапӑнса тухсан паллӑ пулчӗ. Метафорӑсем, танлаштарусем, гиперболӑсем тата ытти ҫавнашкал ӑсталӑх меслечӗсем пулнӑ ӗнтӗ ҫав «урӑхла сӑмахсем». Кашни ҫыруне чунтан-чӗререн ҫырнипе татах та тыткӑна илеҫҫӗ вӗсем. Хӑй пирки те асӑнма манмасть. «Роман тӑватӑп» тесе хыпарлать.

Акӑ редакцине килнӗ сӑвӑсене пӑхса тухнӑ статьяра та манӑн ят курӑнса кайрӗ. Унта та вӑл мана «урӑх сӑмахсемпе» ҫырма вӗрентет. Ӑнӑҫлӑрах йӗркесене илсе кӑтартать. Хӗлхем асӑрхансах хавхалантарма манмасть.

Ҫакна та каласа хӑвармалла, ытти нумай прозаиксем пекех, литература ӗҫне Владимир Садай сӑвӑсенчен пуҫланӑ. Унӑн чи малтанхи сӑвви «Пӗрлешӳллӗ ӗҫ» хаҫатӑн 1940 ҫулхи сентябрӗн 6-мӗшӗнче тухнӑ 77-мӗш номӗрӗнче пичетленнӗ. Акӑ вӑл:

«В. Цырульников

**ЮРӐ**

*Пит хавассӑн янра, юрӑ,*
*Янра, юрӑ, ҫӗнӗлле!*
*Янра, юрӑ, ҫитсем, юрӑ,*
*Мускава, ҫут Кремӗле.*

*Савӑнатӑп: савни манӑн*
*Вӗҫнӗ Ҫурҫӗр полюсне.*
*Кремельте те итлет Сталин*
*Савни савӑк юррине.*

Каша».

1949—50 çулсенче те В. Садай сăввисем райхаçатра тăтăшах çапăнса пычĕç. Унăн малтанхи тапхăрта çырнă ниçта та пичетленмен калавĕсемпе сăввисене хăй вăхăтĕнче Ульяновск облаçĕнчи Димитровградра ĕçлесе пурăннă чăваш писателĕ тата журналисчĕ Яков Рогачев пухса пынă-мĕн. Кайран вăл вĕсене мана парнелерĕ. Халĕ вĕсем Чăваш Республикинчи патшалăх гуманитари институт архивĕнче упранаççĕ.

Пĕррехинче Садай пирĕн яла та пырса тухнă пулнă. Çум çумланă çĕрте ĕçлекен хĕрарăмсемпе тĕл пулса калаçнă. Анчах унта эпĕ пулман. Ытти кунсенче çумне сиктермесĕр çӳренĕ-ха. Кун çинчен те мана вăл хăй çырса пĕлтернĕччĕ. Кĕркунне Вăта Тимĕрçенти вăтам шкула вĕренме çӳреме пуçларăм. Унта интернатра пурăнатпăр. Эрнере пĕр хутчен киле килсе каятпăр. Çуран, паллах. Пĕррехинче Вăта Тимĕрçенти ялти клубра В. Садай вулакансемпе тĕл пулу ирттернĕ. Ку вăл канмалли кун пулнă. Ун чух эпир шăпах килсене саланнăччĕ. Каллех ăна курасси пулмарĕ. Çапла пулса тухнишĕн пăшăрханса çӳрерĕм кăна. Юлашкинчен çавах курса калаçма тӳр килчĕ.

Акă эпĕ редакцинче. Палланă пӳлĕмсем. Алăк уçсанах — вырăс редакцийĕ. Унти пĕлĕш çынсене сывлăх сунса чăваш пӳлĕмне иртетĕп. Владимир Леонтьевич сĕтел хушшинчи çырусем ăшне путнă. Çап-çамрăк та хитре пит-куçлă каччă ларать ман умра. Шупка хăмăр костюмпа, шурă кĕпепе. Вăл кам килнине тӳрех чухланă пулас. Эпĕ те, паллах.

- Ку эпĕ, Садай пулатăп-ха, - терĕ вăл, алла çемçен чăмăртаса. Алли унăн, чăнах та, хĕрарăм алли пек, çемçе. Хăй те, хĕр пек, вăтанса пуçне усать.

Калаçма эпĕ те ăстах мар. Майĕпен çавах сăмах май картне ларать. Çамрăк писателĕн «Ялав» журналта «Вăл парăнман» ятлă пысăк калавне вуланăччĕ-ха. Тин çеç унта «Геройсем» ятлă пĕчĕк новелли çапăннă. Хăй каланă тăрăх, часах «Акăшкӳл» калавĕ тухмалла. Райхаçатра вăл «Тĕл пулу» ятпа икĕ «подвал» йышăннăччĕ.

- Мана çулталăкне пĕрер калав кăларса пырсан çитет, - тет Садай калавĕсем пирки.

Сĕтел çинче алçырăвĕ выртать. Тĕрленчĕк. «Корейăра» ятлă. Кайран вăл та хаçатра çапăнса тухрĕ. Теми кирлĕскер. Ун чухне шăп та шай Корея вăрçи хĕрсе кайнăччĕ. Владимир Леонтьевич çарта чух вăл тăрăхра пулнă та, вулакансене çырса кăтартмалли çук мар ĕнтĕ унăн.

Садай манăн тин çеç çырса килнĕ пĕчĕк калава пăхса тухать. Халиччен эпĕ калав тавраш çырса курман-ха. Ку - малтанхи опыт. Ăна мĕн çинчен çырнине астумастăп ĕнтĕ. Пĕр деталь пирки каларĕ тишкерӳçĕ.

- Акă эсĕ сар хĕвел тухни çинчен çыратăн. Ирхи хĕвел сарă тĕслĕ мар, хĕрлĕ тĕслĕ пулать. Тата калавра интриги тени пулмалла. Сюжет тăрăх вулакана систермесĕр çавăтса пымалла та, кайран, чăннине пĕлсен, вăл шалт! тĕлĕнсе кайтăр. Манăн «Геройсем» калавра, ав, пысăк мар пулсан та, çавнашкал интрига тени пур. Урăхла каласан, кашни илемлĕ произведенирех завязка, кульминаци тата развязка пуламалла. Санăн калавунта вара çакна курма çук-ха.

Калава тишкернĕ хыççăн — çĕнĕ калаçу.

- Чăваш поэчĕсенчен кама юратса вулатăр? - кăсăкланать вăл.

Эпĕ пĕр хушă нимĕн калама аптратăп. Епле уйăрас-ха вĕсене? Пурте лайăх, ман шутпа. Сăмаха ваттисенчен пуçлатăп: Хусанкай, Ухсай, Шавлы...

- Çĕнĕ ят пур. Урдаш... Илтнĕ-и? Питĕ пултаруллă поэт, - пулăшать Садай мана.

Урдаш? Ара, ăна та пĕлетĕп. Çырнисене те вуланă. Чăваш поэчĕсенчен халиччен пĕрне те курман-ха...

Малтанхи тĕл пулу çакăнпа вĕçленчĕ. Тепрехинче эпĕ редакцинчен йыхрав илтĕм. Ку вăл — облаçри ĕçялкорĕсен канашлăвне пыма чĕнсе янă хут. Ăна вырăсла çырнă. Çыру айĕнче дата: «1950 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕ».

Канашлура эпĕ тăтăшах Садайпа пĕрле юнашарах ларатăп. Владимир Леонтьевич тепĕр Каша чăвашне - малта пыракан колхоз председательне Николай Васильевич Грушина илсе пынă хăйпе пĕрле. Виççĕн — кунран-кун ӳссе пыракан чăваш писателĕ, эпĕ, унăн çамрăк вĕренекенĕ тата районта малта пыракан хуçалăх ертӳçи, хаçат çыннисен шанчăклă тусĕ тата ялкорĕ - залри тулли халăх хушшинче пĕчĕк хаçатăмăр чысне хӳтĕлетпĕр. Ман сăн ăнсăртран фотообъектива та лекнĕ иккен. Вăл облаçра тухса тăракан «Ульяновская правда» хаçатра çапăннă. Унта мана палласа илме те пулать. Мăя эпĕ аттерен юлнă пурçăн шарф çыхнă...

Калас пулать, çакăн хыççăн райхаçатăн кашни номерĕнче тенĕ пек манăн япаласем çапăнма пуçларĕç. Ĕнтĕ «подвала» йышăнакан очерксене те пĕçерме пуçларăм эпĕ. Ача-пăча калавĕсем пĕрин хыççăн тепри çапăнса пычĕç. Сăвăсем пирки каламăпăр та.

1951 çулта «Тăван Атăл» журналăн пĕрремĕш номерĕнче «Летчиксем» романĕ çапăнса тухсан пирĕн Садай яланлăхах Шупашкара куçса кайрĕ. Пăртак маларах унпа редакцинче тепĕр хут тĕл пулнăччĕ. Çав хушăра вăл авланма та ĕлкĕрнĕ иккен. Мăшăрĕ - Кашапа кӳршĕллĕ Кунтикав хĕрĕ. Ăна Луиза Тимофеевна тесе чĕнеççĕ. Çĕнĕ çынсем тин çеç Ульяновскран таврăннă та хаваслăн кулса калаçаççĕ. Мана Садай аллине хутпа чĕресе тытнă пакетран

пиҫсе ҫитнӗ чие ҫырли илсе сăйларӗ. Телейлӗ самант!

Пирӗн ҫыхăну Садай Шупашкара куҫса кайнă хыҫҫăн та татăлмарӗ. Ҫапла вара вăл маншăн, ҫырма пуҫлаканшӗн, учитель вырăнӗнчех пулчӗ. Вырăссен «наставник» текен сăмах пур. Маншăн Садай чăннипех те наставник пулса тăчӗ. «Садай шкулӗ» мана пултарулăх ӗҫӗнче ҫӗнӗ пусăма ҫӗкленме пулăшрӗ. Ку вăл пуҫламăш пусăм кăна пулин те, ҫавах... Эпӗ вăл витӗм панипе ҫырас ӗҫри чи кирлине тавҫăрса илтӗм, никӗс тӗпленчӗ темелле. Малта ҫӗнӗ «шкулсем» кӗтнӗ-ха: Сергей Есенин сăввисемпе чи малтанхи хут паллашни, Петӗр Хусанкайпа Ухсай Яккăвӗн, Стихван Шавлы шкулӗсем. Кусем пурте - «манăн университетăн» аслăрах пусăмӗсем.

1992—2010.

# Хусанкай шкулӗ

Чăваш поэзийӗ ҫинчен сăмах хускатсан, эпир чи малтанах ăна аталантарас ӗҫе пысăк витӗм панă ăстасене аса илетпӗр. Вӗсем хушшинче Петӗр Хусанкай ячӗ уйрăмах сумлă вырăнта. Халăх поэчӗ тетпӗр ăна. Ҫак пысăк ята вăл хăйӗн чăн поэзи калăпне лартса ҫирӗплетнӗ сăвви-поэмисемпе, пысăк культурипе, интеллигентлăхӗпе, тӗрлӗ енлӗ тарăн пӗлӗвӗпе, ҫирӗп кăмăлӗпе, ҫунталă мал ӗмӗчӗпе, чăвашлăх сăн-сăпачӗпе, йывăр вăхăтра пулăшма хатӗр ҫынлăхӗпе чăннипех те тивӗҫлӗ пулчӗ.

...1956 ҫулта мана, Чӗмпӗр-Ульяновск тăрăхӗнче ӗҫлесе пурăнакан хаҫат ҫыннине, Шупашкара ҫамрăк писательсен канашлăвне чӗннӗччӗ. Канашлу февралӗн 13-мӗшӗнче, КПСС XX съезчӗ уҫăлас умӗн пӗр кун малтан пулса иртрӗ. Мана канашлу ӗҫне хутшăнма ҫеҫ мар, унта сăмах тухса калама та тӳр килчӗ. Ку вăл ҫапларах пулса тухрӗ.

Залра манпа юнашарри Илпек Микулайӗ пулса кайрӗ. Эпӗ сăмах тухса калама килтех хатӗрленнӗ, анчах хăяймасăр ларатăп. Илпек манăн алри хут таткине асăрхарӗ те: «Тавай-ха!» - тесе ҫырнине хăвăрт вуласа тухрӗ. Хăй кăмăллă. Мухтать. Аллинчи кăранташӗпе унтан-кунтан юсакаласа та хурать. Тек чакма май ҫук ӗнтӗ. Ҫапла вара халăх умне тухма тиврех.

Питӗ хумхантăм эпӗ трибуна ҫинче. Хăлхапа пит ҫăмартисем пӗҫерсе тăраҫҫӗ, хам никама та асăрхамастăп. Аран-аран вулакаласа патăм ҫырса хатӗрленӗ сăмахсене. Залра ларакансем алă ҫупрӗҫ, хавхалантарчӗҫ.

Тăхтав вăхăтĕнче çамрăксен Петĕр Хусанкайпа тата Семен Элкерпе сăн ӳкерттермелле, тесе пĕлтерчĕç. Часах залра тенкелсем шăнкăртатма тытăнчĕç.

- Астăвăр, манса ан кайăр: ку вăл историллĕ ӳкерчĕк пулать, - тесе шӳтлет пĕвĕпе пуринчен те çӳллĕрех Валентин Бурнаевский.

Пурте хĕвелле çиçетпĕр. Часах Петĕр Хусанкайпа Семен Элкер хăйсем те курăнса кайрĕç. Иккĕшĕ те пăртак уксахлаççĕ. Эпĕ Петр Петровичăн кăтра пуçĕ çинчен куçа илместĕп. Ахальтен мар иккен ăна Пушкинпа танлаштараççĕ! Сăнĕпе те Александр Сергеевич пекехçке вăл: тӳрĕ сăмси, çирĕп сасси, витĕр куçĕ, ăслă сăмахĕ, тирпейлĕ хусканăвĕпе тум-юмĕ пĕрре курсанах тыткăна илеççĕ.

- Эсĕ-и-ха вăл «Алка пичче» текенни? — терĕ сасартăк Петр Петрович, манпа тӳрремĕнех паллашнă майăн, эпĕ трибуна çинче каланă сăмахри асне юлнă детале аса илтерсе.

Унтан алăри сăвă листисене тытрĕ те тенкел çине меллĕн вырнаçса ларчĕ. Эпĕ унпа юнашар пулса тухрăм. Часах пирĕн йĕри-тавра сăн ӳкерттерме пынă çамрăксем пухăнса çитрĕç.

Хусанкай сăвă листисене уçкаласа пуринпе те хаваслăн калаçнă май фотокорреспондент пире ӳкерсе те илчĕ. Çаплах Семен Элкерпе юнашар ларса сăн ӳкерттертĕмĕр. «Ялав» журнал канашлу çинчен çырнă отчетра Хусанкайпа пĕрле çапăннă ӳкерчĕк пичетленсе тухнăччĕ. Йăнăшман ун чухнех «малашнехине витĕр курса тăма» пултарнă Бурнаевский. Саманчĕ пирĕншĕн чăннипех те историлле пулчĕ темелле. Ара пире Хусанкай хăй асăрхарĕ-çке...

Тепĕр икĕ çултан, чăваш писателĕсен пиллĕкмĕш съездĕнче поэзи çинчен тунă содокладра вăл пирĕн ăрури çыравçăсем пирки çапла каланăччĕ: «Алла яхăн çамрăк сăвăç шутланать иккен пирĕн. Вĕсем хушшинче: А. Канаш, Н. Сандров, А. Воробьев, В. Алентей, Г.Орлов, Г. Айхи, Ю. Петров, М. Хури, Ю. Скворцов, А. Галкин, П. Васильев, А. Юман, А. Аслут, М. Волкова, Н. Кузьмина тата ыттисем те - асăнма тивĕçлĕ ятсем. Хамăра кура ку чылай пысăк ушкăн, çителĕклĕ резерв, поэзин ыранхи сасси. Республикăра сăвăçсăр район çук та пулĕ, сăвăçсăр ял та сайра-и, тен. Ăçта пурнăç — унта поэзи».

Çамрăксемшĕн тăрăшни — малашлăхшăн тăрăшни. Халăх хăйĕн пуласлăхĕпе, ăрусен çыхăнăвĕпе вăйлă. Пуласлăх паян туптанать. Ку вăл поэзие те пырса тивет. Аякрине курма пĕлнĕ сăвă ăстине çакă, паллах, шутлаттармасăр тăма пултарайман. Паян эпир вăл ун чухне епле тĕрĕс шутланине курса тăратпăр. Ĕнтĕ асăннă ятсене чăваш вулаканĕсем лайăх пĕлеççĕ. Вĕсенчен хăш-пĕрисем хăйсем калассине каласа пурнăç çулне вĕçлерĕç, ыттисем вăйпитти тапхăрне

кёрсе тăван поэзин паянхи уйĕнче çанă тавăрса вăй хураççĕ.

* * *

Хусанкай... Унччен эпĕ ăна мĕнле пĕлнĕ-ха? Питех те çиелтен те çителĕксĕр темелле. Шкул çулĕсенче «Таня» поэмипе уйрăм сăввисене тĕпчесе вĕреннĕ. Вăрçăччен тухнă япалисене пачах та вуламан пулнă ёнтĕ. Учебниксенчи биографилле справкăсенче произведенисен ячĕсене асăннипех çырлахатчĕç. Пирĕн енне çитеймен те пуль тухнă пек кĕнекисем. Ячĕ чĕлхе çинчех пулнă-ха. Хăйне пĕлекенсене те курса калаçнă. Вĕсем пурте поэт ăс-хакăлĕпе пултарулăхне пысăк хак паратчĕç.

Вăрçăччен тухнă тăван литература учебникĕсенче Хусанкай пултарулăхĕ çинчен тиркесе çырнă йĕркесене те вуласа тĕлĕннĕччĕ пĕррехинче. Хăш-пĕр ырăнсене хама валли çырсах илнĕччĕ. Статья авторĕпе (вăл кам пулнине те астуса юлман) килĕшнĕрен мар, çук! Пачах урăхла, унта вăл хамăр пурте пĕлекен тата юратакан Константин Иванов пирки те усал сунса çырни пурччĕ те, çавăн хыççăн эпĕ палламан автор шухăшĕсем çине шанмасăр пăхнăччĕ-ха. Ăна ёненес пулсан, Хусанкай ытти поэтсен витĕмĕнчен хăтăлса çитмен имĕш, «тĕрĕс çул çинчен пăрăнса, индивидуализм, есенинщина еннелле сулăннă», «пулхăршăн йĕрсе çырма тытăннă», «мăнкăмăллă», «эп» текен шухăшĕ палăрнă т.ыт.те.

Ӳсĕм çулĕпе пынă чух пĕр поэт тепĕр поэт пултарулăхĕ умĕнче пуç пĕкни, ăсталăха унран вĕренни саккунлă-ха вăл. Хусанкайăмăра çеç мар, Есенин хăйне те начар пĕлнĕ ёнтĕ эпĕ ун чухне. Унăн сăввисем пичетре курăнмастчĕç, вĕсен асамлăхĕ çинчен çӳрекен легендăсем çеç кĕретчĕç хăлхана. Халĕ акă эпир поэтăн «есенинщина» витĕмĕпе çырнă сăввисене те пĕлетпĕр. Эпĕ вĕсенче нимĕн начаррине те асăрхамастăп. Пачах урăхла, унта чăваш поэчĕн хăйĕн ларса çитнĕ сасси çирĕппĕн илтĕнет. Епле тарăн туйăмлă та шухăша яракан лирика тĕслĕхĕ вăл!

Пирĕн ӳсĕмрисем астунă вăхăтра хаçат-журналсенче Хусанкай ячĕ кĕрлетчĕ ёнтĕ. Вăрçă çулĕсенче çĕнĕрен тухма пуçланă «Илемлĕ литература», «Тăван Атăл» альманахсенче унăн фронтри сăввисене тĕл пулкаланă: «Пӳртне-и? Вучахне те хăварман...» (1943, Орел облаçĕ), «Иртетпĕр Белоруссии çĕрĕпе... Ăçта ялсем, çут хулисем ăçта-ши?..» Е сасартăк тăван Чăваш çĕр-шывне аса илтерекен йĕркесем: «Хурăнлăхра мунча шăрши кĕрет, Чăваш мунчи шăрши. Ай-хай çапăнасчĕ те пĕрре! Хăçан кĕрĕпĕр-ши?» (1943, Брянск вăрманĕсем»).

«Тăван Атăл» альманахрах Ст. Шавлы поэт хăйĕн тишкерӳллĕ статйинче Хусанкайăн «Таня» поэмине пысăк хак парать, çавăнтах

поэт-фронтовик «Аптраман тавраш» сăвăлла роман çырма пуçлани çинчен пĕлтерни асра юлнă. «Сăвă йĕркисем простă янăраççĕ», - тесе савăнать Шавлы фронтри ĕçченĕшĕн пултарулăхĕ тапса тăнăшăн. 1947 çулта тăван ялтан вунă çухрăмра вырнаçнă Упи пасарне кайсан чăвашла тин çеç тухнă ытти кĕнекесемпе пĕрле П. Хусанкайăн «Çĕнтерӳ юрри» ятлă çӳхе кĕнекине туянса таврăннăччĕ. (Вăл халĕ те тĕрĕс-тĕкел упранать). Кĕнеке вăрçăччен çырнă «Инспектор», «Тантăшсем» сюжетлă сăвăсемпе уçăлать. Вăрçă вăхăтĕнче çырнисем те чылай вырăн йышăнаççĕ унта. «Элкере. Чăваш поэчĕсене» тесе ят панă вăл поэзири аслă пиччĕшĕ çуралнăранпа 50 çул тултарнине хисеплесе çырнă сăввине. Элкер аллăра! Ĕненме пулать-и çакна? Хăçан пулнăччĕ-ха ку? Сăвă айне: «1944. Польша», - тесе çырнă. Тин çеç пек мар-и? Ун чухне Хусанкая аллă та нумай пек туйăнать. «Нумай-и пурнăçăм сахал-и, Пăхассăм çук кала-малла. Сана тытма эп тивĕç алă, Салтак пиччеçĕм, салтакла», - тет те поэт, шухăшлăн хушса хурать: «Пĕрре килет этемшĕн аллă, Пуртех çитейменпĕр алла».

Хăй вара ун чухне 37-ре çеç пулнă-ха. «Харсăр ăмăрткайăк», «Аннене», «Çиле хирĕç çӳрен ут юртать», «Салампи»... (ячĕ кăна мĕн тăрать! Ахальтен мар вăл Чăваш халăх писательне А. Артемьева çав ятлă сăнар тума хавхалантарман-ши? Халĕ акă Нарспи ятпа пĕрле пирĕн вăхăтри чăн-чăн хитрелĕх символĕ пулса тăчĕ тесен те ытлашши пулмасть пулĕ тетĕп). Мĕн тери хитре сăвăсем! Ăста калăпланă кашни йĕрке шăранса пырать, асра юлать, чуна çĕклентерсе ярать...

Кун хыççăн поэт кĕнекисем йăвăрах та хулăнрах тухса пыма пуçларĕç. Юлашки кăларăмĕсене сиктермесĕр вуласа пынă тес пулать. Сăвăç чапĕ çултан-çул хушăнсах пычĕ, часах ун çумне «халăх поэчĕ» ят хушăнчĕ. Сисĕнмесĕр П. Хусанкай хăй аллă çул хушшинче тунă ĕç вара чăннипех те пысăк чыса тивĕçлĕччĕ: вуншар поэмăсен кĕнеки, сăввисен хисепĕ те çук, куçарусемпе статьясем, очерксем, ăслăлăх ĕçĕсем сахал-и тата! Тепĕр çынна çав ĕçсене тума темиçе ĕмĕр те çитес çук. Пирĕн сăвăç пултарнă ав! Ун ячĕ хăех чăваш ятне пĕтĕм Раççей таранах çĕклет. Çавăнпа юбилее кĕтсе илме хатĕрленекен Хусанкай пире пӳ çитми аслă туйăнатчĕ.

Ăна Ульяновск-Чĕмпĕр тăрăхĕнчен юбилей ячĕпе саламласа сăвăлла çыру та ăсатнăччĕ эпĕ. Сăвă йĕркисем пĕли-пĕлми хайланăскерсем кăна пулнă ĕнтĕ, анчах сăмахĕсене халь тин улăштарма çук. Çакăн хыççăн поэтпа тĕл пулса калаçма та тӳр килчĕ. Мана «Ялав» редакторĕ Георгий Ефимов хамăн тин çеç çырса пĕтернĕ «Телей сăпки» поэма алçырăвне редколлеги членĕсем вуласа тухнă хыççăн кăранташпа паллă тунă вырăнсене юсама пĕр-ик куна Шупашкара чĕнсе илнĕччĕ.

Журналсен редакцийёсем ун чухне Писательсен Союзёпе пёрлех – Хёрлё площадьри кётесри шурă чул çуртра вырнаçнăччё.

Петр Петрович «Ялав» редакцийёнчен тухрё те тăкăс коридоралла çул тытрё. Эпё вăл иртес çул çинче, кантăк умёнче тăр-пёчченех шухăша кайса тăратăп. Пёр-пёрне курса сывлăх суннă хыççăн Хусанкай манпа чарăнсах калаçма пуçларё. Часах пирён йёри-тавра çынсем сырăнчёç. Уйăп Мишшипе Куçма Чулкаç пырса тăчёç. Петр Петрович çаплах манпа калаçать.

- Поэмуна «Ялав» журнал йышăннă, тесе илтрём. Маттур! Вуласа тухма тăрăшатăпах, - терё вăл. – Мёнле хушаматпа кăларас тетён? Ермилов? Э-э, çук! Халё ёнтё псевдоним тупас пулать. Ермилова мёнле палăк лартăн? Вырăс хушамачё вăл. Пире, чăвашсене, хамăр сăн, хамăр ят кирлё.

Пурте çак шухăша ырласа кула-кула шавлама пуçларёç.

- Псевдонимё пур-ха манăн, - тетёп эпё вăтана-вăтана. – Райхаçатри фельетонсем айне «Юман» тесе алă пусатăп. Аттене асаттепе асанне çапла чённё. Ялтисем ăна халь те çав ятпах пёлеççё. Анчах унашкал ят пулнă литературăмăрта...

- Юман? Питё чаплă ят! Чăн-чăн чăваш ячё! Мёнех вара? Çёнё Юман пултăр. Çапла çырас пулать, - хистесех каларё вăл.

Çапла юмахлакаласа тăнă хушăра эпё сăвăçăн туя тытнă алă пўрнисене асăрхарăм. Алли унăн пёчёкçё те пёркеленчёксем нумай унта. Калăн ватă çын алли тесе. Пичё апла мар авă. Сăнёпе çулёнчен те çамрăкрах пама пулать ăна. «Ўт тарать», - терё хăех аллине çёклесе пўрнисене сăтăркаланă май.

Журналта манăн поэма 1958 çулхи январь, февраль тата март уйăхёсенчи номерсенче «Ермилов» хушаматпах çапăнса тухрё. Çав çулхинех, кёркунне, чăваш писателёсен пиллёкмёш съезчё пулса иртсеччё. Съездра поэзи пирки Петёр Хусанкай содоклад турё. Унта вăл мана чи малтан йёкёр хушаматпа – «Ермилов-Юман» тесе асăнчё. Çапла вара эпё Ермиловран Юман пулса тăтăм.

Калас пулать, поэзи ăсталăхё П. Хусанкая самантлăха та канăç паман. Вăл хăй чёлхене лайăх пёлнё, ыттисене те çаплах тёплён ёçлеме хистенё. Сăвăсенчи кăлтăксене е çўп-çапсене асăрхасан, кун пирки яланах тўрремён каланă, нимёнле авторитета та пăхăнман. (Элкер кăна çак йыша кёмен. Хусанкай ăна уйрăмах тăванла çывăха хурса саватчё. Çаплах Митта Ваçлейён пултарулăхне те пысăка хурса хакланине пёлекенсем такам та асăрханă ёнтё). Çакна эпир унăн йышлă статйисене вуласан та куратпăр. «Платон манăн тус та, чăнлăх хаклăрах», - тесе çырнăччё вăл хăех кун пирки. Çав чăнлăхшăн

чылайăшне кӳрентерме те тивнĕ. (Принциплă, тишкерекен ĕç авторне, ырă сунса çырнă критикăна чуманлăхпа тăшманла курайманлăх сĕрĕмĕ аптратнипе нихăш енчен те танлаштарма çук. Шел пулин тн, литература ĕçĕ-хĕлĕнче критика çине тӳнтерле пăхнă тĕслĕхсене сахал мар илсе кăтартма пулать). Сиплĕ эмел яланах йӳçĕ. Çакна тӳссе курман çыравçă çуках. Çамрăк чух Хусанкая хăйне те сахал мар йĕплĕ çăмах çитернĕ. Кунта «тăварласа хыптарни» те паллă. Тертленнĕ. Ăна-кăна вăхăчĕ хăех тикĕслет. Кĕрешӳре пиçĕхнĕ, хăйĕн перине кунран-кун туптанă.

Ашшĕ-амăшĕ хăйĕн ачисене ятла-ятла вĕрентет, çын тăвать. Кайран, ӳссе çитсен, мăннисем çакăншăн тав сăмахĕ çеç илтеççĕ. (Урдаш калашле, «Тавах, анне, ятланăшăн...»). Ура хума та элеклеме çеç пĕлекен явăлсемшĕн сăмахĕ урăх: «Ăçта вĕсем халĕ?..» (Артемьев аса илĕвĕнчи Хусанкай сăмахĕ). Ман шутпа поэзире те асли вĕрентсе каланă сăмахсемсĕр ӳсĕм кĕтме хĕн. (Ку вăл «Чăн-чăн критик-çыравçă хăй» тенине пĕртте хирĕçлемест).

Чăваш писателĕсен пиллĕкмĕш съездĕнче те Хусанкай содоклачĕ нумай калаçтарчĕ. Ыттисемпе пĕрлех, ятлă поэтран мана та хытă лекрĕ.

«Астумасăр ютран илсе кĕртнĕ сăнлăхсем, юри туса мар, ăнсăртран пулма пултарнисем» хушшинче вăл «Телей сăпкинчи» тĕслĕхе илсе çапла каларĕ: «Е ак тепĕр çамрăк сăвăç А. Юман: «Хăрушă ĕçе пăхмашкăн вăтанса хĕвел питне пĕлĕтпе хупларĕ», - тет. Пăхăсăн — К. Иванов 50 çул ĕлĕкрех: «Намăсланса, хĕрелсе хĕвел анчĕ, пытанчĕ», - тенĕ.

Поэт хăйĕн сăмахне тытнă, манăн çав самаях пысăк поэмăна аллинчи кăранташĕпе паллă тусах вуласа тухнă иккен. Итлесе ларнă манăн ятăм татах та илтĕнса кайрĕ залра.

«Тепĕр чух пирĕн сăвăçсем ваттисен сăмахĕсемпе те кирлĕ усă курма пĕлмеççĕ, - терĕ докладчик. — «Туман тиха пилĕкне ан хуç» - кĕскен те уçăмлăн каланă халăх. Анатолий Юман ак епле шĕветсе ярать: «Туман тихан черченкĕ пилĕкне авал, пĕлмесĕр-и, ан хуçăр, тенĕ». Те черченкĕ-ха, те çирĕп пулать, - туман тиха-çке!»

Хăй çав вăхăтрах аллипе пуçран пиччĕшле шăлса илнĕ пек те туйăнать. Çитменлĕхсемпе кăлтăксене асăннă хыççăн: «Ахаль çав çамрăк автор пултармалласкер, унăн чĕлхи те чылай таса... ӳссе пыракан çамрăк ăна-кăна час тавçăрса илессе шанас килет», - тесе хучĕ.

Хусанкай поэзи çинчен тунă содокладне вырăсла çырса хатĕрленĕччĕ, ăна съезда хутшăннисене валеçсе панăччĕ. Часах поэт

çав содокладран статья туса Мускавра тухса тăракан «Знамя» журналта çапса кăларчĕ. Чăвашла вăл «Ăсталăхпа чăнлăх» статьясен пуххинче çапăнса тухнă (1964).

Астăватăп-ха, Мускав журналĕнче поэт статйине вуланă хыççăн, пĕрле ĕçленĕ вырăс журналисчĕ А. Нагаткин мана мухта-мухта саламлать.

- Ара статьяра мана хурласа çеç асăннă вĕт, - тетĕп çакна.

- Пулин! Ку та пысăк чыс! Куратăн вĕт: авторĕ сана ырă тăвас тесе çырнă, шанчăкне те çухатмасть, - парăнмасть çакскер.

Ку вăл чăнах та çапла пулнă ĕнтĕ. «Доброжелательная критика», - текен сăмах çаврăнăшĕ пур вырăссен. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, принциплă чăн-чăн критика вăл яланах çапла пулмалла та. П. Хусанкай тĕслĕхĕ çакна тепĕр хут çирĕплетет. Ахальтен мар çавăн чух хăйĕн тин çеç çапăнса тухнă «Аптраман тавраш» сăвăлла романне парнеленĕ май экспромтла сăвăлласа çапла çырса хунăччĕ: «Анатолий Юмана - ĕненетĕп таланта! 3.VII.58. Шупашкар».

Кайран, «Телей сăпки» поэмăна уйрăм кĕнекерен кăларнă чух, поэзири аслă пиччеçĕмĕн канашĕсемпе асăрхаттарăвĕсене шута илсе тепĕр хут тĕплĕн ĕçлеме тиврĕ те. Вулакансене те, авторне те çакăн усси куçкĕретех.

* * *

«Хусанкай шкулĕ» çакăнпа çеç вĕçленмерĕ-ха.

1962 çулхи август уйăхĕнче «Тăван ялта» ятлă лирикăллă поэма çырса «Ялав» редакцине ярса патăм. Çав кĕркуннех, октябрĕн 19-мĕшĕнче, çамрăк писательсен черетлĕ канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта мана та чĕннĕччĕ. Маларах, хам килĕшнипе, алçырăвне пăхса тухма Петĕр Хусанкая пачĕç.

Канашлура мĕн-мĕн çинчен каланине çырса тăмăп. Хусанкай вара хăйĕн сăмахне йăлтах манăн çĕнĕ поэмăна халалларĕ темелле, ăна тин çеç пăхса тухнăскер, кашни йĕрки çинче тенĕ пекех чарăнса тăчĕ. Поэт шариклĕ авторучкăпа, тин çеç модăна кĕнĕскерпе, паллă туса тухнă çав алçырăвĕ çаплах упранать. Малтанхи страницăри пушă вырăна Петр Петрович çапла çырса хунă:

*«Тăшманăмран эп хĕрхенӳ кĕтместĕп,*
*Тус-çыннăм — ан хĕрхентĕр вăл мана.*
Гёте».

Çак йĕркесене хăй калас сăмахĕн эпиграфĕ пек ăнланмалла ĕнтĕ. Канашлури сăмахне те вăл çав йĕркесене аса илтернинченех пуçларĕ.

- Эпĕ Юманăн тус-çынни пуласшăн, хĕрхенесшĕн мар, - терĕ вăл.

Пуҫланчӗ вара тишкерӳ! Тӳррипе каласан, эпӗ хамӑн япалана аплах вӑйсӑр тесе шутламанччӗ. Шӑйрӑксем тупӑнасса кӗтнӗ-ха. Ӑста куҫӗ ӑна та, кӑна та асӑрхать. Ҫитменлӗхсемпе кӑлтӑксем туллиех иккен манӑн унта!

«Каплипе пичетлеме май ҫук», - тесе ҫырса хунӑ хамах блокнот ҫине поэт сӑмахӗсене. Вӑхӑт иртнипе сарӑлнӑ блокнотри йӗркесене малалла вулар: «Кукша» - уҫах мар. Андриян Николаев космонавт ҫинчен сӑмах май ҫеҫ каласа кӑтартни ҫителӗксӗр. Ку хӑех аварасӑр пысӑк тема». «Композици хавшак». «Каласа кайнӑ вырӑнсем пур». «Тӑван кӗтес – чӑвашлах мар, мана вырнаҫмасть». «Абстрактлӑ сӑмах». «Иккенсем нумай», «ҫкесем» те пур. «Ямб тума йывӑр. Хорей ҫӑмӑлтарах пырать». «Е маннӑ» тени «йӗм аннӑ» евӗр илтӗнет». «Рифмӑсем йӑвашшисем нумай», «Эп шутсӑр утнӑ такӑр ҫул». «Шутсӑр – беспечно». «Туллиех» - «тулли» кирлӗ». «Комбайн курап» - проза». «Вӗрен пек» кирлӗ», «тӳшек» сӑмахпа вӗсем пӗр-пӗрне хирӗҫлеҫҫӗ». «Ылӑха» мар, «ырра», «Ямб пӑсӑлса каять», «Сӑмах майлашӑвӗ тӗрӗс мар», «Кукӑр» - «шакӑр» - рифма мар», «Пур – пыр» - начар», «Уҫӑ мар», «Ниме пӗлтермен сӑмахсем», «Куҫ хыҫӗнче» темест чӑваш, «кут хыҫӗнче», тет. Хӑш-пӗрисем апла ҫырма вӑтанаҫҫӗ. Ку вӑл - суя намӑссӑр. Ложная справедливость».

Канашлу хыҫҫӑн алҫырӑвне тепӗр хут ӗҫлеме тавӑрса пачӗ. Унта паллӑ тунисене илсе кӑтартас килет: «Проза», «Шаблон», «Ритм», «Сахал!», «Сӑнарсӑр каласа кайнӑ», «Ҫаплах пӑхса ларать ҫунатсӑр, тахҫан кивелнӗ ҫиларман» йӗркесем тӗлӗнче – «Сергей Есенин пулнӑ!», «Унччен ҫыртма йӗмпе е унсӑр чупса ҫӳренӗ ачасем» тӗлӗнче – «Африкӑра мар-ҫке», «... ку Юман-иҫ пулчӗ» тӗлӗнче – «Ку сӑмах ҫук сирӗн». «В.М.» (Владимир Маяковский ӗнтӗ. – **А.Ю.**). Сӑвӑлласа хуни пур: «Поэт тени ӑҫта вӑл кайтӑр авторитетсӑр лашапа? – Абашевпа Иван Малгай та ҫӳреҫҫӗ халӗ «Волгӑпа». «Аваннине, наачррине те парать мана кала-кала» «те» пулмалла чӗлхе йӗркипе. «Обще!», «Мӗне, кама?», «Хаҫат!»

Килӗшнӗ вырӑнсене «хӗрес» лартса паллӑ тунӑ. Рецензент пач тӗкӗнмен вырӑнсем те чылай алҫырӑвӗнче. Пӗтӗмӗшпе илсен, вӑл ҫын ӗҫне хисеплени сисӗнет, тирпейлӗ те асӑрханса паллӑ туса пынӑ, саспаллисем сывлӑш пек ҫӑмӑл та чӑваш тӗрри пек тикӗс шӑрҫаланаҫҫӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн эпӗ поэмӑна ҫине тӑрса юсарӑм, кайран хам ӗҫлекен район хаҫатӗнче пичетлесе кӑлартӑм. Хаҫатӑн пӗр экземплярне поэзири пиччӗмҫӗм патне ярса патӑм. Ҫавах та райхаҫат – райхаҫатах ӗнтӗ. Пуҫласа ҫыраканӑн «пысӑк пичете» те тухас килет. Ҫавӑнпа

эпӗ калас килнӗ шухӑшсене пӗтӗмлетнӗ ҫӗнӗ поэмӑна «Тӑван Атӑл» журнал редакцине сӗннӗччӗ. Ун чухне Петр Петрович ҫав журналӑн редколлеги членӗнче тӑратчӗ, ҫапла вара унти поэзи пайӗн лавне те, тӗпрен илсен, вӑлах туртса пынӑ. Ку е вӑл япалана кун ҫути кӑтартасси унран ҫеҫ килнӗ тесе шутланӑ ӗнтӗ эпӗ. Редколлеги членӗсем те: «Хусанкай килӗшсен, сӑмахсӑрах яратпӑр», - тесе шантарнӑччӗ. Халӑх поэчӗн сӑмахӗ - маншӑн саккун. Ҫавӑнпа эпӗ вӑл алҫырӑвӗнче паллӑ тунисене питех те тӑрӑшса асӑннӑччӗ. Ҫавах асӑннӑ поэма тек кун ҫути кураймарӗ.

«Ҫапла. Тепӗр хут вуласа тухрӑм эпӗ ӑна. Килӗштеретӗп. Анчах вӑл малтан райхаҫатра пичетленсе тухнӑ-ҫке», - тесе хуравларӗ Петр Петрович мана Шупашкар урамӗнче ӑнсӑртран тӗл пулсан. Унпа пӗрле утса пыракан Филипп Лукин композитор тӳрех ман хута кӗме пӑхрӗ.

- Пичетлес пулать ӗнтӗ. Ачи маттур вӗт, тӑрӑшать, - терӗ.

Анчах ятлӑ-сумлӑ поэтӑмӑр яхӑна та ямасть. Ун чухне эпӗ ҫакна Халӑх поэчӗ пичетлӗ сӑмах пӗлтерӗшне питех те пысӑка хурса хаклани вырӑнне хурса ӑнланатӑм. Ара, райхаҫат та пичет-ҫке. Шел, ӑна ҫаплах кирлӗ пек хисеплеменнисем чылай-ха, пуҫлӑхсенчен тытӑнса хаҫат-журнала ҫырӑнакан журналистсем таранах. Халӗ урӑхларах шухӑш та ҫуралать: поэмӑна тытса чарнин тӗп сӑлтавӗ унта хускатнӑ ыйтусем мар-ши? Вӗсем вара, чӑнах та, ҫав тапхӑршӑн вӑхӑтсӑр шутламан-и ха? Ку чухне пирӗн куҫсем яриех уҫӑлчӗҫ, унччен курман-илтменнине курнӑ-пӗлнӗ хыҫҫӑн ҫапла шутлама сӑлтав та пур. Ун чухне ятлӑ-сумлӑ ҫын та пур чухне те «хӑлӑхсӑр автора» хӳтӗлесе хӑварма пултарайман сӑлтавсем те пулнӑ. Эпӗ асӑннӑ поэмӑра КПСС обкомӗн секретарӗ таранах тиркевлӗ сӑмах калама хӑйнӑччӗ. «парти чирӗн паллисене» куҫ кӗрет каланӑччӗ. Анчах тӳррӗн калани тӑванне юраман-ҫке ун чух.

Чылай ҫулсем иртсен «Тӑван ялта» поэмӑна ҫӗнӗ куҫпа пӑхса тухрӑм, чылай кӗскетрӗм, ҫӗнӗ сыпӑк хушрӑм. Шухӑшӗпе илсен, вӑл нимӗн чухлӗ те кивелмен пек туйӑнчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн эпӗ ӑна 1994 ҫулта Ульяновскри «Симбирская книга» издательствӑра ҫапӑнса тухнӑ «Суйласа илнисем» кӗнекене кӗртрӗм.

* * *

«Советская Россия» хаҫатра фельетон пичетленнӗ. Авторӗ Шупашкарти Хӗрлӗ площадьри светофор тавра шӑл йӗрет. Чӑвашсен тӗп хулинче светофор вырнаҫтармалӑх кӗтес те ҫук, имӗш.

Ҫак шӑлйӗрен Петр Петровича питех те тарӑхтарса янӑ.

- Вуларӑр-и хаҫатри фельетона? Авторӗ чӑвашсене намӑса пӗлмесӗр

элеклет, - тесе касса татрĕ ятлă поэтăмăр.

Калаçу Хĕрлĕ площадьри Писательсен Союзĕн çурчĕ умĕнче пулса иртрĕ.

Сенкер тӳпе. Хĕртсе хĕвел пăхать. Автомашинăсем хĕвĕшеççĕ. Хула халăхĕ те те йышлă. Элекçе пăхмасăр, пурнăç хăй еккипе малалла шăвать.

* * *

Чăваш литературин писательсен икĕ съезчĕ хушшинче (1967-1971)» библиографилле кăтартусенче çапла çырнă йĕркесем пур: «1968 çулхи октябрĕн 27-мĕшĕ. В Чебоксары прибыл известный болгарский писатель и журналист, большой друг чувашского народа Веселин Иосифов. Он побывал на предприятиях и в колхозах, клубах и учебных заведениях, встречался с писателями, журналистами, деятелями культуры.

Веселин Иосифов выступил на торжественном пленуме Чувашского обкома ВЛКСМ, посвященном 50-летию Ленинского комсомола».

Шăп та шай çав кунсенче эпĕ Шупашкара кайма тухнă-мĕн. Ун чухне аякри ентешсем шĕкĕр хуламăра, тĕпрен илсен, шыв çулĕпе, Атăл тăрăх пăрахутпа çӳренĕ темелле. Вăхăчĕ ытларах иртетчĕ ĕнтĕ. Ун вырăнне хăтлăхне мĕн çитĕ! Çул çинчи чи пысăк хула – Хусан. Унта çитсессĕн пăрахут çинчи пассажирсем ытларах хĕвĕшме пуçлаççĕ: пĕрисем анса юлаççĕ, теприсем ларма васкаççĕ. Куннехинсе те çанталăкĕ кĕрхи пулин те, çуллахи пек сенкер тӳпе. Хĕвелĕ те ăшшине хĕрхенмесĕр савăшать.

Пăрахут карлăкĕ çине таянса Хусанпа сывпуллашнă хыççăн нумай кайнă-и, çук-и, - ресторана кĕрсе апатланма шутларăм. Сасартăк сĕтел хушшинче Хусанкая курах кайрăм. Унпа пĕрле тепĕр арçын тата хĕрарăм. Арçынни хамăр çынсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Майри хура платьепе, мăйĕ çине сап-сарă та шултра шăрçа çыххи çакса янă. Пысăк хăлха çаккисем йăлтăр-ялтăр çиçеççĕ. Çинçешке те хура сăнлă хăй. Чисти чикан майри пекех туйăнать. Вĕсем те тин çеç апатланма хатĕрленеççĕ куран, сĕтел çиййĕ пуш-пушах. Эпĕ çывăхах пырса тăтăм. Часах Петр Петрович та мана асăрхарĕ. Эпир хаваслансах пĕр-пĕрне сывлăх сунтăмăр. Вăл мана сĕтел хушшинчи пушă вырăна кăтартса пĕрле ларма сĕнчĕ.

- Паллашăр: ку вăл пирĕн çамрăк поэт, - терĕ хăй вырăсла, хăнасене манпа паллаштарса. Çийĕнчех хăнасем камсем пулнине те каласа кăтартрĕ. – Ку акă – «Литературен фронт» хаçат редакторĕ Васелин Иосифов, ку – унăн мăшăрĕ. Вăл та журналистка.

Çакă тĕлĕнтерсе те çĕклентерсе ячĕ: манпа калаçнă чухне поэтăмăр чăвашла пуплет, хăнасем лăпкăн итлесе лараççĕ. Пăлхарсемпе вăл пăлхарлах калаçса илет, пурне те пĕр япала кăсăклантарнă чухне вара вырăс чĕлхи пĕр-пĕрне ăнланма пулăшать пире.

Петр Петрович аякри тăвансене Атăл çинчи пăлхарсен тĕп хули вырнаçнă вырăнсене кăтартса çӳренĕ иккен, халĕ вĕсем Шупашкара таврăнаççĕ.

Туслăх кĕрекинче ларса пынă май Шупашкара çитнине сисмерĕмĕр те. Ку вăхăтра çанталăк сулхăнлатнăччĕ. Йĕпхӳ пек çумăр пĕрчисем ӳккелеççĕ. Çăмăл плащсене уртса çыр хĕррине тухма пуçларăмăр. Чĕрере çаплах тулли савăнăç. Туслăх хăвачĕ ăшăтса тăрать пире. Пристане Хусанкайпа унăн хăнисене кĕтсе илме чăваш писателĕсен пысăк ушкăнĕ чĕрĕ чечексемпе тухнă. Малта - Илпек Микулайĕ. Часах пăлхар-туссем писательсен ытамне кĕрсе ӳкрĕç.

* * *

1969 çул çĕр-шыв В.И. Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине чаплăн палăртма хатĕрленнĕ çулталăк пулчĕ. Çав çул Ильич çĕр-шывĕ çĕр чăмăрĕ çинчи мĕн пур континентсенчен туристсемпе хăнасене йышлăн кĕтсе илчĕ. Апрелĕн 24—28-мĕшĕсенче Ульяновскра тата облаçра Чăваш культурин кунĕсем пулса иртрĕç. Ăна В.И. Ленин çуралнăранпа 100 çул тата Чăваш Республикине туса хунăранпа 50 çул çитнине халалланă. Литературăпа искусство ĕçченĕсем икĕ бригадăна уйрăлса çӳрерĕç. Писательсенчен унта Петĕр Хусанкай, Николай Дедушкин, Алексей Воробьев, В. Давыдов-Анатри тата Георгий Ефимов пулчĕç.

Чăваш çĕр-шывĕнчен хăнасен пысăк ушкăнĕ килни çинчен (ăна КПСС Чăваш обкомĕн секретарĕ И.П. Прокопьев ертсе пычĕ) эпир «Ульяновская правда» хаçатран пĕлтĕмĕр. Унăн пĕр номерне чылайăшпех Чăваш культурин кунĕсене халалланăччĕ (номерте Петĕр Хусанкайăн В.И. Ленина халалланă пысăк сăвви пурччĕ, вырăсла ăна хăех куçарнăччĕ). Çав чаплă туслăх уявĕ епле пыни çинчен кайран та пичетре тăтăшах пĕлтерсе тăчĕç.

Хаклă хăнасем Чăнлă çĕрĕ çине килсе çитиччен чылай маларах районти Культура çурчĕ умне халăх пуçтараннă. Вĕсем хушшинче кӳршĕ ялсенчен килнĕ чăвашсем те чылай. «Ырă сунса кĕтсе илетпĕр!» - тесе çырнă сăмахсем курăнаççĕ хăмач çинче.

Акă кĕтнĕ самант çитрĕ. Чăвашсен паллă артисчĕсем, музыканчĕсем тата поэчĕсем Чăнлă çĕрĕ тăрăх утаççĕ. Юрăпа ташă ансамблĕн коллективĕ... Делегацие Чăваш композиторĕсен Союзĕн правлени председателĕ, СССР Патшалăх премийĕн лауреачĕ Филипп

Миронович Лукин ертсе пырать. Хӑнасем хушшинче эпӗ паллана ҫынсене шыратӑп. Часах Алексей Воробьевпа Георгий Ефимова асӑрхатӑп. Хӑнасене, йӑла тӑрӑх, ҫӑкӑр-тӑварпа кӗтсе илеҫҫӗ, ҫамрӑк ленинецсем саламлаҫҫӗ. Официаллӑ пай хыҫҫӑн хаклӑ хӑнасене тӗл пулса хамӑрӑн савӑнӑҫа пӗлтеретпӗр. Хусанкай, Давыдов-Анатри тата Дедушкин тепӗр бригадӑпа ҫӳреҫҫӗ иккен. Вӗсем те килсе ҫитмелле. Часах Культура ҫурчӗн сцени ҫинче чӑваш халӑхӗн ҫунатлӑ юррисемпе хӑватлӑ ташшисем янӑраса каяҫҫӗ. «Атӑл ҫинчи асамат кӗперӗ» - ҫапла ят панӑ чӑваш халӑхӗн кун-ҫулӗ ҫинчен каласа паракан юрӑпа ташӑ композицине.

Тепӗр кунне, апрелӗн 26-мӗшӗнче, Аслӑ Нагаткина Чӑваш делегацийӗн иккӗмӗш ушкӑнӗ те килсе ҫитрӗ. Хӑнасем «Улхаш» тата «Память Куйбышева» колхозсенче пулчӗҫ. Хуҫалӑхӗсем кусем Вӑта тата Анат Тимӗрҫен, Кивӗ Улхаш ялӗсенче вырнаҫнӑ. Вырӑнти пуҫлӑхсем хӑнасене хуҫалӑхсемпе тӗплӗн паллаштараҫҫӗ, вӗсен экономикипе  культури ҫинчен каласа кӑтартаҫҫӗ. Хаклӑ хӑнасене кӗтсе илме ватти те, вӗтти те тухнӑ.

Вӑта Тимӗрҫенте эртелее паллӑ ученӑй И.И. Корнилов та хутшӑнчӗ. Ҫакӑ асран кайми тӗл пулӑва татах та илемлетсе ячӗ.

Паллашӑва Кивӗ Улхаш ялӗнчен пуҫлама калаҫса татӑлчӗҫ. Шӑп та шай ҫавӑн чух эпӗ Корниловпа Хусанкай тӗл пулу сӗтелӗ хушшинче ӑшшӑн калаҫса ларнине асӑрхарӑм. Мӗн ҫинчен калаҫрӗҫ-ши вӗсем? Пӗлме хӗн. Эпӗ вара ун чух тӗл пулу ятлӑ поэтӑмӑра тепӗр чаплӑ очерк (унччен вӑл Изотов чӑваш ӑсчах ҫинчен ҫырса савӑнтарнӑччӗ) хайлама хавхалантармӗ-ши? — тесе шутланӑччӗ. Анчах очерк ҫуралмарӗ. Ку, тен, сӑвӑҫ сывлӑхӗ япӑхланнинчен те килнӗ-и? Ун чух вӑл йывӑр чирли сисӗнетчӗ. Темле таблеткисене те пӗрлех чиксе ҫӳретчӗ вӑл, анчах вӗсем те, темме, пулӑшаймастчӗҫ.

Пуҫлӑхсен сӑмахне итленӗ хыҫҫӑн машинӑсен ушкӑнӗ ялти лавкка урамне ҫитсе чарӑнать. Кунта колхозри комсомолецсемпе ҫамрӑксем нумаях пулмасть сквер чӗртнӗ пулнӑ. Хӑнасем ҫав ҫӗнӗ сквера йывӑҫсем лартрӗҫ. Халӑхпа пӗрле ялти чи ватӑ мучи, кӗреҫе сухаллӑ Петр Савинович Сидехменов сад ӑсти те тухнӑ. Унпа Петӗр Хусанкай ӑшшӑн калаҫать. Часах акӑ, халӑх ырласа-хавхалантарса тӑнӑмай, пирӗн поэтӑмӑр та аллине кӗреҫе ярса тытрӗ. Эпӗ ӑна шӑтӑк чавма пулӑшрӑм. Юнашарах Г. Хирбю композитор тӑрмӑшать. Йӗри-тавра кӗреҫесем чанклатнӑ сасӑ ҫеҫ илтӗнсе тӑрать. Ҫапла вара карта тытнӑ урамваррине хунавсем лартса хӑвартӑмӑр. Эпӗ Хусанкай лартса хӑварнӑ йывӑҫ тӗмӗ ыттисем хушшинче ҫухалса каять пулӗ тенӗччӗ. Хунавӗ пысӑках марччӗ. Эпӗ ӑна акаци тӗмӗ пек те астӑватӑп. Теприсем улмуҫҫи хунавӗ пулнӑ вӑл, тесе ҫирӗплетеҫҫӗ. Епле пулсан

та, ял халăхĕ ăна ку таранчченех «Хусанкай улмуççийĕ» тесе астуса тăрать.

Колхоз клубĕн сцени çнче хăнасем ял-йышпа çывăхрах тĕл пулчĕç. Каллех çăкăр-тăвар, салам сăмахĕсем. Чăваш делегацийĕ ятĕнчен Чăваш Республикин Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Н.Е. Егоров сăмах илет. Халăхпа тулнă зал хаклă хăнасене тимлĕ итлет, вĕсене алă çупса саламлать. Кун хыççăн Чăваш радио хорĕн коллективĕ тата чăвашсен паллă артисчĕсем Мефодий Денисов, Тамара Чумакова юрăсем юрласа савăнтарчĕç, Петĕр Хусанкайпа Васлей Давыдов-Анатри сăвă калаççĕ.

Халăх пырса тăрать. Тек вăл клуба шăнăçмасть ĕнтĕ. Кун хыççăн майне тупаççĕ: концерт урамри вăхăтлăха тунă эстрада сцени çинче малалла пырать.

Каç пулас умĕн Культура кунĕсене хутшăннисем «Память Куйбышева» колхоза пырса çитрĕç. Урамра кĕнекесемпе сутă тăваççĕ. Петĕр Хусанкайпа Васлей Давыдов-Анатри поэтсем, Григорий Хирбю композитор лутра грузовик кузовĕ çинче ларнă май хăйсен кĕнекисем çине автографсем çыра-çыра параççĕ. Кузов хĕрринче çап-çамрăк та хитре пит-куçлă сарă чăваш хĕрĕ курăнса каять. Хăйĕн тепĕр тантăшĕпе пĕрле вăл çӳлелле кармашса кĕнекесем суйлать.

- Кам хĕрĕ пулатăн эсĕ? Мĕн ятлă? – калаçу пуçлать унпа Петр Петрович.

- Элли Люççи...

Хĕрачан ячĕ сăвăçа кăсăклантарса ярать. Хăй тĕллĕн экспромт çуралать.

- Çыр, Юман, манса каясран блокноту çине, - тесе хушать мана, тĕл пулу вăхăтĕнче хăйсенчен пĕр утăм та хăпмасăр çӳрекен район летописецне (манăн райхаçат вали тĕрленчĕк тумалла).

Эпĕ çыратăп. Ун айне вăл хăй çырнине ĕнентерсе алă пусса хурать: «П. Хусанкай. 26.IV.69. Вăта Тимĕрçен». (Клубĕ Анат Тимĕрçентеха, эпир унта çитнĕ). Акă вăл, çав экспромт:

*Çак пурнăçăн тутли-йӳççи*
*Сана пит паллă мар, Элли Люççи.*
*Анчах ăна пурна-киле*
*Эс те тутанăн темелле.*

Каллех концерт пырать. Хăнасем каллех хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ. Поэзипе музыкăна юратакансем уçă тӳпе айĕнчи эстрада патне капланнă. Каллех Петĕр Хусанкайпа Васлей Давыдов-Анатри, çавăн пекех сцена ăстисем тухаççĕ.

Кивĕ блокнота уçса пăхатăп. Акă мĕнле çырса хуни пур унта:

«Йĕри-тавра чăваш сăвви-юрри хуçаланать çак кунсенче. Хусанкай сцена çине тухсан, халăх пĕр хушă шăп пулать, вăл мĕн каласса кĕтет. Каланă чух вара çăвар карса, хăй залра ларнине манса кайса итлет. Давыдов-Анатри сăвă каланă чух кĕр-кĕр кулă кĕрлесе тăнине епле манăн тата! Кичем те хытă чун-чĕреллĕ çынсем те тӳссе тăраймаççĕ. Эппин, чăваш сăвви халăха кирлĕ ĕç тăвать, вăл малашлăхшăн ĕçлет».

Тĕл пулăвăн юлашки самантĕнче Хусанкай ĕшенни сисĕнчĕ. Анчах хăй çакна палăртасшăн мар. Халăха кĕтнĕ пушă вăхăтра тата район центрне пĕрле ларса таврăннă чухне поэзи çинчен, пурнăçпа вилĕмĕн ĕмĕрхи ыйтăвĕсене хускатса васкамасăр та чĕререн калаçса ларма тӳр килчĕ. Çавна май тин çеç паллашнă, халăх сăмахлăхĕпе ăстан усă курса çырнă «Тилли юррисем» ярăмăн философилле никĕсĕ чуна ярса илни çинчен хамăн шухăша пĕлтермесĕр тӳсеймерĕм. Çавăн чух вăл кĕнеке пасарĕнче туяннă «Хушка мумсем» кĕнекин малтанхи страници çине çапла çырса хучĕ: «Анатолий Юмана, Ан манах, эппин мана! П. Хусанкай. 26.IV.69».

Юлашкинчен хăнасене уяв кĕрекине лартса чысларĕç. Кунта та эпĕ Хусанкайран уйрăлмарăм, юнашарах лартăм. Вăл кĕрекере те кăмăллă та сăпайлă. Лимонад тултарнă куркине çĕкленĕ май кĕреке сăмахĕ те, шӳчĕ те хатĕр ун.

Чăваш çĕр-шывĕнчен килнĕ делегаци районти ĕççыннисемпе тĕл пулни чăваш культурин чăн-чăн уявĕ пулса тăчĕ.

* * *

Юлашкинчен эпир Петр Петровичпа 1969 çулхи майăн 28-мĕшĕнче Шупашкарта тĕл пултăмăр. Ун чухне В.И. Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине кĕтсе илме хатĕрленнĕ май пулнă чăваш писателĕсен черетсĕр IX съезчĕ пыратчĕ. Тăхтав вăхăтĕнче пурте шавлăн иккĕмĕш хутран сарлака карлăк тăрăх анаççĕ. Эпĕ, поэтăн тинтерех тухнă «Суйласа илнисем» кĕнекине туяннăскер, автограф çыртарма пытăм. Куннехинче унăн сăн-пичĕ самаях çуталнă пек те туйăнчĕ мана. Калаçма та хаваслăн кулса калаçать: «Анатолий Юмана асăнма — ялана, авана. П. Хузангай. 28.V.69. Ш-р», - тесе çырса хучĕ вăл хăйĕн çав кĕнеки çине.

...1970 çулхи мартăн 4-мĕшĕ... Çав кун яланлăхах уйрăлма пӳрнĕ пулнă иккен пире поэтпа. Çакăн çинчен эпĕ ракета ĕмĕрĕнчен те «çын урлă» илтрĕм. Чĕрери хурлăха каласа кăтартма сăмах та çитмест. Çавах та хам тӳрех райхаçат валли некролог çырма лартăм.

«Чăваш халăхне, унăн культурине, поэзине юратакан çынна Хусанкай ячĕ калама çук çывăх, - тенĕччĕ эпĕ унта. — Çак ят тăван

халăх ячĕпе калама çук таччăн çыхăнса тăрать. Ку вăл ăна Халăх поэчĕ ятне панипе кăна мар çапла. Литературăмăрта çур ĕмĕр хушши тулăххăн ĕçлесе, вăл унта хăйне евĕр асран кайми йĕр хăварчĕ. Унăн ячĕ наци ячĕпе таччăн çыхăннине эпир пурте хăнăхса çитнĕччĕ ĕнтĕ. Халĕ Петр Петрович çук тенине ĕненес те килмест.

Тен, чун улталамасть пулĕ? Петр Петрович Этем вилнĕ. Хусанкай ят вара пурăнать, пурăнĕ те. Халăх ячĕ манăçа тухмасăр унăн паллă ывăлĕсемпе хĕрĕсен ячĕсем те манăçа тухмаççĕ. Хусанкая та çавнашкал телеейлĕ шăпа пӳрнĕ. Унăн йышлă поэмисемпе халăх пултарулăхне çывăх тăракан тарăн шухăшлă та пысăк ăсталăхпа çырнă хитрее сăвви-юррисем, çавăн пекех паллă тĕпчев ĕçĕсем чăннипех те наци пуянлăхĕ пулса тăчĕç. Эппин, поэт пурăнать, вăл вилмен, вăл пурăнĕ.

Пирĕн районти ĕççыннисем Хусанкай-Поэта çеç мар , Хусанкай Этеме те лайăх пĕлеççĕ. Поэт пирĕн тăрăха икĕ хутчен килсе кайнă. (Малтан вăл чăваш писателĕсен ушкăнĕпе 1961 çулта килнĕ пулнă. – **А.Ю.**) Юлашкинчен акă иртнĕ çул... Çав тĕл пулу юлашки пулассине кам пĕлнĕ-ха! Сывпуллашма тенĕ пек килсе кайрĕ ун чухне халăхăмăр поэчĕ.

Тулта – çуркунне пуçламăшĕ, пуш уйăхĕ хуçаланать. Хусанкай хăй хыççăн хăварнă сăвă-юрăсем те çурхи шыв пек янăрĕç халăхра. Вĕсем пурнăç пекех чĕрĕ.

Хусанкай-Этем пурнăçран уйрăлнă май чăвашсен авалхи йăлипе эпир унăн тупăкĕ умĕнче çĕлĕксене хыватпăр, чĕрери хурлăха хушса шăпланатпăр.

- Тăпру çăмăл пултăр, вилĕмсĕр Халăх поэчĕ!»

Кун çумне халĕ те мĕнех хушса калайăп-ха?

* * *

Хусанкай хăйĕн сăввисенче час-часах халăх пултарулăхĕнче анлăн сарăлнă «çăлтăр» сăнарпа усă курать. Эпир маларах илсе кăтартнă «Ăста поэзишĕн» статйинче çапла каланă вырăн пур: «Чăваш поэзин чăн тӳпинче икĕ çутăран та çутă çăлтăр ялтăртатать: пĕри – Иванов, тепри – Çеçпĕл». Статйине вĕçлеме те çав юратнă сăнарпах вĕçлет: Чăваш поэзи тӳпинче халлĕхе икĕ çутă çăлтăр, терĕмĕр пулсан, малашне вулакансем пирĕн сăвăçсем çинчен халăх юррипе çапла калама пултарччăр:

*Чăн тӳпере çич çăлтăр,*
*Çиччĕшĕ те çут çăлтăр!*»

Мĕнех вара, паян сăвăç ĕмĕтленни пурнăçа кĕнĕ теме пултаратпăр эпир. Чăваш поэзийĕн тӳпинче çăлтăрсен шучĕ халĕ çиччĕрен те иртет. Ивановпа Çеçпĕл çăлтăрсемпе пĕрле Шелепи, Элкер, Митта

Васлейӗ, Александр Алга, Стихван Шавлы, Алексей Воробьев, Валентин Урдаш ҫӑлтӑрсене куратпӑр. Ҫав ушкӑнрах Ухсай ҫӑлтӑрӗ хӑй мухтаса ҫырнӑ Хушка Ҫӑлтӑрах аса илтерет. Вӗсемпе пӗрле Хусанкай ҫӑлтӑрӗ ҫуттӑн ялкӑшать.

Ҫакӑн чухлӗ ҫӑлтӑр ҫутма пултарнӑ халӑх чӑннипех те вилӗмсӗр!

1985–1988–96.

# Тӑванлӑх вӑрттӑнлӑхӗ

Ухсай Яккӑвӗ ҫинчен эпӗ чи малтан Тӑван ҫӗр-шывӑн аслӑ вӑрҫи пуҫланнӑ ҫул хамӑра вӗрентнӗ Ольга Васильевна Нагорновӑран илтнӗччӗ. Вӑл Ульяновскри учительсем хатӗрлекен И.Я. Яковлев ячӗллӗ педучилищӗре пӗлӳ илнӗ чух чӑваш студенчӗсене шӑпах Яков Гаврилович тӑван чӗлхепе литературине вӗрентнӗ иккен.

-Уроксенче вӑл пире час-часах «Халӑхӑн ылтӑн кӗнеки» поэмин сыпӑкӗсене вуласа кӑтартатчӗ,- тесе аса илнине астӑватӑп.

Ухсай Яккӑвӗ хӑйӗн  поэмине 1937 ҫулта ҫырнӑ. Ҫӗнӗ хайлавӗ часах хрестоматие кӗнӗ. Ун чухне ҫирӗм улттӑри поэт темиҫе кӗнеке авторӗ пулнӑ ӗнтӗ. Вӑл кунта чылай сӑвӑ-поэма хайлать, малашне ҫырмалли валли паха материал пухать. Ахальтен мар вӑрҫӑчченхи тапхӑрта алли витӗр ҫулсерен 3-4 кӗнеке шӑранса тухнӑ: «Вут чӗлхе», «Телей ҫинчен хунӑ юмах», «Пуканесен бригади», «Ял хыпарӗсем», «Сӑсар ҫӗлӗк» сӑвӑ пуххисем, «Ӗмӗт» ятлӑ малтанхи романӗ, «Тутимӗр» трагедийӗ, «Костантин Васильевич Иванов» монографийӗ. Кунтах Лениниана ҫуралать.

Класран класа куҫса пынӑ май чӑваш литературии урокӗсенче Ухсай Яккӑвӗн сӑввисем час-часах тӗл пулма пуҫларӗҫ. Вӗсем ҫӑмӑллӑн вуланатчӗҫ, асра юлатчӗҫ: «Карлав аври касмашкӑн кайрӑм...» е тата «Юратрӑм эп, хирсем, сире...». Кам пӗлмест пулӗ «Саккун тесен сехре хӑпатчӗ, чӗтретчӗ пирӗн ӳтӗмӗр» йӗркесене!

Вӑрҫӑ ҫулӗсенче ҫаплах манӑн алла «Ӗмӗт» романӗпе «Ял хыпарӗсем» сӑвӑ кӗнеки лекнӗччӗ.

Аслӑрах классенче «кӗнеке чирӗ» ытларах та ытларах ҫулӑхрӗ. Чӑвашла кӗнекесем библиотекӑсенче сахалччӗ, ҫавӑнпа камӑн алне мӗн лекнӗ, ҫавна тытса вулаттӑмӑр. Чи юратнӑ калавсемпе сӑвӑсене эпӗ ятарласа тунӑ хулӑн тетраде ҫыра-ҫыра илеттӗм. Вӑрҫӑ ҫулӗсенчех пирӗн яла «Илемлӗ литература» журналӑн (кайран вӑл «Тӑван Атӑл» ятпа тухма пуҫларӗ) ҫӗнӗрен тухма пуҫланӑ малтанхи номерӗсем килсе

çитрĕç. Унта, паллах, «танкист-гвардеец, ялан хаваслă капитан» Ухсай Яккăвĕ çырнă сăвăсемпе поэмăсем те манăн кĕтнĕ киленӳсем пулнă. Часах шкул библиотекине вăрçă çулĕсенче тата ун хыççăн тухнă çӳхе хуплашкаллă кĕнекесем килме пуçларĕç. Эпир вĕсене пурне те пĕр сиктермесĕр, каçса кайсах вуласа пыраттăмăр.

Вăта Тимĕрçенти вăтам шкулта вĕреннĕ чухне маншăн тепĕр кĕтменлĕх пулчĕ: пирĕн истори учителĕ Андрей Иванович Ирбахтин, Ульяновск облаçĕнчи Тереньга районĕнчен тухнă чăваш, Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче Ухсай Яккăвĕпе пĕрле ĕçлесе пурăннăскер пулса кайрĕ. Ун чухне поэт ячĕ тăван литературăмăрти чи сумлă ятсенчен пĕриччĕ ĕнтĕ. Вăл çырнă çĕнĕ сăвăсемпе поэмăсем хаçат-журналта та, уйрăм кĕнекен те тухсах тăратчĕç. Поэт мухтавĕпе чапĕ çĕр-шыв талккăшĕпех çĕкленсе çитнĕччĕ.

-Куратăп-ха, манăн çамрăк тус час-часах Ульяновскри Ленин музейне кайса çӳрет, Владимир Ильича астунă çынсемпе тĕл пулать. Пушă вăхăчĕ нумаях мар пулин те сăвăсем çырма та ĕлкĕрет. Çырнисене мана вула-вула кăтартать. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе кăлăк чăххи пекех ĕçлетчĕ вара. Малтан эпĕ ку вăл унăн яшлăх чирĕ кăна тесе шутланă. Часах акă Шупашкартан пысăк гонорар куçарса пачĕç çакскере. Çĕнĕ кĕнеки тухнă иккен! Çакăн хыççăн ĕнентĕм вара çамрăк педагог çине тăрсах поэзи вăрттăнлăхне алла илнине,- каласа паратчĕ пире Андрей Иванович. Хăй кантăкран кулса пăхакан çурхи хĕвел пекех çиçсе илетчĕ.

* * *

1956 çулта мана Шупашкара çамрăк çыравçăсен канашлăвне йыхрав турĕç. Чăвашсен шĕкĕр хулинче унччен пĕр хутчен пулса курнăччĕ-ха. Ун чухне эпĕ хамăр ентеш-писатель Владимир Садай патĕнче чарăннăччĕ. Çавăн чухнех А.Артемьев, Илпек Микулайĕ, Уйăп Мишши, Иван Пиняев писательсемпе тĕл пулни тарăн йĕр хăварнăччĕ. Ара, эпĕ чĕрĕ писательсене пуçласа курнă-çке-ха. Кĕнеке çыракансем маншăн яланах асамлă чунлă çынсем пек туйăнса тăратчĕç. Ку канашлура тăван литературăн мĕнпур çăлтăрĕ пулмалла. Пире, аякран килнисене, “Атăл» хăна çуртне вырнаçтарчĕç. Çавăн чухне пуçласа курнăччĕ те ĕнтĕ эпĕ Ухсай Яккăвне. Çапах та паллашасси ларусен залĕнче мар, каярах пулчĕ.

Канашлу вĕçленнĕ хыççăн хăна çуртĕнче пĕр номерте вырнаçнă Пăрачкав вырăсĕ Владимир Грибанов поэтпа «Ан хумхан, çăкалăх» юрă авторĕ Фĕдор Тихонов (пысăк ал çырăвĕнчен унăн çав сăввине пичете пама суйласа илнĕччĕ) тата темиçе çамрăк автор урамра ăнсăртран Ухсай Яккăвĕпе тата унăн мăшăрĕпе, Мария

Дмитриевнăпа, тĕл пултăмăр. Яков Гаврилович пире хăйсен хваттерне йыхрав турĕ. Ун чухне вĕсем «Атăл» хăна çуртĕнчен инçех мар пурăнатчĕç. Самантран эпир вĕсем патне çитсе те тăтăмăр. Тараватлă хуçасем пире сĕтел хушшинех лартрĕç. Вĕри шӳрпе антарнă май Мария Дмитриевна мăшăрĕн мăйне шурă салфетка çыхса ячĕ, пире пурсăмăра та «вăтанмасăр, килти пек» апатланма сĕнчĕ.

Эпĕ хваттер ăш-чиккине тишкеретĕп. Пысăк та çутă пӳлĕм. Стена çинче поэтăн Макаров художник пир çине çуллă сăрăпа ӳкернĕ пысăк портречĕ. Çав портрет репродукцине «Ялав» журналта курнă пек астăватăп. Залра пианино та пур. Ухсайăн икĕ хĕр ача иккен. Эпир пырсан вĕсем юнашар пӳлĕме кĕрсе кайрĕç.

Кĕрекере шăкăл-шăкăл калаçса ларнă май Яков Гаврилович пирĕн çинчен тĕплĕн ыйта-ыйта пĕлчĕ. Шăпах çавăн чухне аса илтертĕм те ĕнтĕ эпĕ ăна Ульяновскри чăваш шкулĕнче пĕрле ĕçленĕ тусĕ çинчен.

-Ирбахтин? Андрей Иванович? Пĕлмесĕр! Епле пĕлес мар-ха? Питĕ лайăх тусчĕ вăл. Пурăнаççĕ тетĕн? Çемйипех-и? Салам кала, эппин, манран,- хавасланса кайрĕ Яков Гаврилович.

Чĕмпĕр тăрăхне аса илме юрататчĕ вăл. Кун пек чухне сăн-сăпачĕ уйрăмах çуталса илетчĕ.

Сăвăç Ульяновск литераторне П.Бейсова лайăх пĕлетчĕ, Николай Благов поэта кăмăллатчĕ. Ульяновскри радиопа телевидени комитечĕн председателĕнче нумай çул ĕçленĕ Илья Николаевич Милюдина кашнинчех асăнатчĕ. Ăна та вăл вĕрентнĕ иккен. Унăн Ульяновскри ытти тусĕ хушшинче «Ульяновская правда» хаçатра ĕçленĕ Игорь Антонинович Хрусталёв журналист, КПСС обкомĕн секретарĕ пулнă Владимир Николаевич Сверкалов ячĕсене асăнмалла. Юлашки вăхăтра ăна истори наукисен кандидачĕ Жорес Трофимов тĕпчевçĕ ĕçĕсем кăсăклантаратчĕç. Ятлă поэт ман енĕпе тимлĕ пулнине те çак сăлтавпах ăнлантарса памалла-ши? Эпĕ хампа пĕрле яланах «Чĕмпĕр сывлăшне» илсе çӳренĕ-çке-ха.

Çавăнтанпа эпĕ Шупашкарта кашни çул тенĕ пекех пулнă. Писательсен пухăвĕсене, съезчĕсене пырса çӳренĕ. Отпуск вăхăтĕнче вара çырнă япаласене хаçат-журнал редакцийĕсене е кĕнеке издательствине леçме пырсан темиçешер кун та пурăннă. Çавăн чухне Яков Гавриловича тăтăш курнă, писательсем хушшинче те, трибуна умĕнче те, Союз çуртĕнче те, редакци пӳлĕмĕсенче те, ĕç сĕтелĕ хушшинче те, урамра та. Манпа вăл кашнинчех шăллĕпе калаçнă пек кăмăллăн калаçатчĕ, асăрхаттаратчĕ, канаш паратчĕ, чĕнме те яланах «шăллăм» тетчĕ.

-Ăçта чарăнтăн, шăллăм? Хăна çуртне-и? Аван. Хваттерсенче

çынсене чăрмантарса ан çӳре, - тетчĕ те тӳрех Чĕмпĕр хыпарĕсене ыйтса пĕлме тытăнатчĕ. Юлашкинчен, паллах, калаçу литература çине куçатчĕ. Яков Гаврилович, хăй пысăк сăмах ăсти пулнăран, ыттисен пултарулăхне те çав шая хурса хаклатчĕ.

-Мĕн çыран-çĕмĕрен? Ал çырăвне илсе килтĕм тетĕн-и? Аван. Чĕлхепе тăрăшарах ĕçле. Инверсисене тĕрĕс тума вĕрен. Çырнисем вăрăмрах пулса тухнăн туйăнмасть-и сана? Кĕскерех çырма тăрăш. Эпĕ пысăк калăплă произведенисем пирки каламастăп. Чăваш литературин традицийĕсенче вĕсем тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ. Çав вăхăтрах кĕскен çырса та пысăк шухăша палăртма пулать.

Сăмах май çи-пуçпа ĕç-пуç çинчен ыйтса пĕлме те манмастчĕ: «Чухăн пурăнмастăн-и, укçу çитет-и?»

-Ма кашне çыхмастăн? Пальто тăхăнсан кашне те çыхас пулать. Çын умĕнче тирпейлĕ çӳреме тăрăш, чăваш поэчĕ ятне ан яр,- терĕ пĕррехинче. –Санăн кунта куçса килмелле те çав... Тымарсем тарăн кайнă тетĕн. Юрĕ. Унтах пурăн. Эрех ĕçместĕн-и? Ан ĕç!

Ленин урамĕнче тĕл пулни аса килет. Вăл хăйĕн хваттерĕнчен тухнă çеç, анаталла анать.

-Эсĕ ман патăмаччĕ-и? Кайран кĕрсе тухăн, халĕ обкома чĕнеççĕ. Атя «Чувашия» хăна çурчĕн буфетне, апат çитерсе ярам.

Апачĕшĕн вара маншăн та хăех тӳлерĕ. Ирĕксĕрлесех.

Поэт хăй кĕнекисене парнеленĕ чух çырнă автографсенче те пирĕн сайра хутшăнусен витĕмĕ палăрать пек ман шутпа. Акă маншăн хаклă йĕркесем: «Анатолий Ермилова – шăллăма. Я. Ухсай. Шупашкар. 28-XI-1956 ç.»(«Самана», 1956), «Çамрăк тусăма – Анатолий Ермилова. Я.Ухсай. 25-IX-1958» («Кĕлпук мучи», 1958), «Молодому талантливому поэту Анатолию Ермилову. Я. Ухсай 25-IX-1958» («Дед Кельбук», «Художественная литература» издательство, 1956), «Юман шăллăма ырă çеç сунса – Я.Ухсай. Апрель, 2.1974 ç.» (Ача чухнехи çăлтăрăм». Триологи 1973 ç), «Юман шăллăма унăн йĕкелĕсем шултра та тутлă пуласса шанса. Я.Ухсай, 1974 ç. Шупашкар» («Суйласа илнисем», 1 том, 1971 ç.), «Юман шăллăма шыв ĕçни эрехрен усăллăрах тесе – Я. Ухсай. Шупашкар. Апрель, 1974» ( «Çул çӳренĕ чух çырса пынă кĕнеке», 1966 ç.), «Чунĕпе те ăсĕпе илемлĕ, тĕреклĕ Юман тусăма – Я.Ухсай. Шупашкар. 20-IX-1983 ç.» («Суйласа илнисем». 11 том, 1975 ç.), «Анатолию Юману в память об Ульяновске. Я. Ухсай. 2 апреля 1974 г.» («Избранное» Мускав, «Художественная литература» издательство, 1973 ç.), «Анатолию Юманӳ по-дружески – Я.Ухсай. 20 сентября 1984 г.» (« Избранное», Мускав, «Художественная литература»

издательство,1983), «Юман тусăма. Я.Ухсай. 16.11.1980» (К. Иванов. «Избранное». «Советская Россия» издательство, 1974 ç.).

Ахальтен мар ĕнтĕ союза кĕме шутланă май эпĕ чи малтан Яков Гавриловичпа канашласа пăхма шутларăм. Вăл ку шухăша ырласа сĕнӳ хутне çырупа ярса пачĕ, çаврака та вĕтĕ сас паллисемпе çырнă йĕркесене пăлханса вуласа тухатăп. Акă вăл:

«За последнее десятилетие в чувашской поэзии весьма заметно бросается в глаза, тревожит душу количественный рост профессиональных авторов, ставших коренными горожанами, изредка по творческим командировкам Литфонда и путёвкам Бюро по пропаганде литературы выезжающих в деревню, и осенью, и зимою воспевающих красу деревенской весенней природы и соловьиные трели. Такой количественный рост порождает низкий качественный уровень стихотворной продукции, язык становится и вялым, теряется смысловой вес слова, трескучие стихи вытесняет эпический жанр, что призван показывать трудовые и психологические характеры людей, богатырский духовный размах народа.

В количественном росте творцов чувашской поэзии заметно выделяется Анатолий Ермилов (его литературный псевдоним Юман). Обещает он быть не стихотворцем, а поэтом в настоящем смысле слова. Работая в редакции районной газеты и находясь в самой народной гуще, он продолжает по содержанию и форме гражданственности Константина Иванова.

Я не стану перечислять названия его книг, рекомендую его в члены СП СССР, прошу предостеречь своё творчество от ломки строя языка, ради ритма и рифмы не губить стихи и поэмы инверсиями, с совестью, и уважением, любовью относиться к родному языку. Это будет и душевно, и трепетным отношением и к своему народу, творцу всех духовных сил, в том числе и языка.

Псевдоним Юман, что значит Дуб, обязывает Анатолия творить и чеканить стихи ядрёные, как жёлуди.

Я.УХСАЙ,
член СП СССР с 1938 г.

7 августа 1977 г.»

Ятлă сăвăçăмăр ман пирки калама çапла ăшă сăмахсем тупни хавхалантарчĕ те, çунатлантарчĕ те. Хăй вăл литературăна чи сăваплă ĕç вырăнне хурса хаклатчĕ. Сăвă травашне чĕре витĕр кăлармасăр аллине перо тытман. Шедеврсем ахаль çуралмаççĕ. Ку такама та паллă. Сăмах ăсти пулнă май, ыттисенчен те çирĕп ыйтатчĕ пиччемĕр. Калас тенине чăнлăха тĕпе хурса, яланах тӳррĕн калатчĕ. Хăйĕн

шухăшне нимĕнле авторитет умĕнче те улăштарман. Ăсталăх енĕпе яланах принциплă пулнă. Унăн кулăшпа хутăш каланă сăнарлă сăмахĕ яланах тĕл тивнĕ. Çакна ăна пĕлнĕ çынсенчен чылайăшĕ курса ĕненнĕ темелле.

Çапах та çитмĕлмĕш çулсенех таврăнар-ха. Ухсай Яккăвĕн авторитетлă сăмахĕ хыççăн та Союза кĕрес ыйту час татăлаймарĕ. Ун чухне влаçра ларакансен чурăслăхне тӳссе ирттермен çыравçă сахал пулнă-и, тен. Ман тĕле те йăтăнса аннăччĕ унашкал тамаша. Кун пек чухне ыйтăва татса паракансем сĕнӳ хучĕсене вуласа та пăхман пулас. Шыв айĕнчи чул-тумхахсене сирес тесе сахал мар вăй хума тиврĕ. Çавна май «кивелнĕ» сĕнӳ хучĕсене çĕнетме Шупашкра тепĕр хут тухса кайрăм. Ухсай пичче патне те кĕрсе тухрăм.

-Унччен каланă хăш-пĕр сăмахсене улăштармалла мар-ши? Халĕ унченхи шайран ӳсĕмĕ ытларах сисĕнет,- тесе ыйтрĕ вăл çыру сĕтелĕ хушшине ларма хатĕрленсе.

-Ытлашши-мĕнĕ çук пуль унта. Тавах ăс вĕрентнĕшĕн,- терĕм кăна.

-Ну, юрĕ апла пулсан. Ырă сунатăп сана!—çак сăмахсемпе вăл сĕнӳ хутне тепĕр хут çырма ларчĕ. Çав кун Яков Гаврилович уйрăмах уçă кăмăллăччĕ. Ĕç хучĕсене аяккалла хурсах манпа калаçса ларма вăхăт тупрĕ. Хăй çинчен каласа кăтартрĕ. Твардовскипе епле паллашни, вăл «Нарспи» поэмăна редакцилесе Мускавра кăларма пулăшни çинчен. Яланхи пекех, хăй хĕрсех ĕçлет иккен. Çырнисен пуххи валли ал çырăвĕ хатĕрлемелле, кун-çул тӳпинчен аса илмелли çук мар. Поэт архивĕ калама çук пуян. Çырусем, хаçат-журналтан касса кăларнисем...Вĕсем пурте иртнĕ асран кайми çулсене аса илтереççĕ. Акă Твардовский çырăвĕсем. Хăй вăхăтĕнче кирлĕрен çӳретнĕскерсем халĕ ĕнтĕ хаклă реликвие çаврăннă. Кайрантарах Твардовскин асăннă çырăвĕсем пичетре те тухрĕç. Акă Николай Старшинов паллă поэт çĕнĕ сăвă пуххи ярса панă, унта вăл куçарнă Яков Гаврилович сăввисем те пур...

Папка ăшĕнчи хутсемпе çырусене иле-иле кăтартнă, вуланă хыççăн каялла тирпейлесе чикнĕ май Яков Гаврилович сасартăк, тем аса илнĕн е тĕрĕсленĕ пек, мана кĕтмен çĕртен ыйту пачĕ:

-Сăввусене хăçан çыратăн?

-Ирхине, - пулчĕ хуравăм. — Ку вăхăтра шухăшсем те уçăмлă, ĕç те кал-кал пырать.

-Питĕ тĕрĕс тăватăн,- савăнăçлăн килĕшрĕ вăл, - эпĕ хам та ирпе ĕçлеме кăмăллатăп. Çĕрле вулама меллĕрех...

Юлашкинчен Яков Гаврилович хăйĕн Ульяновскри тусĕсене аса

илчĕ. Ку çеç те мар, вĕсем патне кĕске запискăсем çырса мана кĕртсе е çырупа ярса пама ыйтрĕ. Халĕ хăш-пĕр адресачĕсем те çук ĕнтĕ, сыввисенчен ирĕк ыйтса эпĕ хăш-пĕрне илсе кăтартма пултаратăп:

И.Н. МИЛЮДИНА

*«Хаклă Илья!*

*Кăçалхи май уйăхĕнче Константин Иванов çуралнăранпа 90 çул çитет. Çавна май эфирта сасă кăларсан, радио итлекенсемпе телевизор куракансене çав чаплă кун çинчен аса илтерсен аванччĕ, ху та статья çыр.*

*Санăн Я.Ухсай. 1980 çулхи февралĕн 16-мĕшĕ.»*

Н.Н. БЛАГОВА

*«Хаклă Коля!*

*Эсĕ ман çырăва хуравламарăн. Çакă мана эсĕ мăнкăмăлланнă, хăвна «Эпир, Николай, Ульяновск гражданинĕ, Саратов поэчĕ» евĕр чĕнме пуçламан-ши тесе шутлама сăлтав пулса тăрать...*

*Часах сан пата манăн тусăм Коля Старшинов пырса çитет.*

*Санăн Я.Ухсай.»*

И.А. ХРУСТАЛЁВА

*«Хаклă Игорь!*

*Эсир питех те ĕçлĕ пулнине шута илсе çакна асăрхаттарам, кăçалхи май уйăхĕнче Константин Иванов çуралнăранпа 90 çул çитет.*

*Тахçанах Ульяновска çитсе курас кăмăл пур. Ман ятран Сверкалова пуç тай. ЭСĔ çине куçрăм, капла шанчăклăрах, сăмахĕ чĕререн тухать.*

*Чĕререн юратса Я.Ухсай. 1980 çулхи февралĕн 16-мĕшĕ.»*

Çав кунсенче Яков Гаврилович Ульяновскра пурăнакан историк-тĕпчевçĕ, Ульяновсен çемйи çинчен çырса кăларнă йышлă кĕнекесен авторĕ, истори наукисен кандидачĕ Жорес Александрович Трофимов ĕçĕсемпе интересленетчĕ. Анчах хăйпе паллашма ĕлкĕрейменччĕ-ха. Çырма аллине ручка тытнă май манран: «Ашшĕ ячĕ еплеччĕ-ха унăн?»- тесе ыйтрĕ. Эпĕ те çийĕнчех астуса илеймерĕм. Юлашкинчен Яков Гаврилович аптрасах ӳкмерĕ, Чăваш Ен йăлипе çапларах çыпăçтарса хучĕ:

*«Хаклă Трофимович юлташ!*

*Сирĕнпе тахçанах тĕл пулса Чĕмпĕр çинчен калаçасшăн. 1929-1930 çулсенче эпĕ Ульяновскра ĕçлерĕм, Ульяновсен çемйи çинчен материалсем пухрăм. Манра Ленин çинчен сана кирли те çук мар. Чăнах та, халăх хушшинче çӳрекен легендăпа çыхăннă япала ĕнтĕ.*

*Сирĕн Я.Ухсай».*

Тепĕр виçĕ çултан Ульяновска пырса тухсан Яков Гаврилович

«Ульяновская правда» хаçат редакцийĕнче Жорес Александрович Трофимовпа курса калаçма пултарчĕ. Хăйсен юратнă ĕç-пуçĕ çинчен чылайччен калаçса ларчĕç вĕсем. Çав кун пирĕн калаçу та вăраха тăсăлчĕ. Чĕмпĕртен Шупашкара, Шупашкартан Мускава çитрĕмĕр, çул тăршшĕне те, вăхăт талккăшне те çывăхлатрăмăр, шухăшĕмĕтсемпе çунатлантăмăр.

...Çу уйăхĕн варри. Хĕвеллĕ уяр кун. Эпĕ ĕçрен тин çеç кăнтăрлахи апата таврăнтăм. Килте никам та çук. Газ плити умĕнче кăштăртатнă хыççăн сĕтел хушшине ларма ĕлкĕртĕм çеç, такам чӳречерен шаккарĕ. Пăхатăп та, пĕрле ĕçлекен юлташăма, вырăс хаçачĕн журналистне Николай Гурьянова палласа илетĕп. Эпир унпа пĕр пӳлĕмрех ларатпăр-ха. Уйрăласса та тин çеç уйрăлнăччĕ. Халĕ акă ман хыççăнах вĕçтерсе çитнĕ. Тем пулман пуль те?

-Юман, чазырах! Хăназем бур! – тет çакскер.- Ухсай приехал!..

Шупашкар хăнисене эпир тахçанах кĕтеттĕмĕр-ха. Ĕçĕ акă мĕнре. Чăвашкасси ялĕнче иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче И.Я. Яковлев пуçарнипе туса лартнă шкул пур. Аслă патриархăмăр тăрăшнипе е вăл тӳременĕнех уçнă шкулсем пирĕн тăрăхра пĕрре кăна мар. Чăвашкасси шкулне илсен, ял-йыш çине тăрса ыйтнипе кунта И.Я. Яковлева чысласа Асăну хăми уçма йышăннă. Тĕрлĕ сăлтава пула ĕçĕ вăраха тăсăлчĕ. И.Я. Яковлев çуралнăранпа 135 çул çитнĕ май вара ял-йыш уява хатĕрленчĕ. Чăваш çĕр-шывĕнчи культура ĕçченĕсене йыхравланăччĕ Яковлев кунне палăртма. Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ те килме кăмăл турĕ. Çак хыпар пурсăмăра та савăнтарчĕ, паллах. Районта ăна астăвакансем те сахал мар. Вăл вĕрентсе кăларнă, паян та ырсывă пурăнакан ентешсене эпир çирĕме яхăн шутласа кăлартăмăр. Вĕсене пурне те тĕл пулăва пыма йыхравларăмăр. Эпир шутланă тăрăх, хăнасем ыран килсе çитмеллеччĕ. Халĕ акă...

Утнă çĕрте утса, чупнă çĕрте чупса тенĕ пек редакцие вирхĕнсе çитетĕп. Редакци умĕнче хура «Волга» ларать. Ку – хăнасен «кӳми». Вĕсене эпĕ редактор пӳлĕмĕнче тупатăп. Хама лăпкăнрах тытма тăрăшса сывлăх сунатăп. Ухсай пиччемĕр çулсен йывăрлăхне парăнмасть-ха. Хăмăр костюмпа вăл. Хура çӳçĕ чăпăрланнă пулин те, пичĕ-куçĕ хаваслăхпа çиçет. Яланхи пекех сăмаха кĕскен калаçать. Малтан вĕсене виçсе пăхать тейĕн. Çитменнине хаçатсенче куллен пичетленсе «якалса çитнĕ» сăмахсем мар вĕсем, халăх ăсĕнчен тымар илнĕскерсем, сĕткенлĕ те асра юлаканскерсем.

Пирĕн калаçу пулас уяв çинчен. Яков Гаврилович чи малтан хăйĕн çамрăклăхĕпе çыхăннă Ульяновск хулине çитсе курасшăн иккен, çавăнпа ытти хăнасенчен маларах тухса килнĕ.

Редактор пӳлӗмӗнче Яков Гавриловичпа пӗрле икӗ ҫамрӑк ларать. Пӗри – «Советская Чувашия» хаҫатри культура пайӗн пуҫлӑхӗ, Ухсай Яккӑвӗн «Тутимӗр» трагедине вырӑсла куҫарнӑ, эпӗ лайӑх пӗлекен Аристарх Дмитриев писатель тата «Коммунизм ялавӗ» хаҫат фотокорреспонденчӗ Юрий Дмитриев иккен.

Калаҫу вӗҫленнӗ хыҫҫӑн хӑнасене чи малтанах редакципе юнашарах вырнаҫнӑ столовӑйне ертсе каятӑп. Апатланса таврӑннӑ тӗле редакци умне кунта ӗҫлекенсемпе типографи рабочийӗсем хӑпса тухрӗҫ. Пурте ятлӑ сӑвӑҫа курса калаҫасшӑн. Асӑнмалӑх сӑн ӳкерттертӗмӗр.

Хулара эпир чи малтанах сӑвӑҫ пӗлӗшне – «Ульяновская правда» хаҫат редакторӗн ҫумне Игорь Антонинович Хрусталёва шыраса тупрӑмӑр. Пӑртак калаҫса ларнӑ хыҫҫӑн вӑл пире хаҫат редакторӗ патне ертсе кӗчӗ. Паллаштарма. Хӑй йӗркипе сӑмах Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн реставрацилеме пуҫӑнакан комплексӗ ҫинчен пычӗ. Игорь Антонинович реставраторсен ӗҫӗ-хӗлӗ епле пынине лайӑх пӗлет-мӗн. Кирлӗ ҫӗре шӑнкӑравларӗ кӑна – специалистсенчен пӗри редакцине ҫитсе те тӑчӗ. Пӑртакран пирӗн йыша Жорес Александрович Трофимов тӗпчевҫӗ хутшӑнчӗ.

Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ... Иртнӗ ӗмӗртенпех вӑл тӗрлӗ ӑрури чӑваш чӗринче шанчӑк та ырӑ туйӑмсем ҫуратнӑ, ҫунатлӑ ӗмӗтсемпе хавхалантарнӑ. Мӗнех вара, кӗтни сая кайман! Ырӑ вӑрлӑхран тулӑх та патвар хунавсем шӑтса тухнӑ та...

Нумай ырӑ туйӑм ҫуралчӗ чӗресенче чӑваш литературипе культурин малтанхи ҫӑлтӑрӗсене ҫӗкленӗ сукмаксемпе ҫӳренӗ май. Хальлӗхе кунта шӑплӑх хуҫаланать, ӗлӗкхи ешӗл ҫереме вӗлтӗренпе хупах сырса илнӗ, ҫурчӗсем юхӑнса ҫитнӗ, пушӑ е ваннӑ чӳрече кантӑкӗсем витӗр ҫил тӑлӑххӑн вылять. Ҫапах та ку вӑхӑтлӑх сырланӗ кӑна. Ҫамрӑк ӑру ӑс-тӑнӗпе типтерлӗхӗ часах ҫак кӗтесре ҫӗнӗ пурнӑҫ хӑватне чӗртсе ярӗҫ, кунта каллех халӑх юххи килсе ҫапӗ. Ҫав самант килсе ҫитесси нумай юлман ӗнтӗ. Пире Константин Ивановӑн шӑпчӑк сасси, Фёдор Павловӑн асамлӑ сӗрме купӑсӗ тепӗр хут янраса кайнӑнах туйӑнчӗ. Халӑх асне яланлӑхах кӗрсе вырнаҫнӑ ытти ҫутӑ сӑнара та вӑратса ҫӳрерӗмӗр эпир кунта. Уйрӑмах Ухсай пиччен аса илмелли тупӑнсах тӑрать.

-Ак ҫав ҫуртра эп астӑвассах лавккаччӗ, - терӗ сӑвӑҫ хавхаланса.

Вӑл тунсӑхласа ларакан, кивелсе ҫитнӗ, шупка хӗрлӗ тӑмпа сӑрланӑ чул ҫурта кӑтартрӗ. Икӗ хутлӑ ҫурт...Тинкererех пӑхсан малтан вӑл пӗр хутлӑ ҫеҫ пулнине тавҫӑрса илме йывӑр мар, иккӗмӗш хутне, чӑнах та, кайран ҫӗклесе лартнӑ иккен. Вӑл малтанхинчен тӗсӗпе те уйрӑлса тӑрать. Яков Гаврилович пире шухӑшлӑн ҫапла пӗлтерчӗ:

- Çак лавккана Ульяновсен няни — Варвара Григорьевна Сарбатова — краççын туянма çӳренĕ...

Кивĕ çуртра халĕ те лавкках иккен. Кантăкĕнчен канфет-пĕремĕк курăнать. Эпир пынă чух апата хупнăччĕ, шала кĕрсе кураймарăмăр.

Сăмах Мария Александровна Ульяновăна Сызране леçнĕ паллă мар чăваш çинчен хускалать.

-Паллă мар? Паллă унăн ячĕ. Вăл Саврăшпуç чăвашĕ Кирилкке пулнă,- тесе çирĕплетет Яков Гаврилович.

Тĕпчевçĕсем Яковлевăн малтанхи хваттерне те тупса палăртнă. Çав шурă та пĕчĕк чул çурт патне пырса пăхатпăр. Вăл Иван Яковлевичăн тĕп хваттерĕнчен инçех мар вырнаçнă. Специалист-реставратор пулас ĕçсем çинчен тĕплĕн, ăнланмалла каласа кăтартать.

Акă вăл, Чĕмпĕр вучахĕ! Эпир унăн варринче тăратпăр. Çакăнтан таврари чăваш ялĕсене ăслăлăхпа пĕлӳлĕх кăварĕ сирпĕннĕ. Вăл ăçта ӳкнĕ — унта амаланса тĕттĕмлĕхле мĕскĕнлĕхри çынсен чĕрисене хĕмлентернĕ, малалла чĕннĕ, çутталла, пĕлӳ патне ăнтăлма хистенĕ. Çакна палăртма кăмăллă, вăхăт иртнĕçемĕн чăвашсен малтанхи юратăвĕ — Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ, унпа юп курса вăй илнĕ яш-кĕрĕм сасси манăça юлмасть, тепĕр хут çывăхлансах пырать.

-Хамăр ĕçе вĕçлесен килсе курăр кунта,- тет реставратор, хыткан ӳт-пӳллĕ те сăмси урлă çутă пайăркасенчен хӳтĕленмелли çăмăл куçлăх уртса янă вăтам çулсенчи арçын. Тумланасса та вăл çуллахи чи шăрăх кунри пек çăмăл тумланнă, çийĕнче кĕске çанăллă улача кĕпе, лайăх якатнă çутă шăлавар...

Шкул картишĕнчи улăп тăприне аса илтерекен тăвайккипех анса хăпарма тивет пире. Ку ватă çыншăн çăмăлах мар.Çавăнпа Яков Гавриловича час-часах хулĕнчен тытса пулăшма тивет. Курни-илтни ăна хумхантарнине туйса илме йывăр мар. Ăшшăн сыв пуллашрăмăр эпир Сĕве хĕрринчи улăп тăпри пек сăрт çинчен тăван халăхăмăра çутта кăларнă аслă çын халалласа хăварнă хаклă Чĕмпĕр вучахĕпе.

...Тепĕр кун, 1983 çулхи çу уйăхĕн 13-мĕшĕнче, эпир Шупашкар хăнисемпе пĕрле Чăвашкассине пырса çитетпĕр. Аякри хăнасем килнине кура ялти шкула халăх пухăнма пуçларĕ. Часах урам çын юххипе пĕвенсе те ларчĕ. Яков Гавриловича ял халăхĕ сырса илнĕ. Вĕсем хушшинче вăрçăпа ĕç ветеранĕсем нумай. Пăртакран Шупашкартан хăнасен тепĕр пысăк ушкăнĕ килсе çитрĕ, вĕсем — паллă çыравçăсемпе сцена ăстисем, ăсчахсем... Пурте пухăнса пĕр-пĕринпе паллашса çитсен, шкул çуртне курса çаврăнсан чаплă митинг пуçланчĕ. Унта хумхануллă сăмахсем сахал мар пулчĕç. Шкул стени çине мрамор хăма çакрăмăр, «Шкул çуртне чăвашсен паллă просветителĕ

И.Я. Яковлев 1896 çулта никĕсленĕ», - тенĕ унта.

Çакăн хыççăнах шкулта класс-музей уçăлчĕ. Унта шкулпа тата И.Я. Яковлевпа çыхăннă паха документсем упранаççĕ. Официаллă пай вĕçленнĕ хыççăн хăнасем асăнмалăх сăн ӳкерттерчĕç. Юлашкинчен шкул директорĕ Мария Михайловна Бикмендеева хăнасене ятарласа тунă кĕнекене автографсем çырма сĕнет. Унта паянхи кунччен Яков Гаврилович çырса хăварнă йĕркесем упранаççĕ, «Чăвашкасси шкулĕнче ăна хаклă ят панă кун пултăм. Пĕчĕк ачасем юрлани питĕ тĕлĕнтерчĕ. Я. Ухсай, Май, 13.83».

* * *

«Редакцие çӳресси те писатель ĕçех»,- тесе вĕрентнĕ çамрăксене Корней Чуковский. Кăна эпĕ халĕ «Литературная Россия» хаçатра вуласа пĕлтĕм. Чĕрепе хам та тахçанах туйнă-ха. Перифери тунсăхĕ — манăн ĕмĕрхи чир. Çавăнпа чĕрĕ çыравçăпа тĕл пулса калаçма тивсен эпĕ кашнинчех ача чухнехи пекех савăнатăп. Анчах райхаçатран кирлĕ чухне хăпса тухма йывăртарах.

Шупашкара пĕр вăхăт вăрах каяймарăм. Яков Гавриловичран хăйĕнчен те хыпар-хăнар таврашĕ пулмарĕ. Çавăнпа тĕп хуламăра çитсен кĕрсе тухма шутларăм. Тинех палланă хваттер алăкĕ умĕнче хумханса тăратăп: «Килте-ши, çук-ши?» Шăнкăрав кнопки çине пусатăп. Алăк уçăлчĕ те мана поэт хăй мар, Оля хĕрĕ кĕтсе илчĕ.

-Атте чирленĕ-ха, канать. Тин çеç çывăрса кайрĕ. Кайрантарахпа кĕрсе тухăр,- терĕ вăл мана палласа илнĕ хыççăн.

Анчах çак калаçу хыççăн та эпĕ Яков Гаврилович йывăр чирленине пĕлмен. Çавăнпа каланă вăхăтра пырсан, вăл вырăнпах выртнине курсан, питех те тĕлĕнтĕм. Икĕ арçын хирĕç тухрĕç. Эпĕ вĕсене палламастăп. Вĕсем кайсан Ольга Яковлевна мана тĕпелелле кĕме сĕнчĕ. Иртетĕп. Яков Гаврилович хăй кабинетĕнче вырăн çинче выртать. Куçне вăйсăррăн хупнă. Шурă простынь, шурă кĕпе, чăпарланса шуралнă çӳç... Пичĕ-куçĕ хĕç пек çӳхелнĕ. Яков Гаврилович куçне уçрĕ.

-Епле-ха капла, Яков Гаврилович? Мĕскер пулчĕ? - тетĕп.

-Эпĕ чылайранпа ĕнтĕ чирлĕ... Пĕр хушă пульницара та выртрăм. Халĕ акă килте... Çырăвна хуравлаймарăм та... -терĕ вăл йăвашраххăн эпĕ сывлăх суннă хыççăн.

Юнашарах тенкел çине лартăм. Çире — Ольга Яковлевна панă шурă халат. Калаçасса сăвăç пиччеçĕм асапланса калаçать. Вăхăтран вăхăта куçне хупсах илет.

-Мĕнле пурăнать унта пирĕн директор? -терĕ вăл сасартăк.

Кам çинчен сăмах пынине эпĕ çийĕнчех ăнланмарăм.

-Чăвашкассинчи Яковлев шкулĕн директорĕ... Ячĕ мĕнлеччĕ-ха...-аса илме тăрăшрĕ вăл.

-Э-э ...Мария Михайловна Бикмендеева çинчен – ха эсир,-тавçăрса илетĕп тинех.

-Ара, çаплаччĕ çав.

-Вăл маттур-ха, тăрăшать. Ыр-сывах. Сана салам каласа ячĕ,-тетĕп.

-Хастарлăхĕ çителĕклĕ ун. Пурте ун пек вăй хурсан аванччĕ те... Сывлăхĕ тĕреклĕ тетĕн... Юрать... Халăхăмăр лайăх çынсемпе пуян. Салам кала хăйне те...

Яков Гаврилович ÿсĕркелесе илет. Сывлăш çавăрнă хыççăн Ульяновска аса илчĕ.

-Мĕн çĕмĕреççĕ унта чĕмпĕрсем?..

-Николай Благов съезда кайса килнĕ терĕç, - пĕлтеретĕп хам илтнине. (Ун чухне Мускавра СССР писателĕсен черетлĕ съезчĕ хăйĕн ĕçне тин çеç вĕçленĕччĕ).

-Кунхинче эп каяймарăм... Илтрĕн-и?.. Мана правлени членне суйланă...

Кун çинчен эпĕ ирхине çеç «Литхаçатра» вуланăччĕ-ха. Çавна май Яков Гавриловича чĕререн саламларăм. Поэт юлашки вăхăтра «Чĕмпĕр» романпа ĕçленине пĕлсе тăрса (уйрăм сыпăксем «Тăван Атăл» журналта çапăнса тухнăччĕ) ăна çырса пĕтернипе-пĕтерменни çинчен ыйтса пĕлтĕм.

-«Чĕмпĕр» вĕçленеймесĕрех юлать,- терĕ те вăл каллех куçне хупрĕ.

Чирлĕ çынна тек калаçса ларма йывăррине туйса сыв пуллашма васкарăм, ăна тĕрĕс-тĕкел сывалма ырă сунтăм. Кĕтнĕ пек пулса тухаймарĕ...

Темиçе кунтанах килсе çитрĕ çав хăрушă хыпар. Мана вăл аякра, хам ĕçлесе пурăнакан вырăс ялĕнче хăваласа çитрĕ. Кун пек чухне ахаль сăмахсем вăйсăр. Ирĕксĕрех алла ручка ярса илтĕм. Çав самантрах çак реквием йĕркисем çуралчĕç:

Ухсай ЯККĂВНЕ асăнса

I

Эп вырăс хушшинче ÿссе çын пултăм,
Эп вырăс ялĕнче ĕçлетĕп халь.
Хама пĕччен туймарăм нихăш çул та,—
Парса тăрать юлташлăх-туслăх хал.
Пĕр палламан çынни те – манăн тусăм,

«Ухсай» тесе калатăп çеç ятна.
Пароль е паспорт пек, кӳрет вăл усă,-
Ку комплимент пулмарĕ, ан ятла.

Çапла... Калатăп эп кĕскен кăна та,
Пĕр ят кăна, ансат çеç хушамат.
Анчах унра чунпа туйса тăратăп
Ман халăха палăртакан хăват.

Сăпайлă та ĕçчен ман паттăр халăх,
Кĕлпук хаваслăхĕ çиçет унра.
Сăмах асамĕ — ĕмĕр асăнмалăх,
Ахальтен мар эс ху та халăхра.

II

Çырусенче мана эс «шăллăм» теттĕн,
Хуравласа хыпар пĕлтернĕ май.
Эп вĕсене чун-чĕререн кĕтеттĕм,-
Поэзи улăпĕ çырать — Ухсай!

Тăванлатать ют çынсене поэзи,
Кĕçĕннисемшĕн пур «пичче» сăмах.
Эй, йывăр та иккен çыравçă ĕçĕ,
Шăпи те çăмăл мар иккен, чăнах.

Пĕччен чухне пуссах çитет-çке тунсăх,
Шала каять кунран-кун çавă чир.
Ĕнерленмест йĕрке кăварлă чунсăр,-
Пиччепеле чухне патвар эпир.

Калас сăмаххине калать вăл тӳррĕн,
Сăмахĕ те, йĕпли, ун саншăн пур.
Ăна хыпсассăн та, кайран эс çӳрĕн
Таса чунпа хаваслă та маттур.

Сиплет мĕн пур ăншăртсенчен сăмахĕ
Ăна тытса-пăхса каланăран.
Чунна хуçса хумасть санне — сăна-ха,-
Ыраттарса илсен те хушăран.
Асли, пичче пулмашкăн питĕ йывăр,-

Ун хӳттинче пурне те ҫăмăлрах.
Калатпăр татăлса: «Пиччеҫӗм, ҫывăр...
Ӳксессӗн те эс туйăнăн ҫумрах».

Ху вырăнна ҫӗн ăрăва хăвартăн,
Сан йышлă шăллусем, Ухсай пичче.
Вӗсем пӗлеҫҫӗ саптарма кăвар та,
Чӗртмешкӗн ҫулăм та ҫын чӗринче.

III

Ульяновск хăй еннех сана туртатчӗ,
Ильич ҫӗр-шывӗ, чи сăваплă ен.
Кунта поэтăн сарăлчӗ ҫуначӗ,
Килти пек сиплӗн, ҫирӗп те ӗлккен.

Пӗччен кăна-и вăл... Пӗрремӗш утăм
Кунта ман халăх тухнă ҫутталла.
Малтанхисем чӗртсе хăварнă ҫутă
Шăллӗсене те витӗм памалла.

Ас ил: поэт юман пулса шавланă,
Чун йӗкелне те акнă вăл пӗлсе.
Ҫапла хунанă Иванов вăрманӗ,
Чăваш ене тăнланă тилмӗрсе.

Каш-каш кашларӗ Иванов вăрманӗ.
Ҫав вăрманта эс ӳсрӗн пит патвар.
Эс ху та пултăн чи лаштра юманӗ,
Пиччӳпеле ҫӗклентӗн юнашар.

Йӗкелӳсем те санăн пулчӗҫ тулăх,
Ӗрчет юман вăрманӗнче хунав.
Паян ҫавах пуҫа усатпăр тăлăх,
Пӗрре те ҫăмăл мар-ҫке сансăр, ав.

IV

Килсе кайсан кӗрсе тухаттăм ыррăн,
Чӗлхе тӗвви те салтăнатчӗ час.
-Пусăсенче епле ӳстертӗр тырă?

Мĕскершĕн Чĕмпĕр ен пач шарламасть...

Сăмах çине сăмах... Пуплешнĕ майăн
Çитеттĕмĕр инçе Мускав таран.
Шăкăлтатса лармашкăн иккĕн лайăх,
Пĕр-пĕринпе ун чух çеç çывăхран.

...Куннехинче утса тухмарĕ хирĕç,
Çыру та çыраймарĕ вăрахчен...
Ана-мĕн пăталанă вилĕм чирĕ,-
Пĕлменччĕ те илтменччĕ эп унччен.

Поэт куçне уçса мана палларĕ,
Каллех сăмахĕ Чĕмпĕр ен çинчен...
Çаплах сӳнмен-ха ун чĕре кăварĕ,-
Паллană çыннисем ун чĕринче.

Юлашкинчен мана аса илтерчĕ:
-Чире пулса çырмарăм эп вăрах...
Хăйне çаплах асаплантарчĕ терчĕ,
Хама тин туйрăм питĕ те хăрах...

-Тек эпĕ, тен, ура çине тăраймăп,-
Хуллен калать поэт сыв пуллашса,-
Ан манччĕ, шăллăм, ан тусамччĕ айăп...
Пехил,-тет вăл мана куçран пăхса.

Эп тав туса та ыр сунса кĕç тухрăм
Çак хăтлă та салхуллă пӳлĕмрен.
Пуçа эп шавлă урамра та усрăм –
Пичче кĕтсе илеймĕ ӳлĕмрен.

Çавах чĕремçĕм манăн çырлахмарĕ,
Шăпа приговорне вăл хирĕçлет.
Шутларăм эп: «Поэт вăл юман мар-и?—
Ӳксессĕн те пĕтмест чăн-чăн поэт».

1987 çулхи пуш уйăхĕ.

# «Йывăра çĕнсе, çунатланса пурăн...»

Литература еткерлĕхĕнче çырусем уйрăм пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ. Хăй вăхăтĕнче пичет валли мар çырнă йĕркесенче пĕр шутламан-туман çĕртен самана сăн-сăпачĕ те сăнарланса юлать, автор тавракурăмĕ, пĕлӳпе культура шайĕ, унăн кăмăл-сипечĕ ӳкерĕнет. Ахальтен мар эпир А. Пушкин, Л. Толстой, М. Горький, А. Чехов т.ыт. классиксен çырăвĕсене илемлĕ литература хайлавĕ пекех кăсăкланса вулатпăр. Вĕсене вуласа тухнă хыççăн пирĕн ума ятлă-сумлă çыравçăн чун пуянлăхĕ çĕнĕ енчен, туллинрех те чĕрренрех тухса тăрать, сăмах ăсти сăнарласа хăварнă персонажсемпе пулăмсем татах та ăнланмаллăрах та çывăхрах туйăнса каяççĕ.

Чăваш литературине илес пулсан, çыру жанрĕ пирĕн те туллин аталанса çитнĕ тесе çирĕплетме иртерех-ха. Чылай чух паллă çынсен архивĕсенче тусанланса выртакан çырăвĕсем вулакан патне пач çитеймеççĕ, вĕсем çаплах хăйсен черетне кĕтсе выртаççĕ. Тепĕр енчен, нумаях пулмасть пĕрле пурăннă-ĕçленĕ çыравçăсен литература еткерлĕхне тĕпчесе вулакансем патне çитерес ĕçре вăй хуракан специалистсем çителĕксĕрри те, тĕпчевçĕсемпе кĕнекеçĕсем пурнăçран юлса пыни те, вĕсен умне тăтăшах ку е вăл йывăрлăхсем тухса тăни те чăрмантарать.

Литературăна кĕме шутланă кирек мĕнле çамрăк авторăн та яланах юратнă çыравçисем пур. Вăл вĕсенчен вĕренет, тĕслĕх илет, хайлавĕсене вуласа хавхаланать, идеал выранне хурса хисеплет. Унашкал вĕрентекенсем манăн темиçе пулнă: Я. Ухсай, П. Хусанкай, А. Алка, Г. Ефимов, Н. Евстафьев, çывăхрах пĕлнисенчен – В. Сатай. Кусем çумне çаплах «Стихван Шавлы шкулне» те хушмалла.

Манăн килти архивра Чăваш халăх поэчĕ Стихван Шавлы çырнă çырусем самай упранаççĕ. Вĕсене ятлă-сумлă поэтăмăр тĕрлĕ çулсенче тата тĕрлĕ сăлтавпа çырнă. Çавна май çырусен содержанийĕ те тĕрлĕрен. Поэт хăйĕн кĕçĕн «шăллĕне» асăрхать, ӳсме хавхалантарать, унăн ăнăçлăхĕсемшĕн савăнать, «çăка» е «ăвăс» сăвă çырсан пăшăрхантарать, ятлать, вĕрентет, канаш парать. Çапла вара поэт кăмăлĕ лару-тăрăва кура улшăнсах пырать, çавăнпа вăл хăй те куç умне чĕррĕн тухса тăрать: йăваш, çилĕллĕ, хаяр, анчах нихăçан та усал сунса мар, ырă тăвас тесе асăрхаттарать вăл аякри кĕçĕн ĕçтешне, çапла вара ăна сакăлтăксенче такăнасран асăрханса ӳсме пулăшать, алă тăсса парать, чăн сăмаха кӳрентермесĕр, анчах тӳррĕн калать. Çав вăхăтрах поэт чĕлхи хитре, сулмаклă та асра юлакан, шухăша

яракан сăнарлă. Тепĕр тесен, вулакан çакна хăех тивĕçлипе хаклама пултарать.

Халĕ акă поэт пуръннă вăхăт та хыçа тăрса юлчĕ. Кăçалхи авăн уйăхĕнче вăл 90 çул тултармаллаччĕ. Юбилей умĕн вулакансене кăштах та пулин Чăваш халăх поэчĕн çыру еткерлĕхĕпе паллаштарни те вырăнлă пулассăн туйăнать.

«9.XII.56.

Хаклă Анатолий, салам!

Тавтапуç хаçат ярса панишĕн. Кăмăлăра килĕшнĕ япаласене хăвăр хаçатăрта çапла çапса пырсан, питĕ аван пулмалла, район халăхĕ те Сире уншăн тав тумалла.

Мĕн çыран-çĕмĕрен? Хавхалан, ӳс.

Салампа Стихван Шавлы.

P.S. Салам хаçат тăваканĕсене!»

«27.IX.57.

Анатолий шăллăм. Салам!

«Пурнăç пăрăнăçне» («Телей сăпки» поэмăн малтанхи ячĕсенчен пĕри. – **А.Ю.**) вуласа тухрăм. Савăнтăм. Маттур!

Пĕлетĕн-и, санран лайăх поэт пулма пултарать. Сăвă йĕркисем тарăннăн, сарлакан сывлаççĕ. Сăнама, курма, туйма, сисме пĕлни пур. Поэт ăспа мар, чĕрипе шухăшлать; çав паха.

Вырăнăн-вырăнăн кĕскетмеллисем пур кăна. Тăк, тĕк тенисем чăрмантараççĕ. Тĕл-тĕл йĕрке хăй шăнăçмасть т.ыт.те.

Поэмуна «Ялава» яратпăр. Хитре сăн хатĕрле. Г. Ефимов çырса ярĕ, санăн кунтах килсе каймалла пулать пулĕ.

Ĕçле, тăрăш, пуçу ан çаврăнтăр. Юлташусене салам.

Стихван Шавлы.

P.S. К. Чулкаç темĕн çырса ярать ав тата».

«4.V.61.

Хаклă Юман!

Авланса курма пулĕ, кĕнеке кăларма йывăртарах.

Эсĕ вара мĕншĕн пĕр поэмуна анчах сĕнетĕн, мĕншĕн турпас кăларас тетĕн?!

Ун çумне лайăх сăввусене хуш, кĕнекӳ (пулать пулсан) тытса пăхмалăх пултăр – вара Чăвашгиза сĕн, пирĕн енчен чару пулмĕ. «Сăпку» валли секци хăвачĕ кирлĕ мар, пичетре пулнă вăл.

Салампа усал Çтаппан пиччӳ.

Редакци халăхне салам!
С.Ш.»

«8.II.69.
Шупашкар.
Хаклă Юман,
Ĕçле!

Кашни кĕркуннех икел тăк. Патлатса ўкчĕр. Сасси ват Шупашкара илтĕнсе тăтăр.

Хаçатăр тавра тăван чĕлхе хĕлхемне сўнме ан парăр, чĕртсех пырăр!

Салампа Çтаппан пиччў».

«19.II.69.
Шупашкар
Юман тăванăм!

Хаçатусене ярса панăшăн пысăк тав. Л. Сергеевăн чĕлхе уйрăмлăхĕсем çинчен калакан стайине çĕнĕрен пичетлесе илни те аван.

Тен, малашне, вăхăтран-вăхăта, тĕпри çыруçăсемпе те паллаштаркалăр — ку та аван пулĕччĕ. Япалисене кĕнекесенчен, журналистсенченех илме пулать. Калăпăр, акă март уйăхĕнче А. Талвир 60 çул тултарать. Литсраницисене те кунтисемпе хутăштарма пулать.

Лисков Ахваниçе эпĕ ма вара астумастăп, «Колхозникре» ĕçленĕ пулсан? 40 çула яхăн иртрĕ те, «маннă тĕнче» пулнă пулĕ. Унăн утмăлне ман ятпа та саламлăр.

Мĕтри Мишин çăмăл сăввисенче сăмахсем вырăнсăртарах лараççĕ. Тен, тарăнрах сухалĕ - тар тапиччен?!

Салампа Стихван Шавлы».

«3.III.69.
Хаклă Юман тăванăм!

Чĕмпĕрти чăваш секцийĕ пирки шухăшласа пăхас пулать: пурте тĕрлĕ çĕрте пурăнатпăр тата Союз членĕсем те çук. Хăвна хальтерех илеймĕç-ха: тухнă кĕнекўсем кирлĕ. Аниçça аппа ватă ĕнтĕ, ĕçех хутшăнаймĕ, Якку вырăсла çеç çырать пулас. Малашне курăнĕ-ха, кунтисем хирĕç пулас çук.

- В. Долгов хăйĕн стайине çапнăшăн савăнчĕ.

- Сăн пĕчĕкки çук, хаçата сĕнмесен те юрать. Сăввисене илес тесен, «Ватă тимĕрçĕ», «Мăкăнь хирĕ», «Шупашкар илемĕ», «Симĕс

юн», «Тăрна ташши» (вырăн тăрăх) илме пулать.

- Аптраман сăввисене вуланă пек астăватăп. Ăна ёнтĕ халь «такăнмасан» та юрать.

Пурсăра та пысăк салам.

Стихван Шавлы.»

«28.III.69.

Хаклă Юман тăванăм!

Икĕ пакетна та илтĕм, тавах.

Вырăсла хаçат валли лирикла сăвăсене илĕр. Санра те «Гл. улица», те «Когда заря займется!» - астумастăп.

Аптрамана çамрăксен пуххине чĕнме каланăччĕ — чĕннĕ. «Типографи хĕрне» «К. ялавне» патăм, хăй килнĕ çĕре кĕрлесе тухĕ. Пенза чăвашĕн — Вл. Штурминăн — сăввине те курĕ. Г. Ефимова хам сĕннĕччĕ. Вăл унта халь пĕтĕм чăваш культурин асли (пай пуçлăхĕ).

Вырсарникун Мускава - Малеевка (хамăр çурта канма-çырма) тухса каятăп. Хаçату тухсан çавăнта ярса пар: Московская обл., п/о Руза, Дом писателеей им. Серафимовича — мана.

Урăх çырмалли çук-ха.

Сывă пул-ха, Иккĕмĕш Юман. Пĕрремĕш пекех лаштра, хăватлă пул!

Çтаппан пиччӳ».

«3.V.69.

Шупашкар

Салам сана, Иккĕмĕш лаштра Юман!

Чăваша ăна ырă шухăш кăна пар: вăл Çĕр чăмăрĕпе пӳскелле выляма тытăнать. Эсĕ, ача, капла Чăнлă райкомĕн хаçатĕнчен чăваш поэзийĕн хаçачĕ туса хуран! Тен, кăштах виçе те кирлĕ пуле. Юрĕ, ку уявсем килех тăнипе çапла пулчĕ пулĕ-ха.

Пирĕн чăвашсене эсир питĕ лайăх, селĕм кĕтсе илнĕ иккен. Урăхла мĕнле пултăр ёнтĕ.

Мускав таврашĕнче лайăх кантăм: тапсан планета вăйкăнать. Пĕрре сирĕн урлă, Париш (Барыш) чăвашĕсем урлă Пенза чăвашĕсем патне çитес кăмăл пур та, темлерех пулать ёнтĕ. Илим Курараn Шнаю та инçе мар (Саратов чăвашĕсем).

- «События» сăмаха тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ калама пулать, репортажунта «чаплă ĕç пулса иртрĕ» теме пулнă.

- «Эсир» сӑмаха «эсӗр» тесе те ҫырма хушаҫҫӗ кунти чӗлхе академикӗсем-пӑсавҫисем.

«Ӳстеретпӗр тырӑ-пулӑ эпир анлӑ уй-хирте» тенӗ ҫӗрте «эпир» сӑмах — ҫӑпан сӑмах. Малашне ҫавӑн пеккисене сӑнасан пӑсмасть. Ху та ҫапла вӗрент.

«Чӑн поэзие чухлатпӑр, пур чуна кантармалли» тени аван, анчах та ҫителӗксӗр пек: хускатмалли тесен активлӑрах, хытарарах, пусарарах каланӑ пек туйӑнать. Ку — автор ӗҫӗ.

Вӗҫӗ кирлӗ мар. Паллӑ.

Пӗтӗмпе илсен, «Чӑнлӑсен сӑмахӗ» кӗнекӳне те кӗме пултарӗ. Унччен «Т. Атӑла» ярса пар. Е «Ялава».

Праҫник ҫине праҫник.
Поэт, эс лар, ан сик!
Ҫыру сӗтелӗ умӗнче
Ешерекен, сывлан тӗнче.

Салам!
Пурте аптраман пулӑр!
Стихван Шавлы».
«12.VII.69.
Шупашкар
Хаклӑ Юман тӑванӑм!

Халь ӗнтӗ райхаҫатра «Шахмат ҫинчен» ятлӑ сӑвӑ та тухнӑ хыҫҫӑн - сан шахматла выляма вӗренмелле пулать, м.т. ун ҫинчен ҫур тӗнче , пӗтӗм районӑр пӗлет. «Пӗлнипе мухтанкалама юрать, пӗлменни пирки ҫӑвар та ан уҫ». Фирдоуҫҫи ҫапла каланӑ, Шавлы калать тесе ан ӳпкелех.

Пултаруллӑ ҫамрӑксемпе райвулакансене паллаштарни аван, анчах кунта та асӑрхану - редактор кирлӗ. Наумова Елюк хурӑн ҫинчен ҫапла калать: «Ун ҫулҫисем мерчен те пурҫӑн», - тет вӑл. Пурҫӑнӗ - кивӗ эпитет пулин те пырӗ. Мерчен - хӗрлӗ пулать, «мерчен мӑййя», «мерчен куҫлӑ ҫӗрӗ» т.ыт.те. Мерчен вӑл - чул. Тӗрӗсрех каласан, тӑмран тунӑ, хӗрлӗпе сӑрланӑ шӑрҫа... «Сан шӑрҫу - суя мерчен» тенӗ ҫав йышши мерчене. Коралтан тунине чӑн мерчен тенӗ». «Ман мӑйӑмра чӑн мерчен, кӗмӗл сулӑ алӑра», - юрланӑ чӑваш хӗрӗ.

1. Сӑмах вӑл шакӑркка мар, ӑна сӑвва пӗлсе лартмалла. Ку аксиомӑна эс пит лайӑх пӗлен.

2. Елюк аслӑ шкула вӗренме кӗретех. Ӑҫта чӑваш пур - ҫавӑнта сӑвӑҫ ӳстӗр.

3. Кивӗ сӑмахсем кӳртес тесен, вӗсен пӗлтерӗшӗ ҫинчен ваттисенчен ыйтса пӗлӗр! Ан вӑтанӑр.

4. Елюкӑн хӗлхемӗ пур, хӗлхемрен ҫулӑм чӗртӗр!

Салампа Ҫтаппан пиччӳ.

«27.VIII.69.

Шупашкар.

Хаклӑ Юман, кӗреш тӑванӑм!

Хаҫатусемпе ҫырӑвусене пурне те илсе тӑратӑп. Рехмет сана уншӑн. Ӗнер каҫхине Шунталран таврӑнтӑм, пит лайӑх курса ҫӳрерӗм хамӑр енсене. Пӗр паллӑ тракторист район тӑрӑх хӑйӗн «мотосикки» сӑпкинче сиктерсе ҫӳрерӗ. Тен, очерк-статья ҫуралӗ.

Кайма Хусан урлӑ вӗҫнӗччӗ, килме Чӗмпӗр урлӑ сиртен кӳршӗллех пуйӑспа иртрӗм. Чарӑнма правус пӑсӗ чакнӑччӗ.

«Юрланса пӗтмен юррусем» (вӗҫленмен тени вӑл «шӗвӗртмен» тени пулать) килӗшрӗҫ, Ӗҫне вӗҫне (кунта вырӑнлӑ) ҫитер.

Тавли ман пата ҫыру ҫырнӑ пек астӑватӑп - Самарта. Эс тӗрӗс калатӑн.

Ҫанна тавӑртӑм. Ӗҫлеме тытӑнасси ҫеҫ.

Салампа Ҫтаппан пиччӳ.

P.S. Аптраман уҫӑ сывлӑшра ытларах пулма тӑрӑшӑр, вара аптрамӗ».

«20.XI.69.

Хаклӑ Юман тӑванӑм!

Шел, «Чӑнни» поэмунта ҫӗнни ҫук. Сӑввине поэт мар, редактор, информатор, хаҫат пусмӑрласа ҫитернӗ ҫын ҫырнӑ. Мӗн тӑвӑпӑр ӗнтӗ? Ҫӗнет-ха, тархасшӑн!

Ҫырувӑсем сан - ӑслӑ, чунлӑ. Ҫав ӑспа чун поэзие кӳҫтӑр.

«Описательность - враг!» - тенӗ Байрон. Эсӗ те «брак!» те те, сонетусемпе поэмусем патне таврӑн. Пушкинла, ытарларах каласан, поэзире ӑс мар, пӑс! кирлӗ.

Пурне те ху пӗлен... Стихван пиччӳне вӑрҫма та пултаран. Тӳрӗ сӑмаха кукӑртма пӗлмест вӑл. Ҫавӑнпа та ӑна нумайӑш вӑрҫаҫҫӗ.

Салампа Стихван Шавлы.

P.S. Журналсенче мӗн пур - тӗрӗслӗп».

Буклет ҫине ҫырнӑ йӗркесем:

«Юман пулас туйраҫӑм, ҫитес Ҫӗнӗ ҫул саламӗ, сывлӑхӗ, хӑвачӗ сана!

Стихван Шавлы».

«22.XII.70.

P.S. «Корнилов инженера» «Комунизм ялавěнче» икě хěл канса выртнă хыççăн «Т. Атăла» чăмтаратăп».

Поэт çуралнăранпа 60 çул тултарнă май пулса иртнě литература каçне пырса кăмăл тума чěннě йыхрав хучě çине çапла çырса хунă: «15.10.70. Юман тăванăм, çăка ан пул-ха: вырăнне пурсăра та пěр пек панă. Ушкăн кěнеки ушкăнах ěнтě. Çул малалла! Уйрăм та кăларăн-ха! Килес çул поэмусем уйрăммăн тухмалла.

Ярса панă хаçатсем йăлтах килчěç - тав! Аптраманма иксěр ятăра эп уççыру янăччě те - илеймерěн пулас. Салампа Стихван Шавлы». Сăн ÿкерчěк тăрринче хушса çырни: «Мухтав Чăваш цинкографине! - епле чаплă çапнă!»

«26.III.72.

Шупашкар.

Юман тăванăм!

Кашла!

Çтаппан мучи çырмасть тесе ан кала - унăн сăвă та статья çырса ларса çÿхелнě кутне хыçма та вăхăт çук. Вырăсла кěнеке кăларма та пиллемерě тесе ан кала - вăхăт çиттěр, томěпех кăларăн. Халь Мускав çывăхне пěр уйăхлăха çырма-канма тухса каятăп.

Аслă Нагатка кăларса тăракан кěнекÿсене «Ком. ялавне» Ахваниç Пурхилне рецензи çырма сěнтěм. Хăйсемех пěлеççě. Халь ак «Франци поэчěсене» уйрăм конвертпа чиксе ятăм (паян вырăс эрни).

Литкружокăр та ěçлетěр. Чěмпěр чăвашěсем 2 миллионлă Чăваша пěрлештерсе тăччăр!

Салам! Стихван Шавлы».

«20.III.73

Голицыно.

Юман тăванăм!

Кунта пěрер уйăх канас терěм. Халь каллех шуйттан пек ěçлеме пултаратăп. Тин çеç «Лит. Раççейре» çěнě сăвăсем тухрěç. Паймен патне çакăн пек сăвăсем çырăнчěç:

Стихван каллех шуйттан,<br>
Çтихван каллех чěр турă:<br>
Ěçе вăл кÿленчě паян,<br>
Çтихван - çунат та юрă!<br>
Айванлăх çулăхрě ăна,<br>
Чул пек пусарчě нишлěх:

Стихван ёçпе чыслать куна,
Айванлăх,
Нишлĕх - ишлĕк!

Стихван кăкри каллех сунтал,
Сăмахĕ - мăлатук,
Сулмаклă.
Стихван - усалпа усал,
Ырра пула Çтихван çунатлă!
Сывă пул!

Маяк пичче 80 çул тултарнă тĕле «Т. Атăл» статья ыйтнăччĕ, çавна ăсталама ларатăп-ха. Кĕскен. асаилӳсем еверлĕрех, вăл Чăваша кĕрсе пыни çинчен.

Аптраман çыру çырнăччĕ, эп темле канашах параймастăп, врачсене итлетĕр. Киле çитсен, Литфонда калăп, тĕн, кăштах нухрат куçарса памĕç-и? Ан хурлантăр, чире парăнмасан, чир пăрăнарах çӳрет.

Салампа Ăçтаппан пиччӳ».

«18.4.73.

Шупашкар.

Хаклă Юман тăванăм!

«Чĕмпĕр чулĕ калаçать» - питĕ лайăх ят, илемлĕн те сулăмлăн питĕ нумай калама пулать...

Ульянов Володьăна - ачаран пуçласа гимнази пĕтериччен - мĕншĕн эс Ильич е Ленин тесе çыратăн?

Эсчен каланă вырăнсем нумай, эс урăхларах, çĕнĕллĕрех каласа пама пултарнă.

Ĕçле.

Ĕçӳ каять.

Çырăвушăн тав.

«Хăват» кĕнеке кайса патăм. Вăл кăçал е килес çул тухмалла. Хаçатне чиксе яратăп.

Салампа Стихван Шавлы».

«Çуртапала хур тĕкĕнчен
Поэзи тытăнать.
Тавтапуç сана, тĕнче,
Ан юлтăр автомат!
Хаклă Юман тăванăм!

Тавах саламушăн, çунатлă сăмахушăн! Ватти ватăлла, çамрăкки çамрăкла татах та шавлар-ха, кĕрлер-ха эппин! «Ялавпа» «Атăлти» сăввусем юман никĕс çинче, малашне тимĕр-бетонран хывасси паллă.

Саншăн савăнатăп!
Салампа Çтаппан пиччӳ.
16.VII.74".

«7.II.75.
Шупашкар.
Хаклă Юман тăванăм!

Сан пирки эп иккĕленмен, эс пултаракан, шухăшлакан çын. Уру çине ĕне пуснă ĕнтĕ, эс тăван поэзин аслă çулĕ çине тухса пыран; систерсе çеç калас терĕм.

Хысна тенкелĕ çине ларнă çынсем пуртех ăслă пулмаççĕ, час пăсăлаççĕ. Некрасов та хăй журналне çăлас тесе патшана мухтанă та, леш хăлхасăр пулнă, илтмен.

Çĕтĕк чунлă çăпата чăвашĕсем районсенче пур пулсан, Шупашкарта пинĕпех. Вĕсем ялан тĕрĕс шухăшлаççĕ, вĕсене тавлашса çĕнме çук, вĕсемшĕн хура та хĕрлĕ, анчах поэта чăтăмлăх-тӳсĕмлĕх, пуласлăха шанни кирлĕ. Бездарнăç çăмăл пурнать, вăл яланах кăпăк пек, çиелте, çил çĕкленĕ улăм пĕрчи пек малта, - алă сул та иртсе кай!

Чĕмпĕр валли 200-300 йĕрке подстрочник тени çитет (вĕсем те хăвна малашне вырăсла куçарма кирлĕ пулаççĕ). Кунтан рекомендацисем парăпăр, хамăр та çĕмĕрттерсе пырса çитĕпĕр.

Халь ĕнтĕ эс Рафаэль-Байрон-Маяковский çулне çитнĕ пулĕ; Тăхтаман 50 çулсăр авланман, эс те 50 çулччен Союза кĕресшĕн иккен - ан кĕт, маларах илетпĕр.

Виçĕлогине пĕтер («Пурнăç аваре» ятлă сăвăллă роман çинчен сăмах пырать. - А.Ю.). Хам яланхи буксиру пулăп, часрах тĕнче умне кăларма пулăшăп.

Йывăра çĕнсе, çунатланса пурăн, хăвна пĕччен тесе ан шухăшла!
Çтаппан пиччӳ».

«4.VII.75.
Хаклă Юман тăванăм!
Союза кĕмелли хут чиксе яратăп. Çĕмĕрттер!

Çак кунсенче Аниçça аккамăр патне те çавăн пек хут ярса патăм. Хамăр пыни кирлех те пулмĕ. Хут вăл хăех ĕçлет.

Уйăх вĕçнелле çĕнĕрен Мускава вĕçмелле-ха.

Хамăр енне те кайса курас килет те, кĕр еннерех сулăнсан кайса та çӳрĕп-и-ха, тен?
Салампа Çтаппан пиччӳ».

«23.IX.75.

Хаклă Натуль тăванăм!

Чĕмпĕр сана Союза илсе пит аван ĕç тунă, халь ĕнтĕ Шавлы мучисене çавăтса малалла утма пултарăн. (Хĕрлĕ Чутайсем çапла калаççĕ). (Шел пулин те, ун чухне манăн Ульяновскри çыравçăсен ушкăнĕ урлă Союза кĕресси пулмарĕ, кайрантарах куншăн Шупашкарти «туссем» тăрăшни паллă пулчĕ. Мана вара Мускав ирĕк панă хыççăн 1983 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче тин, Шупашкар урлă, Союз членне йышăнчĕç. - А.Ю.).

Пĕр кун Чĕмпĕртен иртнĕ чух Сирĕн енне те кĕрсес тухасшăнччĕ те, сунас пекки пулчĕ пулас. Тĕнче халлĕхе пичетсĕр пурăнаймасть-ха, çав «стверени» хыçне хăвăн пичетне пусса яр-ха, «аччут» ыйтма пултараççĕ.

Салампа Ст. Шавлы».

Хаçат-журналта яланах вырăн хĕсĕккине пула халлĕхе поэзири аслă юлташăн çак çырăвĕсене çеç илсе кăтартнипе çырлахма тивет. Мехел çитсен, тен, ыттисем те вулакан умне тухма пултарĕç.

(«Тăван Атăл», 2 №, 2000 ç.).

Халĕ Стихван Шавлы çыравĕсем Шупашкарти Гуманитари институт архивĕнче упранаççĕ.

## «Отецă»

Вăрçă çулĕсенче эпĕ чи малтан «Илемлĕ литература» альманахпа паллашрăм. Ăна шăпах манăн аслă тус, ялта хăй тĕллĕн вĕреннĕ ӳнерçĕ Владимир Шерипович Узалуков Упи пасарĕнчен туянса килнĕччĕ. Каярах мана вăл çаплах «Тăван Атăлпа» «Ялав» журналсен чи малтанхи номерсемпе те паллаштарчĕ. Çакăн хыççăн манра çĕнĕ туртăм вăранчĕ – халĕ ĕнтĕ эпĕ чăваш писателĕсен сăввисемпе калавĕсене каçса кайсах вулама пуçларăм. Журналĕсем вăхăтлăха вулама илнĕскерсем пулнăран, кăмăла кайнă хайлавсене «хам валли» çырса илме пуçларăм. Вĕсем хушшинче самай пысăк хайлавсем те пурччĕ. Сăмахран, Л. Агаковăн «Вилĕмрен те вăйлăрах», «Хĕрача» повеçĕсемпе калавĕсем, М. Данилов-Чалдун, Илле Тукташ калавĕсем т.ыт.те. Сăвăсем хушшинче Николай Евстафьевăн «Тӳремлĕх» ятлă пĕчĕк сăвви те пурччĕ. Çакăн хыççăн поэт сăввисене каярах та асăрхасах тăма пуçларăм. 1948 çулта «Ялав» журналта унăн «Паттăр ывăлĕ» поэми çапăнса тухрĕ. Вăл та çийĕнчех асра юлчĕ.

1953 çулта Шупашкара малтанхи хут пырса тухсан киоскра поэтăн типографисĕр шăрши кĕрекен «Сын героя» кĕнеки куç тĕлне пулчĕ.

Поэмăн вырăсла вариантне те çийĕнчех туянма васкарăм. Çапах та авторне хăйне тепĕр виçĕ çултан тин курса паллашма тӳр килчĕ. Ку вăл 1956 çулхи февраль уйăхĕнче пулчĕ. Ун чухне эпĕ шăпах çамрăк писательсен малтанхи пысăк канашлăвне пынăччĕ. Пире Хĕрлĕ площадь çумĕнчи «Атăл» хăна çуртне вырнаçтарчĕç. Нумай вырăнлă номерте манăн койкăпа юнашар Порецкинчен пынă икĕ вырăс вырнаçрĕç. Çулĕсемпе вĕсем манран чылай аслăрах, вăрçăра та пулма ĕлкĕрнĕ. Литературăра вара малтанхи утăмсем кăна тăваççĕ иккенха.

Каçхине вĕсем вырăс секцине ертсе пыма палăртнă Николай Евстафьев поэт патне хваттерне каятпăр тесе тухса çухалчĕç. Чылайран тин таврăнчĕç çакскерсем. Иккĕшĕ те хаваслă. Поэт хăйсене ăшшăн кĕтсе илни çинчен çĕкленсе каласа кăтартрĕç. Халĕ литературăра иккĕшĕ те паллă ятсем – Николай Мишутинпа Владимир Грибанов. Пĕри - ача-пăча калавĕсем çырнă, тепри – поэт. Секци ертӳçи вĕсен хайлавĕсене пăхса тухма та ĕлкĕрнĕ-мĕн. Хăш-пĕр япалисене «Советская Чувашия» хаçатра пичетлеме суйласа та илнĕ. Уйрăмах хăйĕн сăввисене лайăх вулама пултаракан Владимир Грибанов савăннă.

- Пĕлетĕн-и, санăн пĕр сăввуна та вырăсла куçарнă вăл. «Время» ятлă. Вуласа тухрăм. Питĕ килĕшрĕ. Поэт сан пирки лайăх шутлать. «Вдумчивый автор» тесе хакларĕ, - хушса хучĕ юлашкинчен эпĕ ыйхăран вăраннине курса.

Ку вăл маншăн, паллах, питĕ те кĕтмен çĕртен пулса тухрĕ. Савăнтарчĕ. Анчах канашлура Николай Евстафьева курса пулмарĕ. Тепĕр кун хăна çуртне хăй пырса кĕчĕ. Çĕнĕ вырăс-тусĕсене ăсатма. Шăп çавăн чух пĕрремĕш хут тĕл пулса паллашрăмăр та эпир унпа. Николай Филиппович манăн «Ялав» журналта тухнă иккĕмĕш, пĕчĕк çеç ятсăр сăвва вырăсла «Вăхăт» тесе ят панă. Куçарăвĕ килĕшрĕ. Пăхмасăр калама та çийĕнчех вĕрентĕм эпĕ ăна. Çапла вара тĕл пулусенче те пĕр хутчен мар янранă. Вулакансем те, итлекенсем те кашнинчех хапăл кĕтсе илетчĕс ăна.

Çул иртнĕçемĕн Шупашкара тăтăшах пырса çӳреме пуçларăм. Кашнинчех Николай Евстафьев поэтпа тĕл пулмасăр таврăнман темелле. Час-часах мана пристаньрех кĕтсе илетчĕ. Вăл хăналама та, хăналанма та юрататчĕ. Тĕл пулмассерен вара мана хăйпе пĕрле хула урамĕсем тăрăх ертсе çӳретчĕ. Çыравçăсем, çав шутрах хăйĕнчен çулпа самай аслисем те ăна пурте шӳтле-путле «Отецă» тесе чĕнетчĕç. Хăйне çапла чĕннипе вăл чăннипех те кăмăллăччĕ. «Мана Хусанкай та «Отецă» тесес чĕнет», - тесе мăнкăмăлланатчĕ.

Пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçни, кулленхи ĕçлĕ е туслă хутшăнусем, ман шутпа, çамрăк çыравçăсене сывлăш пекех кирлĕ. Ку вăл уншăн

- чăн-чăн шкул. М. Горький сăмахĕсемпе каласан, университет. «Писательская среда» теççĕ вырăссем. Пĕр шутласан, кирек мĕнле ăста та аслинчен вĕренет, малтан ашшĕ-амăшĕн, каярах аслă юлташĕсен «копийĕ» пулса ÿсет, ăстаçă аслăрах ăстаран вĕренет. Çыравçă валли те унашкал хутшăну кирлĕ ÿсме.

Паллă ĕнтĕ, Николай Евстафьев поэт 1918 çулта Самар тăрăхĕнчи Йĕкер ялĕнче çуралнă. Вăл «тĕп Самар чăвашне» В.З. Иванов-Паймене хăйĕн вĕрентекенĕ тесе шутлатчĕ. Çавах та хăй вăхăтĕнче Шупашкара куçса килмен пулсан чăваш халăхĕ хăйĕн тепĕр поэтне çухатма пултарнă. Телее апла пулса тухман. Поэт икĕ чĕлхене те лайăх пĕлсе ÿснĕ. Хама илес пулсан, эпĕ Шупашкара кĕске вăхăтлăха пырса кайнă кунсенче те Н. Евстафьев поэт «шкулне» иртме ĕлкĕрнĕ темелле, ун урлă чăвашсен ытти ятлă-сумлă писательсемпе тата поэчĕсемпе паллашнă.

...1957 çулхи раштав уйăхĕ. Çĕнĕ çулхи 1-мĕш номертен тытăнса «Ялав» журналта манăн «Теллей сăпки» ятлă пысăк поэма çапăнма тытăнмаллаччĕ. Шăпах çав çул Николай Евстафьевăн «В труд Республики» ятлă сăвăсемпе поэмăсен вырăсла пуххи çапăнса тухнăччĕ. Сакăр пичет листине яхăнах вăл. Унта поэтăн çав тапхăр тĕлне çырнă паллăрах сăввисемпе поэмисем пурте тенĕ пекех кĕнĕччĕ темелле. Николай Евстафьев мана çав çĕнĕ кĕнекине парнелет. Унта авторĕ авторучкăпа çапла çырса хунă: «Дорогому Анатолию от души в надежде в скорейшее время получить от него книгу или что-либо крупное. Словом: с надеждой! «Шанчăклисем телейлĕ, - тенĕччĕ Çеçпĕл пичче. Н. Евстафьев. 17.XII.1957 çул. Шупашкар».

Ун чухне Николай Евстафьев Атăл çыранĕ хĕрринчи йывăç çуртра пурăнатчĕ. Çуртăн кивĕ пĕренисем çинче Асăну хăми пурччĕ. «Ку çуртра В.И. Чапаев вĕреннĕ», - тесе çырнăччĕ унта. Çĕнĕ хăтлăрах хваттере куçсан та, эпĕ Николай Евстафьев килĕнче пĕр хутчен мар çĕр каçнă. Вăл кашнинчех мана, çаплах пĕр кĕнеке те кăларса яма ĕлкĕреймен автора, хăйпе танлă тусĕ тата юлташĕ пек тулли çăкăр-тăварпа кĕтсе илсе ăсататчĕ.

1968 çулхи апрель уйăхĕнче хаçат-журналсем Николай Евстафьев поэт 50 çул тултарни çинчен пĕлтерчĕç. Эпир хамăр райхаçатра та юбиляра тивĕçлипе чысларăмăр. Поэт нумай кĕттермерĕ. А.Г. Николаев космонавт сăнне ÿкернĕ открытка çине тав сăмахĕсем çырса ярса пачĕ:

*«Ытарма çук тăванăм, Юман,*
*Чĕрере ман мĕн пур çавăнтан*
*Саламлатăп тулли кăмăлтан!»*

Хăйĕн кĕске çырăвне вăл çапла вĕçленĕ: «Саламушăн тавтапуç, хаçатра манман иккен. Ху çеç кĕрекере пулмарăн. Ырра манмаççĕ, тенĕ ваттисем. Сывлăх! Н. Евстафьев».

...1970 çулхи ноябрь уйăхĕн вĕçĕ. Ĕнтĕ хĕл те ларнă. Ял урамĕсемпе уй-хирсене шурă шупăр витсе хунă. Çурçĕр çилĕ витĕрех кастарать. Эпĕ малти пӳртре çыру сĕтелĕ хушшинче ларатăп. Хĕл кунĕ вăрăм мар. Кăнтăр иртнĕ хыççăнах каç сĕмĕ çапма пуçлать. Каç кӳлĕм алăка такамсем шаккарĕç.

- Питĕрмен! – илтĕнет çинĕхре арăм сасси.

Часах кайри пӳртре килнĕ çынсем каптăртатса кĕрсе тăчĕç. Ура сассисем, шавлăн калаçни илтĕнеççĕ.

- Толя, тух!.. Хăнусем çитрĕç! – чĕнет мана арăм. Алăка уçса пăхатăп та... Николай Евстафьев тăра парать. Пит-куçĕ хĕп-хĕрлĕ хăйĕн, кĕрĕк çухине, çăмламас çĕлĕкне пас тытнă. Унăн юлташĕ Куçма Турхан иккен. Вĕсем кĕрсен пӳрт тулсах ларчĕ. Хăнасем самаях хĕрнĕ. Уйрăмах Турханĕ «çемçелнĕ», ура çинче аран тăрать. Пӳрте кĕрсен тĕшĕрĕлсех анчĕ. Мĕнле сĕтĕрсе çитернĕ ăна Николай Филиппович – тĕлĕнсех каймалла!

- Виçпӳртре хăнара пултăмăр. Илпек Микулайĕпе пĕрле. Литература каçĕ ирттертĕмĕр унта. Писательсемпе артистсен ушкăнĕ Шупашкара таврăнчĕ. Эпир, Турханпа иксĕмĕр, кунта çитнĕ-çитнех сан пата çитсе курас терĕмĕр. Чăнлă районĕнчи чăваш ялĕсенче тĕл пулусем ирттерсен лайăх пулмалла, - терĕ Николай Филиппович, хăйсем мĕн тĕллевпе çӳренине пĕлтерсе. Унтан чĕлхине аран улăштаракан юлташĕ енне кăтартса:

- Малтан чиперехчĕ, тем йывăрланса çитрĕ тусăм, - тесе хушса хучĕ.

- Ара, кун пирки сăмах та çук... Тархасшăн! – тетĕп çакскерсене.

Кузьма Сергеевича ушкăнпа салтăнтаратпăр та, ăшă вырăн çине канма вырттаратпăр. Арăм сĕтел çине апат-çимĕç кăларса лартнă вăхăтра Николай Филипповичпа малалла калаçатпăр. Вăл мана Шăмăршăри уяв çинчен çĕкленсе каласа кăтартать. Юлашки ыранхи ĕç-пуç çинчен сăмах пуçлатпăр.

Тепĕр кунхине, пулса иртнишĕн кулянса, К. Турхан пиртен тем пекех каçару ыйтса калаçрĕ. Паллах, эпир ăна пурсăмăр та лăплантарма тăрăшрăмăр. Вĕри чей ĕçсе ирхи апат тунă хыççăн тӳрех райхаçат редакцине пырса кĕтĕмĕр. Хăнасене коллективпа, çаплах район пуçлăхĕсемпе паллаштарнă хыççăн, вĕсем чи малтанах редакци

çумĕнчи редколлеги членĕсемпе тĕл пулса калаçрĕç. Куçма Турхан чăваш литературин ӳсĕмĕсем, чăваш писателĕсем юлашки вăхăтра мĕнле хайлавсем çырни çинчен тĕплĕн каласа кăтартрĕ. Паллах, хăйĕн пултарулăхĕпе те паллаштарма тиврĕ ăна. Николай Евстафьев çамрăк авторсен сăввисене тишкерсе тухрĕ, черетлĕ литстраница валли хăйĕн çĕнĕ сăввисене парса хăварчĕ. Пĕрле сăн ӳкерттертĕмĕр. Асăнмалăх.

Кун хыççăн эпир виççĕн – К. Турхан, Н. Евстафьев тата эпĕ – районти чăваш ялĕсене тухса кайрăмăр. Çывăхри яла редакци автомашини леçсе хăварчĕ пире, малалла вара хуçалăхсен пуçлăхĕсем пулăшнипе ялтан яла тĕл пулусем йĕркелесе çӳрерĕмĕр. Эрне хушшинче эпир çитсе курман ял та юлмарĕ темелле.

Юлашкинчен эпир каллех пирĕн Аслă Нагаткинри хваттерте. Манăн хăнасене ăсатса ямалла. Арăм – ĕçре. Çавăнпа сĕтеле хамах хатĕрлемелле. Эпĕ тĕпел кукринче аппаланнă хушăра Николай Филиппович черетлĕ литстраница валли манăн пĕр сăвва вырăсла куçарса та хучĕ. «С утра торопимся мы в поле...» текен сăмахсемпе пуçланатчĕ вăл.

Çав хушăрах ура айĕнче явăнса çӳрекен Таня ятлă кĕçĕн хĕрĕмпе ăшшăн сăмахласа илме те ĕлкĕрет. Ăна хăйĕн юбилейĕ тĕлне хатĕрленĕ буклетне çак сăмахсене çырса парнелерĕ: «Пĕчĕк Таньăна пысăк пулма, лайăх вĕренме, пурнăçра телей курма ырлăх-сывлăх сунса парнелетĕп. – Н. Евстафьев. 2XII.70».

Поэт халалĕ тӳрре килчĕ: Таня хĕрĕм вăтам шкула ылтăн медальпе пĕтерсе тухрĕ, кун хыççăн Ульяновскри И.Н. Ульянов ячĕллĕ techpединститутран (халĕ вăл университет) вĕренсе тухса вырăс чĕлхипе литератури учителĕ пулса тăчĕ. Халĕ вăл Тутарстанри Нурлат хулинче ĕçлесе пурăнать, сакăр ача пăхса ӳстерет (виççĕшне ашшĕ-амăш прависĕр хăварнă çемьерен усрама илнĕ).

Поэт вилсен хаçатра тухнă некрологра çапла çырнăччĕ: «...Творчествăра аллă çул ĕçлесе Н.Ф. Евстафьев сăвăсемпе поэмăсен 20 ытла кĕнекине кăларнă. Хăйĕн произведенийĕсенче вăл пирĕн çитĕнӳсене, совет салтакĕсен вăрçăри паттăрлăхне, халăхсен туслăхне мухтанă. Унăн нумай сăввисене юрра хывнă. Н.Ф. Евстафьев художествăлла куçару ĕçĕсенче те палăрнă. Творчествăра активлă ĕçленĕшĕн ăна «Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ работникĕ» хисеплĕ ят панă...»

2008.

# Классик

Чи малтанах эпӗ Лапшу Ҫтаппанӗ ҫинчен вӑрҫӑччен пӗр класра вӗреннӗ Кашкӑр Ванькинчен илтнӗччӗ. «Кашкӑр» - ял хушшинчи ят. Ванькана вӑл ашшӗнчен юлнӑ. Тахҫан пулнӑ ӗнтӗ ку? Пӗррехинче ашшӗн ӗнси ҫине ҫӑпан тухнӑ пулнӑ. Мӑйӗ ыратнипе вӑл ҫынсем ҫине кашкӑр пек урлӑн ҫаврӑнса пӑхнӑ имӗш. Ҫакӑ ҫеҫ. Усал чӗлхесем акӑ ҫак сӑмаха пӗр айӑпсӑр ҫын ҫумне ӗмӗрлӗхех ҫыпӑҫтарса хӑварнӑ. Хӑй ҫумне ҫеҫ те мар, ачисемпе мӑнукӗсем ҫумне те.

Калас пулать Ванькка питӗ пултаруллӑччӗ. Шел, кил-йыш чухӑнлӑхне пула аслӑ шкул пӗтерме пӳрмерӗ ӑна. Ӳсерех парсан кӗтӳ кӗтрӗ, ака-сухана ҫӳрерӗ. Ҫитӗнсе ҫитсен, ялти ытти хресчен ҫыннисем пекех, пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхра вӑй хучӗ. Пӗчӗк чухне Ванькка, ялти мӗн пур тантӑшӗсем пекех, хаваслӑ та йӑрӑ ачаччӗ. Ыттисенчен лайӑхрах вӗреннипе ҫех уйрӑлса тӑратчӗ-и, тен.

Пӗррехинче Ванькка пире Лапшу Ҫтаппанӗ ҫинчен юмах кӗнеки вулани ҫинчен пӗлтерчӗ. Эпир хистесе ыйтнипе кӗнекери хӑш-пӗр юмахӗсене каласа та кӑтартрӗ. Тӳрех калас пулать, юмахӗсем пире питех те тӗлӗнтерсе ячӗҫ. Итленӗ май питсем ҫуталса ҫеҫ тӑраҫҫӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн хамӑрӑн та ҫав юмахсене алла тытса вулас килсе кайрӗ. Анчах кӗнеки алран алла ҫӳренипе ҫӗтӗлсе пӗтнӗччӗ ӗнтӗ. Унӑн хуплашки те, вӗҫӗ те ҫукчӗ.

Пирӗн тантӑш ҫав чаплӑ кӗнекене кам ҫырнине те пӗлет. Ку вӑл Куҫма Чулкаҫ писатель иккен. Часах эпӗ ун ҫинчен мӑннисем калаҫнине те илтрӗм. Пиртен темиҫе кил урлӑ ҫеҫ пурӑнакан колхоз председателӗ, хыткан пит-куҫлӑ та ҫӳллӗ пӳ-силлӗ Пукав Иванӗ пӗррехинче, Атӑл пӑрахучӗпе ҫула кайсан, Шупашкарта Куҫма Чулкаҫ писателе тӗл пулнӑ. Вӑл каланине ӗненсен, «Лапшу Ҫтаппанӗ» авторӗ «юптарса калаҫма юрататать, питех те уҫӑ кӑмӑллӑ, пӗвӗпе хӑй питех те лутра, асап хуҫса тӗртленнӗскер».

«Лапшу Ҫтаппанӗ» кайран «Сунарҫӑ халапӗсем» ятпа темиҫе хутчен те ҫапӑнса тухнӑ. Ача чух ҫиелтен ҫеҫ паллашнӑ хыҫҫӑн, эпӗ ҫав юмахсене чылай вӑхӑт хушши ҫаплах тупса вулаймарӑм. 1956 ҫулта Шупашкара ҫамрӑк писательсен канашлӑвне пырса тухнӑччӗ. Чӑваш кӗнеке издательствинче шӑпах ҫав ҫул «Сунарҫӑ халапӗсем» кӗнекен ҫӗнӗ кӑларӑмӗ ҫапӑнса тухнине курсан калама ҫук савӑнтӑм. Шӑпах ҫавӑн чух мана унӑн авторӗпе те ҫывӑх паллашма тӳр килчӗ. Асӑннӑ кӗнеке килти библиотекӑра халӗ те тӗрӗс-тӗкел упранать. Унта писатель автографӗ те пур. «Анатолий Федорович Ермилова –

Ульяновск облаçĕнчен çамрăк авторсен канашлăвне килнĕ сăвăça асăнмалăх парнелетĕп.

Автор Куçма Чулкаç.

6 ноябрь 1956,

Шупашкар хули», - тесе çырнă вăл унта.

Ун чухне Куçма Чулкаç Чăвашрадиора литература передачисен редакторĕнче ĕçлетчĕ. Çавна май литературăна тин çеç кĕрекен çамрăк авторсене вĕсен сăввисене ятарласа хатĕрлекен передача валли çырса илме пухрĕ. Йышлăн пынăччĕ эпир ун чухне Чăваш писательсен Союзĕпе пĕр çивитти айĕнчех вырнаçнă радиокомитетăн шурă чул кĕрменне. Çавăн чух çывăх паллашма тӳр килчĕ те чаплă юмахсен авторĕпе.

Шупашкартан тата çывăх районсенчен пынă çыравçăсем хăйсен сăввисене пленка çине çырса илнĕ хыççăн, килнĕ пекех, хăвăрт саланса пĕтрĕç. Мана, аякран килнĕскере. Куçма Чулкаç хăйĕн ĕç-пуçне вĕçленĕ хыççăн каç выртма та хăй хваттернех илсе кайрĕ. Паллă писатель хăйĕн пысăк мар çемйипе пĕренесенчен купаланă икĕ хутлă кивĕ çуртăн пĕр хваттерĕнче пурăнать иккен. Хваттер интерьерĕ питех те ансат: çара та кивĕ сĕтел-пукан, студентсенни пек, тĕпне хăма сарнă черченкĕ икĕ тимĕр кровать, вĕсем çинчи тӳшек-çытарĕ те çемçех мар. Пӳлĕм тăрăх асăрханса çеç çӳремелле: хытăрах ярса пусмассерен урай хăмисем авăнса чĕриклетсе илеççĕ. Кунта писатель пурăннине кĕнекесемпе тата хутсемпе тулса ларнă этажерка çеç аса илтерет.

Меллĕ самант тупса, эпĕ ăна «Лапшу Çтаппанĕн» историйĕ çинчен каласа кăтартма ыйтатăп. Çакна манăн, чăнах та, питĕ пĕлес килетчĕ ĕнтĕ. Телее, Кузьма Афанасьевич вăрах кĕттермерĕ, карчăкĕ, Сантăр аппа, сĕтел хатĕрленĕ хушăра, хăйĕн тĕп кĕнекине епле çырни çинчен калама пуçларĕ.

- Ку юмахсем вĕсем пĕрре ларса çырнă япаласем мар, - тесе пуçларĕ хăйĕн сăмахне Куçма Чулкаç. – Кашни юмахĕ пурнăçра пулса иртнĕ тĕрлĕрен ĕç-пуçпа çыхăннă. Сăмахран, «Çăка хăвăлĕнче ларсах арăслана чĕрĕлле тытрăм» юмах атте Канаша кайсан арăслан курни çинчен каласа кăтарнипе çыхăннă.

«Ямаш вăрманĕнчи ăсансене пурне те хам хыççăн ертсе килтĕм» юмаха çырас умĕн Н. Янгас поэтран «консультаци» илме тиврĕ. Пĕррехинче унăн хваттерне пырсан: «Ăсан мĕн çиет? – тесе ыйтрăм. «Çуркунне - хурăн кăчки, кĕркунне - пилеш», - терĕ çакскер. Çавнашкал «информаци» те юмах çырма çителĕклĕ пулчĕ. Епле юмах пултăр-ха вăл улăпсăр? «Сунарçă халапĕнче» те Лапшу Çтаппанĕ

«тӗлӗнмелле курӑк ҫисе» улӑп пек ӳссе кайнине ҫырса кӑтартнӑ. Шупашкарта Михал Ефимович Ефимов преподаватель пурччӗ. Вӑл пединститутра педагогика ҫинчен лекцисем вулатчӗ. Пӗррехинче хӑйӗн лекцийӗнче «Стыдливая мимоза» текен чечеке аса илчӗ. Унӑн вӑррине ҫисен организм ӳссе каять имӗш. Ытти-хытти - фантази ӗҫӗ. Хур кайӑксем тытни ҫнчен калакан юмах сюжечӗ ҫуркунне Атӑл хӗррине ансан ҫуралчӗ. Кайӑк хурсем питӗ йышлӑччӗ ҫав ҫул.

«Симӗс пасар» тетпӗр. Вӑл ӑҫта иккенне пӗлетӗн ӗнтӗ эсӗ. Унта пӗр хӗрарӑм кӗвенте туяннӑ. Кӗвенти хуҫӑлса кайрӗ... Сутаканни: «Эпӗ кашкӑр тытнӑ», - тет хӑйне ятлакан хӗрарӑм умӗнче тӳрре тухса. Ҫакӑн хыҫҫӑн манӑн Лапшу Ҫтаппанне те «кашкӑр тыттарас» килчӗ. Анчах мӗнле тытаҫҫӗ-ха ӑна? Хумма Ҫеменӗпе калаҫатӑп. «Шупашкарта Иван Андреевич Шевле сунарҫӑ пур, - тет ҫакскер. — Ҫавӑнпа калаҫса пӑх-ха». Вӑл мана унӑн тӗлне те пӗлтерчӗ. Тепрехинче вара эпӗ ҫав паллӑ сунарҫӑ патне хваттерне пытӑм. Вӑл мана сунарҫӑсем кашкӑрпа тилле епле тытни ҫинчен каласа кӑтартрӗ. Ҫапла вара тата икӗ сюжет ҫуралчӗ.

Пӑсарапа куян мыскарисем — хамӑр Ямаш ялӗнче пулса иртнӗ ӗҫсем. Пӗр ҫулхине куянсем хурама вуллисене кӑшласа янӑччӗ...

Малтанхи юмахӗ арӑслан ҫинчен пулчӗ, иккӗмӗш упа тытни ҫинчен... Сунарҫӑ ятне малтан Йӗксӗк Хветӗрӗ тенӗччӗ. 1935 ҫулта Янкас ялне командировкӑна ячӗҫ. Ун чухне Янкас поэт ҫуртӗнче ял Совечӗ вырнаҫнӑччӗ.

- Писательсем килсе ҫӳреҫҫӗ... Ман ҫинчен те кӗнеке ҫырасчӗ, - тет пӗри.

- Эс кам пулатӑн вара? - тесе ыйтатӑп.

- Эпӗ Лапшу Ҫтаппанӗ, - терӗ ҫакскер.

Ҫынни вӑл ун чухне конюхра ӗҫленӗ. Ватӑскер. Сакӑр тиха пӑхнӑ. Сунарҫӑ мар. Ҫав кун эпӗ ун патне хваттерне кайрӑм. Ара унӑн уҫӑ кӑмӑлӗ питӗ килӗшрӗ те...

- Чӑнах Лапшу Ҫтаппанӗ-и эсӗ? — терӗм ҫакна тепӗр хут, килне пырса кӗрсен.

- Ҫаплах ара, - тет ҫакскер.

- Сирӗн почта ӑҫта? — ыйтатӑп унран, ҫын улталаманнине кура. Хам типографине шӑнкӑравлама васкарӑм. Килхуҫи мана кивҫен виҫӗ тенкӗ укҫа кӑларса пачӗ ҫыхӑну расхучӗсене тӳлеме. Хам вара «Пионер сасси» хаҫат редакцине шӑнкӑравласа наборласа хунӑ сунарҫӑ ятне улӑштартӑм — ӑна Лапшу Ҫтаппанӗ туса хутӑм...

Ҫапла. Кӗнекере персонаж ячӗ те пысӑк пӗлтерӗшлӗ. «Сунарҫӑ халапӗсенчи» тӗп персонажа Йӗксӗк Хветӗрӗ теме халӗ ниепле те

чĕлхе çаврăнмасть. Вăл вара çапла юлма та пултарнă-çке? Паллах, ун чухне юмахĕсем чылай чухăнланса юлнă пулĕччĕç. Телее, Лапшу Çтаппанĕ ят парне пек тупăннă. Чее те усал кăмăллă çынна йĕксĕк теççĕ чăвашсем. К. Чулкаç кĕнекинчи сунарçă юптарма юратать пулин те, начар çын мар, пачах урăхла, тӳрĕ кăмăллă та тĕрĕслĕхе питех те хисеплекен, ыттисене сума суса юратаканскер. Юптарса вăлтасси те унăн пурнăçа юратнинчен тапса тăрать, вăл халăх шӳчĕпе çыхăннă. Тĕнче литературине илес пулсан, унашкал сăнарсенчен чи малтан Мюнхаузен барон сăнарĕ аса килет. Анчах чăваш писателĕ унăн витĕмĕнчен тухса, халăх уйрăмлăхне сыхласа хăварма пултарнă. Лапшу Çтапаннĕ чунĕпе те, ăсĕпе те чăн-чăн чăваш çынни. Вăл ял çыннисен пурнăçĕпе пурăнать, вĕсен йăли-йĕркине тытса пырать. Хăй çуралса ӳснĕ яла, унăн çыннисене, çутçанталăк пуянлăхне чунтан юратать, вĕсене тивĕçлипе хаклама пĕлет. Çапла вара писатель халăх чысне тивĕçлĕ, унпа чунĕпе те, юнĕпе те çыхăннă сăнар тума пултарнă. Çавăнпа вăл хаклă та.

Аслăраххисем астăваççĕ ĕнтĕ, çыравçăсем К. Чулкаçа куç умĕнех «классик» тесе чĕнетчĕç. Шӳт сăмахшăн вăл çилленместчĕ. Кулса илетчĕ кăна. Мĕн пур классиксем çинчен халăхра анекдотсем çӳреççĕ. Куçма Чулкаç пирки хайланисем те сахал марччĕ хăй вăхăтĕнче. Вĕсене ĕçтешĕсем хăй умĕнчех каласа кулнисене те курнă эпĕ. Шӳт сăмахра чăнни те пулнă çав. «Лапшу Çтаппанĕ» авторĕ ырă сăмаха чăннипех те тивĕçлĕ. Мĕн каласси, вăл шайлă япаласем куллен çырăнмаççĕ.

1992–2010.

## «Ман суран – çĕр-шыв суранĕ»

Сайра хутра тĕл пулакан пысăк талантсем пекех, Валентин Урдаш ыттисенчен уйрăлса тăратчĕ, «стандарта» шăнăçмастчĕ. Çакна пытарма çук: тепĕр чухне çын куçĕ умĕнче хăйне йĕркерен кăларса ярса кăнттăм та чарусăр тыткалама та вăтанса тăмастчĕ. Мыскарасемпе шӳтсем теме те май килет ун хăтланăшĕсене. Пĕррехинче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра «Урдаш «гастролĕсем» ятпа фельетон та сапăнса тухнăччĕ. Кирек кам чысне те варлакан çавнашкал алхасусем вара унăн час-часах пулкалатчĕç.

Кунашкал мыскарасем, паллах, никама та илем кӳмеççĕ, чыс та тумаççĕ. Çав шутра поэта та. Вăл мĕн чухлĕ талантлăрах, ун çинчен

тӗрлӗрен япӑх сӑмах ҫавӑн чухлӗ хӑвӑртрах сарӑлать. Пӗрисем кулса, теприсем тарӑхса каласа кӑтартаҫҫӗ. Ҫӳпӗрен пӗрене тума юратакансем яланах йышлӑ. Пулмасла япаласемпе хутӑштарса, анекдотсем те калаҫҫӗ паллӑ ҫынсем ҫинчен. Е тата аслӑ инстанцисене ҫӑхавсем вӗҫтерсе ярасса та кӗтсех тӑр. Поэтӑн ҫакнашкал хӑтланӑшсем ҫинчен официаллӑ ҫынсем пӗлмен мар. Вӗсем ку е вӑл мыскарасем пирки «тивӗҫлӗ выводсем» тунӑ е тепӗр чух ирӗксӗрех «мерӑсем йышӑнма» тивнӗ.

Мӗнрен килнӗ-ха Валентин Урдашӑн шухӑлӑхӗ? Тен, поэтсене авалтан ҫапла богемӑсен шутне кӗртсе картнӑран-ши? Е пурнӑҫ хаваслӑхӗ яш чӗрене шӑнӑҫаймасӑр хӗрринчен тӑкӑнса тӑнинчен-ши? Ҫав пурнӑҫа поэт вӗҫсӗр-хӗрсӗр юратнӑран-ши? Е вӑл, ҫап-ҫамрӑк йӗкӗт, аравасӑр тӗртлӗ вӑрҫӑ нушине тӳснӗ хыҫҫӑн чунӗпе ӳчӗн суранӗсене пула асапланнӑран-ши? Вӑл та, ку та пулӗ. Ҫапах та ӑна халӑх хӑй пурӑннӑ чухнех ҫӑмӑлттайлӑ «ҫылӑхӗсене» каҫарсах тӑратчӗ. Пӗрле ӗҫлекенсем те ӑна нихӑҫан та сума сума пӑрахман. Ку е вӑл алхасу хыҫҫӑн очеркӗсемпе сӑввисене хӑнӑхнӑ псевдонимпа мар, паспорт ҫинчи хушамачӗпе «В. Яковлев» ячӗпе ҫапса кӑларни пулкаланӑ ӗнтӗ. Пӑртакран хаҫат-журналта каллех пурте пӗлекен тата кӗтекен «В. Урдаш» тепӗр хут курӑнса каятчӗ. Е пӗр хушӑ пач ҫухалса пурӑннӑ хыҫҫӑн шавлӑ Шупашкара ҫӗнӗ сӑвӑ-юрӑ ярӑмне илсе таврӑнатчӗ.

Ун ятне халӑх хаҫат-журнал е кӗнекисене вуласа ҫеҫ пӗлмен. Вӑл ҫитмен чӑваш ялӗ, ӑна курман-палламан чӑваш юлман-тӑр. Ҫапла вара В. Урдаш ҫинчен мансӑр пуҫне те аса илсе ҫырма пултаракан ҫынсем сахал мар, паллах. Ҫитменнине, эпӗ унӑн кун-ҫулне, тусӗ-юлташне пӗлсех кайман. Курсан та вӑрах калаҫса ларма тӳр килмен темелле. Ҫавах пӗлни-илтни ӗмӗрлӗхех асра юлчӗ.

Валентин Урдаш ятне эпӗ чи малтан 1944 ҫулта «Тӑван Атӑл» ятпа ҫӗнӗрен тухма пуҫланӑ илемлӗ литература альманахӗн малтанхи номерӗнче икӗ лирикӑллӑ сӑввине вуланӑ хыҫҫӑн астуса юлтӑм. Пӗри – «Тухӑҫран хӑпарсан шурӑмпуҫ» ятлӑччӗ, тепри – «Укӑлча умӗнче». Икӗ сӑвви те композиторсем юрра хывнӑ хыҫҫӑн халӑх хушшинче хӑвӑрт сарӑлчӗ. Ҫамрӑк, анчах вӑрҫӑ вучӗпе ҫунса та сывӑ юлнӑ, чӑннипех те кӑвар чӗреллӗ йӗкӗтӗн сӑввисемпе калавӗсем часах «Ялав» журналта та час-час курӑна пуҫларӗҫ. Очерксем те ҫырать иккен ҫакскер. Вӗсем журналсенче ҫеҫ мар, тӗп чӑваш хаҫатӗнче те курӑмлӑн ҫапӑнса пыраҫҫӗ: «Тулӑ хумханать...», «Пирӗн ялӑн, савнӑ ялӑн...». Юлашки очеркӗн ятне автор хӑй ҫырнӑ сӑвӑран илнӗ. Сӑвви вара Ф. Лукин композитор юрра хывнӑ хыҫҫӑн халӑх чи юратнӑ

юрӑсенчен пӗри пулса тӑчӗ. Вӑл ҫеҫ-и, поэтӑн ытти сӑввисем те, юрра хывӑнса, халӑх хушшине хӑвӑрт анлӑн сарӑлчӗҫ. Композитор ҫав юрӑсен ярӑмӗшӗн СССР Патшалӑх премине те тивӗҫрӗ. Ҫапла ҫиҫӗмлӗ хӑвӑртлӑхпа сарӑлса пычӗ поэт чапӗ. Ахальтен мар В. Садай эп унпа паллашнӑ чухне: «Ку чухнехи поэтсенчен кама кӑмӑллатӑн?» - тесе ыйтсан, эпӗ асӑннӑ ятсем ҫумне хӑех Валентин Урдаш ятне те хушса хунӑччӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн пирӗн райхаҫатра кӗске хыпар ҫапӑнса тухрӗ. «Нумаях пулмасть пирӗн района чӑвашсен ку чухнехи паллӑ поэчӗ Валентин Урдаш килсе кайрӗ», - тесе пуҫланӑччӗ ӑна. Аяларах поэтӑн ҫӗнӗ сӑвви пичетленнӗччӗ. «Ман суран – ҫӗр-шыв суранӗ, Ман суран вӑл – сан суран. Сурансем ҫинчен эп манӑп Пӗр-пӗрне юратнӑран», - тесе вӗҫленӗччӗ сӑввине. Чӑннипех те чӗререн тухакан сӑмахсемпе ҫырнӑ ӑна. Анчах ӑна эпӗ кайран сӑвӑҫ кӗнекисенче пӗртте курмарӑм.

Ҫав тӗл пулура В. Урдаш, тен, райхаҫатра ӗҫлекен тусне хӑвӑртрах Шупашкара куҫса пыма та хистенӗ. Кун пирки вӑл ун патне хӑйӗн ҫав тапхӑрта ҫырнӑ пӗр ҫырӑвӗнче уҫҫӑнах систерет: «Ҫакӑнта, хулара эсӗ пулсанччӗ, пӗрле пурӑннӑ пулӑттӑмӑр. Пӳрт-ҫурта йӗркене ярӑттӑмӑр. Мӗншӗн халӗ те ямаҫҫӗ Сире? Хӑвӑртрах кил-ха, атту ӗмӗр иртет вӗт», – тесе ҫырнӑ поэт.

Ялта ӳссе ҫын пулнӑ, поэт чунлӑ, анчах хӳтлӗхсӗр ҫынсене хулара чӑннипех литература чапӗ кӗтнӗ-ха. Ҫав вӑхӑтрах чапа тӳсме чухӑн та нушаллӑ пурнӑҫа тӳсессинчен йывӑртарах, тесе тӗрӗсех каланӑ-тӑр ҫав. «Пӳрт-ҫурт йӗркелесе ярасси» вара пурнӑҫланмасӑр, ӗмӗтре юлнӑ темелле, харпӑр хӑйне йӑпатмалли хитре те айван ӗмӗт.

...1958 ҫулхи утӑ уйӑхӗ. Эпӗ писательсен ҫуртӗнче ларатӑп. Сасартӑк алӑк уҫӑлчӗ те Валентин Урдаш васкавлӑн кӗрсе тӑчӗ. Вӑл кӗҫех кунтах вырнаҫнӑ «Тӑван Атӑл» редакцине кӗрсе тухрӗ, унтан «Ялав» журнал редакцине... Тухсан, мана асӑрхаса, чарӑнса тӑчӗ. Калаҫса кайрӑмӑр.

- Эс ҫакна курнӑ-и-ха? - терӗ вӑл, аллинчи сенкер хуплашкаллӑ ҫӗнӗ сӑвӑ кӗнекине кӑтартса.

- Ҫук, - тавӑртӑм эпӗ.

- Эппин, сана та парнелем-ха. – Ҫавӑнтах тенкел хыҫӗ ҫине сӗвенсе автограф ҫырчӗ:

«Ермилов тусӑма –

Парам уссӑма.

Валентин Урдаш.

3.VII 58 ҫу. Шупашкар, Писательсен ҫурчӗ», - тенӗ вӑл унта. Кӗнеки «Чун савнӑран» ятлӑччӗ.

Çапла пуçласа куçма-куç паллашрăмăр поэтпа.

Çав çулах, авăн уйăхĕнче, эпĕ каллех Шупашкара çитрĕм. Хальхинче писательсем хăйсен черетлĕ пиллĕкмĕш съездне пухăннă. Унта манăн та, çулталăк пуçламăшĕнче «Ялав» журналта пичетленсе тухнă «Теллей сăпки» поэма авторне, пыма йыхрав тунăччĕ. Халь эпĕ те мĕскĕн кĕлмĕç ача мар, малтанхи гонорара илсе çăмăллăн сывласа янă, мал ĕмĕтлĕ те уçă чунлă çамрăк çын темелле. Çĕнĕ паллашусем, çĕнĕ тĕл пулусем... «Эсĕ кам пулатăн?» «Çавă». «Эсĕ?» «Наум Яковлевич Любимов». «Апла пĕлетĕп. Илтнĕ. Вуланă. Критик. Статьюсем журналсенче çапăнсах тăраççĕ».

Çав каç Якку Наумĕ «пулăшнипе» эпĕ Валентин Урдаш мыскарине иккĕмĕш хут (пĕрремĕшĕнче Шупашкара чи малтанхи хут пырсан) курнăччĕ. Ку вăл Шупашкарти тарăн çырма-çатра тĕпĕнче чуна шиклентерекен пӳртре ăнсăртран пулса иртрĕ... Ун чухне поэтпа калаçса ларма тӳр килмерĕ. Съездра курсан, çывăха пырса чăрмантарма ирентĕм. «Атăл» ресторанта пĕр сĕтел хушшинче апатланма тӳр килсен хăй кĕтмен-туман çĕртен: «Эсĕ тӳрех поэмăпа тухрăн. Маттур!» - тесе хучĕ кăна.

Тепĕр съезд аса килет. Ку хăçан пулнине астумастăп. Валентин Урдаш кермене çĕнĕ хура плащпа пырса кĕчĕ, залри малти ретсенчен пĕринче ларăн йышăнчĕ. Пурте ун еннелле тинкерсе пăхаççĕ. Унччен маларах черетлĕ мыскарасемшĕн хаçат-журналта ун хайлавĕсене пичетлеме чарнă пулнă иккен. Вăрçă ветеранĕ тата инваличĕ В.Урдаш Мускава, ун чухне СССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Председателĕнче ларнă Ворошилов патне кайса килнĕ имĕш. Çакăн хыççăн унăн кĕнекине кăларма ирĕк панă. Кун çинчен мана Шупашкар çыравçисем каласа кăтартрĕç. Мĕнех, тепĕр чухне хăвна ху хӳтĕлеме пĕлни те кирлĕ çав пурнăçра.

... Черетлĕ съезд. Ун чухне съездсенче çыравçă ăсталăхĕ çинчен нумай калаçатчĕç. Ку хутĕнче Валентин Урдаш сăввисене мухтарĕç. Тăхтав вăхăтĕнче юлташĕсем хушшинче хăй те хĕрсех калаçать. Тăп-тăр урă. Савăннă. Пичĕ-куçĕ çиçет.

- Пĕлетĕр-и, мĕншĕн лайăх пулса тухаççĕ манăн сăвăсем? Эпĕ вĕсене çынна юратса çыратăп. Чун-чĕререн. Çавăнпа лайăх тухаççĕ те вĕсем, - вĕрентет пире, çамрăксене, ырă ят илтнĕ сăвăç. Кун çумне мĕнех хушса калайăн? Сăвва, чăнах та, юрату çуратать. Ахальтен мар поэт çакна ялан пусса палăртма тăрăшать. «Юрра юрату çуратать» ятлă сăвви те пур унăн:

*Поэт вăл — хăй пурнăç, хăй юрă,*
*Юрра юрату çуратать.*

*Апла-тăк, чĕремçĕм ман, курăр,*
*Сӳнми юрату çеç усрать.*

Çакна унăн кĕнекисен ячĕсем те тупĕр хут çирĕплетеççĕ: «Чун савнăран», «Саншăнах юрлатăп», «Пурăнас килет», «Ăраскал», «Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран» тата ытти те.

... Каллех Писательсен çурчĕ. Çулне те, кунне те астумастăп. Çулла. Эпĕ отпускра, яланхи пек, Шупашкара çитсе килме васкарăм. Аслă Нагаткинри райхаçатра Надежда Александровна Клопкова корректорта ĕçлет. Унăн упăшки, Василий Иванович - район прокурорĕ. Клопковсем иккĕшĕ те кунтикавсем. Ялĕ ку Чăнлă шывĕ хĕрринче вырнаçнă. Урдаш çуралса ӳснĕ Раккассине Чăнлă шывĕ çеç уйăрса тăрать. Кӳршĕ ялти чăвашсем пĕр-пĕринпе тахçанах тăванлашса пĕтнĕ. Василий Иванович кланă тăрăх, В. Урдаш та вĕсене хурăнташ тивет. Çавăнпа ăна салам калама хушрĕ.

- Сана пирĕн енчи хурăнташ-тăвану салам каласа ячĕ, - тетĕп çакна.

- Кам? — ыйтрĕ поэт.

- Район прокурорĕ, - терĕм.

Тин çеç кулкаласа калаçаканскер, «прокурор» сăмаха илтсен, Урдаш сасартăк сăнран улшăнчĕ: куçне чарса пăрахрĕ, сăн-пичĕ хуралчĕ. Ку çеç те мар, вăл мана çилленмеллипех çилленчĕ.

- Прокурор тавраш̆ĕнче пирĕн нихăçан та тăван, хурăнташ пулман! - касса татрĕ вăл. Тек калаçмарĕ те. Çапла, кăнттам чĕлхеме пула ырă çынсен ăшă саламне поэт патне чипер илсе çитереймерĕм.

... 1972 çулхи август уйăхĕ. Çумăр вăрах çуманнипе çĕр çуркаланса кайнă. Анакан кĕтӳ тусанне çăтса, эпĕ Шупашкартан киле тĕттĕмленес умĕн тин çитсе ӳкрĕм.

- Каярах юлтăн. Паян кăнтăр хыççăн Валентин Урдаш кĕрсе тухрĕ. Чылай кĕтсе ларчĕ сана. Кĕтсе илеймерĕ... Чирлĕскере çамрăк ача çавăтса çӳрет. Пĕвер чирĕ. Хăрушă чир. Хăй сывалаймасса та пĕлет. Çакна пĕлсе тăрсах çирĕп тытать хăйне. «Вилессе пĕчĕк ачасем те вилеççĕ те... Çырлахасах пулать шăпапа. Мĕн тăвас тетĕн? Хамăн та айăп пысăк», - тет. Ларсан-ларсан хăйне çавăтса çӳрекен арçын ачана çенĕке хăварнă миххинчен эрех кĕленчи илсе кĕме хушрĕ. Кĕленчине унчен пăртак пуçланă иккен. «Ĕçмесене лайăхрах та вĕт», - терĕм çакна. «И-и, йăмăкăм, халь тин мана вĕрентнин усси çук. Чиртен те никам та хăтарас çук», - терĕ кăна. Пахчаран пиçнĕ помидорсем татса кĕтĕм те сĕтел çине хутăм, çăмарта ăшаларăм, чей лартрăм. Черккине ĕçнĕ май темтепĕр каласа тĕлĕнтерчĕ вăл мана — Шупашкар вăрттăнлăхĕсенчен тытăнса Мускав хыпарĕсем таранах.

Юманăн писательсен Союзне кĕме вăхăт. Пĕр сĕнĕвне хамах пама хатĕр, тесе калаçать. Юлашкинчен выртса канма шутларĕ, чирĕ аптратнипе тĕртленчĕ. Çенĕхе вырăн сарса патăм. Пăртак каннă хыççăн каллех тăрса ларчĕ. Çук, кĕтсе илеймерĕ сана. Питĕ курса калаçасшăнччĕ. «Кĕçĕр килетех ĕнтĕ вăл. Тен, çĕр выртсах кайăр?» - терĕм хăнана. Каккуй унта! «Пирĕн çитес çĕре кĕçĕрех çитмелле», - терĕ кăна. Тухса кайни те нумаях пулмасть-ха...

Арăм хыпарĕ мана пĕрре тĕлĕнтерчĕ, тепре кулянтарчĕ. Ара, паллă поэт ман пата ятарласа кĕрсе тухнă-çке. Ытти чухне çулталăкĕпех килте тунсăхласа пурăнатăп. Кăна пĕлнĕ-тĕк, Шупашкара кайма та тăхтамаллаччĕ...

Тепĕр кунхине редакцие кайрăм. Урдаш унта та кĕрсе тухнă иккен.

- Чăваш поэчĕ пирĕн пĕр корреспондента аван тăн кĕртрĕ, - кула-кула каласа парать мана редактор çумĕ Н. Гурьянов - вырăс çынни.

Пирĕн хушăра пĕр вĕçкĕнрех çамрăк хаçатçă пурччĕ. В. Урдаш пырса кĕрсен, вăл ăна алă панă чух: «Аван-и, коллега!» - тенĕ имĕш. Лешĕ курман-илтмен яш каччă хăйне çапла каланипе тарăхсах каять.

- Епле коллегу эпĕ санăн? Кам эсĕ?! - тет çакскер çиллĕн. Лешĕ намăсланнипе нимĕн калама аптрать.

- Ай-да Урдаш! Просто молодец! - тет поэт тавçăрулăхĕнчен тĕлĕннĕ юлташ.

Эпир пурте кулса ятăмăр.

Çапларах çынччĕ вăл Урдаш. Чăннине куçран калама юратааканскер, хăюллă та хăраманскер...

Çуркунне Владимир Садай арăмĕ - Луиза Тимофеевна шăнкăравларĕ. Вăл хурлăхлă хыпар пĕлтерчĕ: В. Урдаш вилсе выртнă иккен... «Коммунизм ялавĕ» хаçат поэт вилнĕ хыççăн çапса кăларнă некрологра çапла çырса пĕлтерчĕ: «Чылай вăхăт йывăр чирлесе выртнă хыççăн 1973 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче чăвашсен паллă поэчĕ, СССР Писателĕсен союзĕн членĕ Валентин Андреевич Урдаш вăхăтсăр вилсе кайрĕ...

Валентин Урдаш сăвăсемпе поэмăсен, очерксемпе калавсен кĕнекисем пурĕ вуннă ытла çырнă. Вĕсене вулакансем кăмăлласа йышăнчĕç. Хăйĕн сăвви-юрринче вăл колхоз ял ĕçченĕсен пурнăçĕпе ĕç-хĕлне мухтать, хастарлă та сăпайлă çынсен сăн-сăпатне ĕнентерӳллĕн кăтартса парать.

В.А. Урдаш сăввисем хăйсен янравлăхĕпе, çепĕçлĕхĕпе, ăшă кăмăл-туйăмĕпе уйрăлса тăраççĕ. Чăваш композиторĕсем унăн çĕр ытла сăввине юрра хывнă...

Валентин Урдаш совет писателĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарас тĕлĕшпе те пархатарлă ĕç турĕ...

Вăрçăри паттăрлăхшăн Валентин Андреевич Урдаша пĕрремĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе, виçĕ медальпе наградăланă...

Çывăх юлташ, пултаруллă поэт вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Уçă, ырă кăмăллă, çут ĕмĕт-шухăшлă Валентин Урдашăн сăнарĕ яланах пирĕн асра упранĕ».

Вилнĕ хыççăн унччен поэт пирки çӳрекен ӳпкевлĕ сăмахсем хăвăрт манăça тухрĕç, унăн ырă ĕçĕсемпе чапĕ, тивĕçлĕ шая çĕкленсе, çĕнĕрен чăннипех те çутă çăлтăрлă çунма пуçларĕç. Халăх хăйĕн ывăлне вилĕмсĕрлĕх парнелерĕ.

(«Тăван Атăл», 12 №, 2004 ç.)

# Алексей Талвир (Башкиров)

Алексей Талвир кĕнеки манăн алла чи малтан аллăмĕш çулсен пуçламăшĕнче лекрĕ. Ун чухне эпĕ Ватă Тимĕрçенти вăтам шкулта вĕренеттĕм. Пурăнасса шкул çумĕнчи интернатра пурăнаттăмăр. Пушă вăхăтра юнашарах çул урлă вырнаçнă ял библиотекине каçса кĕнекесм вулама суйласа илеттĕмĕр. Ун чухне вулама юратман шкул ачине астумастăп эпĕ. Хам вара (эпĕ çеç-и) чăваш кĕнеки тесен каççах каяттăм, лекнине-пĕр «шĕкĕлчесех» тăраттăм. Сăмах май каласан, ун чухне чăваш писателĕсем çыракан çĕнĕ япаласене пурне те тенĕ пек вуласа ĕлкĕрме пулатчĕ темелле. Роман е повесть таврашĕсене пӳрнепе шутласа тухма пулнă – пысăк калăпланă жанрсем литературăмăрта вăй илсе çеç пыратчĕç. Анчах пирĕн библиотекăра чăваш кĕнекисем сахалччĕ çав. Пур пеккисене тахçанах вуласа тухнă. Çавăнпа та эпĕ анне хăйĕн пур-çук пенсийĕнчен апат-çимĕç туянма парса янă вак-тĕвек укçаран ăнсăртран тĕл пулнă чăваш кĕнекисене туянма та хĕстерсе хăвараттăм. Шăпах çавăн чухне пĕрле вĕреннĕ тантăш аллинче А. Талвирăн «Манăн завод» кĕнекине курсан, ăна Мускавра вырăсла çапăнса тухнă кĕнекепе улăштарса илтĕм. Кĕнеки мана питĕ килĕшрĕ. Ăна эпĕ çаплах упратăп. Часах «Тăван Атăл» журналта унăн пысăк калăплă çĕнĕ хайлавĕ – «Пăва çулĕ çинче» романĕ пичетленсе пычĕ. Вăл уйрăмах асра юлчĕ, ытти тантăшсене те нумай калаçтарчĕ. Эпир ăна пурсăмăр та çийĕнчех пысăк хак патăмăр. Кайран пурнăç хăй те эпир пач йăнăшманнине çирĕплетрĕ. Çав роман хыççăн писатель чапĕ чикĕ урлах каçрĕ мар-и? Анчах эпĕ

кӗнеке ҫыракан авторпа тӗл пулса калаҫасса сунман та. Ку вӑл ҫапла пулса тухрӗ.

Вӑтам шкул пӗтернӗ хыҫҫӑн манӑн малалла вӗренесси ҫинчен шутламалли те ҫукчӗ – вӑрҫӑ ҫулӗсенче сывлӑхне ҫухатнӑ анне вилсе кайрӗ, эпир пӗртен-пӗр Геннадий шӑллӑмпа тӑлӑха тӑрса юлтӑмӑр. Манӑн чи малтан шӑллӑмшӑн тӑрӑшмаллаччӗ, вӑтам шкул пӗтерме унӑн тата икӗ ҫул вӗренмелли юлнӑччӗ. 1952 ҫулта хам та аран-аран вӑтам шкул пӗтеркелесе тӳрех райхаҫат редакцине ӗҫе вырнаҫрӑм. Унта мана хапӑлласах кӗтсе илчӗҫ. Ку вӑхӑт тӗлне эпӗ хамӑр районти ҫав хаҫатра калавсемпе сӑвӑсем, очерксемпе тӗрленчӗксем кашни номерте тенӗ пекех пичетленсе пыраттӑмччӗ ӗнтӗ. Мана хавхалантарса пулӑшаканӗ ун чухне хӑвӑрт ӳссе пынӑ Владимир Садай писатель пулнӑ. Маларах, анне сывӑ чухнех, пӗр уйӑха яхӑн хам та хаҫатра ӗҫлесе курнӑччӗ.

Анчах эпӗ редакцине тепӗр хут ӗҫе пырса вырнаҫнӑ чухне унта ҫӗнӗ ҫынсем ӗҫлетчӗҫ ӗнтӗ. Хӑйӗн «Летчиксем» романе ҫырса пичетленӗ хыҫҫӑн В. Садай Шупашкара куҫса кайма ӗлкӗрнӗччӗ. Телее пирӗн ҫыхӑну кун хыҫҫӑн та татӑлмарӗ, ҫирӗпленсех пычӗ. 1956 ҫулта мана ҫамрӑк писательсен канашлӑвне кайса килме те тӳр килчӗ. Малтанхи сӑвӑсем пысӑк пичетре тухни ҫӗнӗ вӑйпа ӗҫлеме хавхалантарчӗ. Часах эпӗ «Ялав» журнала пысӑк поэма ҫырса ӑсатрӑм. Поэма пирки чи малтан «Ялав» журналӑн ун чухнехи тӗп редакторӗ Г. Ефимов ӑшӑ хыпар пӗлтерчӗ. Вӑл ӑна килӗшнӗ иккен. Канаш памалли те ҫук мар унӑн автора: сюжет тӗлӗшпе те, уйрӑм йӗркесем пирки те. Алҫырӑвӗпе тепӗр хут ҫине тӑрса ӗҫлеме тиврӗ: ҫӗнӗ сыпӑксем хушӑнчӗҫ унта, киввисем те чылай саваланчӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн манӑн поэма редколлеги членӗсене те ҫырлахтарнӑ. Паллӑ поэт Стихван Шавлы ӑна пысӑк хак панӑччӗ.

Акӑ эпӗ каллех Шупашкарта. Алҫырӑвӗнче кӑранташпа аялтан турткаланӑ йӗркесем тӗл пулкалаҫҫӗ. Ку – Шавлы алли. Ҫапах та нумаях мар вӗсем. Редакторӗ ӑна хӑех юсаса ҫитерме пултарнӑ. Анчах ятлӑ поэт алҫырӑвне тӗкӗнсе авторне кӳрентересшӗн пулман. Ҫавӑнпа редколлеги членӗсем ҫав асӑрхаса паллӑ тунӑ йӗркесене авторне хӑйне юсаттарма пӗр-ик кунлӑха Шупашкара чӗнсе илнӗ те. Эппин, мӗн тери хисеплеҫҫӗ иккен вӗсем ҫамрӑк автора! Вӗсем унран иртсе пӗр йӗркене те тӗкӗнмеҫҫӗ. Епле савӑнмӑн-ха! Ун чухне ҫак интеллигентлӑ виҫеллӗх, аслӑ юлташсем автор правине пысӑка хурса хаклани мана калама ҫук тӗлӗнтернӗччӗ. Ҫавӑн чух редакторпа автор хушшинчи ҫакнашкал ӗҫлӗ хутшӑну пултарулӑх ӗҫӗнче чи пахи, чи кирли пулнине ӑнланса илнӗччӗ. Редактор автора шанни, калас тенине

калама чăрмантарманни хăех чăн-чăн шкул иккен вăл.

Каç выртма мана Куçма Чулкаç хăй патне илсе кайрĕ. Эпĕ унпа çамрăк писательсен канашлăвне килсен паллашнăччĕ. Ун чухне вăл çамрăк авторсен сăввисене радио валли çырса илнĕччĕ.

Каç кӳлĕм пирĕн кил хуçи таçта кайса çухалчĕ. «Эпĕ час килетĕп. Эсĕ унччен кĕнекесем вула», - тесе хăварчĕ вăл мана. Таврăнасса çĕрле тин таврăнчĕ. Ĕнтĕ унăн мăшăрĕ Сантăр аппа та пăшăрханма пуçларĕ ун пирки. «Ăçта çухалчĕ ку пирĕн?..» - текелет. Хĕрĕнкĕ килсе кĕчĕ кил хуçи.

- Ресторанра пултăм. Талвире куртăм. Санăн поэмуна пурте мухтаççĕ. Алексей Филиппович сан пирки ыйтса пĕлчĕ. Ыран ирхине хăй патне кĕрсе тухма ыйтрĕ, - терĕ çаксккер.

Алексей Талвир ун чухне - писательсен пуçлăхĕ, правлени председателĕ. Ăна эпĕ хăйĕн кабинетне иртсе кайнине курнăччĕ-ха. Паллашасса çывăхран паллашма ĕлкĕреймен. Ку хыпар мана савăнтарчĕ те, хумхантарчĕ те. Ирхине вара, шăпах калана вăхăтра, Алексей Филиппович кабинетне пырса шаккарăм.

- Кĕрĕр, - илтĕнчĕ кăмăллă та лăпкă сасă.

Акă эпир алă тытса паллашатпăр. Вăл ыйтнипе эпĕ хам çинчен каласа кăтартатăп. Кĕскен. Хумханнипе сассăм чĕтĕрет.

- Эсĕ лайăх поэма çырнă, теççĕ, - терĕ Алексей Филиппович мана итлесе пĕтернĕ хыççăн. – Саламлатăп! Правлени членĕсем канашларăмăр та хамăр енчен Сире кăштах пулăшма шутларăмăр. Халĕ Георгий Андреевич Ефимов патне кĕрĕр те Литфондран 500 тенкĕ пулăшу ыйтса заявлени çырăр.

Самантран эпĕ Г.Ф. Ефимов кабинетĕнче. Вăл мана заявленине мĕнле çырмаллине каласа кăтартать. «Для завершения работы над поэмой «Колыбель счастья» тенĕччĕ унта. Укçине Патшалăх банкне кайса хамах илтĕм. Ку вăл маншăн, чăнах та, калама çук кирлĕ те пысăк пулăшу пулчĕ. Ара çав укçашăн манăн уйăх çурă ĕçлемелле пулнă-çке.

1958 çулхи январь, февраль тата март уйăхĕсенче поэма «Ялав» журналта çапăнса та тухрĕ. Çав çулах пулса иртнĕ писательсен черетлĕ пиллĕкмĕш съездĕнче тунă докладĕнче А. Талвир ман пирки ырăпа асăнма та манмарĕ. Çак тĕслĕх те мана хавхалантарса тăмасăр пултарайман. Писательсен правленине ертсе пынă çулсенче вăл эртел ĕçне йĕркелеме пĕлни, çыравçăсене пĕр вăя чăмăртама пултарни çамрăк авторсен хутне кĕни уçăмлăн палăрчĕ.

1960-1961 çулсенче манăн Хусанти ВПШ çумĕнчи журналистсенултă уйăхлă курсĕнче вĕренме тиврĕ. Çавăн чухне унта чăвашла

тухса тăнă «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцине куллен тенĕ пек пырса çӳреттĕм. Пĕррехинче унта пырсан Талвире курах кайрăм. Вăл Хусана пурăнмаллипех куçнă иккен. Çакăн хыççăн ăна редакцинче чăвашла çыракан çамрăк авторсем хушшинче тăтăшах курма пулатчĕ. Вăл пырсан унта Тутар писателĕсен Союзĕ çумĕнчи чăваш секцийĕ çĕнĕ вăйпа ĕçлеме пуçларĕ. «Хусан» альманахăн икĕ номерĕ тухса кайрĕ. Хусантан таврăнсан эпĕ ун патне райхаçатăн литературăпа çыхăннă номерĕсене тăтăшах ярса тăраттăм. Алексей Филиппович хăй енчен пĕр çырăва та хуравсăр хăварман. Утмăл çулхи юбилейĕ тĕлне Хусанта «Сабантуй в Буинске» ятлă кĕнеки çапăнса тухнăччĕ. Ăна вăл ман пата та ярса пачĕ. «Юратнă Юмана – асăнмалăх! А. Талвир. 29.V – 69. Шупашкар», - тесе çырнă вăл унта. Пĕрлех - йыхрав хучĕ. Унта писатель 60 çул тултарнă май унăн тăван ялĕнче Патăръелĕнче пулса иртекен литература каçне чĕнсе çырнă. Шел пулин те, райхаçатра ĕçленĕ чух манăн нихăçан та уявсем тăрăх çӳреме вăхăт пулман. Куннехинче те чĕннĕ çĕре çитсе кураймарăм. Писателе сăвă йĕркисемпе саламланипех çырлахма тиврĕ.

1992.

# В.З. Иванов-Паймен

Тăван çĕр-шыв аслă вăрçи çулĕсенче тата ун хыççăн та пирĕн аякри пĕчĕк чăваш ялне тăван чĕлхепе тухнă кĕнекесем, учебниксемсĕр пуçне, пырса çитеймен темелле. 1943-1944 çулсенчи «Илемлĕ литература» альманахăн икĕ кенекине эпĕ чире пула çара каяймасăр юлнă В. Узалуков хăй тĕллĕн вĕреннĕ художник аллинче курнăччĕ. Çынни вăл пирĕн пата час-часах пырса çӳретчĕ, аттеренех юлнă пĕчĕк совет энциклопеди томĕсене уçса ларма юрататчĕ, хаçат-журналсен çĕнĕ номерĕсене вулатчĕ. Вăлатимĕр тете чăваш альманахне подпискăпа çырăнса илнĕ пулнă. Хăй «шĕкĕлченĕ» хыççăн икĕ кĕнекине те мана вулама пачĕ. Часах ку альманах «Тăван Атăл» ятпа тухса тăма тытăнчĕ. Мана уйрăмах вăрçă калавĕсем килĕшетчĕç, эпĕ вĕсене «хам валли» хулăн тетрадь çине çырса илеттĕм. Çапла Л.Агаковăн «Медаль» калавне, «Хĕрача», «Вилĕмрен те вăйлăрах» повеçĕсене, Ухсай Яккăвĕпе Петĕр Хусанкай, М. Ястран, сахалтарах пĕлнĕ Н. Евстафьевпа В. Ахтубай тата ытти поэтсен сăввисене çырса илтĕм. 1946 çулта вăрçăчченхи «Сунтал» журнал «Ялав» ятпа тухса тăма пуçларĕ. Л. Агаковăн унта номертен номере пичетленсе

пыма пуҫланӑ «Ылтӑн вӑчӑра» повеҫӗ пирӗншӗн чӑн-чӑн «чун апачӗ» пулса тӑчӗ.

Пирӗн касӑра, урам урлах, Мускава хӳтӗленӗ чух вӑрҫӑран йывӑр аманса таврӑннӑ атте тусӗ - Мӗтрик тете пурӑнатчӗ. Гренадер пек, ҫӳллӗ те тӗреклӗскер, вӑл арманта ӗҫлетчӗ. Каҫсерен пирӗн пата пырса ларса чӑваш журналӗсенче ҫапӑннӑ вӑрҫӑ калавӗсемпе повеҫӗсене каҫса кайсах вулатчӗ. Унӑн хулӑн та ҫӑра сасси ҫаплах хӑлхара янӑраса тӑрать. Вуласса вӑл сасӑпа вулама юрататчӗ.

Ӗҫӗ нумай чухне Мӗтрик тете арман пӳртӗнчех ҫӗр каҫатчӗ. Пӗччен кичем ан пултӑр тесе мана та хӑй патне чӗнетчӗ. Ҫавнашкал каҫсенче эпӗ Мӗтрик тете валли хам вуланӑ журналсен ҫӗнӗ номерӗсене йӑтса пыраттӑм та. Часах пире журналсем ҫитми пулчӗҫ. Вӑрҫӑччен ялта кӗнеке юратакан ҫынсем татах пулнӑ. Ҫав ҫемьесенчен тухнӑ ачасем шкула час-часах килти архивӗсенче упраннӑ кивӗ кӗнекесем чиксе пыратчӗҫ, вӗсене хапӑлласах мана вулама паратчӗҫ. Ҫапла вара эпир, Мӗтрик тетепе иккӗн, арман пӳртӗнче «чӗп куҫӗ» ҫутипе сахал мар кӗнекесемпе паллашма ӗлкӗртӗмӗр. Ҫав шутра М. Трубинан «Ӗҫ тухмарӗ», М. Данилов-Чалдунӑн «Ункӑра» калавӗсене, И. Тукташӑн «Вӑкӑр ҫырми» повеҫне т.ыт.те. Кӗҫех пирӗн алла 1934 ҫулта ҫапӑнса тухнӑ «Ҫӗнтерекен вӑй» ятлӑ повеҫсемпе калавсен пуххи лекрӗ. Унӑн хуплашки те ҫукчӗ. Авторӗ Влас Паймен иккен. Кӗнеки «Ҫӗпре» повеҫпе уҫӑлать. Ӑна писатель 1927 ҫултах ҫырнӑ пулнӑ. Авторӗ ҫав повеҫшӗн Октябрьти Аслӑ революци 10 ҫул тултарнӑ ятпа ирттернӗ конкурсра преми илме тивӗҫ пулни ҫинчен пӗлтерни те пурччӗ унта. Кӗнеки пире те питӗ килӗшнӗччӗ.

Кам вӑл Паймен? Халӗ ячӗ мӗншӗн илтӗнмест? Эпир ун чухне писателӗн малалли шӑпи ҫинчен нимӗн те пӗлмен. Телее, ҫулсем иртнӗ хыҫҫӑн вӑл литературӑмӑра ҫӗнӗрен таврӑнчӗ, вулакансене ҫӗнӗрен ҫӗнӗ кӗнекесемпе савӑнтарчӗ.

Ҫапла, Влас Захарович чӑваш совет литератури сӑпки умӗнче тӑнӑ аслӑ ӑрури талантлӑ ҫыравҫӑсенчен пӗри пулнӑ. Унӑн ҫамрӑклӑхӗ Граждан вӑрҫи ҫулӑмӗнче хӗрсе туптаннӑ. Ҫав ҫулӑмлӑ кунсем ҫинчен вӑл каярах хӑйӗн эпикӑлла сулӑмпа ҫырнӑ «Кӗпер» ятлӑ романӗнче тӗплӗн ҫырса кӑтартрӗ. Ҫакӑншӑн Чӑваш патшалӑх премийӗ лауреачӗн ятне тивӗҫрӗ.

Хӑй вӑхӑтӗнче В. Паймен Самарта, Исаев Мӗтрипе пӗрле, вӑтам Атӑл тӑрӑхӗнчи ҫамрӑк писательсене пухса пӗр вӑя чӑмӑртассишӗн хастар ӗҫленӗ, крайри писательсен ушкӑнне ертсе пынӑ, Самарта

тăван чĕлхепе тухса тăнă «Колхозник» хаçата редакциленĕ. Кунтах «Пăр тапранчĕ» («Вăтам Атăл») альманах кăларса тăрас ĕçе хутшăннă. Аслисен хӳттипе паян литература тĕнчинче паллă ятсем пулса тăнă И. Тукташ, С. Шавлы, В. Бараев тата ытттисем те хăйсен сассисене Самарта туптанă.

Писатель çырнисемпе малтанхи хут паллашса унăн таланчĕ умĕнче пуç пĕкнĕ чух эпĕ хам та юлашкинчен унăн пархатарлă витĕмне туйса тăрасси çинчен шутлама та пулатарайман. Ку вăл питех те кĕтмен çĕртен пулса тухрĕ. 1954 çулта «Ялав» журналта манăн «Йăмра» ятлă сăвă çапăнса тухнăччĕ. Пĕррехинче Димитровградра ĕçлесе пурăнакан чăваш çыравçи Яков Рогачев тусăм ман пата Куйбышев облаçĕнчи «Волжская коммуна» хаçат номерне ярса пачĕ. Унта манăн сăвă пичетленсе тухнă-мĕн. «Старая ветла» тенĕ ăна тăлмачă. Куçараканĕ шăпах В.З. Иванов-Паймен иккен.

Ку çеç те мар, 1956 çулта тумхахлă пурнăç çулĕ утса тухнă паллă писательпе вăл тĕпленнĕ хулара çар хĕсметĕнче тăнă çывăх пĕлĕш тантăшăм Виктор Овчинников ăнсăртран тĕл пулса паллашнă пулнă. Вăл унăн ывăлĕпе туслашнă, çавна май килне пырса çӳренĕ. Виктор мана писательпе тĕл пулни çинчен питĕ хăпартланса каласа кăтартнăччĕ. Вăл ăна хăйĕн интеллигентлăхĕпе, тарăн пĕлĕвĕпе, пысăк ăсĕпе тыткăна илнĕ пулнă. Тус-тантăшăм писатель çемйин сăн ӳкерчĕкне те асăнмалăх парнелерĕ. Çав ӳкерчĕке ăна унăн ывăлĕ панă пулнă.

Çакăн хыççăн эпĕ В.З. Иванов-Паймен патне çыру çырса яма шутларăм. Çыру урлă çапла паллашрăмăр эпир унпа. Тепрехинче писательсен черетлĕ съездĕнче Шупашкарта тĕл пулнăччĕ. Съезд делегачĕсем ăна ăшшăн, чĕрĕ чечексемпе кĕтсе илчĕç. «Самар чăвашĕсем» С. Шавлыпе Н. Евстафьев ăна уйрăмах хисеплесе калаçнине астăватăп.

Çав съездра обществăна хĕрсе калаçтарнă А. Солженицынăн «Один день Ивана Денисовича» повеçĕ пирки те тавлашусем хускалнăччĕ. Черечĕпе В.З. Иванов-Паймен та трибуна умне тухрĕ, сăмах каларĕ. «Гулага» лексе айăпсăр терт курни хамрах юлтăр, эпĕ кун çинчен кĕнеке çырма шутламастăп», - тенĕччĕ вăл ун чухне.

В.З. Иванов-Паймен йывăр чирлесе выртнă хыççăн 1973 çулта, хăй çамрăк чух тымар янă Самарта, пиртен уйрăлса кайрĕ. Манăн килти архивра писателĕн темиçе çырăвĕ упранса юлнăччĕ. Ман шутпа, çыравçă çырăвĕсем унăн хайлавĕсем пекех хаклă. Вĕсем çыннăн кăмăл-туйăм хусканăвĕсене, ăс-хакăлне туллинрех те çывăхрах ăнланса илме пулăшаççĕ.

Çакна шута илсе, темиçе çул каярах эпӗ вӗсене (çаплах килти архиврa упраннӑ аслӑ ӑрури ытти ятлӑ-сумлӑ çырӑвӗсене те) Чӑваш Республикин Гуманитари институт архивне яланлӑхах упрама патӑм.

## Поэт халалӗ

Шупашкарти К.В. Иванов ячӗллӗ литература музейӗнче ӗçлекенсем чӑваш писателӗсен юбилейӗсене писательсене, композиторсемпе юрӑ ӑстисене, преподавательсемпе студентсене пухса савӑнӑçлӑ лару-тӑрура чысласси йӑлана кӗнӗ. Çавнашкал литература каçӗсенчен пӗрине эпӗ çуралнӑранпа 75 çул çитнӗ куна халалланӑччӗ. Юбилей тӗлне «Поэт хывнӑ туслӑх кӗперӗ» ятлӑ стенд умӗнче тӗл пулӑва музейри наука аслӑ сотрудникӗ Галина Георгиевна Еливанова ертсе пычӗ. Чи малтан вӑл хӑнасене манӑн кун-çулпа пултарулӑх çинчен каласа кӑтартрӗ. Çаксем сӑмах каласа саламларӗç: Аркадий Казанов, Аристарх Дмитриев, Виталий Енӗш, Раиса Сарпи, Ӑсан Уçӑпӗ, Василий Сипет писательсемпе поэтсем, Шупашкарти «Чӗмпӗр» ентешлӗх ертӳçи Александр Вражкин, манӑн авалхи тусӑм Петр Сымкин международник-журналист, ЧК фонд председателӗ Константин Портнов, пирӗн ентеш И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗн доценчӗ, хими наукисен кандидачӗ Петр Эндюськин, Юрий Кудаков паллӑ композитор тата ЧР халӑх артисткисем Тамара Гурьевӑпа Зоя Лисицына, Геннадий Эсекел (Никифоров) писатель тата юрӑçӑ ман сӑвӑсем тӑрӑх Юрий Дмитриевич Кудаков çырнӑ юрӑсене юрларӗç.

Юбилей уявне эпӗ Василий Давыдов-Анатри чӑваш халӑх поэтне те йыхрав тунӑччӗ. Чире пула вӑл пирӗн тӗл пулӑва пырса çитеймерӗ, мана телеефонпа шӑнкӑравласа çапла каларӗ:

«Тӑван пекех хаклӑ çыннӑм Анатолий Юман! Эпӗ сана ӗмӗрех пӗтӗм чун-чӗререн юратса пурӑннӑ. Сан çинчен манӑн çырнӑ статьясем те, сӑвӑсем те пур. Вырӑсла та, чӑвашла та. Шел пулин те, халӗ эпӗ вӗсене юбилей уявне пырса вуласа параймастӑп. Ман ятпа çак салам сӑмахне юбилей хӑнисене вуласа пар. Яланах çапла тӑван халӑхшӑн малашне те усӑллӑ пулар! Ӗмӗрӳ вӑрӑм пултӑр, ӗçӳ ӑнса пытӑр! Пире çӗнӗ сӑвӑ-юрӑсемпе, пичетри поэт сӑмахӗсемпе савӑнтарсах, хавхалантарсах тӑр!

**Василий Давыдов-Анатри,**
**Чӑваш халӑх поэчӗ.**

2007 çулхи сентябрӗн 12-мӗшӗ».

# Икĕ повесть

## Вăрçă ачисем

*Çĕнĕ ăру ачисене халаллатăп*

### ЯЛАВĂРТА

1937 çулта атте вăхăтсăр вилсе кайнă хыççăн (вăл репрессие лекмен, чирлесе вилнĕ) анне Синкĕл районĕнчи Ялавăр ялĕнче пурăнакан кукамай патне çыру ярать. «Çĕр чăтайми хуйхă йăтăнса анчĕ – мăшăрăм вилсе кайрĕ. Ачасене пăхма куçса кил», – тесе çырнă унта. Тăван ялĕнче пĕччен пурăнакан кукамай – ăна эпир «павăшки» тесе чĕнеттĕмĕр («бабушка» сăмахран) – çиййĕнчех Атăл пăрахучĕ çине ларать те пирĕн пата – аттепе анне ĕçлесе пурăннă ун чухнехи Пухтел районĕнчи Чăвашкасси ялне пырса çитет. Çапла вара уншăн кунта çĕнĕ пурнăç пуçланать.

Анчах та çĕнĕ вырăна ниепле те час хăнăхса çитеймест пирĕн павăшки. Çут çанталăк пуянлăхĕпе палăрса тăракан тăван Ялавăр ялне вăл асăнса илмен кун иртместчĕ. (Ун чухне павăшки 67 султа пулнă, вăл шăпах В.И.Ленипа пĕр çулта çуралнă.)

Чăвашкассинче эпир 1896 çулта паллă просветитель И.Я.Яковлев никĕсленĕ пуçламăш шкул çуртĕнче пурăнаттăмăр, вăл пирĕншĕн тăван кил пекех пулнă. Стена çинче И.Я.Яковлевранах юлнă чан пек çапакан çаврака сехет çакăнса тăратчĕ. Пирĕн пата пырса çитнĕ кун çĕрле сехет çапма тытăнсан павăшки хăранипе: «Ăçта пушар?!» - тесе кăшкăрса вăранса каять. Ара, ун чухне Ялавăрта пушар каланчи тăрринче пысăк чан çакăнса тăнă. Кăнтăр тĕлĕнче вăхăта пĕлтернĕ унпа. Пушар тавраш siksе тухас пулсан та ял халăхне чан çапса хыпарланă. Хăйĕн ĕмĕрĕнче виçĕ хутчен пушар тухса шар тӳснĕ хыççăн чан сасси унăн асне ĕмĕрлĕхех сехре хăпăтмалла кĕрсе юлнă ĕнтĕ. Шкулти сехет сассине чан сассипе пăтраштарнине час-часх аса илсе кулатчĕç унран кӳршĕ карчăкĕсем.

Ку çеç те мар-ха, пирĕн павăшки аннене тăтăшах тăван Ялавăр ялне куçса кайма ӳкĕтлетчĕ. Çав аякри пысăк чăваш ялĕнче ун чухнех вăтам шкул пулнă ĕнтĕ, кукамай çурчĕ те пушах ларнă.

Пёррехинче эпир унта куҫса каймах тытӑнтӑмӑр. Анне Ульяновск хулине тырӑ турттаракан кӳршӗ арҫыннипе – Ульянтюкпа – калаҫса татӑлнӑ хыҫҫӑн ҫуллахи хӗвеллӗ ир эпир килти япаласене тиесех ҫула ӑсантӑмӑр. Ҫавӑн чух чӑнкӑ ҫыр хӗрринчен аслӑ Атӑл шывӗ куҫ умне мӑнаҫлӑн тухса тӑни калама ҫук тӗлӗнтернӗччӗ мана. Кун ҫинчен эпӗ хамӑн «Ачалӑх ҫӗр-шывӗ» ятлӑ автобиографиллӗ повеҫре ҫырса кӑтартнӑччӗ.

Синкӗл хулипе унран 15 ҫухрӑмра ларакан Ялавӑр ялӗ Атӑлӑн сылтӑм ҫыранӗнчех вырнаҫнӑ пулин те, вӑл енне ытларах анаталла анакан пӑрахутсемпе кайса ҫӳренӗ. Ир енне эпир те Атӑл хӗрринчи Ҫинкӗл хулине ишсе ҫитрӗмӗр. Пирӗн тата Ялавӑра ҫитме лав тупмалла. Павӑшкипе анне лав шыранӑ хушӑра эпир Геннадий шӑллӑмпа ҫыр хӗррине пушатса купаланӑ михӗсем хушшинче пирӗн умра уҫӑлнӑ ҫӗнӗ тӗнчене сӑнаса тӑратпӑр. Шӑпах А.Гайдар калавӗнчи Чукпа Гек пек. Пристань ҫывӑхӗнче ялсенчен килнӗ лавсем сахал мар. Хӑлхана чӑвашла калаҫнӑ хаваслӑ сасӑсем килсе кӗреҫҫӗ.

– Матрине кума, эсӗ-ҫке ку!

– Эпӗ-ха, Якур кум! Аван-и? Пӗччен те мар, ҫемьепех. Стеша та кунта-ха. Ачисемпех...

– Питӗ лайӑх! Пӗрлех кайӑпӑр арӑ...

Аякри хулара та тӑван сасӑсем илтӗнни пирӗн кӑмӑла ҫӗклет. Анчах Ялавӑр чӑвашӗсен чӗлхи хӑйне евӗрлӗ. Вӗсем «О» саспалли ҫине пусӑм тӑваҫҫӗ: «пӑто», «кӑмоко», «лок». Ҫӗр улмине паранкӑ теҫҫӗ.

Кӑштах пурӑннӑ хыҫҫӑн эпир хамӑр та «ялавӑрла» калаҫма вӗренсе ҫитрӗмӗр. Синкӗл енче виҫӗ пысӑк чӑваш ялӗ тӗпленнӗ: Ялавӑр, Уличе тата Анаткасси. Вырӑссемпе кӳршӗленсе пурӑннӑран кунти чӑвашсем – пысӑккисем ҫеҫ мар, пӗчӗккисем те – вырӑсла пит таса калаҫаҫҫӗ.

Пӑртакран лав ҫине тиенсе ӗмӗтри Ялавӑра ҫул тытатпӑр. Кунта та пире тӗлӗнмелли кашни утӑмрах. Ялавӑр ялӗ сӑрт айӗнче ларать. Вӑл патне пырса ҫитмесӗр те курӑнмасть. Павӑшки ҫурчӗ енне ансӑр ҫул пӑрӑнса анать. Ҫурчӗ тӑкӑрлӑк хӗрринчех ларать. Урамри кашни ҫурт хыҫӗнче сад ешерет. Пирӗн те пулнӑ унашкал сад. Шел, халӗ улмуҫҫисем хӑрса ларма ӗлкӗрнӗ. Пӗр-ик катӑркас тӗмӗ ҫеҫ сыхланса юлнӑ. Ҫурчӗ хӑй те кивелсе ҫитнӗ темелле. Улӑм ҫивитти хуралса ларнӑ ҫеҫ мар, унтан-кунтан шӑтма та ӗлкӗрнӗ. Сарай тӑррисем те ҫавнашкал шӑтӑк-путӑк. Вӗсем витӗр ҫӗрле ҫӑлтӑрсене те курма пулать.

Ҫуртсемпе юнашар килӗренех тирпейлӗн шуратса лартнӑ тӑм

лаçăсем курăнса лараççĕ. Пирĕн те пулнă унашкал лаçă, тăм кирпĕчрен купаланăскер. Анчах халĕ унăн ишĕлчĕкĕсем çех юлнă. Вырăсла хапха вара çаплах чылай-ха.

Пырса çитнĕ кунхинех, каç кӳлĕм, Якур кукка шăллăмпа иксĕмĕре мунчана илсе кайрĕ. Мунчи юхан шыв хĕрринчех вырнаçнă. Çырмари шывĕ çăлкуç пек тап-таса, тĕпĕнчи шур чулĕсем те курăнса выртаççĕ. Шăнкăр-шăнкăр юхса выртать вăл. Çыранăн икĕ енĕпе те хăвалăх чӳхенсе ларать. Чăннипех те çăтмахри пек кĕтес!

Павăшки патне тăванĕсемпе кӳршисем киле-киле лараççĕ. Вĕсен калаçăвĕсен вĕçĕ те çук.

Анне пире вырнаçтарса хăварнă хыççăн сывлăхне çирĕплетме Хура тинĕс хĕррине Крыма курорта тухса кайрĕ. Эпир павăшки хӳттине юлтăмăр. Пырса вырнаçнă-вырнаçман вăл пире, шăллăмпа иксĕмĕре, хĕрлĕ ситцăран кĕпе тата кĕске йĕм çĕлесе пачĕ.

Малтанхи кунран тытăнсах пирĕн туссем йышланчĕç. Чи малтанах эпĕ хирĕç ретре пурăнакан Шитту Наттолĕпе паллашрăм. Наттоль – мăнтăркка пит çăмартиллĕ, шурă çӳçлĕ ача. Вăл манран пĕр çул кĕçĕнрех, мĕшĕлтирех. Яланах тулли сăмси ăна калаçма чăрмантарать. Кăмăлĕ хăйĕн уçă вара. Тĕрлĕ тĕслĕ кĕленче, тĕрĕллĕ чей чашки катăкĕсене пухса выляма юратать. Кӳршĕрех пысăк çемьеллĕ Якур куккасем пурăнаççĕ. Вĕсен тăватă çитĕннĕ ывăлĕ – асли Ванькка кукка – 1917 çулхи, Çтаппан кукка – 1918 çулхи, Виктор – 1920 çулхи, Пеття 1925 çулхи. Пирĕнпе тантăшлă Лисукпа Шура хĕрĕсем те пур. Пеття кукканa час-час пирĕн пек шăпăрлансем хушшинче те курма пулать. Темиçе килĕ урлă, чăнкă çыр хĕрринче Исаевсем пурăнаççĕ. Вĕсем те пирĕн çывăх тăвансем. Исаевсен Ванькка ятлă çитĕннĕ ывăлĕ, пирĕнпе тантăшлă Мишша, Раиспа Нина хĕрĕсем – пурте пирĕн туссем. Эпир кĕçĕннисемпе клекла вылятпăр, çырмари пĕчĕк авăрсенче алапа сĕрсе ырашпăтри тытатпăр. Арçын ачасем пăрахут юхтарса савăнаççĕ. Геннадипе манăн вĕсене ăмсанмалли çеç юлать. Çакна кура Пеття кукка пире самантрах пăрахут ăсталаса пачĕ: хăма таткисене чутласа якатрĕ те пĕр-пĕрин çине хурса пăтапа çирĕплетрĕ, хыçала вазелин курупки хуппи çапса хитрелетрĕ, шывра туртса çӳреме кантра çыхрĕ – пăрахут пулса та тăчĕ. Хăй вара чăн-чăн моторлă кимĕ моделĕ хайланă, арман пĕвинче иштерет ăна.

Хирĕç ретре – Ежовсем. Вĕсен те икĕ çитĕннĕ ывăлĕ пур. Кĕçĕнни – Хветĕр, шерте те пек çӳллĕ те чипер ача. Вăл манран пăртак aслăрах пулин те эпĕ унпа çывăхлантăм. Пĕррехинче вăл мана хăйпе пĕрле пушар каланчи çинче хурал тăма илсе кайрĕ. Каланча тăрринчен

ял урамĕсем ал тупанĕ çинчи пек курăнаççĕ. Анчах кунĕпе тăрсан унта йăлăхтарать. Çавах эпир Хветĕрпе хамăр поста тӳсĕмлĕн ирттереттĕмĕр. (Вăрçă хыççăнхи çулсенче Л.Агаковăн «Ылтăн вăчăра» повеçне вуласа тухсан мана яланах чиркӳ тăрринче хуралта тăнă вăрçă ачисем Ванюша Долбинпа Илья Кузин аса килетчĕç, çавна май куç умне Ялавăрти çӳллĕ пушар каланчи тухса тăратчĕ.)

Кану вăхăчĕ иртсен анне курортран таврăнчĕ. Шел пулин те, районти çут ĕç пайĕнчи пуçлăхсем ăна Ялавăра куçарма килĕшмен. Пирĕн вара ирĕксĕрех каялла Чăвашкассине таврăнмалла пулчĕ.

## СУРОВ ТУХТĂР ПАТĔНЧЕ

Ĕнтĕ манăн шкул çулĕ çывхарса килет, (Вăрçăччен пĕрремĕш класа тăхăр çулхи ачасене вĕренме илетчĕç.) Çав вăхăтрах манăн проблема пур – сăпкара чухнех, шатра чирĕпе чирленĕ хыççăн, сылтăм куçа шурă илнĕ. Ыр та, хăрах куç чиперех сыхланса юлнă-ха. Пит çинчи шатра та сӳннĕ. Манпа пĕр вăхăтра çак хăрушă чирпе чирленĕ пĕр касăри Сайдяшевсен хĕрĕ – Хĕрпик – ĕмĕрлĕхех суккăрланса юлнă авă. Унăн куçне юмăç карчăк-кĕрчĕк ирĕксĕр уçма хăтланнă, çавăнпа чирĕ шала кайнă тетчĕç.

Мĕн каласси, ун чухне медицина çĕнĕлĕхĕсем инçетри ялсене çитеймен пулнă-ха, профилактика сиплевĕсемпе усă курайман ача ашшĕ-амăшĕ, çавăнпа вĕсен пепкисем хушшинче вилекенсен йышĕ пысăк пулнă. Пирĕн çемьере те ултă ачаран эпир, Геннадий шăллăмпа иксĕмĕр çеç, тĕрĕс-тĕкел ӳссе çитĕннĕ, ыттисене пурăнма пӳрмен. Сăмахран, эпĕ атте-аннен виççĕмĕш ачи – аслă ывăлĕ пулнă. Манăн икĕ аппа – Зинăпа Тамара, çаплах Рая йăмăк, Володя шăллăм алăра чухнех вилсе выртнă.

Çавăнпа пулса тухнă инкек аннене пĕрре те канăç паман, вăл епле те пулсан манăн тепĕр куçа та сыватма ĕмĕтленнĕ. Вăрçăченхи çулсенче Ульяновскра Суров офтальмолог ĕçлесе пурăннă. Унăн ăсталăхĕ пирки халăхра ырă ят çӳренĕ.

Кам пулнă-ха вăл Суров? «Ульяновская-Симбирская энциклопедия» кĕнекере ун пирки çапла çырнă: «Суров Григорий Иванович, (1871,Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Улатăр хули – 10.02.1947, Ульяновск хули), офтальмолог, медицина наукисен докторĕ, РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ. Хресчен çемйинчен тухнă. Улатăр промгимназине, Чĕмпĕрти арçын ачасен гимназине (1891) тата Хусан университетĕнчи медицина факультетне лайăх паллăсепе пĕтернĕ... 1901-1905 çулсенче

çар госпиталĕсенче ĕçленĕ. Питĕрти çар медицина академийĕнче куç роговицине куçарса лартас ыйтупа доктор диссертацине хӳтĕленĕ. 1906 çулта Чĕмпĕре куçса килнĕ. 1911 çултанпа мĕн виличченех Чĕмпĕрти кĕпĕрне пульницинче куç чирĕсен уйрăмне ертсе пынă. Офтальмологире хăйĕн практика шкулне туса хунă, пульница условийĕсенче наука енĕпе ĕçленĕ. 50 ытла ĕç пичетлесе кăларнă. Вырăнти врачсен обществин председателĕ пулнă. Ульяноскри (Атăл леш ен районĕ, Çĕнĕ хула) урамсенчен пĕрине Суров ятне панă».

Вăт çакнашкал паллă тухтăр патĕнче манăн куçа операци тутарма шутланă та анне.

Ульяновск хулинчи кивĕ вокзал çывăхĕнче аннен пĕлĕшĕсем пурăнатчĕç. Халĕ вĕсен хушаматне çех астăватăп - Сергеев мăшăрсем. Интеллигентлă çемье. Сергеевсен манпа тантăшлă икĕ ывăлĕпе хĕрĕ, ватă амăшĕ пурччĕ.Ульяновска пырсан анне яланах вĕсем патне чарăннă, унтах каç выртнă. Куннехинче те эпир чи малтан Сергеевсем патне пырса çитрĕмĕр. Тен, Суров тухтăр пирки те аннене вĕсемех каласа кăтартнă пулĕ.

Сергеевсен çурчĕ çумĕнчи пахчара тĕрлĕ çимĕç ӳсет. Урам енче инçе те мар пĕчĕк хитре ларĕк ĕçлет. Унта ситро сутаççĕ. Кил хуçи ачисемпе эпир хăвăрт туслашса çитрĕмĕр, унта-кунта тухса çӳретпĕр. Ситро ĕçсе ăша кантаратпăр. Унăн тути çаплах манăн асран каймасть. Унашкал пылак шыв тек нихăçан та ĕçсе курман пек туйăнать.

Çул килсе каннă хыççăн ирхине эпир хула пульницине пырса çитетпĕр. Суров тухтăр чирлисене килĕнче çех йышăнать иккен. Анне мана унăн кунтах вырнаçнă, çутă хăмăр сăрпа сăрланă пысăк мар особнякне çавăтса кĕчĕ. Алăкне асăрханса шаккаса кĕретпĕр. Шурă халатлă ватă тухтăр пире ăшшăн йышăнчĕ. Кĕске те шапшурă сухаллăскер юмахри асамçах аса илтерет. «Асамçă» анне сăмахне тимлĕн итлерĕ. Манăн куçа тĕрĕслесе пăхрĕ. Телее, операци тума та килĕшрĕ. Пульницана пымалли куна палăртрĕ.

Хваттере таврăннă чух анне пасара кĕрсе тухрĕ. Ман валли çĕнĕ костюм суйлать. Пульницана кивĕ тумпа пырса кĕме лайăх марçке. Мана ачасем валли çĕленĕ тĕттĕм кăвак тĕслĕ «матроска» кăмăла каять. Картусĕ те пур, кăсăруклă, ылтăн тĕслĕ якорьпе капăрлатнă «карап капитанĕн» картусĕ.

Акă мана операци сĕтелĕ çине хураççĕ.

— Шутлама пĕлетĕн-и? — тесе ыйтать тухтăр.

— Пĕлетĕп, — тетĕп те шутлама пуçлатăп. — Пĕрре, иккĕ, виççĕ...

Сăмсана тутлă шăршă пырса çапать. Часах хам сисмесĕрех çывăрса каятăп.

– Маттур! Йăшăл та тумарĕ, – тесе мухтарĕ тухтăр мана анне умĕнче хăйĕн ĕçне вĕçленĕ хыççăн. Çитменнине, канфет парса сăйларĕ. Такам: «Матрос с разбитого корабля», – тесе шӳтлет,

Манăн «Çулпуç сăпки» кĕнекере (1983) Г.И.Суров тухтăра халаллана сăвă пур:

*«Асамçă» тĕплĕн тĕрĕслерĕ:*
*Пĕрре пăхать куçа, тепре.*
*Тинех çакскер:*
*– Ну, килĕр, – терĕ, –*
*Май пулĕ тепĕр эрнере.*
*Шур юр пек, çӳçлĕ те сухалĕ*
*Ун савăл евĕр, шӳреке...*
*Куçа хупсан куратăп халĕ*
*Эп çав шап-шурă старике.*

Шел пулин те, манăн шурă илнĕ куç кирлĕ пек уçăлсах çитеймерĕ, чăн та, тĕсне пăртак улăштарчĕ ĕнтĕ вăл.

Пирĕн вăхăтра куç шăрçине (роговицине) çивĕчлетес тесе офтальмологсем сахал мар ĕç тунă. Çитĕнĕвĕсем пысăк. Ку енĕпе уйрăмах Владимир Петрович Филатов (1875-1956) академик палăрнă. Унăн меслечĕпе усă курса йывăр куç чирĕсемпе аптранисене ăнăçлăн сыватаççĕ. Сăмах май каласан В.П.Филатов академик ячĕ те пирĕн Ульяновск хулипе таччăн çыхăннă. Филатовсен çемйи 1882 çулта Чĕмпĕре куçса килнĕ, тĕнче шайĕллĕ чаплă офтальмолог 1892 çулта Чĕмпĕр гимназийĕнчен вĕренсе тухнă; кун хыççăн Мускав университетĕнче вĕреннĕ чух та кану кунĕсенче Чĕмпĕре таврăнса ашшĕпе пĕрле земство пульницинче ĕçленĕ.

## «ШКУЛ ТУЛИ»

Ача чухне манăн хушма ят – Шкул Тули. Эпир шкул çуртĕнче пурăннипе мана çитĕннисем те, тантăшсем те çапла чĕнетчĕç.

Операци хыççăн мана Суров тухтăр вунă çула çитмесĕр шкула яма хушман. Анчах ăçта тӳссе тăратăн унта коридорта та, урамри çеремре те кунĕ-кунĕпе ача-пăча сасси янраса тăрать пулсан!

1939 çулхи çĕнĕ вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче пулса иртрĕ ку. Ун чухне эпĕ саккăр кăна тултарнăччĕ, çавăнпа вĕренме кайма пач шутламан. Çитменнине, врач иртерех кайма хушман-çке-ха.

Хĕвеллĕ ăшă кун. Тăхтав вăхăтĕнче ачасем пурте урамра тĕрлĕрен вăйă выляса савăнаççĕ: сикеççĕ, чупаççĕ, кăмăлĕсем тулса çитнипе

хаваслăн çуйхăшаççĕ. Эпĕ те пĕрремĕш класа  килнисеме пĕрле вылятăп. Акă шăнкăрав  урока чĕнет. Вăйăри юлташсемпе пĕрле эпĕ те класа чупса кĕретĕп, парта хушшине вырнаçса ларатăп.

Учитель, çамрăк каччă Николай Иванович Семёнов, хăй те ачалăхран тин çеç уйрăлнăскер (ăна Кивĕ Улхашра ШКМ пĕтернĕ хыççăн пирĕн яла ачасене вĕрентме янăччĕ) мана курсан:

— Кунта пирĕн çĕнĕ ача та пур иккен-ха, — терĕ. — Мĕн тăватпăр ăна? Йышăнатпăр-и?

— Йышăнас! Йышăнас! — хавасах пулчĕç ачасем.

— Вăл çырма та, вулама та пĕлет, — хушса хучĕç теприсем.

Çапла вара эпĕ те çав кунтан шкул ачи пулса тăтăм. Анне те хирĕçлемерĕ.

... Çуллахи кану кунĕсенче пире, шăллăмпа иксĕмĕре, павăшки каллех Ялавăра илсе кайрĕ. Пире унта та çĕнĕ туссем кĕтсе тăраççĕ. Эпир каллех кунĕ-кунĕпе уçă сывлăшра: пулла çӳретпĕр, пăрахутсем юхтарса савăнатпăр. Сайра-хутра çывăхри вăрмана çырла татма та илсе çӳрет пире павăшки.

Эпĕ пушă вăхăтра ӳкерчĕксем тума юрататăп. Лавккара акварель сăрă сутаççĕ. Çаврака калăп ăшĕнче шурă тĕсли те пур. Анчах курупкари илĕртӳллĕ сăрсем хаклă. Павăшки мана йӳнереххине — картун хут çине çыпăçтарса тухнă тӳме пеккисене туянса пачĕ. Унта шурă тĕслĕ сăр пач çук. Ун вырăнне хучĕ хитре вара: тĕттĕм кăвак тĕспе граждан вăрçи паттăрĕсене — утлă çар отрячĕн силуэтне ӳкерсе хунă.

Вăл çулхине аслатиллĕ çумăрсем нумай çăватчĕç.Пĕррехинче шыв арманĕ çумĕнчи вată йăмрана аçа çапса хуçса антарнăччĕ. Шалкăм çумăр вăхăтĕнче пирĕн пӳрте шыв каять. Эпир Якур куккасен лаçне кĕрсе пытанатпăр. Кунта çиçĕм çути курăнмасть. Эпир çаплах тĕне кĕменнине пĕлсен пире тантăшсем хăратма пуçларĕç: тĕне кĕмен ачасене аçа çапма пултарать имĕш. Павăшки те тахçанах тĕне кĕме шахвăртать. Юлашкинчен вăл пире 30-40 çухрăмра вырнаçнă Тереньга районĕнчи Молвино ялне илсе кайма шутларĕ. Унта чиркӳ ĕçлет.

Çула çуранах тухрăмăр. Эпир, Геннадий шăллăмпа, çара уранах. Пыра-киле пире шăрăх пусма пуçларĕ, ывăнса çитрĕмĕр. Хушăран канса та илетпĕр. Каç пулттипе аран-аран чиркӳллĕ вырăс ялне пырса çитрĕмĕр. Чиркӳпе юнашарах вырнаçнă çурта чарăнса каç выртма яма тархаслать павăшки. Эпир мĕн сăлтавпа çӳренине пĕлсен кил хуçи арăмĕ пире хапăлах пулчĕ. Чиркĕвне хĕрлĕ кирпĕчрен купаланă. Унăн мăнаçлă стенисемпе куполĕсем çине тĕлĕнсе пăхса тăратăп. Тепĕр кунне шала кĕрсе курма та ирĕк пачĕç пире. Унта халăх

йышлăччĕ. Уйрăмах Хăрушă суда сăнарласа кăтартнă пысăк картина тыткăнларĕ мана, тамăкра тертленекен çылăхлисен шăпи канăç памарĕ.

Пăртакран павăшки священникпа кĕрсе калаçрĕ. Анчах та тĕне кĕме аннерен справка илмелле пулнă иккен пирĕн. Унашкал справкăсăр чиркӳре тĕне кĕртме юрамасть. Çапах та павăшки майне-шывне тупнă: священник килне пырса калаçма сĕннĕ. Эпир çапла турăмăр та.

Священник çурчĕ самаях пысăк, кил картинче хура шавкка йытă чупса çӳрет, сарайĕнче верстак ларать, унта кил хуçи темĕн каскалать. Эпир пырса çитсен вăл пире килне чĕнсе кĕртрĕ. Тĕлĕнсе каймалла: кунта та чиркӳри пекех, пӳрт стенисем турăшсемпе тулса ларнă. Священник пысăк таз çине шыв ярса кĕлĕ сăмахĕсем каларĕ, пире çав шывпа пĕрĕхсе сăхсăхрĕ, чей калакĕпе кагор (Турă юнĕ) ĕçтерчĕ, мăйсене хĕрессем çакса ячĕ. Шкула кайнă чух хĕресĕсене кĕпе çумне тӳнтер енчен çĕлесе хума хушрĕ.

Киле таврăнсан çапла турăмăр та. Халĕ ĕнтĕ эпир Ялавăр ачисенчен пĕртте катăк мар, аслати те çапас çук пире!

Анчах иртерех савăннă иккен. Кĕркунне эпир тăван яла çийĕнчех тухса каяймарăмăр. Çĕнӳ вĕренӳ çулĕ пуçлансан икĕ уйăх хушши Ялавăр шкулне çӳреме тиврĕ. Эпир кĕпе айĕнче хĕрес çакса çӳренине пĕлнĕ касăри пĕрле выляса çӳренĕ хĕрача учителе каласа панă. Хĕрарăм учитель мана класран крыльца çине чĕнсе кăларса хĕресе татса илме хушрĕ. Вăтаннипе тата намăс курнипе эпĕ йĕрсе яманни кăна. «Çылăхĕ хăйсене пултăр», - тесе чуна пусарма тăрăшатăп ăшăмра.

Сутăнчăк чунлă çынсем пĕр айăпсăр кӳрекен суранпа малтанхи хут паллашасси çакă пулчĕ.

## ВĂРÇĂ АЧИСЕМ

1941 çулхи çулла эпир каллех çемйипех Ялавăрта. Павăшки пĕрмай хăйĕн «юррине» юрлать – вăл яланлăхах тăван ялне куçарса килесшĕн. Анчах тымар янă Чăвашкассинчен хăпса килме ансат мар çав: хăйĕн ĕçĕнче анне тахçанах ырă ят илме ĕлкĕрнĕ, ял çыннисем те хисеплеççĕ ăна. Çавна кура район пуçлăхĕсем ăна çаплах тытса тăраççĕ.Кăçал çуллахи кану кунĕсене анне Ялавăрти тăванĕсем хушшинче ирттерет. Речĕпе хăнана чĕнсе каяççĕ павăшкипе аннене тăванĕсем. Çитменнине, чикĕ хĕрринчи çартан икĕ офицер отпуска килнĕ. Вĕсенчен пĕри – Анаткасри пирĕн тăванах иккен, тепри

эпир пурӑнакан Тукасран. Пуп Ванькки теççӗ ӑна ял çыннисем. Амӑшӗ пире хирӗç урамри çуртра пурӑнать.

Эпир, Шитту Наттолӗ, Геннадий шӑллӑм тата хӑнана амӑшӗсемпе пӗрле килнӗ кӳршӗ хӗрачасем, çул варринче хамӑр вӑйӑсене вылятпӑр.

Сасартӑк кӳршӗри çуртра «Шумел камыш...» халӑх юррине юрласа ларакан хӑнасем шари-шари çуйхӑшма пуçларӗç. Мӗскер пулнӑ?

- Вӑрçӑ пуçланнӑ! — илтӗнет такам сасси.

Çак кӗтмен хыпара илтсен хӑнасем хӑвӑрт саланчӗç. Канма килнӗ офицерсене чаçа таврӑнма хушса телеграмма та пырса панӑ иккен.

Çав самантран ялти лӑпкӑ пурнӑç арпашса кайрӗ. Пирӗн ачалӑх та вӗçленчӗ темелле.

Çанталӑк та, халӑх хуйхи-суйхине сиснӗ пекех, татӑклӑн улшӑнчӗ. Тӳпене хура пӗлӗтсем карса илчӗç. Вӗтӗ çумӑр çума пуçларӗ. Виçӗ кун пӗр чарӑнмасӑр ислетрӗ вӑл типме ӗлкӗрнӗ çӗре. Пирӗн тӑвансем çар офицерӗсене инçе çула ӑсатаççӗ. Çумӑр витӗрех.

Пуп Ванькки урапа çине сиксе тӑнӑ та сӑмах калать. Вӑл вӑр-хурахла тапӑнса кӗнӗ нимӗç захватчикӗсене тавӑрма тупа тӑвать. «Вӑрçӑ вӑраха пымӗ. Эпир çӗнтеретпӗрех!» - тесе шантарать ӑсатма пынисене.

Ӗнтӗ çар хӗсметӗнче тӑракансем çех мар, ялти ытти вӑйпитти арçынсем те вӑрçӑ хирне ӑсанма тытӑнчӗç.

Вун ултӑ çулхи Пеття куккан та тек ача шухӑшӗ мар. Ун аллинче эпӗ час-часах Синкӗл районӗнче вырӑсла тухса тӑракан «Сталинский организатор» хаçат куратӑп. Вӑл хаçатра çырса пӗлтерекен хыпарсене аршӗпе — Якур куккипе — юнашар ларса вулать. Ашшӗпе ывӑлӗ юлашки хыпарсене шухӑша кайса вӑрахчен сӳтсе яваççӗ.

- Каплах пулсан сана та салтак шинелӗ тӑхӑнма черет çитет пулӗ, - тет Якур тете.

Çапла пулса тухрӗ те. Тӑватӑ тӑванран иккӗшӗ çех — Çтаппанпа Виктор — вӑрçӑ хирӗнчен тӗрӗс-тӗкел таврӑнма пултарнӑ. Вӑрçӑчченех çар хӗсметӗнче тӑнӑ Ванькка кукка 1942 çулхи февралӗн 6-мӗшӗнче паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗ. Петтяна вун саккӑр тултарнӑ-тултарман çамрӑка ят тухнӑ, вӑл 1943 çулхи март уйӑхӗнче тан мар çапӑçура пуçне хунӑ. Якур кукка хӑй те Куйбышев хулинче стройбатра хӗсметре тӑнӑ.

* * *

Вӑрçӑ пуçлансан эпир часах аякри Чӑвашкассине таврӑнма васкарӑмӑр. Халӗ ӗнтӗ анне — шкул заведующийӗ. Кунсӑр пуçне ун çине обществӑлла ӗç сахал мар тиеннӗ. Вӑл икӗ кӳршӗ ялти — Чӑвашкассипе Çӗнӗ Улхашри — коммунистсен ертӳçи. Йышӗ вӗсен

пысăк мар, ытларах унта ватăсем. Çĕнĕ Улхашран Беляков Кузьма, Рухлин Тиххăн, вырăс хĕрарăмĕ Шафеева Дуня (чăвашсем ăна Туняшша тесе чĕнеççĕ), Чăвашкассинчен уй-хир бригадин бригадирĕ, çитмĕл урлă каçнă Улендеев Туктамăш, Сайдяшев Эхтюк, Семенов Тимĕрплат тата темиçе çын. Йышĕ пысăках мар пулин те ялсенчи пĕр ыйту та вĕсем хутшăнмасăр татса парăнмасть: çур аки ирттермелле-и унта, тыр-пул пухса кĕртмелле-и, авăн çапмалла-и, патшалăха тырă ăсатмалла-и, фронтовиксем валли ăшă тумтир, парнесем пухмалла-и, халăх хушшинче çар заемне сармалла-и, окопсемпе танка хирĕç кĕрешмелли траншейăсем чавма килнĕ халăха, беженецсене хваттере вырнаçтармалла-и – чи малтан коммунистсем пуçарса ял-йыша çĕклемелле. Пухăвĕсем ытларах чух пирĕн çемье пурăнакан шкул пӳлĕмĕнчех пулса иртеççĕ. Хĕрсе калаçнă чухне чылайăшĕ табак туртса тултаратчĕç, пӳртре мунчари пек тĕтĕм явăнса тăратчĕ.

Сăмахĕсем манăн хăлхана та кĕретчĕç. Аннен пуху протоколне çырса пĕр экземплярне парти райкомне ăсатмаллаччĕ. Иккĕмĕш экземплярне куçарса илме эпĕ пулăшаттăм.

Ку çеç те мар, анне патне салтак арăмĕсем йышлăн пырса çӳретчĕç: фронтри мăшăрĕсемпе тăванĕсем ярса панă çырусене вулаттарма е хирĕç çырса хуравлама та, районти пулăшу касси фронтовиксен çемйисене паракан пулăшусене ыйтса илме заявленисем çыртарма та (аслă ăрури хĕрарăмсем хушшинче хут пĕлменнисем сахал марччĕ). Кунсерен тенĕ пекех çерем çине тухса ларса пухăннисене «Правда» тата облаçра тухса тăракан «Волжская коммуна» хаçатсенче пичетленсе пыракан фронтран килнĕ пĕлтерӳсене вуласа паратчĕ. И.Эренбург, М.Шолохов, К.Симонов, А.Толстой, Б.Полевой, Б.Гроссман тата ытти паллă писательсен публицистикăлла статйисемпе очеркĕсене те ял халăхĕ патне çитернĕ çапла. Хаçат – пĕртен-пĕр хыпар çăлкуçĕ пулнă ун чух. Уйрăмах «Правда» хаçатра П.Лидов журналистăн «Таня» ятлă очеркĕ çапăнса тухни асра. Пĕррехинче пăхатăп та – анне сĕтел хушшинче ĕсĕклесе йĕрсе ларать. Умĕнче – хаçатăн çĕнĕ номерĕ. Ку вăл шăпах асăннă очерк çапăннă хаçат пулнă та. Кайран вăл пирĕн пата кам пыракана пурне те Зоя Космодемьянская хĕр-партизан паттăрлăхĕ çинчен кала-кала кăтартатчĕ. Ванда Васильевская хĕрарăм çыравçăн «Асамат кĕперĕ» повеçĕ пичетленсе тухсан та пире нумай калаçтарчĕ.

Фашистсен тискерлĕхĕ çеç мар, çапăçури çарти салтаксен паттăрлăхĕсем çинчен чи малтан хаçатра вуласа пĕлнĕ. Çапла, 1942 çулта «Правда» хаçатра пирĕн ентеш – Пухтел чăвашĕ Совет Союзĕн

Геройĕ Павел Лаптев çинчен «Воин-богатырь» ятлă пысăк очерк çапăнса тухнăччĕ. Каярах чăвашсен паллă писателĕ Илле Тукташ ун çинчен очерк çырса ăна уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларнăччĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче çав хайлав шкулти хрестоматие те кĕнĕччĕ.

Çав событисем çинчен эпир те, вăрçă ачисем, тĕплĕн пĕлсе тăнă.

Вăрçăн малтанхи çулĕнче шкул коллективĕ те çĕнелнĕччĕ. Пирĕн учительница Ольга Васильевна Нагорнова, Пухтел хĕрĕ, шăпах вăрçă пуçланнă çул Ульяновскри И.Я.Яковлев ячĕллĕ чăваш педучилищине пĕтерсе тухнăскер, хĕвеллĕ сăн-питлĕ, уçă кăмăллă чăваш хĕрĕ. Тепри – кӳршĕри Çĕнĕ Улхашран – Елена Николаевна Митрофанова. Вăл Хурăнварта вĕренсе пĕлӳ илнĕ.

Ял хушшисем инçе мар та, Елена Николаевна куллен ашшĕ килне кайса çӳрет. Ольга Васильевна пирĕнпе юнашар шкулти пĕчĕк пӳлĕме йышăнчĕ. Шкулти класс пӳлĕмĕсене тасатса тăракан уборщица Крахьяна аппа та пирĕнпе пĕрлех пурăнать. Унăн ывăлĕпе хĕрĕ – Аркадипе Аниççа пур. Вăрçăччен Аркади çемйинчен уйрăлса кайнă ашшĕпе Мускавра пурăннă. Ашшĕне çара илсе кайсан тăван мар амăшĕпе яла таврăннă. Шкула вĕренме çӳрет. Кунта Крахьяна аппана кунсерен тĕл пулать. Амăшĕпе ывăлĕн тĕл пулăвĕсем Аркади тăван амăшĕ патне таврăннипе вĕçленчĕ. Ольга Васильевна Пухтелĕнчен тăванĕн хĕрне пурăнмаллипех илсе килчĕ. Вăл Верук ятлă. Эпир пурте пĕр çемье пек пурăнатпăр. Апат-çимĕçе те пĕр-пĕринчен уйăрса хатĕрлемен.

Шел пулин те, Аркадин малалли шăпи телейсĕр пулчĕ. Ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн пĕр-икĕ эрне хушши пирĕнпе пĕрле Кивĕ Улхаш шкулне çӳрерĕ. Анчах çитмен пурнăçа пула вĕренме пăрахрĕ. Колхозри трактор бригадинче плугарьте ĕçлеме пуçларĕ. 1947 çулта унăн пурнăçĕ сарăмсăр татăлчĕ. Каçхи сменăра ĕçлесе ывăннă хыççăн Аркади йăранрах выртса çывăрнă, тракторисчĕ ăна курмасăр таптаса кайнă. Аркадие Çĕнĕ Улхаш масарне 1944 çулта вилсе кайнă пирĕн павăшкипе юнашар пытартăмăр.

Инкек-синкек кунпа кăна вĕçленмерĕ-ха. Часах Верук та пиртен уйрăлса кайрĕ. Ăна тăван ялне таврăнсан аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче аçа çапса вĕлернĕ терĕç.

Уйрăмах 1943 çул йывăр килчĕ. Ялта чăн-чăн выçлăх пуçланчĕ темелле. Хирти тырă пысăк лаптăк çинче юр айне пулса юлнă. Ăна юр айĕнчен кăларса çиекенсем наркăмăшланса вилнĕ тĕслĕхсем те пулчĕ, вилнĕ лаша ашне пĕçерсе çинисем çинчен те калаçкалатчĕç. «Курăк çулĕ» тесе кĕрсе юлчĕ вăл халăх асне. Çу кунĕсенче, чăнах та, вĕлтĕрен тата ытти курăк яшки пĕçерсе çиетчĕç выçăпа аптранисем.

Пирĕн пата Мускав çывăхĕнчи çапăçусенче «Паттăрлăхшăн» медаль илме тивĕçнĕ Мĕтрик тете мăшăрĕ Селиме аппа кунсерен кĕрсе ял хыпарĕсене пĕлтерсе тухать. Хыпарĕсем кунран-кун хăрушăрах. Выçă вилнисен списокĕ ӳссех пырать.

- Эптĕк вилнĕ...

- Павăл вилнĕ...

Эпир вĕсене иккĕшне те лайăх пĕлетпĕр-ха. Эптĕк пирĕн касă пуçламăшĕнче икĕ хĕрĕпе пурăнакан шĕвĕ сухаллă хыткан старик. Яланах çĕтĕк кĕрĕк уртса çӳретчĕ вăл. Йытă тирĕнчен çĕленĕ çĕлĕкĕ те çаралса-якалса пĕтнĕ. Миккан ятлă пĕртен-пĕр ывăлĕ вăрçăра хыпарсăр çухалнă. Юлашки вăхăтра килĕрен ыйткаласа çӳретчĕ. Пĕррехинче пирĕн пата та кĕрсе тухрĕ. Эпĕ ăна ал айне лекнĕ пĕçермен çĕр улми парса янăччĕ. Кур-ха эсĕ – тӳсеймен мĕскĕн старик.

- Шкул çулĕнчи икĕ хĕрĕ те выçăпа шыçăннă, - пĕлтерет Селиме аппа.

Павăл – аялти касăра ял вĕçĕнче пурăнакан вăтам çулсенчи арçын. Шуранка питлĕ, йăвашскер. Ăна чир-чĕрне пула çара илмен пулмалла,

Тепрехинче Селиме аппа хăй пирки пăшăрханса калаçрĕ.

- Çăхванишнă! Тархасшăн яшка çине юрма та пулин çăнăх парса яр. Атту эпĕр те вилетпĕр, - йĕрес пек калаçать вăл.

Аннене ваттисем вырăсла ятне кĕскетсе пурте çапла чĕнеççĕ.

Анне кӳршĕ хĕрарăмне пĕр чашăк çăнăх парса ярать. Апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен килĕрен хĕсĕк пулин те пире çăмăлтарах – патшалăх учительсене пĕрер пăт çăнăх парса пулăшать. Талонпа. Уйрăмах аптраса çитнĕ фронтовик çемйисене тата. Анчах çав пулăшăва илес тесен вĕсен районти социаллă пулăшу пайне заявлени çырса памалла. Пирĕн анне патне заявлени çырма ыйтса çӳрекенсен йышĕ кунсерен чакма пĕлмест.

«Курăк çулĕ» хыççăн ял халăхĕ харпăр хăй анкартинче те тулă е вир акса çитĕнтерме пуçларĕ. Колхозниксен анкартийĕ пĕчĕкех мар – хĕрĕх сотăй. Пирĕн шкул пахчинче акма юрăхлă çĕр 15 сотăй . Эпир те çак лаптăк çинче пĕр çулхине çуррине тулă, тепĕр çулхине вир акса пăхрăмăр. Кунсăр пуçне çаплах çĕр улми, кишĕр, сухан акса-лартса çитĕнтереттĕмĕр. Тырă анисене çерçисемпе кураксем сырса илсе тăна кăлараççĕ. Вĕсене ятарласа тунă шакăрккасемпе хăваласа тăмалла.

Пирĕн пахчара икĕ çӳллĕ хурама ӳсет. Çерçисене хăвалама ывăннă хыççăн эпир Геннадий шăллăмпа çав хурамасем çине хăпарса канатпăр. Пиçĕ туратсем çине меллĕн вырнаçса ларса тунсăхри Ялавăра

аса илетпĕр. Унта аякри тантăшсенчен вĕренсе юлнă сăмахсăр юрă кĕввине шăрантаратпăр:

Роййеге роййе,
Роййеге роййе...

Пирĕн колхоз хирĕсенче ĕçлекен хĕрарăмсен ачисем валли ясли тунăччĕ. Ăна йĕркелесе ертсе пыма та аннене шаннăччĕ.

Манăн вăрçă çулĕсенчи туссем – Ильмендеев Николай (Пиккук Миккалайĕ), унăн аппăшĕ Зоя, аттен çывăх тусĕ пулнă, вăрçăн малтанхи кунĕсенче Мускава хӳтĕленĕ Мĕтрик тете хĕрĕ – Ильмендеева Зина, пĕр çул кĕçĕнрех аташ – Исливанов Анатолий, шăллăм тантăшĕ Ильмендеев Куçча (Константин), Ендияровсен усрава илнĕ хĕрĕ Люба, килĕнче пĕччен юлнă (ашшĕ фронтра, амăшĕ вилсе кайнă), пирĕн кӳршĕри аслашшĕ патне пырса çӳрекен Сайдяшев Куля (Николай) тата пиртен пуринчен те аслăрах Сайдяшев Ваçça (Василий). Ваçça 1928 çулта çуралнă, пиртен 3-4 çул аслăрах. Анчах пĕвĕ пиртен нимĕн чухлĕ те уйрăлса тăмастчĕ. Кун пирки ялта «тăлăх пуснă» тетчĕç. Ăна тăван мар ашшĕпе амăшĕ Чăваш Енри Путреккел ялĕнчен килнĕ ыйткалаканран йышăнса усрама илсе юлнă пулнă иккен. Кун çинчен эпир пĕлсех пĕтермен. Ял çинче те çынсем шарласах кайман. Ача-пăча пĕр-пĕринпе хирĕçнĕ чух кăна кӳрентерес шутпа «Путреккел» хушма ят çыпăçтаратчĕç. Анчах та пирĕн хушăра йывăр каласа кӳрентерни пулман. Вăл хăй пурне те алăра тытатчĕ. Пирĕн мĕн  пур вăйăра хуçаланса етрсе пыратчĕ.

Ашшĕпе амăшĕ ачасене питĕ хапăлччĕ вара. Хăйсем патне пырсан нихăçан та сĕтел хушшине латмасăр яман. Çар заводĕнче ĕçлекен ашшĕ ăна чăн-чăн спортсменсем ярăнакан йĕлтĕр туянса панăччĕ. Çав йĕлтĕрпе вăл чи чăнкă çырансенчен те ярăнса анма пултаратчĕ. Хуларан туянса килнĕскер, Пиккук Миккалайĕн йĕлтĕрĕ те начар марччĕ. Ытти вак-тĕвексен йĕлтĕрĕсем ялти ăстасем хăмасенчен саваласа хайланăскерсем кăначчĕ. Кунсăр пуçне пирĕн кашнин пăр тĕплĕ «тенкелсем» пурччĕ.

Эпир, вăрçă ачисем, ярăнса та вăй выляса кăна çӳремен. Аслисене май пур таран ĕçре те пулăшаттăмăр: утă турама, çум çумлама çӳренĕ. Аслăраххисем ака-суха тунă. Вăрçă пуçланнă малтанхи çулах нимĕç самолечĕсенчен сыхланма çуртсен çывăхĕсенче окопсем чавма хушу килнĕччĕ. Хаçатсенче вĕсен чертежĕсене те пичетлесе кăларнăччĕ. Эпир те шкул пахчинче окоп чавса хатĕрлерĕмĕр. Тĕпĕнче ларса канма сакă та тунăччĕ. Çĕрле кантăксенчен çутă ан курăнтăр тесе чернилпа хуратса хаçат караттăмăр.

Вăрçă çулĕсенче занятисем , яланхи пекех, сентябрĕн 1-мĕшĕнче

мар, октябрĕн 1-мĕшĕнче тытăнма пуçларĕç. Çав хушăра шкул ачисем хирте е йĕтем çинче вăй хуратчĕç: молотилка патне кĕлте сĕтĕрнĕ, улăм купаланă. Пучах пухма та çӳренĕ. Аслăраххисем ĕнесем кӳлсе кĕлте те турттарнă, тыр вырнă, кĕлте çыхнă. «Кашни тăваткал метр тырă ани çинче икшер пучах хăварсан гектартан пĕрер пăт тырă çухалать», - тесе асăрхаттаратчĕç пире. Эпир тăкаксăр ĕçлеме тăрăшаттăмăр. Çапла вара май пур таран пурте Çĕнтерӳве çывхартма тăрăшнă.

Фронтри лару-тăрусене те, фашистсем тытса илнĕ ялсемпе хуласенчи ним айăпсăр мирлĕ граждансене асаплантарса вĕлернĕ, чакса кайнă чух çурчĕсене çунтарса хăварнă тĕслĕхсене те хамăр хушăра хĕрӳллĕн сӳтсе яваттăмăр эпир, вăрçă ачисем, пĕрле пухăнса калаçнă хушăра.

-Нимĕçсем пирĕн яла килсе кĕрес пулсан чи малтан сире вĕлереççĕ,- терĕ пĕррехинче манăн çывăх тусăм Пиккук Миккалайĕ.

Миккалайсем пире хирĕç ретрех пурăнаççĕ. Эпир вĕсемпе çемьесемпе те туслă. Пиккук тете манăн атте юлташĕ пулнă. Пиккук тетепе унăн мăшăрĕ Хĕрпик аппан çемйи пысăк — виçĕ ывăл, икĕ хĕр. Кил хуçи хăй вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче Инçет Хĕвелтухăçĕнче çар хĕсметĕнче тăратчĕ, кайран ăна Анăçри фронта илсе кайрĕç.

Миккалай, çитĕннĕ çын пекех, пĕлмесĕр калаçман. Ара, фашистсен çарĕ пирĕн яла та тытса илнĕ пулсан, чăнах та, чи малтан манăн аннене, çаплах унăн икĕ ывăлне — шăллăмпа мана — туртса çакма пултарнă паллах. Манăн анне — ялти ятлă çын, çитменнине, коммунистсен ертӳçи-çке.

Телее, апла пулса тухмарĕ. Çапах та вăрçă шăпланнă хыççăн та окупаци хăрушлăхĕ час-часах манăн тĕлĕке кĕретчĕ: ĕнтĕ пирĕн яла та гитлеровецсен çарĕ пĕлĕт пек капланса кĕрет пек, вĕсенчен тарса хăтăлма та çук... Юлашкинчен хăраса вăранса кайни сахал мар пулнă.

## ÇĔНТЕРӲ КУННЕ КĔТСЕ ИЛНИ

Çав чăтăмсăр кĕтнĕ кун çывхарса килнине мăннисем çех мар, ачасем те фронт линийĕ СССР чикки урлă каçсанах туйса тăнă-ха. Анчах та юлашки çапăçусем пĕрре те çăмăл пулман паллах. Фашист çарĕсем кашни татăк çĕршĕн урса кайсах хирĕç тăнă. Юнлă Гитлер хăйĕн ухмахла авантюри путланса ларнине курса тăрсах çĕнĕрен те çĕнĕ резервсене çапăçăва кĕрте-кĕрте янă, çав шутрах ним айăпсăр ватăсемпе вĕтĕсене, хĕрарăмсене те хĕрхенсе тăман. Берлин урамĕнчи

çапăçусенче пуç хунисем хушшинче çул çитмен çамрăксем те йышлă пулнă.

Фронтран килекен юлашки хыпарсем пурне те савăнтарнă пулин те тăвата çулталăка тăсăлнă вăрçă калама çук хака ларнине кашниех ăнланнă. Пурте пĕр шухăш-ĕмĕтпе пурăннă: хăçан шăпланĕ-ши вăрçă кĕрлевĕ? Часах çиттĕрччĕ çав кун! Тăнăçлă та тӳлек шăплăх çитмеллех. Анчах хăçан? Çакна никам та татса калама пултарайман-ха ун чух. Тен, çавăнпах Çĕнтерӳ кунĕ кĕтмен çĕртен çитсе тăнă пек туйăнчĕ.

Вăл кун яланхи пекех Кивĕ Улхашри çичĕ çул вĕренмелли шкулта занятисем пыратчĕç. Тăхтав вăхăтĕнче класс руководителĕ Пелагея Петровна Иванова мана стена хаçачĕ кăларма чĕнсе кайрĕ. Кӳршĕри пушă класра вăл пĕччĕнехчĕ. Шкул çулĕсенче эпĕ яланах стена хаçачĕн редколлеги членĕ пулнă. Ку вăл ачаран ӳкерчĕксем тума юратнинчен килнĕ темелле. Кивĕ Улхашри çичĕ çуллă шкулта сăвăсем те çырма пуçланăччĕ ĕнтĕ.

П.П.Иванова — тулли пит-куçлă, кăмăллă ватă учительница. Пĕвĕпе çӳллех мар. Ялан çутă хашаклă куçлăх тăхăнса çӳрет. Хăй вăхăтĕнче вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулне пĕтерсе тухнă. И.Я. Яковлев просветителĕн ентешĕ çеç мар, тăванĕ те пулнă. Патриархăмăр ăна çывăха хурса “внучка” тесе чĕннĕ. Çаплах “Нарспи” авторĕн К.В. Ивановăн вĕренекенĕ те пулнă вăл. Хăйĕн паллă вĕрентекенĕсем çинчен Пелагея Петровна пире яланах пысăк çĕкленӳпе каласа паратчĕ. Вăл пире тăван чĕлхепе литература предмечĕсене вĕрентетчĕ. Мăшăрĕ, шкул директорĕ Андрей Петрович, пире вырăс чĕлхипе литературине вĕрентрĕ. Сĕрме купăс ăста калатчĕ. “Совет Союзĕн Гимнĕ” пичетре çапăнса тухсан ăна вăл шкулти мĕн пур ачасене пухса юрлама вĕрентрĕ.

Ивановсен çитĕннĕ ывăлĕ – Леонид Андреевич та Ульяновскри И.Я. Яковлев ячĕллĕ педучилищĕре вĕренсе учитель ятне илнĕ пулнă. Вăл кĕçĕн классенчи ачасене вĕрентнĕ. Часах ăна çара илнĕ. Синкерлĕ хĕрĕх пĕрремĕш çулта килтисем унран пĕр çыру çеç илме ĕлкĕрнĕ, пултаруллă çамрăк учитель вăрçă авăрĕнче хыпарсăр çухалнă. Çак инкек ашшĕпе амăшне вăхăтсăр шуратнă. Çакна та каласа хăвармалла: Ивановсем учительсен династине пуçарса яраканĕсем пулнă. Пелагея Петровна хăй вăрçă хыççăнхи çулсенче çамрăк ăрăва пĕлӳ парас енĕпе нумай çул хушши ăнăçлă ĕçленĕшĕн Ленин орденне тивĕçнĕччĕ. Ивановсен икĕ хĕрĕ — Розăпа Люция та ашшĕпе амăшĕн ырă ĕçне малалла тăсса ырă ята тивĕçрĕç, халĕ вĕсен ачисемпе мăнукĕсем çак династие малалла тăсаççĕ.

Ирхине тӳпене хура пĕлĕтсем карса илнĕччĕ. Пăртакран вĕсем

майӗпен сирӗлме пуҫларӗҫ. Часах хӗвел пӑхса ячӗ. Класс пӳлӗмӗ ҫуталса кайрӗ. Мана кирлӗ заданисем парса хӑварнӑ хыҫҫӑн Пелагея Петровна самантлӑха тухса кайрӗ. Эпӗ класра пӗчченех тӑрса юлтӑм. Хаҫата илемлетсе пӗтерме те ӗлкӗрейменччӗ – Пелагея Петровна хыпаланса каялла пырса кӗчӗ. Хӑй калама ҫук хумханнӑ.

- Вӑрҫӑ чарӑннӑ!-пӗлтерчӗ вӑл мана.

Эпир пуҫӑннӑ ӗҫе хӑварса класа таврӑнтӑмӑр. Калама ҫук пысӑк савӑнӑҫ! Хӑйӗн кӑмӑлне кам мӗнле пӗлет, ҫапла палӑртать. Шӑв-шав та хӗвӗшӳ! Пелагея Петровна пире пурсӑмӑра та киле таврӑнма хушрӗ. Часах эпир пурте шкул килкартине сиксе тухрӑмӑр. Сарлака урама тухса: «Урра! Урра!» - кӑшкӑратпӑр. Хирӗҫ пулакансене пурне те хаваслӑ хыпар пӗлтеретпӗр. Пасар урамне ҫитсен кунта халӑх пуҫтарӑнма ӗлкӗрнине куртӑмӑр. Пӗр старик лавкка крыльци ҫине улӑхса тӑнӑ та сӑмах калать. Ҫав вӑхӑтрах шурӑ тутӑрпа куҫҫульне шӑла-шӑла илет.

-Герой ашшӗ Кӗркури пичче, - терӗҫ Кив Улхашри тантӑшсем пире унпа паллаштарса.

Совет Союзӗн Геройӗ Николай Григорьевич Князькин ҫинчен эпир унччен илтнӗ-ха. 1943 ҫулхи ноябрь уйӑхӗнче вӑл Киев хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ хаяр ҫапӑҫура пуҫне хунӑ. Ентеш танкист тӑшманӑн виҫӗ орудине, тӑватӑ пулемӗтне, хӗрӗх ытла нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене тӗп тунӑ. Тӑшман йӗтри танк гусеницисене татнӑ хыҫҫӑн та парӑнман вӑл, фашистсен эшкерне пере-пере вӗлернӗ, юлашки юн тумламӗ тухиччен тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫнӑ. Халӗ ял варринче ӑна асӑнса лартнӑ палӑк ҫӗкленсе тӑрать, ун умӗнче яланах чӗрӗ чечексем. Ҫак асран кайми самант ҫинчен эпӗ сӑвӑра ҫапла ҫырнӑччӗ:

## ҪӖНТЕРӲ КУННЕ КӖТСЕ ИЛНИ

Ҫу уйӑхӗн тӑххӑрмӗш кунӗ...
Этем ӗмрисен тӳпинче
Ялан вӑл ҫут ҫӑлтӑр пек ҫунӗ,
Манмасть ӑна пӗтӗм тӗнче.

Эпир, ачапча, шкултаччӗ
Ҫав кун хутаҫ пек сумкапа.
Шур ҫӳҫлӗ учитель пӗлтерчӗ
Пире чӗрери хаваспа:

-Вут-вăрçă пĕтнĕ... Итлĕр:
Кĕрлет çĕр-шывра Çĕнтерӳ!
Тĕп пулнă юнлă Гитлер!—
Kаларĕ учитель хĕрӳн.

Тăвата çулталăк-çке кĕтнĕ
Ватти те вĕтти çак куна.
Тинех хайхи... вăрçă пĕтнĕ!
Хыпар шăнăçмасть яш чуна.

-Урра! та урра! кăшкăратпăр,
Сумка çакса таврăннă май.
Çаплах кам пĕлмен - хыпарлатпăр -
Ялти урамра çын нумай.

Лавкка умне халăх пĕвеннĕ,
Кунта пухăнатчĕ пасар.
Паян та унта çын иленнĕ
Илтсессĕн хаваслă хыпар.

Крыльца умне пухăннă халăх,
Тăнлать тилмĕрсе старике.
Трибуна çинчи пек вăл калăн...
Ку кам? Герой ашшĕ иккен.

Çапла пуçласа эп курсаччĕ
Çав кун Кĕркури пиччене.
Танкист унăн ывăлĕ - Князькин -
Текех таврăнаймĕ килне.

Вăл çак Çĕнтерӳшĕн пуç хунă
Тин сӳннĕ хаяр вăрçăра.
Ыратнă сурса ашшĕ чунĕ,
Паян та пирте çав суран.
2009.

# Манăн пурнăç

## Умĕн калани

«Хыпар» хаçатăн 2008 çулхи 203-мĕш номерĕнче манăн «Манăн пурнăç» ятлă сăвă çапăнса тухнăччĕ. Анчах та пысăк мар сăвăра сакăр вунна çывхарса пыракан этем кун-çулĕ çинчен епле туллин çырса кăтартайăн-ха? Кунта проза жанрĕ кирлĕ. Чăнах та, пур-ха манăн унашкал автобиографилле япала. Вăл 2002 çулта «Ялав» журналта «Ачалăх çĕр-шывĕ» ятпа пичетленнĕччĕ. Журнал вариантне те тулли тесе калаймăн.

- Аван япала. Патшалăх кĕнеке издательствине сĕнмелле ăна, - тесе канаш панăччĕ мана поэзири ĕçчешĕм тата тусăм Аристарх Дмитриев ун пирки.

Заявка çырса патăм. Анчах унта уйрăм кĕнекен кăларасси пулмарĕ.

- Тираж çук, - пулчĕ пуçлăхсен хуравĕ.

Çитменнине ку чухнехи вулакансем Лев Толстой пек туллин çырнă япаласене вулама юратмаççĕ. Пичетлесе кăларма та çăмăл мар вĕсене. Мĕн тесен те, рынок тапхăрĕ. Çавна май кĕнекеçĕсем те коммерци серепине кĕрсе ӳкрĕç мар-и? Çавăнпа эпĕ хамăн аса илӳсен çĕнĕ, кĕске вариантне çырма шутларăм. Классик тĕслĕхĕпе. Лев Толстой аллă çул тултарнă хыççăн тата 1903-1906 çулсенче хăйĕн биографийĕ çине çĕнĕ куçпа çаврăнса пăхнă пек. Аваннисем çинчен çех мар, начаррисем çинчен те. Пĕр пытармасăр. Çĕнĕ ăру çыннисем ман «çылăхсене» ан туччăр тесе. Çав вăхăтрах эпĕ малтанхи повеçре асăннă фактсене тепĕр хут асăнас темерĕм. Мĕнле пулса тухнине вулакан хăй хак парĕ. Эпĕ унăн ырă сăмахне, ӳпкевне те чĕререн йышăнăп. Ара утса тухнă пурнăçа урăхлатма çук-çке-ха? Эпир пурте – самана çыннисем. Кашни ăру çынни пурнăçĕнче тĕкĕр çинчи пек ӳкерĕнсе юлать ĕнтĕ унăн самани те.

## Малтанхи çаврăм

Ку аса илӳ сыпăкĕсене эпĕ 78 çулхи кун-çул тӳпинчен каялла çаврăнса пăхса çыратăп. «Как мало пройдено дорог, как много сделано ошибок», - тесе çырнă хăйĕн асран кайми сăввисенчен пĕринче вырăссен аслă поэчĕ Сергей Есенин, пирĕн ăрури мĕн пур поэтсен кумирĕ. Манăн Сергей Александровичăн виçĕ хута яхăн ытларах утса тухнă пурнăç çулĕ çинче тунă йăнăшсен шучĕ те çук темелле. Шел пулин те, ку тарана çитсе те вĕсене туллинрех аса илсе вулакан

патне ҫитерсе пулмарӗ. Куннехинче ҫак парӑма кӑштах та пулин катас шухӑш утса тухнӑ кун-ҫулӑм ҫине тепӗр хут ҫӗнӗ куҫпа ҫаврӑнса пӑхма хистерӗ.

Эпӗ 1932 ҫулхи сентябрӗн 12-мӗшӗнче хальхи Ульяновск облаҫӗнчи Чӑнлӑ районӗнчи Чӑвашкасси ялӗнче учитель ҫемйинче ҫурланӑ. «Епле-ха капла?» - тейӗ вулакан. Ҫапла. Тӗрлӗ кӑларӑмсенче эпӗ «юпа уйӑхӗн 28-мӗшӗнче ҫуралнӑ» тесе ҫырнӑ. Куннехинче акӑ анне сӑмахӗсене илсе ҫыратӑп. Ӑна ӗненерех паратӑп. Шел пулин те, манӑн ҫуралнӑ хут сыхланса юлман. Унӑн дубликатне эпӗ кайран, хам ҫитӗнсе ҫитсен илтӗм. Паспортри дата - ЗАГС чиновникӗсен йӑнӑшӗ. Пурнӑҫра вара тӳрӗ ҫынсен сӑмахне мар, хут ҫине ҫырнине ӗненеҫҫӗ. Кун пирки вырӑссен кулӑшӗ те пур: «Без бумаги - ты букашка, а с бумажкой - человек».

Чӑннипех лару-тӑру ҫапларах пулса тухнӑ. 1932 ҫулхи вӗренӳ ҫулӗ умӗн аттепе анне ҫӗнӗ вырӑна пырса ҫеҫ ҫитнӗ пулнӑ-ха. Унччен анне пилӗк ҫул хушши аттен тӑван ялӗнче - Ирҫелӗнче ачасене вӗрентнӗ. Атте вулӑс писарӗнче тӑрӑшнӑ. Унта вӑл хӑйӗн ҫулпа аслӑрах тусӗ - Василий Васильевич Овчинников хӳттипе ӗҫе вырнаҫнӑ пулнӑ. Район центрӗ Аслӑ Нагаткин вырӑс ялне куҫсан В.В. Овчинников унта патшалӑх банкӑн управляющийӗччӗ. Ялти пуҫламӑш шкултан лайӑх паллӑсемпе вӗренсе тухнӑ аттен пӗлӳ шайӗ вулӑс ялӗнчи яваплӑ ӗҫе пурнӑҫлама ҫителӗклӗ пулнӑ пулмалла. Ҫитменнине унӑн почеркӗ питӗ хитре,  тетчӗҫ. Каярах вӑл ҫырнӑ ӗҫлӗ хутсене эпӗ хам та курнӑ.

1927 ҫулта И.Я. Яковлев паллӑ просветитель уҫнӑ Ульяновскри учительсем хатӗрлекен чӑваш шкулӗнчен (ун чухне ӑна педтехникум тенӗ) вӗренсе тухсан аннене икӗ хӗр-тантӑшӗпе пӗрле (пӗри — Вера Брагина, тепри - Ишмуратова, ятне манса кайнӑ) Ирҫел шкулне янӑ пулнӑ. Аттепе анне 1928 ҫулхи июнӗн 6-мӗшӗнче пӗрлешнӗ те. Аннепе пӗрлешнӗ хыҫҫӑн атте хӑй те Куйбышеври рабфака вӗренме кӗрет. Унта вӑл чӑвашсен пулас паллӑ поэчӗпе Стихван Шавлипе пӗрле вӗреннӗ. Степан Антонович аттене хӑй те астӑватчӗ.

Ирҫелӗнче ӗҫлесе пурӑннӑ ҫулсенче анне икӗ хӗр ҫуратнӑ. Вӗсем Зина тата Тамара ятлӑ пулнӑ. Аппасем иккӗшӗ те алри ача ҫулӗсенче вилсе кайнӑ. Рабфакран вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн аттепе аннене Чӑвашкассинчи пуҫламӑш шкула ӗҫлеме янӑ. Шӑпах вӗсем унта пырса вырнаҫнӑ ҫул эпӗ ҫуралнӑ та.

Чӑвашкасси Ирҫелӗнчен ҫирӗм ҫухрӑмра вырнаҫнӑ пысӑк мар чӑваш ялӗ. Халӗ унта ҫӗр ытларах килӗ шутланать. Ун чухне ытларах пулнӑ. Самана улшӑнсан, ҫамрӑксем хулана куҫса кайма пуҫларӗҫ.

Çапла вара ку чухне ялта ватăсем ытларах пурăнаççĕ.

Анне аптраса ӳксен ăна ун чухне район центрĕ пулнă, Чăвашкассинчен вунă çухрăмра вырнаçнă Пухтел пульницине ăсатнă. Лав пульницана çитсе ĕлкĕриччен анне çуратма пуçлать. Ăсатакансем хушшинче асанне те пулнă. Вăл аннене Стюков хушаматлă хăйсен тăванĕ патне илсе каять. (Стюковсен çурчĕ пульница çывăхĕнчехчĕ). Эпĕ шăпах унта çуралнă та. Çитменнине асанне мана вăхăтсăр — çичĕ уйăхрах çуралнă, тетчĕ. Çуралсан пĕр хушă кĕрĕк ăшĕнче упрана имĕш.

Авланнă чухне атте - 19 çулта, анне унран çичĕ çул аслăрах пулнă. Мăшăрланса пурăннă 9 çул хушшинче çемьере пурĕ ултă ача çуралнă. Вĕсенчен эпĕ тата 1935 çулта çуралнă Геннадий шăллăм çеç ырăсывă юлнă. Чăвашкассинче çуралнă Володя ятлă кĕçĕн шăллăмпа Рая ятлă кĕçĕн йăмăк алри ачалла вилнĕ. Аттепе унăн Чăвашкассинчи тусĕсенчен пĕри - хыткан сăн-питлĕ Сайдяшев Эптюш пĕчĕк тупăк тунине астăватăп-ха. Унăн ăшĕнче пукане пек Рая выртать. Йĕритавра - хиртен татса килĕ чечек çыххисем. Атте ун чухнех чирлĕ сăнлăччĕ. Вăл рабфакра вĕреннĕ чух килне таврăнма тухсан Ульяновскран Ирçелне - çитмĕл çухрăмлă хушша çуран çитнĕ. Çанталăкĕ сивĕ пулнă. Атте, çăмăл тумланнăскер, (карттуспа, çӳхе пальтопа) хытă шăнать. Çавăн хыççăн ӳпке чирĕпе аптраса ӳкет.

Маларах хирург çĕççи айне те выртма тӳр килнĕ ăна. Аппендицитран йывăр операци тунă хыççăн чиперех ура çине тăнăха. «Унпа пĕрле выртнисенчен иккĕшĕ операци хыççăн вилсе кайнă», - тесе каласа кăтарттатчĕ анне.

Атте 1937 çулта, питех те вăхăтсăр, çирĕм çиччĕрех çĕре кĕнĕ. Репрессие лекмен вăл. Ăна ӳпке чирĕпе вилнĕ, тетчĕç. Асанне урăхла шухăшлатчĕ. Вилес умĕн аттен хăрах алли шыçса кайнăччĕ. Çав шыçă питех те асăплантарнă ăна. Килтисен ыратакан аллин шурă çаннине касса яма тивнĕ.

- Çак аллах вĕлерет мана, - тесе атте асапланса калаçнине эпĕ те астăватăп.

- Юмана пăсрĕç, - тесе хӳхлетчĕ асанне. Ку вăл — унăн «диагнозĕ».

Ĕç акă мĕнре. Вăтăрмĕш çулсем - ялсенче колхоз йĕркеленнĕ вăхăт. Атте, паллах, çак çĕнетӳсен айккинче тăрса юлма пултарайман. Чăвашкасси шкулĕ хăй вăхăтĕнче И.Я. Яковлев пуçарнипе çĕкленнĕ шкул çурчĕсенчен пĕри пулнă. Ялти пуçламăш шкулăн çак çуртне 1896 çулта туса лартнă. Ăна чăннипех те архитектура палăкĕ тес пулать. Телеее, вăл паян кунччченех тĕрĕс-тĕкел сыхланса юлнă. Аттепе анне пынă çул кил-карти тавращĕ пулман кунта. Ялти тĕреклĕ

пурăнакан хресченсенчен — «кулак» теме чĕлхе çаврăнмасть вĕсене - туртса илнĕ хуралтăсене шкула та панă, çапла вара кил-карти ӳссе ларнă. Кусем вĕсем - хӳме, выльăх усрамалли вите, вут-шанкă хурса упрамалли сарай, япаласен склачĕ (кĕлет), вырăсла хапха. Атте коммунист пулнă-и, çук-и - татса калама пултараймастăп. Анчах вăл ялта çĕнĕ пурнăç тунă çĕре, паллах, активлă хутшăннă, хресченсем хушшинче ăнлантаруллă ĕç илсе пынă. Аван-и, начар-и - интеллигенци представителĕ пулнă-çке. Ялта чи малтан патефон, велосипед туяннă. Кӳршĕ-аршăсем каçсерен пирĕн пата патефон итлеме çӳретчĕç. Ача-пăча велосипед çине ларса çӳреме вĕреннĕ. Ку çĕнĕлĕхсем ял халăхне космос вĕçĕвĕ пекех тĕлĕнтерсе калаçтарнă. Ачасем валли шкул çумне столовăй çурчĕ туса лартнăччĕ. Ку вăл кулаксенчен туртса илнĕ çурт пулман, ăна ял Совечĕ, унăн председателĕ, Ирçел çумĕнчи Чӳрекел чăвашĕ Албутов пулăшнипе туса лартнă. Вăрçă çулĕсенче столовăй çуртне сӳтсе колхозри ĕне фермине куçарнăччĕ, унта пăрусене хупса усратчĕç. Кӳршĕри Ярамай ятлă тутар ялĕнчи шкул коллективĕпе туслă çыхăну йĕркелесе янă пирĕн атте. Шкул ачисене Пухтел вăрманне экскурсие илсе çӳренĕ. Унран никам та усал сăмах илтмен. Тарăхнă вăхăтра персе яма юратнă пĕртен-пĕр сăмахĕ «яппун турти» пулнă. Кӳршĕ-аршăсемпе те татуллă пурăннă. Унăн çывăх тусĕсенчен пĕри, Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче паттăррăн çапăçнă, хирĕç ретре пурăнакан Мĕтрик тете каласа панă тăрăх, атте ăна уçă чӳречерен час-часах чĕне-чĕне илнĕ, пырĕ ярăннă чух пĕрле ларса сăйланма. Хаваслă вăхăтра ахăлтатса кулма та юратнă пирĕн атте. Пĕррехинче шкул хуралçин мăшăрĕпе, вăйпитти хĕрарăмпа кула-кула вăй виçнине хам та курнă эпĕ. Епле пулсан та атте скептик пулман. Анне хĕрарăмсем хушшинче ытларах ĕçленĕ - хут пĕлменнисене вулама-çырма вĕрентнĕ, тăлăх ачасене кĕпе-йĕм çĕлесе тумлантарнă.

Ял халăхĕ аттепе аннене калама çук хисепленĕ. Аттене «Федор Ленччă» (Федор Леонтьевич), аннене «Çăхванишнă» (Степанида Ильинична) тесе чĕннĕ. Аттепе анне хăйсене пысăка хуман, пурнăçра та, йăлара та ыттисене ырă тĕслĕх кăтартнă. Чăвашкасси - тĕне кĕмен чăваш ялĕ. Çакă хăй вăхăтĕнче чăваш халăхĕн патриархне Иван Яковлевич Яковлева «Колумб Америкăна уçнă пекех» тĕлĕнтернĕ. Ял çыннисем çаплах авалхи чăваш ячĕсемпе çӳренĕ: Хĕрпик, Селиме, Кĕлпике, Нескипе, арçын ячĕсем - Мăрси, Искентер, Ухтăм, Улентей, Селентей т.ыт.те. Пирĕн хыççăн хăйсен ачисене вĕсем çĕнĕ ятсем пама пуçланă: Анатолий, Геннадий т.ыт.те.

Çав хушăрах çурт-йĕрĕсене тустарнисем аттене курайман та

пулмалла. Эпир ача чухнех ялта «тухатмăш карчăксем» пурри çинчен сăмах çӳретчĕ. Асанне вилнĕ хыççăн пире çаратса та тухнăччĕ. Вăрăсем тĕрлĕрен тумтир тавраш - хаклă йышши костюмсем, пальтосем, тин çеç йăвалана çăматăсем иле-иле тухнă. Ирхине милиционерсем вăрăсене йытăпа та шыраттарса пăхнă - тупайман. Хăш-пĕр япаласене «Мулянсен мунчи тăрринче тупнă», - тетчĕç.

Атте 1937 çулхи мартăн 27-мĕшĕнче вилнĕ. Кун çинчен район хаçатĕнче хыпарласа çырни пур. Ку вăл шăпах çурхи шыв кĕрлесе юхнă вăхăт пулнă. Ăна хăй çуралса ӳснĕ Ирçел ялне илсе кайса пытарнă. Çывăхри варсемпе çырмасем урлă илсе каçма колхозăн чи чаплă лашисене уйăрса панă, вĕсене ялти вăйпитти арçынсем тытса пынă. Çав шутрах кӳршĕри Мĕтрик тете те, патвар ӳт-пӳллĕ те, кĕреш пек, çӳллĕ те тĕреклĕ арçын. 1941 çулта Мĕтрик тете Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче Мускава хӳтĕленĕ çĕрте палăрчĕ, пысăк çар наградисене тивĕçрĕ. Кайран та вăл çапăçури çарта сакăр хутчен аманнă, икĕ хутчен контузи пулнă. Госпитальте выртнă чух «вилĕм хучĕ» те килнĕччĕ. Йывăр сурансене пула çартан вăрçă вĕçлениччен кăшт маларах таврăнчĕ. Кун хыççăн ăна колхоз председательне суйланăччĕ. Каярах армана куçрĕ. Пушă вăхăтра чăваш писателĕсем çырнă кĕнекесене вулама юрататчĕ. Вăрçăччен тухнă çав кĕнекесене эпĕ ăна уйрăм çынсен архивĕнчен тата Владимир Бараев поэт тăванĕсенчен (унăн амăшĕ пирĕн ял хĕрĕ пулнă, çавăнпа вăл Чăвашкассине час-часах килсе çӳренĕ) тупса параттăм. Арман пӳртĕнче çĕр каçнă чух час-час эпир çав кĕнекесене пĕрле вулаттăмăр. Вуласса сасăпа вулаттăмăр, пĕр-пĕринпе ылмашăнса. Çапла майпа эпир Мĕтрик тетепе Илле Тукташăн «Вăкăр çырмипе», Влас Пайменĕн «Çĕприпе», Данилов-Чалдунăн «Ункăра», Мархва Трубинан «Ĕç тухмарĕ» калавĕсемпе, Владимир Бараевăн «Кавказ хăнисем» очеркĕпе паллашнăччĕ. Çаплах вăрçă çулĕсенче тухнă «Илемлĕ литература» альманахра çапăнса тухнă вăрçă калавĕсемпе очеркĕсене те вуланă. (кайран вăл «Тăван Атăл» ятпа тухма пуçларĕ). «Тăван Атăлта» çапăнса тухнă Леонид Агаковăн «Вилĕмрен те вăйлăрах» тата «Хĕрача» повеçĕсене эпĕ хам валли тетрадь çине те куçарса çырса илнĕччĕ. Питех те кăмăла кайнипе. Ку вăл сăмах май пулчĕ-ха.

Атте тăпри çине хăй хушнипе хĕрес мар, юман юпа лартнăччĕ. Хăма татки çине ятне çырса хунă. Кăмăлĕпе вăл атеист пулнă. Палăк-юпа çĕрсе ӳксен асанне йăлана кĕнĕ хĕрес ларттарнă.

## Иккĕмĕш çаврăм

Çитĕнсе çынна çитнĕ хыççăн ваттисенчен йăх тымарĕсене тĕплĕн

çырса илменшĕн питех те ӳкĕнетĕп. Ăс çитмен, ухмах пулнă. Хăвăрах шутлăр-ха, асаннен ашшĕ ятне те пулин çырса илме тавçăрман вĕт. Асанне, асанне тенĕ кăна. Вăл тăлăх хĕр пулнă. Анат Тимĕрçен ялĕнче «Аппанов» хушаматлă хресчен çемйинче çитĕнсе асаттене качча кайнă. Анат Тимĕрçен пасарне кайсан вăл вĕсем патне кашнинчех кĕрсе тухатчĕ. Камсем пулнă-ши вĕсем? Паллă мар.

Асаттепе пĕр тăванĕсен ячĕсене çырса илнĕччĕ-ха Ирçелĕнчи ватă коммунистран Уйрановран: Тимахви, Ваççа, Петĕр, Аркади тата манăн асатте Лявук. Вĕсем «Мутя» хушаматпа çӳренĕ. Муттясем тĕреклĕ хресченсем пулнă пулмалла. Петĕр çемйинеччĕ пулас Кулак поселокне ăсатнă пулнă. Пурччĕ унашкал ятлă ял. Пĕррехинче, вилес умĕн вăл старик манпа тĕл пулса калаçнăччĕ. Эпĕ, ухмаххи, унăн историне çырса илме ăс çитермен.

Асатте çинчен те çителĕксĕр пĕлетĕп. Вăл хăй евĕрлĕ çын пулнă, теççĕ. Ашшĕне пăхăнман имĕш. Хушаматне те çавăнпа улăштарнă пулĕ. Эпĕ унпа сахал тĕл пулса калаçнă.

Çуллахи кану кунĕсенче анне колхозран лаша çыртарса илсе пире, Геннадий шăллămпа иксĕмĕре, урапа çине лартатчĕ те Ирçелне илсе каятчĕ. Хăш чухне унтан каç пулттипе тин таврăнаттăмăр. Пухтел вăрманĕ тăрринче каснă арпус пек çакăнса тăракан тулли уйăх халĕ те куç умĕнче. Вăрман çулĕпе шаларах кĕрсен шурă тăмлă лупашкасем тĕл пулатчĕç. Унта Граждан вăрçи çулĕсенче пăлхав вăхăтĕнче вилнĕ чухăнсен тăванла вилтăпри те пурччĕ. Каярах вĕсене ялти клуб умне илсе килсе пытарчĕç, палăк çине асăну хăми çырса çапрĕç.

Асатте качака сухаллă пысăк мар старикчĕ. Ун чухне вăл район центрти патшалăх банкĕн çуртне хураллачĕ. Унта ăна та аттен тусĕ - В.В. Овчинников банк управляющийĕ вырнаçтарнă. Çавăнпа эпир асаттепе тăтăш тĕл пулайман. Тăвансем хăна пуçтарсан кăна куркаланă. Вăрçă çулĕсенче выçăпа аптрани асра. Ун чухне асатте кăмака çинче чирлĕ выртатчĕ. Пăртакран вилсе кайни çинчен илтрĕмĕр.

## Виççĕмĕш çаврăм

Чи малтан астунă самантсенчен пĕри: мана такам шкул крыльци çинчи хĕрринчи хăма çине лартса хăварнă. Ун чух утма та вĕренмен-и, тен. Тапкаланса выртнă чух асăрханаймасăр çĕре татăлса антăм. Ыраттарнине астумастăп. Çывăхрисем самаях хытă хăраса ӳкнĕ, ăшталанаççĕ. Ача чухне пĕр хушă пире аттен кĕçĕн йăмăкĕ - Саша аппа пăхнă.

Тĕлĕкри пек асра юлнă ытти самантсене эпĕ «Ачалăх çĕр-шывĕ»

повеçре çырса кăтартнăччĕ.

... вăрçă умĕнхи çулсем... Шкул умĕнче йывăç хăмасенчен çапса тунă трибуна пурччĕ. Уяв кунĕсенче ун тавра ял халăхĕ яланах йышлăн пухăнатчĕ. Куннехинче те митинг пырать унта. Хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет, çутă малашлăха чĕнекен лозунгсем хавхалантараççĕ уява пухăннă çынсене. Колхаз патефон туяннă. Пĕри ăна айккинче калаттарса тăрать. Трибуна çинче такам хĕрӳ сăмах калать, хушăран аллисемпе сула-сула илет. Мана вăл никам та мар, хăй Ленин сăмах каланăн туйăнать. Çакна эпĕ чылай çулсем хушши ĕненсе пурăнтăм. Чăннипе кам пулнă сăмах калаканĕ - пĕлместĕп.

... Килте хăна-вĕрле. Вĕсем уяв хыççăн пухăннă. Кĕреке тулли ĕçме-çиме. Хĕрлĕ эрех пур. Такам мана черкке тĕпне çулаттарса пăхать. Анне çакна асăрхаса ман алри черккене туртса илет.

Хăнасенчен пĕри особист тумĕпе. Вăл анне çумне çыпăçать, ăна пĕрмай темĕн калаçтарать. Анне унран пăрăнма тăрăшать.

Вăл аннене хăйĕн мăшăрĕ тăвас шухăшлă пулнă-мĕн. Анчах анне унăн сĕнĕвĕпе килĕшмен.

- Манăн икĕ ывăл пур. Чи малтан вĕсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерсе çынна кăлармалла, - тенĕ.

Кун çинчен хăна хыççăн такам каласа кăтартрĕ.

## Тăваттăмĕш çаврăм

И.Я. Яковлев ялсенче шкулсем уçнă чухне вĕсенче учительсене пурăнма хăтлă хваттер валли те кĕтес уйăрса хăварма манман. Чăвашкасси шкулĕнче те эпир шкул çуртĕнчех пурăнаттăмăрччĕ. Унта алăкран кĕрсенех - çири тумтире хывмалли вырăн, стенан сылтăм енче - тумтир çакмалли çӳлĕксен речĕ (вешалка), ун çумĕнче ачасем вĕренекен класс пӳлĕмне тухмалли алăк. Сулахайра тата мал енче те - алăксем. Мал енчи алăк çумĕнче, вешăлкăна хирĕç – каланкка çăварĕ. Эпир пурăннă вăхăтра вăл каланкка хутăнмастчĕ. Сулахай енчи алăк кухньăна илсе кĕрет, унта вырăс кăмаки. Кухня çумĕнчи кĕтесре – çывăрмалли вырăн (спальня), унта та алăк уçса кĕмелле. Çурт маччи çӳллĕ, тăватă метра яхăн та пулĕ. Кăмака çине улăхсан та çитĕннĕ çын пуçĕ маччана перĕнмест. Спальнăй кĕтесĕнче - пысăк кĕленче шкап. Хваттерти чи пысăк пӳлĕм - зал. Ун патне икĕ енчен те алăк уçă. Стена çинче вăхăта чан пек çапса пĕлтерекен сехет. Атте сывă чух залăн сылтăм енче пианино та пурччĕ. Атте вилнĕ хыççăн районти çут ĕç пайĕнчен килнĕ пуçлăхсем таçта илсе кайрĕç ăна.

Революци хыççăн ялти шкулта Чăвашкассинче çуралса ӳснĕ

чăвашсен малтанхи композиторĕсенчен пĕри Григорий Григорьевич Лисков (Хемит) учительте ĕçленĕ пулнă. Вăл юрă урокĕсенеирттернĕ чухне унпа усă курнă пулас. Сĕрме купăс калакан ватăсем те йышлăччĕ ялта. Атте пианино клавишĕсем çине пускаласа кĕвĕсем кăларнине астăватăп.

Мачча кашти çинче çаплах сӳре шăлĕ пур. Ăна атте сăпка çакма çапса хунă пулнă. Шăллăмпа эпир çав сăпкара ярăнса ӳснĕ. Кун çинчен эпĕ «Атте килĕ» ятлă пĕчĕк поэмăра та çырса кăтартнăччĕ. Никама та чăрмантарман çав пăта паян кун та тĕрĕс-тĕкел пăхса тăрать мачча çинчен çĕнĕ ĕмĕр çыннисем çине. Вăхăт кӳнтели!

Атте вилнĕ хыççăн шкул хваттерĕ хăйĕн сăн-сăпатне апла та, капла та улăштарчĕ. Вăрçăччен атте хыççăн ĕçленĕ шкул заведующийĕ Александр Семенович Ванюшкин спальня алăкне пӳлсе малти пӳрте - зала – хăйĕн хваттерĕ туса хунăччĕ. Эпир спальнăра хĕсĕнсе пурăнма пуçларăмăр. Ăна Хĕрлĕ Çара илсе кайнă хыççăн шкул заведующийĕ анне пулчĕ, эпир каллех малти пӳлĕме куçрăмăр, пирĕн пӳлĕме çамрăк учительсем В.Г. Праковпа Н.С. Семенов йышăнчĕç. Вĕсем хыççăн Ульяновскри чăваш педучилищинчен тин çеç вĕренсе тухнă Пухтел хĕрĕ - Ольга Васильевна Нагорнова пурăнчĕ.

Вăрçă çулĕсенче учительсен пĕчĕк ушкăнне анне ертсе пычĕ. Тепĕр учителшьница, Çĕнĕ Улхаш хĕрĕ Елена Николаевна Митрофанова ашшĕ килне кунсерен çӳретчĕ. Вутă перекетлес тесе анне малти пӳртре плиталлă пĕчĕк каланкка купалаттарчĕ.

Шкулта икĕ класс пӳлĕмччĕ. Кăнтăр енчине «пысăк класс», çурçĕр енчине «пĕчĕк класс» теттĕмĕр. Пĕчĕк класра - кĕçĕн çулхи ачасем, пысăккинче аслă çулхисем вĕренетчĕç. Вăрçăччен кашни класра 30-40 ача вĕренни те пулнă. Хулăн хăмасенчен тунă партăсем хушшинче тăватшар ача ларатчĕ.

Пысăк класс актовăй зал е клуб вырăнĕнчех пулнă. Унта колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсене те ирттеретчĕç, кинофильмсем те, концертсем те кăтартатчĕç, спектакльсем те лартатчĕç. Сценине партăсем çине хăмасем хурса майлаштаратчĕç. Хăмисене вăхăтлăха шкул хӳмине сӳтсе йăтса кĕретчĕç. Ача-пăчасем учительсем лартаакан спектакльсене курма ял халăхĕ те йышлăн пуçтарăнатчĕ. Çапла Александр Кăлканăн «Анисса», Тихăн Петĕрккин «Укçа» пьесисене лартса панăччĕ шкул сцени çинче. Куçса çӳрекен цирк артисчĕсем килсе кайни те асра юлнă. Вĕсем упана та ташлаттарнăччĕ. Гимнастсем вара маччана çити улăхса хăйсен пултарулăхне кăтартнăччĕ.

Вăрăм коридор вĕçĕнче уборщицăсен пĕчĕк пӳлĕмĕ пурччĕ. Вăрçă

çулёсенче унта хуран вырнаçтарса лартнăччĕ. Унта апат-çимĕç те пĕçернĕ. Пĕчĕк пӳлĕм питĕ хăвăрт ăшăнатчĕ, унпа вут-шанкă та перекетленетчĕ. Шартлама сивĕсенче пурте пĕрле пухăнса унта кăна ăшăнаттăмăр эпир.

Эпир –анне, шăллăмпа эпĕ, Ольга Васильевна, уборщица Крахьяна аппа (хушамачĕ Денисова), аннепе тантăшлă кăмăллă та ĕçчен хĕрарăм, унăн ывăлĕпе хĕрĕ: асли - Аркади, кĕçĕнни – Аниçça. Ольга Васильевна хăйпе пĕрле пурăнма тăванĕн пирĕнпе тантăшлă Вера ятлă хĕрне илсе килнĕччĕ. Виçĕ çемье пурте пĕр кил-йыш пек килĕштерсе пурăнаттăмăр. Шкулти алăксене, чӳрече рамисене - пурне те шурă сăрпа сăрланă. Хыр пĕренисенчен купаланă стенисене çеç тĕкĕнмен. Уборщица пӳлĕмĕнчи алăк тăрринчи хăма çине пысăк саспаллисемпе «Сторож Искак Лисков» тесе шăйăрса çырнă сăмахсем куçа тӳрех тăрăнатчĕç. Хăй вăхăтĕнче вăл та кунта ĕçленĕ куран. Çынни манăн тантăш ашшĕ Ленинград фронтĕнче сас-хыпарсăр çухалнăччĕ.

Крахьяна аппа Çĕнĕ Улхаш хĕрĕ пулнă. Вăл Чăвашкасси ачине качча кайнă. Вăрçă пуçланас умĕн упăшкинчен уйрăлнă. Аслă ачи - Аркади - Мускавра вăхăтлăха ĕçленĕ ашшĕ патĕнче пурăннă. Ашшĕ вăрçа тухса кайсан тăван мар амăшĕпе яла таврăннăччĕ. Пирĕнпе пĕрле ялти шкула вĕренме çӳретчĕ. Кун хыççăн Крахьяна аппа унпа ялан тĕл пулкаланă, ăна хăй патне куçса килме чĕннĕ. Юлашкинчен Аркади чăнах та тăван амăшĕ патне таврăнчĕ. Мускавра пурăнса курнă ача пиртен чылай уйрăлса тăратчĕ. Шĕкĕр хулара вăл тем те пĕр курнă, тем те пĕр илтнĕ. Пире хăй курнă кинофильмсем çинчен кала-кала кăтартатчĕ. Çĕнĕ сăвăсем нумай пĕлетчĕ. Кăмака çинче ăшăнса ларнă май пушăт чĕллисенчен лаша кĕлеткисем тума юрататчĕ. Пирĕн те çук марччĕ ăна каласа кăтартмаллисем. Вăрçă умĕн анне Хура тинĕс хĕрринчи курортран хитре вак чулсем, сăн ӳкерчĕксем нумай кӳрсе килнĕччĕ. Капăрлатса эрешленĕ патак таран... Анне хăй те курортра каннă чух курнă кинофильмсем çинчен каласа кăтартнă пире. Пĕр кинофильмри персонаж юрланă юрă сăмахĕсем çаплах асра:

*Пани, пани, пани мой,*
*Пани золото везет...*

Мĕнле кинофильмри юрă пулнă-ши вăл? Кунашкал юрă сăмахĕсене эпĕ ку тарана çитсе те ниçта та илтмен, кинофильмне те курман.

Эпир пурăнакан пысăк пӳлĕмре тĕрлĕрен вăйăсем выляттăмăр: сĕтел-пукансене пĕр-пĕрин çине лартса, пытанмалла...

Ялти шкултан эпир 1944 çулта вĕренсе тухрăмăр. Хĕсĕк пурнăçа пула Аркади малалла вĕренме каяймарĕ. Колхозри трактор бригадине ĕçе вырнаçрĕ. Унта плугарь пулчĕ. Çурхи-çуллахи кунсенче механизаторсем çĕрле те ака-суха тăватчĕç. Суха туса ывăннă хыççăн каçхи сменăра ĕçленĕ Аркади йăран хĕрринех выртса çывăрса кайнă. Тракторисчĕ ăна асăрхамасăр таптаса кайнă. Ку инкек 1947 çулта пулчĕ.

Аркадие кӳршĕри Çĕнĕ Улхаш масарне, манăн кукамай вилтăприпе юнашарах пытартăмăр. Эпĕ унта çулсерен кĕрсе чечек çыххи хуратăп. Анне те кунта хăйĕн канăçне тупрĕ. Чăвашкассинчи кĕрешĕнсене пытарнă Çĕнĕ Улхаш масарĕн кĕтесĕнче вилтăприсем тахçанах çĕрпе танлашнă. Аннен вĕренекенĕ пулнă, Чăвашкасси шкулĕнче аллă çул ытла ĕçленĕ М.М. Бикмендеева пуçарнипе ял Совечĕ аннене асăнса лартнă обелиск çеç уйрăммăн çĕкленсе ларать кунта.

## Пиллĕкмĕш çаврăм

Килти архивра тăвансемпе çывăх çынсен сăн ӳкерчĕкĕсем йышлăччĕ пирĕн. Çав шутра аттепе анне пĕрле çапăннисем те, студент çулĕсенче ушкăнпа ӳкерĕннисем те, пирĕн ача чухнехи сăн ӳкерчĕксем те. Вĕсем анне арчинче упранатчĕç.

Анне вилсен çĕнĕ пуçлăх пире хваттертен кăларчĕ, çавăн чух аннен япалисене упрама, çав шутрах кил арчине те, кӳршĕри Кив Улхашра пурăнакан Саша аппа патне упрама ăсатнăччĕ. Çул хыççăн çул иртрĕ. Геннадий шăллăм çар училищине вĕренме ăсанчĕ. Эпĕ район центрĕнче хаçатра ĕçленĕ май тăтăшах ют çынсем патĕнче хваттерте пурăнтăм, анне япалисене куçарса кайма май пулмарĕ. Анне арчи Саша аппа çуртĕнче мачча çинче упранчĕ. Унăн ачисем йышлăччĕ. Вĕсем ӳссе пынă май пирĕн япаласене чăлпар! тустарса пĕтернĕ. Çав шутра хаклă реликвисене те.

## Улттăмĕш çаврăм

Хăй вăхăтĕнче атте ялти чăваш ачисене тĕрлĕ енлĕ пĕлӳ парас тесе пĕтĕм вăйне хурса ĕçленĕ. И.Я. Яковлев пекех, вĕсене пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарса пынă. Шкулта верстак пурччĕ. Арçын ачасем унта каскалама вĕреннĕ. Вĕсен ĕçне йĕркелесе пыма ялти ăста стольăра Сидулов Улентее чĕнсе илнĕ. Çавракa та тулли сĕн-питлĕ, сарă мăйăхлă çак чăваш хресченĕ утарçă та пулнă. Шкул пахчинче темиçе вĕлле ларатчĕ, хурт-хăмăр ĕрчететчĕ вăл. Пыл юхтармалли, вĕлле хурчĕсене пăхмалли ĕç хатĕрĕсем хурса упрамалли хуралт пурччĕ унта.

Шкул пахчинче ачасем çĕр улми, купăста, сухан, кишĕр, хăяр т.ыт. пахча çимĕç акса-лартса ӳстеретчĕç, вĕсене хăйсемех пухса кĕртетчĕç. Пахчапа юнашар туса лартнă столовăйĕнче ачасене укçа тӳлемесĕрех апатлантаратчĕç.

Аннене илес пулсан, атте вилнĕ хыççăн унăн ĕçне вăл малалла тăсса пынă. Уйрăмах Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи çулĕсенче йывăр килнĕ ăна. Вăл коммунистчĕ. Вăйпитти арçынсем фронта ăсансан коммунистсенчен ваттисем кăна юлнăччĕ. Кӳршĕри Çĕнĕ Улхашпа Чăвашкассинчи халăх хушшинче ĕç, тĕпрен илсен, вĕсем çине тиеннĕ те. Анне вĕсен ертӳçиччĕ. 1941 çулхи шартлама сивĕре шăнса анне ӳпке чирне кайрĕ. Çавах та вăл уксахласа çӳресех (урине вăл ача чухне пулат çинчен ӳксе сусăрлатнă пулнă) унта та, кунта та çитетчĕ. Кун çинчен эпĕ хамăн ачалăх çинчен çырнă повеçре тĕплĕнрех çырса кăтартнă. «Пурнăç авăрĕ» сăвăлла романра та унăн сăнарне тĕпе хурса çырнă сыпăксем сахал мар (Синерпи сăнарĕ).

## Çиччĕмĕш çаврăм

1943 çулхи «курăк çулĕ» пирĕн пата Ялавăрти тăван – Валя аппа килсе пурăнчĕ. Ашшĕ вăрçăра пуçне хунă хыççăн вăл пĕччен тăрса юлнă. Анне ăна та уборщица ĕçне вырнаçтарчĕ. Хуçалăхри арçын ĕçне те Валя аппа туса пычĕ темелле: вăрмантан кӳрсе килнĕ чĕрĕ вутă пĕренесене каснă, çырнă, вĕсемпе класс пӳлĕмĕсене хутса ăшăтнă, урайĕсене çуса тасатнă.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Валя аппа Ялавăр тата унпа кӳршĕллĕ Анаткас ялĕсенче зоотехникра ĕçлерĕ. Чире кайса вăхăтсăр çĕре кĕнĕ, çапла вара пĕртен-пĕр хĕрĕ тăлăха тăрса юлнă.

Кивĕ хутсем хушшинче Валя аппан пĕр çырăвĕ упранса юлнă. Ăна вăл чăвашла, тĕрĕс те чуна хумхантармалла çырнă. Акă çав çырури йĕркесем:

«II III-59.

Ырă кун, Толя!

Малтанах Шурапа иксĕмĕртен те хĕрӳллĕ салам йышăнма ыйтатăп, унпа пĕрлех сывлăх сунатăп.

Толя, сан çыруна илтĕм, пит хĕпĕртерĕм. Сразу пĕлтĕм санран иккенне. Малтанах çакна калас килет. Эсĕ çырнă Шупашкара каяс теп пурăнма тесе. Ку вăл тĕрĕс, мана хама та Шупашкар хули кăмăла каять. Анчах эсĕ унта кайиччен малтан кунта килсе кур, пока çывăхра чухне. Курсан калаçмаллисем пит нумай пек туйăнаççĕ. Йĕре-йĕре калаçмаллисем. Сана пит кĕтетĕп. Çырса пĕлтер хăçан килессине.

Квартиру казеннăй е çын панче пурăнатна? Пурнăçун условийĕсем мĕнле? Çиме столовăя çӳретне или килтех апат хатĕрлетри?

Эпĕ сана çавна каласшăн, продукт илсе килте пĕçерсен йӳнерех ӳкет.

Толя, авантарах тумланма тăрăш. Эсĕ мана çиленен-ха капла çырнипе. Знаешь, эпĕ кăна мĕншĕн çыратăп? Мана Гриша куккин арăмĕ – инки каласа панăччĕ Толя пит эрех ĕçет тесе и начар тумланнăччĕ тесе. Толя, эсĕ халĕ пĕтĕм çын, хăвна ху тытма пĕлес пулать.

Ну, халлĕхе юрĕ, килсен калаçăпăр. Мана вĕрентнĕшĕн ан çилен. Пит кĕтеп. Обязательно кил. Петя кукку та пит кĕтет. Петя кукку вăл ман тете пулать.

Ну, пока, сывă пул, сывă юлатпăр.

Салампа сан аппу Валя.

Килсе курма ан ман, килме тăрăш».

## Саккăрмĕш çаврăм

Кун пирки мĕнех калас? Питех те тĕрĕс çырнă Валя аппа. Пĕр пытармасăр, хăй мĕн шухăшланине, чĕринче пуррине. Анне вырăнне вĕрентсе. Чăнах та, эпĕ ун чухне кирлĕ пек пурăнма пĕлмен çав. Йывăрлăхсем пулнă ĕнтĕ. Çавах та пурнăç çине тарăнрах пăхма ăс çитереймен.

«1958 çулта «Ялавра» пысăк поэма пичетленсе тухсан Уйăп Мишши мана Мускаври А.М. Горький ячĕллĕ Литература институтне вĕренме ярасшăнччĕ. Ют чĕлхепе экзамен параймасран хăрарăм. Çитĕнсе çитнине ĕнентерекен аттестат çинче ку предметпа нимĕнле паллă та пулман манăн. Çитменнине КПСС райкомĕ те ĕçрен ярасшăн марччĕ. Эпĕ пуçлăхсемпе пĕр сăмах тупаймарăм, ирĕксĕр пăрахса кайсан парти ретĕнчен кăларасран шиклентĕм. Çапла вара аслă пĕлӳ илеймесĕр юлтăм. Ĕçре хама улăштаракан çын çукчĕ. Çав вăхăтрах ытти ĕçчешсем пурте куçăмсăр майпа вĕренсе тĕрлĕ дипломсем илчĕç. Вĕсем кайса çӳренĕ хушăра ĕçĕсем ман çине тиенетчĕç. Темиçе хăмăт тăхăнса туртаттăм райхаçат лавне. Хушăран пуçа эрех-сăра ĕçсе кантараттăм. Мĕн пытармалли, ытлашши яркалани те пулнă. Çакна çывăх çынсем асăрханă, паллах. Епле ӳсĕрĕлсен те ĕçре прогул туни пулман-ха. Çавах та, ку вăл ман сывлăха çирĕплетнĕ теме çук.

Чăннипе илсен, çыравçă пултарулăхĕн шайне аслă шкул пĕтернипе çеç хаклама çук-ха. Пĕлӳпе талант çумне ӳркенмесĕр ĕçлеме пултарни кирлĕ. Тĕнче историйĕнче аслă шкул пĕтермесĕрех пултарулăх ĕçĕнче пысăк ăнăçусем тунă çыравçăсем сахал мар пулнă. Сăмахран, М.Горький хăй те Чулхулара пуçламăш шкул çеç пĕтерсе тухнă, хăйĕн ĕçченлĕхĕпе академик шайне çити ӳсме пултарнă. Унăн университечĕ пурнăç шкулĕ пулнă. Тин çеç Санкт-Петербургри

5-мĕш каналпа  Евгений Евтушенко çинчен телеепередача пулчĕ. Вăл чаплă поэт пулса тăнă чухне вăтам шкул та пĕтермен пулнă иккен. Аслă шкул дипломне ватăлмалăх кунра тин аллине илнĕ. Чăваш литературинче те çук мар унашкал тĕслĕхсем.

Хам пирки эпĕ те пурнăç университетне пĕтернĕ тесе çирĕплетме пултаратăп. Халĕ акă Ульяновскри педуниверситетри чăваш уйрăмĕнчи студентсем ман пултарулăх çинчен диплом ĕçĕсем çырса аслă пĕлӳ илеççĕ.

Утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнче Хусанти ВПШ çумĕнчи журналистсен ултă уйăхлă курсне пĕтерсе тухрăм. Унта та ирĕк пурнăçпа пурăннă. Таврăннă хыççăн редактора хурасшăнччĕ. Килĕшмерĕм. Кĕтмен çĕртен неврастени чирĕпе аптраса ӳкрĕм. Ун чухне çемье çавăрма та ĕлкĕрнĕччĕ. Ĕçлеймесĕр çулталăк хушши арăм ĕнси çинче пурăнтăм. Вăл ĕçлекен тăван ене куçса кайрăм Чăвашкасси çумĕнчи Çĕнĕ Улхаш ялне. Унта мунча пек тăм пӳртре те пурăнма тиврĕ. Çапла вара пурнăç тĕпнех анса лартăм. Пысăк пичете тухма та май çук. Çитменнине унашкал пурнăç хăйĕн лачакине çăтса илет. Ку тапхăр çинчен «Натюш» поэмăра çапла çырнăччĕ:

*Тăм çурт тупăнчĕ - çĕнĕ хваттер,*
*Вырнаçса хĕл каçасчĕ чипер.*
*Чĕрĕ сывлăш та сивĕ урай,*
*Ир те каç тĕлкĕшет хуранай.*
*Хăрăмпа вараланнă стена, -*
*Авалхи çитрĕ мар-и - săна!*
*Эпĕ куртăм ăна куçкĕрет,*
*Ун сăнарĕ сăвва та кĕрет.*
*Сас памасть ĕмĕтри Шупашкар,*
*Чĕрере çеç сӳнмест-ха кăвар.*
*Шăпаран иртме çук, мĕн тăвар?*

## Тăххăрмĕш  çаврăм

Çакнашкал пурнăçпа çур çул ытла тертленсе пурăннă хыççăн каллех райхаçат ĕçне таврăнтăм. Чылай хушă малтан редакцинчи диван çинче, каярах каллех уйрăм çынсем патĕнче хваттерте пурăнма тиврĕ. Хрущев районсене пĕрлештерсен вырăнти пуçлăхсем пурте тенĕ пек Ульяновскри хăтлă хваттерсене куçса кайрĕç, тинех манăн çамрăк çемье валли те пушанса юлнă хваттер тупăнчĕ. Çапла вара Аслă Нагаткин вырăс ялне яланлăхах тымар яма тиврĕ. Перифери тунсăхĕ пĕрмай манпа юнашарччĕ. Шупашкара куçса каяс ĕмĕт путланса ларчĕ. Чăваш  кĕнеке издательствине вырнаçас пирки çĕнĕ

директорпа калаçса татăлнăччĕ. Райхаçатра Г. Айхи куçарăвĕсене пĕчĕк кĕнекен кăларса панипе («Францри поэчĕсем», «Польша поэчĕсем») литературăри «хура полковниксем» (Аркадий Эсхел сăмахĕ) «Айхи тусĕ» тесе айăпларĕç, опалăна тăрса юлтăм.

Юрать-ха, ырă çынсем те тупăнчĕç. Халăх писателĕ тата Чăваш писателĕсен Союзĕн правленин çĕнĕ председателĕ Анатолий Емельянов хута кĕнипе 1983 çулта эпĕ те тинех СССР писателĕсен Союзĕн членĕ пулса тăтăм. Çапах кивĕ сĕрĕм халĕ те пуçа ыраттарать. Ытарлă каласан, Мĕтри Юман ĕмĕлки мана Иккĕмĕш Юмана та мистика сĕрĕмĕпе хупласа тăрать. Тĕлĕнмелле!

Çавах та ку тарана çитсе хĕрĕх ытла кĕнеке тухса кайрĕ. Юлашки çулсенче ытларах хам шутпа кăларнă вĕсене. Виçĕ сонет кĕнеки тухса кайрĕ. Трилоги. Вулакансем ырласа йышăнчĕç вĕсене. Вулакан шухăшĕ вара çыравçăшăн — чи хакли. Халĕ тăваттăмĕш кĕнекине хатĕрлесе çитертĕм. «Ватă Юман шухăшĕ» ятлă вăл. Çаплах ытти жанрсемпе те ĕçлетĕп. Пичетлесе кăларас шанчăк пулсан ытларах та ĕçлемелле те. Ку чухнехи лару-тăрура мĕн пуррипе çырлахас пулать. Çитменине çитерĕр, ытлашшине каçарăр, темелли кăна юлать. Вăт çапла, тăвансем.

Халĕ ĕнтĕ мана вăл та, ку та пăшăрхантармасть. Çывăх çынсем сăнарĕсем асăмрах. Ĕмĕр сисĕнмесĕр иртет — яланлăхах. Çамрăклăха каялла тавăрма çук — çакă кӳренмелле.

*Кукамай та çук, анне те,*
*Халь аппа та çук, ара.*
*Çутă сăнарсем çеç пурте*
*Пурăнаççĕ асăмра.*

*Асăмрах инçе Ялавăр,*
*Тек аппаçăм çук унта.*
*Çавăнпа чуна ман тăвăр, -*
*Тĕрĕс çырнă ман пата.*

*Çырура - аппан ыр чунĕ,*
*Ун ыратăвĕ. Кĕтни.*
*Яланах манра вăл çунĕ,*
*Тавăрма май çук иртни.*
(«Чунри» поэмăран).

## Вуннăмĕш çаврăм

Чăвашкассинчи И.Я. Яковлев шкулĕ çаплах ĕçлет-ха. Вĕренекен ачасен йышĕ çеç сахалланса юлнă. Çулсерен 15-20 ачаран ытла мар

ача вĕренсе тухать унтан. Сăлтавĕ паллă: çамрăксене ялта ĕçлеме ĕç çук. Колхоз саланнă. Çĕнĕ хуçасем ку проблемăпа ĕçлеççĕ. Анчах хăçан татса парасси паллă мар. Учителĕсем пурте тăван ялтан тухса пĕлӳ илнĕ хĕрсем. Вĕсене хваттер кирлĕ мар. Унчченхи хваттер стенисене сӳтсе класс пӳлĕмĕ тунă. «Пысăк класра» - И.Я. Яковлев музейĕ. Шкула газпа хутса ăшăтаççĕ. 1983 çулта шкул çуртне никĕсленĕ чăваш халăх просветительне И.Я. Яковлева чысласа асăну хăми уçнă. Унăн авторĕ - манăн шăллăмпа пĕрле вĕренсе тухнă Георгий Кузнецов скульптор. Шел, халĕ вăл та çук ĕнтĕ пирĕн хушăра. 1983 çултанпа çаплах И.Я. Яковлев Кунне ирттересси йăлана кĕчĕ.

Шкулта И.Я. Яковлев ятне вилĕмсĕрлетес енĕпе туса ирттернĕ ĕçсем пĕтĕмĕшпех пĕр тĕвĕпе çыхăннă. Аякри чăваш ялĕнче пулса иртнĕ культура уявне Шупашкартан пысăк хăнасен сумлă ушкăнĕ килсе çитнĕччĕ. Çав шутра Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ, ун чухне чăваш писателĕсен Союзĕн правленине ертсе пынă, халĕ филологи наукисен докторĕ Юрий Артемьев, «Советская Чувашия» хаçатăн пай пуçлăхĕ пулнă, халĕ паллă поэт тата кусаруçă, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премии лауреачĕ Аристарх Дмитриев, ЧНИИ сотрудникĕ пулнă, истори наукисен кандидачĕ В.П. Иванов, «Ялав» журнал фотокорреспонденчĕ пулнă В.Исаев, облаçри чăвашсен И.Я.Яковлев ячĕллĕ культурăпа çут ĕç обществин правлени председателĕ И.С. Кирюшкин, тĕрлĕ шайлă пуçлăхсем, çывăх ялсенчи учительсем, ытти интеллигенци представителĕсем, колхозниксем, шкул ачисем т.ыт.те. çав чаплă кунтанпа «пăр тапранчĕ».

Мухтанса каламастăп, ку - факт. Кунта ун чухне шкул директорĕ пулнă (халĕ пуçламăш шкул пуçлăхне директор теççĕ) М.М. Бикмендеевăпа манăн тӳпе пысăк пулнине палăртма кăмăллă. Ун чухне пире ура хуракансем, Çеçпĕл Мишши калашле, «Çук!», «Çук!» теекен чăлах чунлă» этемккесем йышлăччĕ. Ăна-кăна пăхмасăр, эпир халăха çĕнĕ уява пухаттăмăр. Халăх çеç пирĕн пуçарусене хапăллатчĕ. СССР писателĕсен Союзĕн членĕ пулса тăрсан ман умра пуçлăх алăкĕсем уçăлчĕç. Эпĕ вĕсен кăмăлĕсене тупаттăм. Пуçлăхсем хăнасем умĕнче хĕрелес мар тесе шкул çуртне юсаттаратчĕç, çул çинчи шăтăк—путăксене грейдерпа тикĕслеттеретчĕç. Журналист пулнă май районти тата облаçри хаçатсенче хамăрăн çак уява «И.Я. Яковлев Кунĕ» тесе пусса палăртаттăм.

1992 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕнче Чăваш Республикин аслă Канашĕ Чăваш Чĕлхи Кунĕ ирттерессине йăлана кĕртес тĕлĕшпе ятарласа постановлени йышăнчĕ. Унăн программи шăпах пирĕн уяв программипе килĕшсе тăратчĕ. Çапла вара Чăвашкассинче И.Я. Яковлев Кунĕ халăх пултарулăх авăрĕнчен вăй илсе Чăваш Чĕлхи Кунĕ таран çĕкленмелли никĕс пулса тăчĕ.

2009.

## Тупмалли

**Анатолий Юман** ...3

**Пурнăç кукрашкисем**
Кукаçи еткерлĕхĕ...4
Икĕ кукка...5
Селиме акка ...7
Виçĕ хăма ...10
Мĕтрик тете ...12
Йывăç велосипед ...14
Аркади ...16
Сухви ...20
Икĕ виле ...21
Марка ...22
Аслă хĕрĕме асăнса ...23
Каланкка вучахĕ умĕнче ...25
Паллă мар пĕчĕк «гени» ...27
Якур тенкелĕ ...28
Хĕрлĕ Савин тата поэт ...29
Экспромт ...30
Композитор парнисем ...29
Тĕлĕк ...37
Ҫĕле ...37
Ăнăçсăр кун ...38

**Аса илӳсем**
Малтанхи учитель ...40
Хусанкай шкулĕ ...44
Тăванлăх вăрттăнлăхĕ ...59
«Йывăра çĕнсе, çунатланса пурăн...» ...74
Отецă ...83
Классик ...88
«Ман суран – çĕр-шыв суранĕ» ...91
Алексей Талвир (Башкиров) ...97
Влас Иванов-Паймен ...100
Поэт халалĕ ...103

**Икĕ повесть**
Вăрçă ачисем ...104
Манăн пурнăç ...121

**Анатолий ЕРМИЛОВ-ЮМАН**
**Пурнăç кукрашкисем**
**Повороты жизни**
На чувашском языке
В авторской редакции

Подписано в печать. Формат 60х84$^{1/16}$. Бумага офсетная.
Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Тираж 300.
Отпечатано с готовых диапозитивов заказчика.